К С(ЧУВ)
Ю 96
Ч-37982

С. ЮШКОВ

# ВУТ-ÇУЛĂМЛĂ ÇИЛ-ТĂВĂЛ



Кӳкеç - 2000 ç.

Национальная библиотека ЧР
4-037982

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Кср

К с (Чăв)
Ю 96

Сергей ЮШКОВ

Кĕнекеме хамăр ентешсене — Мускав хулишĕн 1941—42 çулсенче нимĕç фашисчĕсемпе пурнăçне шеллемесĕр çапăçнă салтаксемпе офицерсене ĕмĕр асăмра тытма халаллатăп.

Автор.

# ВУТ-ÇУЛĂМЛĂ ÇИЛ-ТĂВĂЛ

(Роман)

Кӳкеç — 2000 ç.

УДК 894.344
ББК 84 (2 Рос-Чув) — 4
Ю — 96

Раççей, хаяр вут-çулăмра
Хевтеллĕ чĕрĕ юлтăн.
Пĕрех чакмарăн Мускавран —
Хăватлă, чыслă пултăн.
Мускав тертне, паттăрлăхне
Ачамăрсем-и манĕç?
Илтетпĕр салтаксен сасне:
— Пиртен чĕтретĕр Анăç!..

**Александр Твардовский.**

Мускав — мĕн пек хăватлă сас —
Вырăса тăрать пĕрлештерсе.
Чунне унне мĕн пек хавас —
Еçне тăвать килĕштерсе.

**А. Пушкин.**

«...Пурте асра. Вăрçă чăннипех çав тери йыvăррăн çаврăнса тухрĕ. Анчах Мускавшăн пынă çапăçу нихçан та манăçмĕ. Унччен Ленинградшăн кĕрешрĕмĕр. Ана та манас çук. Анчах Мускав — чи хаяр та ытла та йывăр тĕрĕслев. Çавăнпах асра та пуринчен ытла юлчĕ...»

**Г. К. Жуков,**
**Совет Союзĕн маршалĕ, тăватă хутчен**
**Совет Союзĕн Геройĕ.**

Çакăнта, Мускав патĕнче, Совет Çарĕсем Гитлерла Германие çĕнтерессине яр-уççăн кăтартса пачĕç.

**И. С. Конев,**
**Совет Союзĕн маршалĕ.**

ПРОВЕРЕНО
06 СЕН 2017
Ч-37982
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

# УМСĂМАХ

Романри ĕçсем 1941 çулхи аванпа раштав уйăхĕсенче пулса иртеççĕ. Вăл Совет çĕршывĕшĕн чи йывăр та хăрушă тапхăр. Фашистла Германи пуçланă вăрçăра Совет Союзĕ мĕнпур вăя пухса çĕнтермелле е арканса каймалла, Германи колонийĕ пулса юлмалла. Иккĕрен — пĕри.

Гитлерăн «Барбаросса» планĕпе совет халăхне хура шăпа кĕтнĕ — чуралăхпа вилĕм.

Çавна пурнăçлама чи малтан çĕршывăн тĕп хулине, Мускава, хăвăртрах тытса илмелле пулнă. Ăна илме вермахт 50 дивизи уйăрнă, вĕсенчен вун пиллĕкĕшĕ — танк дивизийĕсем. Çак дивизисене ертсе пыма чи пултаруллă çар пуçне, фон Бок генерал-фельдмаршала хушаççĕ, танк çарĕсемпе — чи хăюллă та ăста Гудериан генерала.

Романри тĕп герой — Чайкин подполковник, каярах — полковник. Вăл фашистсемпе Смоленск хулишĕн пыракан çапăçура хытă кĕрешет. Пĕр çапăçура аманать те эвакогоспитале лекет. Юлашкинчен ăна Шупашкарти пĕр госпитальре сыватаççĕ те фронта ăсатаççĕ. Шупашкарта чух ун патне юратнă арăмĕ çӳрет, çимелли илсе пырса сăйлать. Чайкин резервра тăракан полка ертсе пыма йышăнать. Часах ăна Мускава хӳтĕлеме чĕнеççĕ. Вăл хăйĕн полкĕпе Снегири станцине хӳтĕлеме тухать. Паттăр кĕрешеççĕ унăн салтакĕсемпе командирĕсем, анчах нимĕçсем фронта тепĕр çĕртен татса кĕрсе каяççĕ те — вĕсен те чакма тивет. Ку çапăçусем Волоколамск шоссе çинче пулса иртеççĕ.

Чайкин ертсе пыракан уйрăм полк хастар çапăçсан та, нимĕçсем сарлака фронтăн тепĕр участокĕнче татса кĕрсе каяççĕ те каллех Мускав енчи тепĕр станцине чакма тивет. Вăйсем пĕр пек мар тан ун полкĕ Мускав çывăхĕнчи Ленино станци патне çитиех чакать. Нимĕç генералĕсем Мускава бинокльпе çеç мар, хăйсен куçĕпе те курма пуçлаççĕ. Çĕршыв чĕришĕн — аслă Мускавшăн тем пек хăрушлăх килсе тухать.

Çавăн чухне Сталин Мускав фронтне ертсе пыракан Георгий Жуков çар пуçĕнчен телефонпа çакăн пек ыйтать:

— Эпир Мускава тытса тăрассине эсир шанатăр-и? Эпĕ Сиртен чун ыратнăран ыйтатăп. Эсир, коммунист май, тĕрĕссине калăр.

Жуков Сталина хуравлать:

— Мускава, пĕр сăмахсăрах, тытса тăратпăр. Çавна валли сахалтан та икĕ çар тата ик çĕр танк кирлĕ.

— Сирĕн çавăн пек шанчăк пурри, пĕрре те начар мар, — тет Сталин. — Генштаба шăнкăравлăр та калаçса татăлăр: эсир ыйтакан резерври икĕ çара ăçта илсе пымалла. Чӳк уйăхĕ вĕçнелле вĕсем хатĕр пулаççĕ, анчах халлĕхе танксем пама пултараймастпăр!

Совет çарĕсем чӳк уйăхĕнче хăюллă та ăнăçлă кĕрешнипе нимĕç çарĕсене хытă хавшатаççĕ, юлашкинчен тем пек тапăçсан та пĕр утăм та малалла каяйми пулаççĕ. Чӳк уйăхĕн юлашки кунĕнче Жуков çар пуçĕ вăрттăн канашлу ирттерет, унта вăл генералсене чĕнет. Çакăнта вăл нимĕç çарĕсене хирĕç асар-писер вут-çулăмпа тапăнмалли çинчен калать, вĕсене аслатиллĕ вăй-хăватпа сирсе ывăтмаллине палăртса хăварать. Кĕскен каласан, хирĕçле тапăну пуçласа ямаллин вăхăчĕ çитнине уçăмлă пĕлтерет. Раштавăн 5-мĕшпе 6-мĕшĕнче шăп çав вăхăт çитет. Мускав патĕнчи вăрçăра пиçнĕ çарсем, вăл шутра Рокоссовский генерал-лейтенант ертсе пыракан 16-мĕш çар та Волоколамск тăрăхне ирĕке кăларасшăн хаяр çапăçава тухать. Чайкинăн уйрăм полкĕ те фашистсене хирĕç çапăçма тытăнать. Боецсемпе командирсем хуласемпе поселоксене, чугун çул станцисене ирĕке кăларнă чух тĕлĕнмелле пултарулăхпа паттăрлăх кăтартаççĕ.

Çуран çар (пехота) ăнăçлăхне вăхăтра ӳстерме, çĕнтерме пулăшаççĕ Нарядов полковникпа Тураев майор артиллеристсем, вĕсен вăрçăри ĕçĕ-хĕлне сăнлартăм.

Фронтра аманнă салтаксене вăрçă хирĕнче тӳрех пулăшу паракан санинструкторсене Володьăпа Зоя сăнарĕсемпе пĕтĕмлетсе патăм. Юнлă вăрçă çухатусăр мар, полкри боецсемпе командирсем сĕмсĕр те чурсăр тăшманпа паттăр кĕрешсе чылайăшĕ пуçне хураççĕ, хамăрăн тĕп хулана — Мускава упраса хăвараççĕ. Вĕсене пурне те чыс та мухтав.

---

Г. К. Жуков. Воспоминания и размышления. Москва, 1971, стр. 338—339.

Ку таранччен Гитлер çарĕсене ниçта та çĕнтереймен пулсан, чи малтан çакăнта, 1941 çулхи раштав уйăхĕнче, пирĕн çарсем улăп пек хăватлă çапăçса, пуçласа çĕнтереççĕ, Çĕнтерӳ ялавне чылай çӳле çĕклеççĕ. Çак çĕнтерӳ пирĕн Совет çарне, пĕтĕм совет халăхне гитлерла Германи çарне тĕппипе аркатса тăкас шанчăк çуратать, Тăван çĕршыв вăрçине мухтавлă çĕнтерӳпе вĕçлеме хавхалантарать.

Çак Мускав патĕнчи çĕнтерӳ фашистсен аллине çакланнă Европăри çĕршывсене ирĕке тухма шанчăк кӳчĕ, Гитлер çарĕсемпе кĕрешме вăй-хал пачĕ. Вăл колонири халăхсене хĕрлĕ маяк пек çутатса кĕрешӳ çулĕ çине тăратрĕ.

Çак манăçми çапăçу çĕршывăн пысăк историне ылтăн саспаллисемпе çырăнса ĕмĕрлĕхех юлчĕ.

Çавна шута илсе эпĕ ĕçре çак хăрушă та хăватлă тапхăра сăнласа пама тăрăшрăм.

Хисеплĕ вулаканăм, хайлавăм мĕнлерех пулса тухнине тата шухăш çуратнине эсир хыпарласса кĕтсе юлатăп.

**Сергей ЮШКОВ.**

1999 çулхи чӳкĕн 10-мĕшĕ.

## ХАВАСЛАНСАХ ĔÇЛЕ, СЕРГЕЙ ПИЧЧЕ!

Ак ман аллăмра çĕнĕ кĕнекен ал çырăвĕ. Прозăпа вăл ултă кĕнеке авторĕ. Пурте вĕсем вăрçă тематикипе. Сергей Павлович Юшков хăй те Тăван çĕршывшăн пынă вăрçăра ютсемпе хастар çапăçнă, Карели çĕрне тăшмана кĕме паман, çавна вăл «Вутлă çумăр», «Кĕрен кӳлĕсем» повеçсенче ĕненмелле кăтартса панă, аслă Петĕр хулине (ун чухнехи пек Ленинграда) хăйĕн çывăх юлташĕсемпе пĕрле паттăр хӳтĕленĕ, ăна хăйĕн çывăх юлташĕсемпе пĕрле паттăр хӳтĕленĕ, ăна хăйĕн «Çĕршыв чĕнсен», «Вутра пиçĕхнисем», «Манăçсăр юрату», «Пĕр куç хупмасăр» кĕнекесенче сăнарласа хăварнă.

Уйрăмăнах унăн прозăри пултарулăхĕ, геройсене витĕмлĕ ӳкерсе парасси, чĕлхе илемлĕхĕ «Кĕрен кӳлĕсем», «Вутра пиçĕхнисем» повеçсемпе «Пултаруллă Микулай», «Вутра çуралнă туслăх», «Хăвăл йăмра», «Шиксĕр Орпик», «Унăн çутă сăнарĕ», «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан», «Этем тени», «Вилĕм çири кĕперен те çывăх» калавсенче питĕ уççăн курăнаççĕ, вулакан кăмăлне каяççĕ.

С. П. Юшков — талантлă прозаик пулнине унăн калавĕсемпе повеçĕсем çирĕплетсе параççĕ.

Кăçал çырса пĕтерни «Вут-çулăмлă тăвăл» роман Сергей Юшков пысăк калăпллă хайлав çырма пултарнине кăтартрĕ. Автор çĕршыв историйĕнчи паллă та драмăллă тапхăра илсе парать. Гитлерăн никам çĕнми çарĕсем Мускав патне çĕмĕрсе килеççĕ. Унăн тип çĕр çинчи çарĕсене чи ăста та пысăк пĕлӳллĕ генерал-фельдмаршал Вальтер фон Браухич, генеральнăй

штаба Франц Гальдер генерал, «Центр» ятлă тĕп фронта генерал-фельдмаршал фон Бок, танк çарĕсене Гудериан тата Манштейн генерал-полковниксем ертсе пыраççĕ. Нумай опытлă генералсемпе тата фельдмаршалсемпе çапăçма пирĕн сахал опытлă С. К. Тимошенко маршала, Г. К. Жуков арми генералне, К. К. Рокоссовский генерал-лейтенантне çăмăл пулман, çав тери йывăр тивнĕ.

Çаксене пăхăнса тăрса, паттăр çапăçакан Белобородов генерал, Чайкин полковник, Воронин дивизи генерал-майорĕ, Климов, Ударкин полковниксем, Нарядов подполковник, Орлов, Тураев, Тарасов майорсен сăнарĕсене романра уçăмлă кăтартнă. Зоя Синицинапа Володя Галкин санитарсен хăюллăхĕпе паттăрлăхне те уçса панă, вĕсен юратăвĕ аталанса пынине те автор лайăх асăрханă. Аркадий Чайкин полковникăн сăнарне автор туллин те нумай енлĕн ӳкернĕ, вăл хайлавра тĕп вырăн йышăнать.

Сергей Юшков — пултаруллă тĕпчевçĕ, çур ĕмĕре яхăн çамрăксене чăваш чĕлхине, чăваш культурине, йăла-йĕркине юратма вĕрентнĕ. Ахальтен мар ăна Чăваш нацин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ тата Чăваш халăх ăсчахĕ ятне панă.

Сана, Сергей Павлович, çывăх вĕрентекенĕм, хăвăн юратнă ĕçре ăнăçлăх, çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-халпа тулли телей сунатпăр.

Ĕмĕтӳ çитсе пытăр, Павăл Çирукĕ, эпир сан çывăх юлташусем, сана шутсăр хисеплетпĕр те хаклатпăр, сана çывăх туятпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Александр АРТЕМЬЕВ,**
**Чăваш халăх писателĕ.**

1998 çулхи майăн 5-мĕшĕ.

# ПАХА ТА КАМАЛЛА ПАРНЕ

Сергей Павлович Юшков — Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕ, хаяр çапăçусенче паттăрлăх кăтартнă офицер. Пĕлÿ парса ÿстерес ĕçре паллă педагог, халăх ăсчахĕ тата пултаруллă çыравçă. Халĕ 80 çултан иртнĕ пулсан та аллинчен ручка яман, тĕрлĕ хайлавсем ăсталать. 60—80-мĕш çулсенче вăрçă çинчен çырнă калавсемпе повеçсене пирĕн вулакансем, уйрăмах шкул ачисем хапăлласах йышăнчĕç.

Нумаях пулмасть Сергей Юшков хăйĕн сăввисемпе поэмисене, юмахĕсемпе юптарăвĕсене чăвашла та вырăсла пичетлесе кăларчĕ.

Кăçал вара вулакансем патне унăн пысăк та сумлă хайлавĕ — Мускав патĕнчи хаяр та хăрушă хирĕçтăрăва сăнлакан «Вут-çулăмлă çил-тăвăл» романĕ систермесĕр çитрĕ. Нумай çулсем ĕçленĕ унпа автор. Кĕнекере Тăван çĕршыв историнчи паллă та синкерлĕ пулăма — 1941—42 çулсенче Мускавшăн пынă çапăçусене — анлăн та калăплăн кăтартнă. Ку юнлă çапăçусенче чăваш халăхĕн маттур ывăлĕсемпе хĕрĕсем нимĕç фашисчĕсене хирĕç юмахри паттăрсем пек хăватлă та хăюллă кĕрешнине лайăх сăнланă. Автор çапăçăва пултаруллă ертсе пыракан çар пуçĕсене — Георгий Жуковпа Константин Рокоссовский, Иван Панфиловпа Михаил Катуков, Федор Ремизовпа Александр Белобородов, Аркадий Чайкинпа Виктор Воронов генералсен сăнарне уçăмлă кăтартса панă.

Сергей Юшков история, ун чухнехи лару-тăрăва лайăх пĕлнине, чылай документсене тишкернине, кунти çапăçура пулнă ентешсене ĕнене мелле ÿкернĕ.

Автор геройсен шухăш-кăмăлне çут çанталăк пулăмĕсем урлă кăтартма пултарать, вăл вулакана асра юлмалла тăвать. Роман чĕлхи витĕмлĕ те сăнарлă, илемлĕ мелсемпе автор анлă усă курнă.

Пĕтĕмĕшле каласан, Аслă Çĕнтерĕве халалланă «Вут-çулăмлă çил-тăвăл» роман Чăваш Енре пурăнакансемшĕн паха та кăмăллă парне пулĕ. Самрăк ăрăва Тăван çĕршыва хаклама, юратма вĕрентес пархатарлă ĕçре роман кирлĕ вырăн йышăнасса шанас килет. Романăн кашни сăнарĕ хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕпе, тылри е фронтри пултарулăхĕпе хальхи самрăксене Тăван çĕршыва юратма, унăн пуласлăхĕшĕн кĕрешме вĕрентет, чĕнет. Хайлавăн паха енĕсем йышлă.

**Георгий ИРХИ,**
**РФ писательсен Союзĕн членĕ,**
**А. Талвир ячĕллĕ премин лауреачĕ.**

x x x

«Вут-çулăмлă çил-тăвăл» романа алла илсенех вуласа тухрăм. Автор нумай тишкерÿллĕ ĕçлени куçкĕрет. Ку хайлавра Сергей Юшков Мускав патĕнчи çапăçусем çинчен питĕ тĕплĕн, ĕненмелле çырса панă. Автор хăй те вăрçă çулăмĕ витĕр тухнă, сусăрланнă. Вăрçă хаярлăхĕпе хастарлăхне хăй тÿссе ирттернĕ. Çавăнпах çапăçу хирне, геройсен ĕçĕ-хĕлне чăн-чăн художник пек сăнлать, курăмлă тăвать.

**Юрий АЙДАШ,**
**СССР писательсен Союзĕн членĕ,**
**К. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх премийĕн**
**тата Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ преми лауреачĕ.**

## ВУТ-ÇУЛĂМЛĂ ÇИЛ-ТĂВĂЛ

### Сиплекен çуртра

Кĕр çитрĕ пулин те, çанталăк типĕ тăрать. Авăн уйăхĕнче кăнтăрла ăшă, каç енчелле сулхăнлатать. Çавна пула йывăç çулçисем те сарă, кĕрен сăн çапрĕç.

Пирĕн госпиталь умĕнчи çамрăк хурăнсем ылтăн тум тăхăнчĕç, вĕсен хăш-пĕр турачĕсем иккĕмĕш хутри чӳречесене сĕртĕнес пек тăраççĕ. Анăçран çил вĕрсен, вăрăм турат вĕçĕсем пирĕн палатă чӳречисене вăштăр-вăштăр сĕртĕнсе, ачашла-ачашла илеççе.

Манăн кровать пуçĕ шăп чӳрече патне тухать.

Эпĕ форточкăна уçса алла тăсатăп та сарă çулçăсене тататата илетĕп. Хам вулакан кĕнеке хушшине хуратăп. Ача чухне шкулта вĕреннĕ май йывăç çулçисене пĕрре мар пухса, кăтартусем туна, класс ертӳçинчен ырă сăмах илтнĕ. Çак ман йăлана кĕнĕ тесен те йăнăш пулмасть.

Халĕ госпитальре ун çинчен аса илкелетĕп. Уйрăмах çĕрле хурăн турачĕсем кĕрхи çил вĕрсе хумхатсан, сасартăк вăранса каятăн та пĕр тапхăр шухăша кайса выртатăн. Анчах тăп выртас пулать. Тапранса сылтăм алла хускатсанах, снаряд ванчăкĕ çĕмĕрсе кайнă хулă чиксе ыратса каять; фронтра аманнă суран хăйне систерсех тăрать. Смоленск хули патĕнче туяннă суран мана çапăçу хирĕнчен кăларса ывăтрĕ, анчах эпĕ кунпа килĕшесшĕн мар-ха... Манăн каллех унта таврăнмалла. Эпĕ сиплев çуртĕнче выртнă хушăра «чĕнмен хăнасем» çĕршыва епле шала кĕрсе кайрĕç, тĕп хулана ярса илме кармашаççĕ. Ытла хăрушă тапхăр килсе çитрĕ.

Кун пирки вăрçăччен никам та шухăшлама пултарайман. Ара ăçтан шухăшлăн-ха? Çĕршывăн аслă çар пуçĕсем яланах халăха лăплантармалли сăмахсем калатчĕç, вĕсене лозунг туса, хуласемпе ялсенчи паллă вырăнсене çырса çакатчĕç. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри халĕ те куç умĕнчех: «Кам вăрçăпа тапă-

нать — çав вăрçăпа вилет. Вăрçă пулсан та, вăл пирĕн çĕр çинче мар, ют çĕршыв çĕрĕ çинче пулса иртет. Кам пирĕн çĕршыв çине тапăнать, ăна çавăнтах тĕппипе аркатса тăкатпăр!»

Паллах, çакăн пек хавхалантаракан лозунгсем халăхăн кăмăлне каятчĕç. Хамăр çар çавăн пек вăйлă пулни халăха, кашни çынна савăнтарнă, ăна чăннипех те ĕненекен пулнă.

Çак çăмăлттай лозунгсене пула Гитлер çарĕ тапăннă кун пирĕн çĕршыв çыннисем, уйрăмах çамрăксем, хăйсен ирĕкĕпе фашистсене пĕтерме кайма военкоматсене атакăланă, хыттăн ыйтнă, вăрçă хăвăрт вĕçленесрен шикленнĕ, тăшмана çитсе пĕтерсе тăкма васканă. Ара, вăйсăр Гитлер çарне çĕмĕрсе тăкассине çăмăл тесе шутланă, унта паттăр салтак ятне илме ĕмĕтленнĕ. Çамрăксенчен нумайăшĕ çав вăхăтрах пăшал алла тытса курман, пеме те пĕлмен. Мĕнле çăмăлттайлăхпа айванлăх!

Эпĕ подполковник пулнă май, нимĕçсен çарĕ Совет çарĕнчен вăйлине лайăх пĕлнĕ, вĕсен танкĕсем чылай йышлине, самолечĕсем инçе те хăвăрт вĕçнине, сывлăшра хуçа пулса тăрассине шута илнĕ. Ку вăрçă нумай йывăр пулассине, пирĕн халăх пысăк çухату тӳсессине, çар çыннисем малтанах чухланă. Хам шухăша аттепе аннене те çырса янăччĕ.

Юрать, çак çыру вăрçă цензури аллине лекме ĕлкĕреймен, ăна июль уйăхĕнче çеç туса хучĕç.

Эпĕ аттепе-анне, хамăн мăшăрăм çинчен час-часах шухăшлатăп. Юрать, Лариса мăшăрăма вăрçă тухсан, Борисоври çар хулинчен тӳрех киле ăсатрăм. Халĕ атте-анне патĕнче пурăнать. Вăл ман пата госпитале час-часах килсе çӳрет. Эпĕ шĕкĕр хулари пĕр госпитальре выртатăп, суран тӳрленсе пырать. Анчах каялла вăрçа таврăнма иртерех-ха. Суран пĕтĕмпех тӳрленсе çитеймен. Мана сиплекен Андрей Петрович врач, пĕр аллă çулсене çитнĕскер, васкама хушмасть, эпĕ унăн шухăшĕпе килĕшетĕп. Сипленсе çитмесĕр фронтра çапăçма йывăр пуласси каламасăрах паллă. Эпĕ ĕнтĕ вун çичĕ — вун сакăр çулхи шухă каччă мар, фронт мĕн тути каланине лайăх пĕлетĕп. Унта сана пылпа-çупа хăналамаççĕ, тăшман мĕнпе кĕтсе илнине такам та чухлать.

Сывалса çитсен, фронта пурпĕр каймаллине пĕр сăмахсăрах ăнланмалла.

Манпа юнашар, тепĕр кравать çинче, Тураев майор выртать, вăл Воротынец хулинчен, эпĕ çуралнă ялтан вăтăр çухрăмра. Унăн килĕнче амăшĕ, шăллĕпе йăмăкĕ пур.

Майор лăпкăн çывăрса выртать. Эпĕ хурăн турачĕсем вăратнипе çывăраймарăм-ха, çаплах шухăша кайса выртрăм. Çывăрас тесен те çывăраймастăп, шухăшăмсем татти-сыпписĕр çыхăнса пыраççĕ, вĕçĕ те курăнмасть. Шухăшăм тăван яла вĕçрĕ.

Аттем ĕнтĕ ватă, фронта юрăхлă мар, пиччем Карели фронтĕнче çапăçнине пĕлтĕм. Эпĕ унран Смоленск патĕнче çапăçнă чух пĕр çыру илтĕм. Вăл çырнинчен çавăн пек ăнлантăм: вĕсен чаçне резервăра тытаççĕ. Халĕ вĕсен чаçĕ Карелин лăпкă кĕтессинче, пысăк хыр вăрманĕнче, тăп-тăрă анлă кӳлĕ хĕрринче вырнаçнă. Вĕсен чаçĕ резервăра май пичче финсемпе хастар çапăçма, автомат-пулеметран, гранатометпа минометран та пеме хăнăхса пырать. Апат-çимĕçĕ çителĕклине пĕлтерет.

Пичче çырăвĕ мана савăнтарчĕ, вăл унта тĕрĕс-тĕкел пурăннишĕн кăмăллă пултăм.

Госпитальрен тухсан, киле çитсе курас шухăш манăн пĕрре те иксĕлмерĕ. Хальхи ял пурнăçне хам куçпа курас килчĕ. Пĕлетĕп: вăрçă пынă май вĕсен пурнăçĕ те пыл-çу мар, кашнин çурăмĕ çинчех — йывăр тиев. Ытларах мана хам мăшăрăм Лариса мĕнле пурăнни кăсăклантарать. Унпа мĕнле паллашни аса килчĕ.

Эпĕ кӳршĕ салине ялмага çимеллисем илме кайрăм. Пĕлетĕп: çак ялта мана хисеплекен Ченуринсем пурăнаççĕ. Хăй, Петр Михайлович Ченурин, ялти сумлă çын — истори учителе, арăмĕ — агроном. Хĕрĕ, вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн, фельдшер шкулĕнчен вĕренсе тухнă — халĕ тăван салинче хăй ĕçĕпе темиçе çул тăрмашать. Паллах, вăл манран улт—çичĕ çул кĕçĕн. Иртнĕ çул, отпуска килсен, манпа питĕ ăшшăн сăмахларĕ, мана кăмăлланине пытармарĕ.

Тепĕр çултан каллех отпуска килсен, эпĕ Ченуринсем патне кĕмесĕр чăтаймарăм. Тӳррипе каласан, чун çавăнталлах туртрĕ.

Эпĕ ашшĕ-амăшĕпе хĕрне лайăх пĕлнĕрен тата хăйсем те мана кăмăлланăран хама канăç паман шухăша хускатмасăр тăма пултараймарăм.

Вăл ĕç мĕнле пулнине, вулаканăм, йĕркипех каласа парам. Тен, сана пĕлме кăштах кăсăклантарĕ.

Эпĕ кăнтăр тĕлне шукăль тумланма пуçларăм. Анне асăрхарĕ.

— Аркаш, эсĕ хăнана каятăн-им?

— Çапла, анне.

— Салана-и, хайхи Ченуринсем патне-и?

— Çапла. Ăçтан пĕлетĕн? — кăсăкланатăп эпĕ.

— Апла, мĕнле хатĕрленнинчен куратăп, ывăлăм! Амăш чĕри ывăлĕ мĕн шухăшланине туйсах тăрать.

— Питĕ тĕлĕнтеретĕн, анне. Ман шухăшсенех вулатăн пулмалла.

— Лариса — лайăх фельдшерица. Ырă кăмăллă тата çынсене лайăх сиплет, тепĕр врачран та иртterет, теççĕ, — ырлаçа илет анне.

— Сана та сипленĕ-и вăл?

— Манăн кайма сăлтав пулман, авă, хамăр урамри Анюк аппана, утайми пулнăскерне, укол туса чиртен хăтарса хăварчĕ. Пит тăрăшуллă, ўркенмест, ĕçчен.

Ларисăна анне ырлани кăмăла çĕклерĕ, ăна качча илес шухăш çирĕпленчĕ.

Утюгпа якатнă кăвак брюкине, симĕс йăрăмлă, çăлтăрлă çўхе кĕпене тăхăнтăм, пахчана тухрăм, хитре чечексем татса, илемлĕ çыхă турăм. Çума укçа илтĕм те хамăрăн çĕнĕ урампа пилĕк çухрăмри чиркўллĕ яла вĕçтертĕм. Урари çăмăл сарă пушмаксем вĕлтлетсе çеç пычĕç, вĕсем çĕре перĕнмеççĕ те тейĕн. Чун тени кайăк чунĕ пулса, çунат хушса, анăçалла вĕçрĕ. Тўрĕ çулпа кайма шутларăм. Эпĕ Панар улăхĕпе чылай кайрăм. Çав улăхран анăçалла Типĕ вар тăсăлать. Çав варпа ик çухрăм утсан, Лариса ялĕ. Ял кĕтĕвĕ пĕрмай çўренĕрен кунта курăк ўсеймен, вырăнăн-вырăнăн саралса ларнă. Эпĕ васкаса тăвалла хăпаратăп. Çак анлă çул çинче çырмана шыва анакан хĕрупраçсене тĕл пулас килместчĕ манăн. Эпĕ чечекпе ăçта кайнине чухласран, тĕртсе илесрен, йĕплĕ сăмах каласран шикленетĕп. Ман телее, хĕрарăмсем тĕл пулмарĕç, ик-виçĕ шкул ачи çырмана шыва кĕме çиçтерсе аннине çеç куртăм. Яла хăпарсан, пĕр анлă урампа инçех каймарăм, Ченуринсен тăватă чўречеллĕ хўхĕм шурă кирпĕч çурчĕ умне пырса та çитрĕм. Шăп çак çуртра ĕнтĕ манăн чунтан савакан хĕрупраç пурăнать.

Чĕнтĕрленĕ шурă-кăвак хапха. Эпĕ сашулкă çине пусатăп та алăка тĕртетĕп — яри уçăлса каять. Урлине хуман пулнă: хуçисем килте. Эпĕ кил картине хăюллăн кĕретĕп. Мария Павловна, кил картинче ĕçлекенскер, тўрех ман пата утса пычĕ.

— Килĕрех, Аркадий Петрович, эсир яла килнине пĕлтĕмĕр те кĕтме тытăнтăмар. Лариса та кĕçех ĕçрен таврăнмалла. Петр Михайлович хулана райисполкома кайрĕ, вăл та çитмелле. Эсир, Аркадий Петрович, ку чечексене кунта

кӳрӗр-ха, эпӗ всёене халех кӗленчене шыва лартатӑп. Вӗсем час шанса каяççӗ, — ӑшшӑн сӑмахлать манпа Мария Павловна.

Алӑри чечексене ӑна тыттаратӑп. Кил хуçи кӗленче савӑт ӑшне таса шыв ярать те унта лартать. Мария Павловна мана хӑйсен улма-çырла пахчине илсе тухать.

Шӑп пан улмисем пулса çитнӗ вӑхӑт. Пысӑк улмуççисем, грушовкӑсем çинче, хӗрлӗ йӑрӑмлӑ шултӑра улмасем йышлӑ çакӑнса тӑраççӗ. Йывӑç турачӗсем çӗре çити усӑнса аннӑ.

Грушовкӑпа юнашар — шурӑ пыл улми, кӑшт маларах хӗп-хӗрлӗ анис улмисем кӳçа илӗртсе лараççӗ.

Кил хуçи хӗрарӑмӗ мана кашни çимӗç çинчен тӗплӗн ӑнлантарать... Вӑл — сад-пахча ӑстаçи, кашни улмуççие хӑçан сыпни, ӑна мӗнле пӑхса ӳстерни, шӑши кӑшласран, пӗчӗк улмуççие хурама хуппипе çыхса, упраса хӑварни çинчен пӗлтерет. Ку ӗçре ӑна Петр Михайлович та пулӑшса пынӑ.

Мария Павловна мана слива йывӑççисен лаптӑкне те илсе кайрӗ. Вӗсем пахчан пӗр кӗтессине йышӑнаççӗ. Тулли те сӗтеклӗ кӑвак-кӗрен çимӗçсем туратсене аялалла авнӑ. Питӗ йышлӑ пулнӑ вӗсем, йывӑç çулçисем те ун чухлӗ çук пуль. Çӗрте тӑкӑнни те чылай. Хӑшӗсем сурӑлса кайнӑ та çӑра сӗтекне юхтараççӗ. Çавсене курнипех çӑвара тутлӑ шӗвек тухрӗ: ас тивес килчӗ.

Ман шухӑша ӑнланать Мария Павловна, вӑл çавӑнтах курӑка сирсе ӳкнӗ çимӗçсене çутӑ витрене тултарать.

— Мария Павловна, эсир кун чухлӗ сливӑна ӑçта чикетӗр? — кӑсӑкланатӑп эпӗ.

— Нумай çӗре. Хамӑр тӑраниччен çиетпӗр, хӗлле валли компот тӑватпӑр, тӑван-хурӑнташсене паратпӑр, хӗрлӗ эрех те хатӗрлетпӗр. Ытла пулса кайнисене, лӳчӗркеннисене, сыснасем хапӑл тӑваççӗ. Пӗри те сая каймасть.

Эпӗ кил хуçи хӗрарӑмне ырласа илетӗп, Вӑл сӑмахланӑ вӑхӑтра тутлӑ, сӗтеклӗ çимӗçсене савӑнса çиетӗп, хытӑ вӑррисем çӑвартан тухса сирпӗнеççӗ çеç.

Слива ращинчен уйрӑлсан, помидорсем ӳсекен йӑрансем патне ертсе кайрӗ. Ман куçа чышкӑ пек хӗп-хӗрлӗ помидорсем курӑнса кайрӗç. Пирӗн пахчара кун пек шултра помидорсем ӳснине ас тумастӑп.

— «Улӑп» — терӗ кусене пахчаçӑ.— Ятне те хамӑр панӑ. Пӗр помидорӗ 350—400 грамм туртать. Тепӗр йӑранӗнче хур сӑмарти пысӑкӑш помидорсем питӗ йышлӑн çакӑнса тӑраççӗ, кусем те пулса çитнӗ, «Тапӑри çӑлтӑрсем» ятлӑ, — терӗ

вěсене. Виççěмěш йăранра вара ěне чěччи евěр тăрăхла помидорсем куçа илěртеççě, çисе пăхмасăр тӳсес çук. Вěсене вара «инке пӳрнисем» тесе ят панă.

Эпě хуçинчен ирěк ыйтса, икě помидор татса илтěм те тутана-тутана чăмларăм.

Эпир пахчара çӳренě хушăра Лариса ěçрен таврăннă иккен, сěтел çине ěçмелли-çимелли хатěрлесе лартнă. Пирěн пата вăл хавассăн утса пычě.

Хăй шап-шурă платье тăхăннă, пуçěнче çав тěслě шлепке. Уринче те шурă пушмак. Чăн-чăн пирěшти, тейěн.

Вăл тӳрех ман ума пырса тăчě.

— Сире, Аркадий Петрович, пирěн пата курма килнě ятпа ăшшăн саламлатăп, — тесе, мана ăшпиллěн кěтсе илчě.

Эпě ăна ăшшăн кěтсе илнишěн тав турăм.

— Анне, эсě ханана, хăвăн ěçӳпе мухтанса, выçă вěлеретěн... Атя, Аркадий Петрович, анне, пӳрте кěрер, сăмах-юмаха унта тăсар, — чěнчě пире Лариса.

Хěр хăюлăхě ман кăмăла кайрě. Эпě ун хыççăн магнит туртнă пекех ниçта чарăнса тăмасăр утрăм. Мария Павловна помидор татса, хыçала юлчě.

Пăлтăрăн алăк картлашкисем сарлака, вěсене сăрăпа сăрланă, тап-таса, ниçта пěр тусан пěрчи курăнмасть. Лариса шурă пушмакěсемпе çăмăллăн çěкленсе, пăлтăр алăкне уçса ячě.

— Тархасшăн, пирěн кил-çурта кěрсе курăр, — терě вăл хавассăн кулса, хăйěн сěт пек шурă аллипе пăлтăралла кăтартса. Уçă çил çинче хěрелнě пичě хăмла çырли пек илěртуллě, йěрěлче пек пěчěк тути уçăлать те — пěр тикěс ӳснě шапшурă шăлěсем курăнса каяççě, тăпăл-тăпăл кăкăрлăскер, сывланă май чăлт шурă платйи пěрре çěкленсе илет, тепре анать, мăй таран каснă çырă çӳçне кăтралатнă, ăшшăн пăхакан хăмăр куçě мана кăмăлланине сăмахсăрах систерет.

Унăн çинçе те çепěç сасси чěкеç сасси евěрлě.

Эпě хěр хыççăн пăлтăртан ысăк, хăтлă пӳрте кěрсе тăратăп. Шап-шурă стена çумěпе кěрен хыçлă пукансем йěркипе ларнине куратăп. Анлă пӳлěм варринче кăвак çивитти витнě, тăрăхла сěтел; ун çине шурă турилккесемпе тěм тěрлě апатçимěç лартса тултарнă; варринче икě кěленче, этикетка тăрăх иккешне те кăнтăрта ҫăларнă «Хура куççем», «Ҫавказ парнийě». «Хура куççем» кěленчери эрех çутă сăра тěслě, «Ҫавказ парнийě» хăмăртарах кěрен тěслě, иккěшě те вун сакăр градуслă.

Çимеллисем пĕтĕмпех хăйсен пуян çад-пахчинчен.

Ашшĕ-амăшĕ пӳрте кĕриччен манăн Ларисăпа вăрттăн калаçса илмелле: унăн шухăш-кăмăлне, ман пирки мĕн шухăшланине, мăшăрăм пулма килĕштернипе килештерменнине тата ытти ыйтусене. Хĕрпе татăклăн сăмахламасăр ашшĕ-амăшĕпе пуплени çителĕксĕр пулни маншăн паллă.

Мана Лариса сĕтел хушшине ларма сĕнет, анчах эпĕ ашшĕ-амăшĕсĕр унта ларма хирĕçлетĕп, стена çумĕнчи пукансем çине юнашар ларма чĕнетĕп.

Хĕр килĕшет, акă унпа юнашар вырнаçса ларатпăр, вăл эпĕ мĕн каласса кĕтет.

— Лариса, — тетĕп сылтăм аллине хам алла илсе. — Пĕр пытармасăр кала: эсĕ мана кăмăллатăн-и е хисеплетĕн çеç?

Эпĕ хĕрĕн çутă хăмăр куçĕнчен сăнаса пăхатăп, унăн пĕрĕлче пек тутинчен мĕнле сăмахсем илтĕнессе чăтăмсăр кĕтетĕп.

— Эсĕ сумлă хусах, малтан, чăвашсен йăлипе, сан каламалла,

Ăнлантăм: хĕр тĕрĕссех ыйтать, хам туйăма ман уçса памалла, кайран хĕр пĕлтерме пултарать.

Эпĕ хĕрĕн çемçе аллине хытăрах пăчăртарăм, хам питĕ килĕштернине тунмарăм.

— Мĕнпур чунран... — терĕм те Ларисăна чие çырли пек пĕчĕк тутинчен чуп турăм, хĕр хирĕçмесĕр, хăй кăмăлне систерчĕ.

Эпир пĕр самант ытамлашса лартăмăр, хĕр хăй мана кăмăлланине пытармарĕ, манăн мăшăр пуласси те шиклентермерĕ ăна.

— Тен, сана, Лариса, манăн çарти пурнăç кăмăла каймасть, эсĕ ăна та пĕр пытармасăр кала, — пĕлме тăрăшрăм эпĕ.

— Çар пурнăçĕ пирки нимĕн те калама пĕлместĕп, анчах, ман шутпа, унта та çынсемех пурăнаççĕ-çке, тен, хăнăхма пулать. Эсĕ те, Аркаш, ĕмĕр тăршшĕпех çар çынни пулса пурăнмастăн вĕт, службăра çирĕм пилĕк çул ирттерсен, унтан ирĕке тухма та право пур. Çапла-и? — пĕлме каскать Лариса.

Эпĕ çар йĕрки пирки ăна хам пĕлнĕ таран ăнлантаратăп.

— Пурăнсан, çӳç шăтать, тенĕ ваттисем, — кулса сăмахлать хĕр, — туман тиха пилĕкне вăхăтсăр хӳçар мар-ха.

Лариса сăмахĕнче тӳрĕ кăмăллăх, хĕрле тасалăх, çепĕçлĕх сисĕнсе тăрать, ун çине пăхнăçемĕн хăвăн та ырă кăмăллă, таса чунлă пулас килет. Унпа сăмахланăçемĕн сăмахлас ки-

лет, ăслă хĕрпе пуплеме мĕн пек кăсăклă та чун-чĕрешĕн сиплĕ... Унпа яланах пĕрле пулас кăмăл çирĕпленет.

Акă, Мария Павловна та пахчаран тулли карçинккапа таврăнчĕ, тӳрех тĕпеле иртрĕ. Сĕтел тулли çимелли-ĕçмелли курсан, вăл тĕлĕннĕ пек пулчĕ.

— Пĕтĕмпех юмахри пек: сĕтел тулли ĕçмелли-çимелли. Лариса, эсĕ мĕн вăхăтра хатĕрлеме ĕлкĕрнĕ? Вăт çапла пирĕн хĕр: тем вăхăтра хатĕрлет те хурать — пире те апатланма чĕнет. Эсир кама кĕтсе ларатăр, ĕçместĕр-çиместĕр?

— Сире, аннепе аттене, —хирĕçлет Лариса.

— Мĕн пире кĕтес? Хăна пур-çке, çавна тĕпрен хăналас пулать. Эпир килти çынсем, — Мария Павловна «Хура куçсем» кĕленчене уçать те черккесене тултарса, кашнин умне лартать. Пире те сĕтел хушине ларма чĕнет.

Кил хуçи арăмĕ ман ятăмпа черккĕ çĕклет, пире те тĕппипе ĕçме сĕнет. Лариса хăй черккине ман черккепе чăнклаттарать. «Аркадий Петович, сирĕн сывлăхшăн!»— тесе, тĕппипе ĕçет.

Хĕр хыççăн эпĕ те черкке пушататăп. Эрехĕ, чăнах та, ĕçме тутлă та техĕмлĕ.

Черкке ĕçнĕ хыççăн помидор касăкĕсене пĕрин хыççăн теприне çăвара ăсататăп. Сĕтеклĕ те тутлă помидор касăкĕсене кăмăллатăп. Шурă тарелкăсенче симĕс хăярсене те чĕллĕнчĕллĕн тураса тăвар сапнă, хăймапа хутăштарнă.

Мария Павловна тĕрлĕ çимĕçпе сăйлать, эпĕ пурне тутанса пăхма та ĕлкĕрейместĕп.

Çав самантра пӳрте Петр Михайлович кĕрсе тăрать, эпир ĕçсе-çинине курать те тӳрех пирĕн пата пырать.

— Эй, кунта хаклă хăнасем иккен. Ав, мĕн ятпа сĕтел тулли апат-çимĕç! Епле хапăл сире пирĕн кил-йыш! Тавах сире, Аркадий Петрович, пире манса кайманшăн. Çапла, хамăр енне килсен, пирĕн пата та яланах кĕрсе курăр. Сире курманнипе тунсăхлатпăр.

Вăл мана алă парать, ырласа сăмахне тăсать. Петр Михайлович тĕпеле кĕрсе çăвăнать те часах çур литр шур эрехпе сĕтел патне таврăнать.

— Хаклă хăнана, — тет Ченурин, — çак хĕрарăм эрехĕпе сăйлани çителĕксĕр тетĕп, пире çирĕппи кирлĕ, куçран пуçран хĕм кăларттараканни — вара кондицие ларать.

— Эх, аттеçĕм, эсĕ перхелей пек паян сăмахлатăн, чăнчăн эрехçĕ теме пулать, эсĕ ун пек çын мар-çке, мĕншĕн

начар енчен кăтартасшăн хăвна, — кăмăлсăрланать Лариса, ашшĕ çине сивĕреххĕн пăхса.

Мария Павловна та мăшăрне эрех пирки сахалтарах сăмахлама, хăйне яланах учитель виçинче пулма систерет.

— Хисеплĕ кил-йышăм, сирĕнпе пĕтĕмпех килĕшетĕп, анчах та хаклă, яланах кĕтекен хăнана çапах та пĕр черкке çуттипе те пулин сăйласшăн, мана çак хисеплĕ миссие пурнăçлама ирĕк парăр.

Петр Михайлович кĕленче пăккине уçать те малтан хăй черккине, унтан манăнне тулли ярать, хĕрарăмсене хăйсен черккине хĕрлĕ эрех тултарма хушать.

Пурте, черккесем çĕклесе, ура çине тăратпăр.

— Савăнăр, кил-йыш, савăнăр, Аркадий Петрович, мирлĕ те ирĕклĕ вăхăтра çут çанталăкăн пурлăхĕпе киленсе, ĕçсе çиер-ха, кайран çак тĕл пулăва асра тытар. — Вăл пурне те ĕçме сĕнет. Лариса ку хутĕнче черккери эрехе кăшт тутанать те сĕтел çине лартать. Мария Павловнăпа эпĕ çуршар черкке кăна ĕçетпĕр, кил хуçи черккене тĕппипе ӳпĕнтерет.

Ĕçнĕ хыççăн каллех вилкăсем тарелкăсенчи çимĕçсене тирсе илеççĕ те шăлсем хушшине ăсатаççĕ.

Хĕрарăмсем хирĕççине пăхмасăр, Петр Михайлович виççĕ черкке çуттипе эпĕ килнĕшĕн тав туса ĕçрĕ, манăн та унпа виççĕ хутчен çуршар черкке ĕçме тиврĕ. Часах унăн тĕнчери ларутăру çинчен манпа сăмахлас килчĕ.

— Каçарăр мана, Аркадий Петрович, тăванăм, санпа çак ыйтăва сӳтсе явасшăн. Эпир халĕ мирлĕ вăхăтра савăнса пурăнатпăр, анчах та, сирĕн шутпа, çакă нумая тăсăлĕ-ши? Пире тăшмансем çак ырлăхпа пурăнма нумай вăхăт парĕçши? Мĕнле шутлатăр эсир, çар çыннисем, тĕрĕсрех каласан, Хĕрлĕ Çар командирĕсем?

Манăн Лариса, юратнă тусăм, умĕнче политика тĕнчине пĕрре те кĕрсе каяс килместчĕ, анчах истори учителĕ умĕнче халăхи истори чăнлăхне те пытарма юраманнине ăнлантăм.

— Атте, эсĕ каллех политикăна хускататăн, кунта ун çинчен пуплеме кирлех-ши? — ăшшăн хирĕçлет ашшĕне Лариса.

Мария Павловна пире, арсынсене, верандăна тухса ларма сĕнет. Петр Михайловичпа эпĕ верандăри диван çине тухса ларатпăр та хамăра кăсăклантаракан ыйтăва хускататпăр.

— Эсир, хаклă ентешĕм, пулас вăрçă пирки Хĕрлĕ Çар командирĕ пулнă май, мĕн шутлатăр? — çав ыйтăва каллех пачĕ вăл.

— Пытармастăп, — терĕм ăна тӳррĕн, — гитлерла Германи çĕнĕ вăрçа хатĕрленсе çитнĕ темелле, Европăри патшалăхсене хăй айне тунă хыççăн, çитес вăхăтра, пирĕн çине сасартăк та хăватлăн тапăнма пултарать. Вăл пирĕн çара кĕске вăхăтра çапса çĕмĕрсе çĕршыва парăнтарасшăн, совет халăхне нимĕç баронĕсен чури тăвасшăн. Паллах, унччен çур халăхне вут-çулăмра тĕп тăвасшăн. Нимĕç çĕршывĕ пирĕн çĕршыва крокодил пек Урал таран хыпса çăтмалла, ыттине — Япони капиталĕ. Совет çĕршывĕă шăпи çавăн пек чыссăр, килпетсĕр вĕçленмелле. Адольф Гитлерăн «Ман кĕрешӳ» кĕнекинчи тĕп планĕ çапла.

— Ытла хăрушла план, — Петр Михайлович çутă сăнĕ сасартăк тĕксĕмленсе илчĕ, хура куçĕ хура кĕрхи çанталăк пек тĕксĕмленчĕ, сарлака çамки тăватă картлă пулса пĕрĕнчĕ... — Апла, пурнăç вĕçне çитсе тăнă... Эпир çаплах пурăнасшăн тапаланатпăр, пире çаплах мĕн те пулин çитмест тесе, пăшăрханса илетпĕр. Эп вуланă-пĕлнĕ май хам та шухăшлаттăм: çак асар-писер çил-тăвăлран мĕнле сыхланса юлăпăр-ши, пире килсе çунтарса каймĕ-ши тесе. Чăнах та, тем те пулма пултарать. Гитлер Германийĕ çĕнĕ вăрçа шутсăр вăйлă хатĕрленнине историк май пĕлсе тăратăп, вăл питĕ йывăр пулассине те чухлатăп. Эсир ман шухăша çирĕплетсе патăр, сире, хамăр çар командирне, пĕр иккĕленмесĕр ĕненетĕп, — пусăрăнса сăмахларĕ кил хуçи.

— Петр Михалччă, пирĕн калаçу хамăр хушăра кăна пултăр. Ыттине ху та ăнланатăн, — тесе асăрхаттарса илтĕм эпĕ.

— Мана çирĕп шанма пултаратăн: эпĕ арăмна хĕре те уççăн каламан, шиклентермен, халĕ те çавăн пекех пулĕ. Пире, арçынсене, пĕлни çителĕклĕ. Вăхăт хăех кăтартса парĕ. Ман çапах та санран çакна ыйтса пĕлес килет: ниушлĕ пирĕн çар çак хăрушă вăя сирсе яраймĕ, çавăрса çапаймĕ? Мана çак ыйту канăç памасть. — Вăл ман куçран тимлĕ пăхать, эп мĕнле хуравласса чăтăмсăр кĕтет.

Эпĕ ку йывăр та кăткăс ыйту çине хуравлама васкамастăп.

— Ку — эпир мĕнле хатĕрленме ĕлкĕрнинчен, çапăçăва ертсе пыма пултарнинчен килет. Тӳрех каламалла: вăрçи кăçалах тытăнсан, эпир хатĕрленсе çитме ĕлкĕреймен-ха, унăн темиçе пинлĕ танк çарĕсемпе йышлă авиацийĕ пирĕн çара чăлпар аркатса пăрахать, çуррине ытла тыткăна илет, ыттине унăн çар техники какай тăвать, хăй анлă çĕршыва таптаса



НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА Чувашской Республики
Ч-37982

каҫса каять. Гитлер ҫарӗн ертӳҫисем ҫавӑн пек планлаҫҫӗ, — хамӑн пӗлӗве пӗр пытармасӑр каларӑм.

— Эсӗ, хаклӑ ентешӗм, ҫывӑх ҫыннӑм, тӗрӗснех каларӑн пулас. Юрать, кӑҫал 1940-мӗш ҫул кӑна, халӗ ҫу иртсе пырать, вӑл кӑҫал тапӑнма шутламан курӑнать. — Хӑй хаш! сывласа, манпа юмахлать.

— Пирӗн дипломатҫи ҫавна шута илсе, Гитлерпа икӗ ҫуллӑх килӗшӳ тунӑ, 1939—41 ҫулсенче пӗр-пӗрин ҫине тапӑнмалла мар тенӗ, — аса илтеретӗп кил хуҫине.

— Лайӑх пӗлетӗп Иоахим фон Риббентроппа Молотов килӗшӳ туса алӑ пуснине. Эпӗ ҫак килӗшӳ ҫинчен шкул ачисене кашни класрах ӑнлантарса панӑ, — хушса хучӗ Петр Михайлович.

Пирӗн вӑрттӑн калаҫу чылая тӑсӑлчӗ. Эпир пӗчӗк ӗҫкӗ туса, Ларисӑпа кӑҫалах пӗрлешесси пирки ашшӗпе калаҫса татӑлтӑмӑр, халлӗхе Лариса хӑйсен фельдшер пунктӗнче ӗҫлет, эпӗ киле ҫитсе майлашсан, ӑна илме килме пултӑм.

Тепӗр эрнерен Петр Михайловичпа Мария Павловна ҫывӑх тӑванӗсене чӗнсе пухаҫҫӗ.

Эпӗ те атте аннепе пӗрле Ченуринсем патне «хӗр туянма» хура тӑраптас ҫине ларса, колхозӑн чаплӑ ӑйӑрне кӳлсе, кӳршӗ яла вӗҫтеретӗп. Мӗн калӑн: маншӑн савӑнӑҫлӑ самант! Анчах вӑл нумая пырӗ-ши?

Пире хапха умне тухса кӗтсе илеҫҫӗ ялти тӑванӗсем. Тӑрантас ҫинчен ансассӑн, туй йӗркипе эпӗ укҫа сапса памасӑр, мана урам алӑкне уҫса кӗртмеҫҫӗ. Эпӗ кӗсье тулли кӗмӗл, пӑхӑр укҫа хатӗрленӗччӗ. Алла чиксе яратӑп та ывӑҫ тулли вак укҫа кӗрсе каять, эпӗ хапха еннелле сапатӑп, виҫӗ хутчен сапнӑ хыҫҫӑн пысӑк алӑк яри уҫӑлса каять — эпир кил картине сумлӑн кӗретпӗр. Пӳрт умӗнче каллех чарӑну: каллех укҫа сапатӑп. Пире киле кӗртеҫҫӗ. Хӑтапа тӑхлача алӑ тытатпӑр. Аттепе аннене часах кӗрекене лартаҫҫӗ. Эпӗ хӗр патне чӑлана ваксатӑп. Ларисӑна хӗр-тантӑшӗсем чӑвашла тумлантарса тӑратнӑ. Паллама та ҫук. Шап-шурӑ кӗпи ҫине ҫап-ҫутӑ шӳлкеме ҫакнӑ, кӗпи аркине, ҫанӑ вӗҫне илемлӗ тӗрленӗ, икӗ хӑлхинче ылтӑн алкасем йӑлтӑртатаҫҫӗ, пуҫне тухья тӑхӑнтартнӑ.

Эпир Ларисӑпа мала тухнӑ ашшӗ-амӑшӗ умне тӑратпӑр. Вӗсем пире пӗрле пурӑнма ырлӑх-сывлӑх, телей сунса пиллеҫҫӗ. Эпир ӗмӗр вӗҫне ҫитиччен пӗрле юратса пурӑнма тупа тӑватпӑр. Атте анне те пире ӑшшӑн саламлать, парнесем па-

рать. Тăванĕсем пурте пыра-пыра алла пăчăртаса саламлаççĕ, эрех-сăра ĕçтереççĕ. Эпир иксĕмĕр те черккисене тытса параттпăр — ĕçместпĕр.

Пире, иккĕне, сĕтел пуçне, паллă вырăна, лартаççĕ, пирĕн икĕ енче — атте-аннесем. Шукăль тумланнă тăванĕсем сĕтел йĕри-тавра ларса тухнă. Хаваслă туй юрри чăвашла та, вырăсла та янăрать. Туя пынă кӳршĕ-аршăсем вĕçĕ-хĕррисĕр сăра-эрех ĕçтереççĕ, кил картинче купăс сасси янрать. унта пуса каччисем çĕр кисретсе ташлаççĕ. Туй çĕрлеччен тăсăлать.

Эпир Ларисăна хура тăрантас çине лартса хамăр яла вĕçтеретпĕр. Çапла пирĕн çĕнĕ пурнăç пуçланса каять.

Çакна эпĕ госпитальре тĕлĕкри пек аса илсе выртатăп. Ак хăçан çăтмахри пек пурнăç пулнă!

Ирхине медсестра градусник лартса тĕрĕслесе кайрĕ, температура 37,5[3], вырăна ларман-ха. Аманнă хула сиплерĕ, сурана пенициллин маçĕ сĕрсе çыхрĕ. Температура чакарма укол турĕ.

Ирхи апат çинĕ хыççăн эпĕ уçăлма госпиталь картишне тухрăм. Кунта сывалакансем валли йĕркипех вăрăм, кăвак тĕслĕ тенкелсем вырнаçтарнă.

Эпĕ Пушкинăн «Полтава» поэмине алла тытса тенкел çине пырса вырнаçрăм. Нумай та вулама ĕлкĕреймерĕм, ман пата Лариса вĕçтерсе çитрĕ.

— Аркаш, сывлăх сунатăп! Мĕнле туятăн? — кăсăкланчĕ вăл. Эпĕ ăна алă тытрăм та ларма хушрăм.

— Мĕнле майпа ир çитрĕн? — тĕлĕннĕ пек пулатăп эпĕ.

— Халĕ вунă сехет çитет те... Эс çаплах ир тетĕн. Колхоз председателĕн çумĕ хулана пан улми сутма пĕр кузов тиесе килчĕ, эпĕ унпа тата тепĕр сутуçăпа кабинăра ларса килтĕмĕр, — терĕ арăм.

Лариса кĕрен сумкинчен хĕрлĕ питлĕ улмасем кăларса мана тыттарать.

— Çи, Аркаш, еnле хӳхĕм, пылак! Çăварта канхвет пек ирĕлет.

Эпĕ икĕ улмине илетĕп те пĕрне çиме тытăнатăп. Чăнах та, Лариса каланă пекех, кĕрпеклĕ те тутлă...

Вал мана ялти хыпарсене пĕлтермеваскать. Горький хулинчи госпитальрен икĕ инвалид яла таврăннă: пĕри — хăрах ураллă, костыльпе çеç хăйсен тĕлне тухса ларать, теприн сылтăм аллинчи пуç пӳрни çеç юлнă, ытти пӳрнисем татăк.

— Вĕсене эсĕ пĕлместĕн пулĕ — 20—22 çулхи çамрăксем...

Иккĕшĕ те авланман, манран виç-тăват çул кĕçĕнрех, пирĕн шкултан вĕренсе пĕтерчĕç, колхозра ĕçлесе пурăнчĕç. Вязьмăшăн пыракан çапăçура вилнисем те, аманнисем те чылай теççĕ. Хусан, Пермь госпиталĕсенчен çырусем килеççĕ. Ял çыннисем нимĕç çарĕ Мускава çитет пулĕ тесе, хăраса калаçаççĕ... Эсĕ мĕнле шухăшлатăн, Аркаш? — Лариса тĕсесе мана куçран пăхать.

— Чӳк уйăхĕ тĕлнелле, тен, Мускав таврашне çитĕ, анчах ăна пурпĕр илеймест, алли-ури хуçăлса пĕтет, йывăр аманнă пуçне те сĕклеймн пулать, — ăнлантаратăп ăна.

— Ун пек пулсан, шутсăр лайăхчĕ. Эпĕ хам пата сиплеиме пыракан çынсене çапла каласа лăплантарма тăрăшатăп. Вĕсем манран, вăрçă пирĕн пата кĕрлесе çитмест-и, тесе пĕрмаях ыйтаççĕ. Халĕ ĕнтĕ сан сăмахсемпе хуравлама пултаратăп. Ялта тем тĕрлĕ сăмахлакан та, тĕрĕсрех каласан, сӳпĕлтетекен пур.

Эпĕ ăна хăюллăрах пулма ыйтрăм. Хĕрлĕ Çар чĕнмен хăнасемпе паттăр çапăçнине палăртрăм.

— Сана госпитальре хăçанччен тытаççĕ? Сиплекен Аникин врач сурану пирки мĕн калать? — пĕлме тăрăшать Лариса.

— Нумаях тытас çук: сылтăм хулри суран тӳрленсе çитет, тепĕр эрнерен кунтан ăсатма та пултараççĕ.

— Ниушлĕ, Аркаш, сана тӳрех фронта ăсатассĕ? Киле те кĕрсе тăмастăн-и? — чăтаймасăр ыйтать мăшăрăм.

— Пĕр эрнелĕх те пулин киле пыратăпах. Унран ытлашши памĕç, — пĕлмĕ пек хуравлатăп хам.

— Госпиталь хыççăн эсĕ кам аллине çакланатăн? Санпа кам хусаланать? — пĕлме тăрăшать Лариса.

— Хĕрлĕ Çара юрăхлă пулсан, госпитальрен тӳрех военкоматамата яраççĕ. Облвоенкомат мана хăш фронта разнарядка пур, çавăнта ăсатать. Эпĕ унччен Хĕвел анăç фронтĕнче çапăçнă — манăн çавăнта çул выртать, тĕрĕсрех каласан, хам çапăçнă чаçе,— ăнлантаратăп эпĕ ăна.

— Вара камран ыйтма тивет тăван киле пыма? — чăтăмсăр кăсăкланать вăл.

— Госпиталĕн право çук, военкомат кĕске вăхăта яма пултарать. Эпĕ çапла шутлатăп.

— Эсĕ, Аркаш, киле пыма тăрăш, сана пурте тем пекех кĕтетпĕр. Санăн хăвăн та пире курас килет пулĕ.

Эпир кăнтăрлахи апатченех пуплесе лартăмăр, сăмах сыпăнсах пычĕ. Апата кĕрес умĕн эпĕ çамрăк арăмпа ăшшăн уйрăлтăм. Вăл уйрăлнă чух яланах куççуль кăларать, пуçне

ман кăкăр çине хурса шăппăн йĕрет, эпĕ ăна чунĕ лăпланиччен йĕме ирĕк паратăп. Анланатăп эпĕ: пирĕн чуп-чуп уйăхĕ те йĕркеллĕ пулса иртмерĕ, эрне хушши кăна пĕрле пултăмăр, ун чухне васкаса мана чаçе таврăнма телеграмма çитрĕ. Халĕ акă госпитальре — çын умĕнчи тĕл пулусем кăна, вăрттăн калаçма кĕтес те çук. Ку тĕл пулусем чун-чĕре туртăмне çырлахтараймаççĕ.

Вăхăт малалла шурĕ. Юпа уйăхĕ те персе çитрĕ. Эпĕ Тураевпа тата çывăхрах паллашрăм. Вăл та ман пекех Смоленскшăн пынă хаяр çапăçура аманнă. Тураев артиллери дивизионĕн командирĕ пулнă май, виçĕ батарейăна ертсе пынă, унăн танксене хирĕç пемелли 75 миллиметрлă вун икĕ тупă пулнă. Кашни тупăн расчечĕ ултă çынран тăнă.

Унăн дивизионĕ фашистсемпе харсăр çапăçнă, кунне нимĕç танкĕсен вуншар атакине сирсе яма пултарнă, тăшман техники масарти пек купаланса выртса юлнă, анчах уйăх ытла çапăçнă хыççăн артиллери дивизионĕ те пысăк çухату тўснĕ, дивизионра икĕ тупă кăна юлнă, ăна хăйне те нимĕç снарячĕн ванчăкĕ сулахай аякĕнчен лекнĕ те икĕ шăммине хуçса хăварнă. Вара вăл çак хулари эп выртакан госпитале лекнĕ. Иксĕмĕр те офицерсен палатинче юнашар выртса сиплеnетпĕр.

Юрий Михайлович Тураев майор нумай сăмахламасть, анчах йĕркеллĕ калаçакан çынна итлеме кăмăллать. Вăл Горькире артучилище пĕтернĕ. Çирĕм ултă çулта. Авланман, ашшĕ çук, амăшĕпе аппăшĕ Воротынец хулинче пурăнаççĕ. Амăшĕ — учительница, аслă классенче вырăс чĕлхипе литературине вĕрентсе пурăнать. Тураев хăй математикăпа физика предмечĕсене кăмăллать, вĕсемпе вăл шкулта та пилĕк паллăсемпе анчах вĕренсе пынă. Госпитальрен тухсан, темиçе кунлăх килне кĕрсе тухма шухăшлать. Эпĕ унпа хăш числора Мускавра Çар министерствинче пулмаллине те палăртса хутăм.

Юпа уйăхĕн варринче пире иксĕмĕре те, сывалнăскерсене, госпитальрен ăсатрĕç. Мана кĕтсе илме Лариса колхоз лашипех çитрĕ. Хăй пĕччен мар, ватăрах лавçăпа.

Мăшăрăм хама илме пынăшăн питĕ савăнтăм. Ара, эпĕ эрнелĕх киле каятăп-çке. Вăрçă вăхăтĕнче пĕр сехет тĕл пулса пĕрле пулни те мĕн пек телей! Ăна вулаканăм хăех лайăх ăнланать.

Хура кĕр пулсан та, çанталăк типĕ те ăшă тăчĕ, çумăрсем çуса çынсене йăлăхтармарĕç. Йывăççенчен нумайăшĕ, çав шутра юмансем те, хăйсен çулçине тăкайманччĕ.

Пирĕн лав Етĕрне еннелле каякан асфальт сарнă сарлака шоссепе васкарĕ. Çул икĕ енĕпе шултра юмансем шăппăн ĕнтĕркенĕн ларăççĕ. Унта-кунта, çÿлти туратсем хушшинче, шупкаланма пуçланă пакшасем сиккелени курăнах каять. Улатакка мăн юмансен вуллине хăйĕн шĕвĕр сăмсипе шĕке шыраса, таклаттарать те таклаттарать, вăрман кичемлĕхне сирет.

Пире хирĕç тырă тиенĕ тулли лавсем умлă-хыçлă иртеççĕ, колхозсем тырă хатĕрлев кĕлетсене патшалăх валли ăсатаççĕ.

Лавсем çинче хĕрсемпе шкул ачисем ларса пыраççĕ. Пĕр вăйпитти арçынпа маттур каччăна та курмастăн вĕсем хушшинче. Çак ачасемпе хĕрсем — çĕршывпа фронта тăрантаракансем ĕнтĕ. Каласан ĕненмелле те мар, анчах ху куçпа куратăн та ирĕксĕрех ĕненетĕн. Мана, кăвак гимнастеркăпа хром атă, хĕрлĕ çăлтăрлă кăвак картуз тăхăннă çынна, вĕсем тинкерсе пăхаççĕ. Ку командир яла курма килет ĕнтĕ, тесе шухăшлаççĕ пулас.

Кунĕпех кайнă хыççăн каç кÿлĕм хамăр яла çитсе кĕретпĕр. Ял халăхĕ йĕтем çинче тырă çапать, молотилка кĕрлени те илтĕнет, хĕрарăмсемпе хĕр упраçсем тăпачсемпе пăттипатти, пăтти-патти çапни те илтĕнет. Каç ĕнтрĕкĕ çапнă пулсан та, ял халăхĕ ĕç пăрахман, çанталăк улшăниччен типĕлле йĕтем çинчи тырпула тирпейлесшĕн тăрмашать.

«Ял халăхĕ — маттур, канма пĕлмест», — шухăшлатăп эпĕ. — Тырпул хакне те лайăх пĕлет. Вăл пĕтĕм халăх пурнăç тыткăчи».

Лавçă лашана пирĕн кил умне çитсе тăратать. Атте кил хушшинче пулнă-мĕн, урапа сассине илтнипе тÿрех урама сиксе тухать. Вăл утмăла çитет пулсан та, правур та çивĕч, вăй-халлă.

Эпĕ урапа çинчен сиксе антăм. Вăл мана ыталаса илчĕ, питрен чуп турĕ. Эпĕ вăрçă вутĕнчен ĕнсе тухнине пĕлет вăл, сывă юлнăшăн тата хăйсене килсе курнăшăн чунтанах савăнать. Хам та ăна, хытанкаскерне, ыталатăп, сылтăм аллине пăчăртатăп.

— Халь сывлăху мĕнле? Миçе кунлăха ячĕç киле? — кăсăкланать атте. — Тен, вăрçă вутне урăх кĕместĕн?

— Сывăлăх аптрамасть халĕ. Ытти пирки кайран калаçăпăр, — тетĕп аттене.

Анне те урама сиксе тухрĕ, пурне те киле кĕме чĕнчĕ. Лавçă лаша леçме выльăхсен картине васкарĕ, унтан таврăнсан, пирĕн пата килме ыйтрăм.

Анне пире кĕтнипе паян колхоз ĕçне те кайман иккен: çимелли-ĕçмелли тата выртса тăма вырăн хатĕрленĕ.

Эпир Ларисăпа иккĕн лаç умĕнче çакăнса тăракан кăмкана шыв тултарса пит-куçа нăтăртатиччченех çурăмăр, шăлăнтăмăр, вара пӳрте кĕтĕмĕр.

Анне пире тӳрех сĕтел хушшине ларма ăшшăн та тараватлăн сĕнчĕ, Лариса малтан, унтан хам кĕрсе ларатăп.

Сĕтел тулли çимелли: икерчĕ, хуплу, аш кукли, хăпарту, винегрет, уйрăм тарелкăсемпе помидор, хăяр, хĕрлĕ, сарă пан улмисем...

Атте сăра та тума ĕлкĕрнĕ, эрех те илнĕ. Эпĕ килнĕ ятпа кӳршĕсем те каçрĕç, вĕсем чăмпа сăра йатнă. Ĕçме-çиме тытăниччен Мария Павловнăпа Петр Михайлович тавăхăтра персе çитрĕç. Хуньамапа хуньăма пирĕнпе юнашар лартрĕç. Вĕсем те пуш алăпа килмен, чăвашсен йăли-йĕркипе шăрттан, виç витре кĕрекен пичкепе сăра тата тепĕр четвĕрт эрех пур вĕсен. Вара ĕçкĕ пуçланса кайрĕ.

Лариса мана аякран хуллен тĕртрĕ.

Ĕçместпĕр, тăраниччен çиетпĕр. Эпир малтанхи черккине кăштах сыпса патăмăр, унтан çиме тытăнтăмăр, темле ыйтсан та, хистесен те — текех ĕçмерĕмĕр.

Тĕл пулу çур çĕр çитиччен тăсăлчĕ, кӳршĕсем, килнĕ хăнасем чылаях ӳсĕрĕлчĕç, чăвашпа вырăс юррисене хăйсем пĕлнĕ пек янратрĕç, хăшĕсем ташласа та илчĕç. Эпир Ларисăпа ик-виçĕ хут ташларăмăр. Çур çĕр иртсен, канмалла тесе, хăнасене хăварса, кĕлете çывăрма тухса шăвăнтăмăр.

Иккĕн те, вĕри çамрăксем, йăлт хывăнтăмăр. Анлă кравать çинчи çемçе тӳшекпе минтер пире ăшшăн кĕтсе илчĕç.

Ирхине сасартăк вăранса каятăп: çумри пăпану кӳрекенни тарса кайнă, вăл хуньамаран кая юлса çывăрасшăн мар, килти ирхи ĕçсене хăй йĕркелесшĕн васканă.

Эпĕ, тăван килте канса юлас тесе, ир тăма васкамастăп. Тĕрĕссипе каласан, ман ытларах канас килет. Сулахайран сылтăм енне çаврăнса выртатăп та каллех çывăрса каятăп. Ирхи апат пиçсен, мана, çиме тăмалла тесе, Лариса шырса вăрататъ.

Эпĕ хăвăрт сиксе тăратăп та кил картине тухса сивĕ шывпа çăвăнатăп, пахчана кайса физзарядка туса илетĕп, анкарти хыçне тухса, пĕр сухрăм таран чупатăп. Пӳрте кĕрсе килйышпа апатланатăп, аннепе мăшăр та мана тутлăрах çитерме тăрăшаççĕ.

Мана пĕр кӳршĕ хамăр ял çынни — Орлов Герман Федо-

тович майор — ғманӑ хыççӑн сывалса киле таврӑнни çинчен пӗлтерчӗ.

— Аркадий Петрович, вӑл сире курасшӑн, тен, эсир ун патне Анаткаса кайӑр. Вӑл сире кӗтсе илме хатӗр.

Эпӗ унран ик-виç çул аслӑрах, анчах ача чухне лашасем ситерме Темечке улӑхне çӳренине лайӑх ас тӑватӑп. Вӑл хӑюллӑ та сивӗч ачаччӗ, хӑйсен çӳрен лаши çине вӑшт! кӑна утланса ларатчӗ те кӑркӑс ачи пек çил пек вӗçтеретчӗ. Лаши те вара çамрӑк та юскӑнччӗ Пӑнар пӗвинче шыва кӗме, ишме-чӑмма ӑна ситекен сахалччӗ. Шкулта та лайӑх вӗреннипе палӑрса тӑратчӗ вӑл. Эпӗ вӑтам шкул пӗтернӗ хыççӑн Ленинграда пулемет çар училищине вӗренме кайрӑм, унта виçӗ çул вӗрентӗм. Ялти çамрӑксен малаллахи шӑпипе кӑсӑклансах кайман. Акӑ, халӗ яла килсен, хам ача чухнехи юлташсен кунçулӗпе кӑсӑкланма пуçларӑм. Манӑн халӗ Амӑрткайӑк Герман пурнӑçӗпе паллашмаллах.

## АМАРТКАЙАК ГЕРМАНӖ

Лариса ирхи апат хыççӑн хӑйӗн фельдшер пунктне ӗçе васкарӗ. Кӑнтӑр тӗлне киле таврӑнма пулчӗ. Эпӗ унччен хӑйхи çамрӑк чухнехи юлташӑм патне çул тытрӑм.

Анаткаспа ӑна килте мар, мучӑшӗ патӗнче хӑнара шыраса тупрӑм.

Урамалла тухакан икӗ чӳречеллӗ кивӗ пӳртре виçӗ вата тата тепӗр вӑтӑр пиллӗксенчи арçын сӗтел хушшинче сӑра ӗçсе, пуплесе лараççӗ. Ватӑ хӗрарӑм вӗсене валли çимеллисем сӗтел çине пыра-пыра лартать: пысӑк çатмапа шаритленӗ çӗр улми, йӳçӗтнӗ хӑяр, уйрӑм йывӑç чашӑкпа хӗрлӗ помидор.

Кил хуçи — Амӑрткайӑк Куçма Степанччӑ — Хветут Германӗн мучӑшӗ. Вӑл мӑн витререн алтӑрпа сӑра ӑсать те йывӑç куркасене тултарать.

Эпӗ кашнинех сывлӑх сунтӑм, Хветут Германне госпитальрен сывалса килнӗ ятпа саламларӑм, — вӑл ура çине тӑрса мана алӑ пачӗ. Иксӗмӗр те нумай улшӑннӑ, çапах та пӗр-пӗрне хӑвӑрт палласа илтӗмӗр.

Хветут Германӗ, сулахай хулне сипленӗ пулсассӑн та, аллине çӳлелле кӑшт кӑна çӗклет. Ӑна пӗр уйӑхлӑх киле сывлӑхне тӳрлетме янӑ-мӗн. Тепӗр эрнерен каллех фронта кайма вӑхӑт çитет.

Мучӑшӗ мана та сӑра стаканӗ тыттарчӗ. Вӑл пурне те хӑналарӗ. Сӗнчӗ. Пире, фронтовиксене, уйрӑмах хистерӗ.

Ҫапăкла та хӳхĕм сарана эпĕ кăмăлласах, хуҫине ырла-ырлах ĕҫрĕм.

Хветут Германĕ хăй вилĕмрен мĕнле хăтăлни ҫинчен тĕплĕн каласа пачĕ, ăна пурте шăплансах илтерĕмĕр. Акă унăн аса илĕвĕ.

«...Эпĕ тăна кĕрех кайрăм. Хам нимĕн те ăнланмастăп. Пач тĕттĕм, нимĕн те курмастăп. Сылтăм алла тапратма тăратăп — темĕн чарса тăрать, хускатаймастăп, вăл ҫав тери хытă туртса ыратать. Икĕ урана та пачах хускатаймастăп, тем скер, ывăр япала пусса тăрать. Эпĕ ӳппен выртатăп иккен, ҫавна май сывлама пултаратăп, пуҫ кăштах хускалать, анчах ăна хускатсанах, икĕ енчен те тăпра тăкăнать.

Куҫа уҫрăм: кун ҫути кăштах сăрхăнать — нумай мар: йĕри-тавра ҫăра та хĕрлĕ тĕтре карса илнĕ пек. Тĕтре мĕншĕн хĕрлĕ пултăр? Ăнланмастăп.

Мĕн пулса иртнине ҫине тăрсах аса илме тăрăшатăп. Ара, пирĕн батальона ҫĕнĕ аслă политрук ярса панăччĕ. Нимĕҫсен танк атаки икĕ сехет хушши тăсăлчĕ. Пирĕн артиллери вĕсене хытă ислетрĕ. Вăтăр ытла танк хамăр окопсем умĕнче ҫунса кайса е арканса юлчĕ.

Аслă политрук хыттăн кăшкăрса окопран сиксе тухрĕ те: Ҫĕршывшăн! Сталиншăн!» тесе кăшкăрса чупрĕ. Эпĕ те хам батальона ҫĕклесе нимĕҫсен пехотине хăваларăмăр. Нимĕҫ хытă тарчĕ. Эпир хавхаланса ун хыҫҫăн вирхĕнтĕмĕр.

Анчах савăнма иртерех пулнă-мĕн. Сасартăк пире нимĕҫ артиллерийĕ шăлма тытăнчĕ. Снарядсем татти-сыпписĕр килсе ӳкеҫҫĕ те темиҫе салтака ҫавăнтах тĕп тăваҫҫĕ. Снаряд анчах-и — минăсем те ыхлатса илеҫҫĕ те шартлатса ҫураласҫĕ. Ман батальонри салтаксем чăл-пар саланса пĕтрĕҫ. Аслă политрук ҫаплах кăшкăрса чупать. Унччен те пулмарĕ, ун умне снаряд ӳкрĕ, нимĕн те юлмарĕ унран. Эпĕ ҫакна куртăм та умри таран мар шăтăка сикрĕм. Ҫав самантра умрах темскер кĕрĕслетрĕ — кайран нимĕн те ас тумастăп. Мĕн чухлĕ выртнă — пĕлме хĕн.

Халĕ тăна кĕнĕ май: «Ăҫта эпĕ?» тесе шухăшлатăп. Хама упрас туйăм мана ҫине-ҫинех кăшкăрма хистет.

— Юлташсем, пулăшăр!» — тесе темиҫе хут вăйсăррăн кăшкăратăп, анчах хирĕҫ пĕр сасă та илтместĕп.

Таҫта инҫетре тупăсенчен пени, ҫĕр кисренни кăштах илтĕнет. Ҫил вĕрмест, хвел хĕртмест. Пĕр ҫутă та курăнмасть. Ăҫта эпĕ? Ҫĕр айĕнче пулмалла. Пуҫа хускатсанах тăпра тăкăнать. Кунтан тухаймасăрах вилсе выртатăп пуль. Хăтăлма

май çук-ши? Хăранипе тарласа кайрăм. Халĕ мĕнпур вăя пухса кăшкăрма пуçларăм.

— Юлташсем! Хăтарăр мана!

Çак сăмахсене татти-сыпписĕр калатăп. Мĕнпур вăя пухса урасене хускатма тăрăшатăп, тапалансан-тапалансан, пĕр ури пĕçĕ таран ирĕкленнине сисрĕм, ун çинчи тăпрана сирме пултартăм иккен. Унтан сылтăм урана хытăрах та хытăрах хускатрăм.

Уçă сывлăш та сăрхăнса çитрĕ ман пата. Епле лайăх иккен вăл. Нумай мар пулин те чунăма самант уçăлтарчĕ. Тĕлĕнмелле: тупăсем пенĕ сас та хытăрах илтĕнет. Такам асăрханса пуснă ура сассине туятăп: кăпăрт-кăпăрт. Акă, чăнах та, такам ман пата килчĕ, çĕр çине выртса пĕшкĕнсе сывларĕ. Эпĕ сылтăм урана хытăрах та хытăрах вылятатăп. Ниушлĕ çакна курмасть ку этем?

— Эй, хаклă юлташăм! Чавса кăлар-ха мана. Тархасласа ыйтатăп: хăтарсамччĕ мана!

Сасартăк çав самантра:

— Кунта килĕр! Кĕреçепе килĕр! — тенĕ сасă пуç вĕçĕнчех илтĕнчĕ. Сасси хĕрарăмăн. Эпĕ шартах сикрĕм, чĕре савăнса тапма пуçларĕ.

— Медсестра! Тархасшăн, хăтар мана вилĕмрен! Ан пăрахса кай. Тархасласа ыйтатăп. Ĕмĕр-ĕмĕр сана манмăп, ырăпа асăнăп, — чунран ӳкĕтлерĕм хĕрарăма.

Çав авăкра манран инçех мар снаряд ӳксе çурăлчĕ, çĕр чĕтресе илчĕ, эпĕ каллех ăс-тăна çухатрăм, нимĕн те ас тумастăп. Инкек çине синкек тенĕ пек, тăпра айне юлтăм. Мĕн вăхăт выртнă—нимĕн те ас тумастăп. Çакăнта чун тухма пултарнă. Ман вилĕме атте-анне те, Эмиль арăмпа ывăл та пĕлес çукчĕ — хыпарсăр çухалнисен шутне кĕрсе юлаттăм.

Пĕр ирхине эпĕ тăна кĕрсе çитрĕм. Хальхинче хам патăмра калаçнă сасăсем илтĕнеççĕ. Пĕри ман пуçелĕке тӳрлетрĕ.

— Кам эсĕ? — тĕлĕнсе ыйтатăп çакăнтан.

— Эпĕ ... медсестра, — хуравларĕ сасă. — Тăна кĕтĕн-и? Ай-яй, час тăна кĕреймерĕн.

— Ăçта эпĕ?

— Санбатра. Халĕ ĕнтĕ вилместĕн, — лăплантарчĕ мана çамрăк медсестра.

Пăхатăп — умра шап-шурă халат тăхăннă, кăвак куçлă, йĕтĕн çӳçлĕ, хитре сестра тăра парать.

— Пуç ыратать-и е тата урăх мĕн? — пĕлесшĕн пулчĕ вăл.

Эпĕ пуç кашлапине, сулахай хулă ыратнине пĕлтертĕм.

— Санпа тăрмашма тиврĕ, — терĕ сестра. —Юрать эс, майор, çирĕп те чăтăмлă. Эпир вăйлă çапăçу хыççăн фельдшерпа вăрçă уйне пăхма тухрăмăр. Пĕлетпĕр: йывăр аманнă е тăнсăр пулнă боец е командир тупăнать. Унччен санитарсем аманнă салтаксене вăрçă уйĕнчен чылай илсе тухрĕç. Эпĕ пĕр çĕртен, фельдшер тепĕр çĕртен пăхса пыратпăр. Курах каятăп: тарăн мар хушăкра тăпра тĕмески пур. Çав тĕмескен сылтăм енче тăпра айĕнчен атă кĕлли курăнса выртать. «Кунта пĕр-пĕр вилнĕ салтака е командираваскаса пытарнă-ши?» — тесе шухăшласа тăратăп. Çав авăкра атă кĕлли хускана-хускана илчĕ Ай-уй! Ку тĕмеске айĕнче чĕрĕ çын! Ăна халех чавса кăларса хăтармалла. Çав вăхăтра нимĕç артиллерийĕ каллех пеме тытăнчĕ. Эпĕ çывăхри траншейăна чăмрăм, манран инçех мар пĕр снарячĕ ӳксе хаплатрĕ. Юрать, пĕлнĕ пекех, малтанхи вырăнта юлмарăм. Юлнă пулсан, çавăнтах пĕтеттĕм, сана хăтарасси те пулмастчĕ. Нимĕçсем пеме чарăнсан, каллех çав тĕмеске патне пытăм. Нимĕнле сас-хура та çук, сылтăм ура та хускалмасть. Эпĕ фельдшера чĕнсе илтĕм, йăваланса выртакан пĕчĕк кĕреçесем тупрăмăр, хайхи тĕмескене ик енчен чаватпăр, чавнă май çурăму çинчи сумка тухрĕ, плащ-палатка курăнса кайрĕ, кăвак гимнастерка. Часах хăвна та тăпра айĕнчен кăларса, месерле хутăмăр. Эпĕ санăн сулахай аллунти чĕре таппине тĕрĕслетĕп: вăл хуллен тапать. Чĕрĕ! Халех носилкка çине хурса кунтан илсе тухмалла!

Фельдшер наçилкка шырама кайрĕ. Часах вăл ăна тупса килчĕ. Эпир сана çĕклемелли хатĕр çине хутăмăр та çул çине илсе тухрăмăр. Санитари машини çине лартса, çывăхри сиплев çуртне ăсатрăмăр. Сана тăна кĕриччен сиплеме хам та кунтах юлтăм, аманнă кашни çынна уйрăммăн пăхса тăма медработниксем çуккипе мана хăварчĕç. Пытармастăп: сана вилме парасшăн пулмарăм. Мĕншĕнне те пĕлместĕп: саншăн, тăван пиччемшĕн тăрăшнă пекех хыпкалантăм. Эсĕ икĕ талăк хушши пурнăçпа вилĕм хушшинче выртрăн. Сана çăвартан тутлă чей шывĕ, чĕрене пулăшма корвалол, ăс-тăна вăратма эмел темиçе хутчен ятăм. Тăрăшни харама каймарĕ — эсĕ малтан куçна уçрăн, хускалса илтĕн, унтан мана курах кайрăн та ыйту хыççăн ыйту пама тытăнтăн. Халĕ ĕнтĕ сывалатăн. Санăн гимнастерка кĕсйинчен офицер билетне кăларса пăхрăмăр, унта пĕтĕмпех çырнă: Орлов Герман Федотович, 1916 çулта Чăваш Республикинче хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Майор, çуран çар командирĕ, 257 полк-

ра 3-мӗш батальонра фашистсемпе ҫапӑҫнӑ, ҫемьеллӗ — арӑмпа ывӑл ача пур. Пӗтӗмпех ҫапла-и? — мана куҫран пӑхса ыйтрӗ чипер хӗр.

Эпӗ унӑн ятне ҫавӑнтах пӗлме тӑрӑшрӑм. Вера ятлӑ иккен.

— Документра тӗрӗссине ҫыраҫҫӗ пулӗ, — кӗскен тавӑртӑм ӑна. Манӑн пуҫ шавланӑран ҫынпа сӑмахлас килместчӗ.

— Эпӗ эсӗ тӑна кӗриччен кӑна кунта юлнӑччӗ. Халӗ манӑн ӗҫ вӗҫленчӗ ӗнтӗ. Мана каллех вӑрҫӑ хирӗ кӗтет. Сывӑ пул. Часрах ура ҫине тӑр, майор юлташӑм.

Эпӗ ӑна пуриншӗн те тав турӑм, малашне те аманнӑ ҫынсене вилӗмрен хӑтарма ӑнӑҫлӑх сунтӑм.

Мана часах санчаҫрен Вологда хулинчи эвакогоспитале илсе кайрӗҫ, нумай ҫӗрте сыватрӗҫ, юлашкинчен Горький хулинчи пӗр эвакогоспитальре сывалса ҫитиччenех выртрӑм. Акӑ халӗ тӑван ялта виҫӗ эрне сывлӑха ҫирӗплетсе пурӑнатӑп. Санӑн мӑшӑру Лариса мана хул ыратнӑран уколсем тӑвать. Ырӑ кӑмӑллӑ, лайӑх фельдшерица. Нимӗн те калаймӑн. Манӑн мӑшӑра ырласа сӑмахлать.

Вӑл та Смоленск хулине хӳтӗленӗ, унти юнлӑ та йывӑр ҫапӑҫусене аса илчӗ, нимӗҫсен авиацийӗ сывлӑшра хуҫа пулса тӑнипе пирӗн ҫуран ҫар, мирлӗ халӑх ытла пысӑк ҫухатусем тӳснишӗн хытӑ пӑшӑрханчӗ, ман пекех иккӗмӗш фронта Англипе США уҫманнишӗн вӗсене ултавҫӑ ырӑнне хурса пуплерӗ. Унпа ялти икӗ ватӑ та килӗшрӗ, вӗсем Куҫма Хветучӗ (майорӑн ашшӗ) ярса паракан кӑпӑклӑ сӑрана ырла-ырла лӗрккерӗҫ...

Хветут Германӗ хӑйӗн арӑмӗ, Эмиль, йӗтем ҫинче ытти хӗрарӑмсемпе пӗрле тырӑ ҫапма кашни кун ҫӳренӗшӗн кӑмӑлсӑр пулнине мана систерчӗ.

— Кашни кун ирхине Хветут Ваҫлейӗ, пирӗн бригадир, утмӑл ҫулхи ватӑ, арӑма тырӑ ҫапма чӗнет, пӗр кун та килти ӗҫсене тума хӑвармасть. Эпӗ калаҫса та пӑхрӑм — килӗшмест. Хӑвӑнах пӗлмелле: фронт ыйтать, тет. Вӑт пыр та калаҫ. Ним те тӑваймӑн. Юрать, анне кашни кунах колхоз ӗҫне тухмасть те, вӑл ҫимеллине вӑхӑтра хатӗрлесе парать. Анне пурри тем пекех паха.

— Эмиле вӑрҫма кирлӗ мар. Чӑнах та вӑл, ытти хӗрарӑмсем пекех, фронт ыйтнине тивӗҫтерессишӗн тӑрӑшать. Вӑйпитти хӗрарӑм та колхоз ӗҫне тухмасан, кам тыр-пула пухса кӗртӗ, тырӑ туса илӗ, — лӑплантартӑм эпӗ юлташа. Вӑл хӑех ман шухӑшпа килӗшрӗ. Ҫак вӑрҫӑ йывӑрлӑхне тӳссе ирттерсен, кайран пирӗн пурнӑҫ майӗпен лайӑх-

лanса пырасса шанса юмахласа лартăмăр. Ара, кашни çын хăй вăхăтěнчи йывăр пурнăçа хурласа, пулас пурнăç шутсăр лайăх пуласса ěмěтленсе пурăнать. Вăл ěлěкренех çапла: этем тени çутă пуласлăха ěмěтленсе пурăнна. Çав ěмěте çывхартас тесе, этем ялан вăй хунă, тапаçланна, анчах чылайăшě çав ырă та çутă пурнăçа кураймасăрах куçне хупнă. Ырă та çутă пурнăç çулпа пыракан этемшěн çěрпе пěлěт пěрлешнě выран евěр, вăл утнăçемěн малалла тарса пынă. Çапла май этем хăй ěмěтленни пурнăçа çитсе курасса шанма пулать-ши? Этеме питě нумай кирлě — ăна тивěçтерсе çитерме çук.

Эпир нумай ыйтупа пěр шухăшлине палăртрăмăр, нимěçпе малашне çапăçма пирěн пěр чаçре пулмалла тесе планларăмăр. Çак шухăшпа иксěмěр те килěшрěмěр.

Эпě ялта темиçе кун пурăнтăм, колхоз уй-хирне, пěр тикěс шăтса тухнă кěр калчана та çитсе куртăм.

Ял çыннисем хăйсен пахчисенчи çимěçсене пухса тирпейленě, йăрансем çинче çавракa пуçлă купăстасем кăна юлнă, вěсене шăнтмасăр та касмаççě.

Йěтем çине те çитрěм. Хěрарăмсем юлашки çěмелсенчи ыраш кěлтисене сарса пăрахса çапатчěç. Мана та тăпачă тыттарчěç, тăваттăн тăрса çапакансен ушкăнне тăратрěç.

— Çапмалли кěввине çухатса, пире пуçран туртса ан çап, — тесе, мана кула-кулах асăрхаттарчěç, хăйсем татти-сыпписěр ахăлтатрěç. Эпě авăн çапма тăни вěсемшěн питě кулăшла пек туйăнчě пулас.

Эпě каччă çулсенчех тырă мěнле çапмаллине пěлнě, маншăн çěнě ěç мар ку. Пěр сарăма тăваттăн çапса тухрамăр, пěр йăнăш та тумарăм.

— Ну, Аркадий Петрович, авăн çапма маниман, маттур! тет хамăр урамри Альтук аппа. — Пирěнпе колхозра та ěçлеме пултаран. Халь сана каллех вăрçа илсе каяççě-и? — кăсăкланать вăл.

— Каллех. Нимěç фашисчěсене хамăр çěршывран тасатмасăр тата ăна хăйěн çěршывне кěрсе кайса тěппипе аркатмасăр пирěн ěç вěçленес çук, — ăнлантаратăп вěсене.

— Ай-ай, мěн чухлě вăхăт кирлě, —тěлěнсе сăмахлаççě хěрарăмсем. — Унччен пирěн упăшкасем те вăрçăра вилсе пětěç. Вěсене апла халех кěтмелли çук. Апла вăрçи темиçе çул та пырě. Эпир, хамăр ăспа, килес çуркунне упăшкасене киле кěтнěччě. Ниушлě çаплах вăрăма тăсăлě вăрçи? Ниушлě вăл çулталăк хушшинче пěтмест?

Хĕрарăмсем ĕçе пăрахсах шавласа кайрĕç. Мана лайăх пĕлекен хамăр касри хĕрарăмсем ман çине сиввĕн пăхнине асăрхатăп. Вĕсем хăйсен упăшкисене,е çывăх тăванĕсене вăрçăран хальтерех килтересшĕн, çавăнпа та мана кӳренеççĕ.

Эпĕ вĕсене йĕркипе каласа ăнлантарма та шухăшларăм, анчах бригадир пычĕ те мана шăппăн асăрхаттарчĕ: «Эсĕ çар çынни, кунта та ун агенчĕсем пулма пултараççĕ, хăвăр чаçе тавранас вырăнне пачах урăх çĕре ăсатма пултараççĕ».

— Ăнлантăм. Тавах сире, — тетĕп те хĕрарăмсенчен хăвăрт уйрăлса киле васкатăп.

Киле таврăнсан, аннепе Лариса эпĕ кăнтăрлахи апата килменнишĕн кăмăлсăр пулнине сисетĕп, тепĕр сехетрен касхи апат тумаллине пĕлтереççĕ.

Эпе вĕсем кăмăлсăррипе пахчана тухатăп. Атте пахча картине пĕчченех тӳрлетет-мĕн. Хыçалти карта çĕрĕшнĕ, тайăлнă. Атте карта юписене çĕнĕрен чавса лартнă, урлавĕсене те çапса тытăнтарнă.

— Атя, ывăлăм, сарайĕнчи хăмасене илсе тухар та каç пуличчен çапса лартар. Эс килни лайăх пулчĕ-ха, — ырласа илчĕ атте хăйне пулăшма пынăшăн.

Чăнах та аттепе иккĕн икĕ хутчен хăма çĕклерĕмĕр карта тытма. Атте утмăла çитет пулсан та, вуншар хăма çĕклеме пултарать. Вăйĕ пур-ха, хавшаман-ха. Вăл хуçалăх тытма пултарнишĕн эпĕ савăнатăп. Унăн хура çӳçĕ чăпарланнă, тăрăхларах питĕнче пĕрмексем йышланнă, çамки урлă тарăн йĕрсем каçса каяççĕ. Малти икĕ шăлĕн тĕпĕсем çеç тăрса юлнă. Сулахай урин чĕркуççийĕ ыратнăран кăштах уксахласа утать. Çуркунне-кĕркунне туя та тытать. Атте мана хăмасем парса тăрать, эпĕ вĕсене майлаштарса хуратăп та урлавсем çине çапса лартатăп. Иккĕн пирĕн ĕç ăнса пырать. Пĕр сехет хушшинче картан хыçал енне тытса та лартрăмăр.

— Тытмасан та юрамасть: çын выльăхĕсем пахчана кĕрсе каяççĕ, купăста пуçĕсене тасатса хăвараççĕ, — ман хыççăн калаçса утрĕ атте. — Ывăлăм, итле-ха, эсĕ каллех фронта çакланатăн. Ман шутпа, вăрçи халех вĕçленес çук пек. Кĕçех Мускав патĕнче хаяр çапăçусем пуçланас пек... Эсĕ, ывăлăм, полк командирĕ, май килнĕ таран пуçна упрама тăрăш, ăслă та тавçăрулла пул, кирлĕ-кирлĕ мар çĕре пуçна ан чик. Нимĕçпе кĕрешме тухиччен разведка ярса, ун вăйне-шайне, мĕнле хĕç-пăшалпа тапăннине лайăх пĕлме тăрăш — унсăрăн ăна парăнтараймăн, хăвăн чĕрĕ вăйна çухатан. Фашист çавăнпа усă курса кайран хăвна таптаса каçĕ, пĕтерсе тăкĕ. Коман-

диршăн ун пек памăс урăх нимĕн те çук. Ĕçлеме вăй кирлĕ, çапăçма ăс кирлĕ, тенĕ ваттисем. Вырăссен мухтавлă Суворовĕ пек салтаксен йышĕпе мар, ăсупа çапăçмалла, — мана вĕрентрĕ аттеçĕм. Вăл Суворовпа, Кутузов, Чапаевпа Фурманов çинчен чылай кĕнеке вуланине аса илтĕм çак самантра.

Пӳрте кĕрсе каçхи апат тунă хыççăн Лариса мана ашшĕпе амăшĕ патне кайса курма чĕнчĕ. Вăл вĕсемсĕр, паллах, кĕске вăхăтрах тунсăхларĕ.

Каçхине сулхăнрах пирки иккĕн те кăвак плащ тăхăнса салана тухса утрăмăр. Лаша витине кайнă пулсан, пире аслă конюх хура тăрантас çине лартса, хăватлă йăйăрпа, «Юпитерпа», леçсе яратчĕ. Çынсене чăрмантарас килмерĕ.

Эпир ялтан тухсан шоссе çулĕпе Ураккасси еннелле алăран алла тытса утрăмăр. Ларисăн яланах манпа пулас кăмăлне тивĕçтесре, ăшшăн пуплесе пыратпăр. Эпир шоссепе пынă май хĕвел аннине пăхса сăнатпăр. Хĕп-хĕрлĕ те пысăк çаврашка кӳршĕ ялăн çӳллĕ йăмрисем çине анса тирĕнчĕ, вĕсем витĕр аялалла анса, çурт-йĕрсем çинче ялкăшса тăчĕ, кунта та нумай тытăнса тăмарĕ, хĕрлĕ пайăркисене çӳлелле ывăтса, пĕр сарай хыçне анса пытанчĕ. Хăй çухалчĕ пулсан та, пĕлĕт çине хĕрлĕ-кĕрен сăр сапса хăварчĕ. Эпир Пăнар çырмин кĕперĕ çине çитиччен те çав илемлĕ тĕссем тӳперен çухалмарĕç.

Эпир Ураккасси ялĕпе тăваллаваскамасăр утрăмăр. Ял варрине çитсен, кирпĕч магазина кĕтĕмĕр. Унта вăтам çулхи уксах сутуçă ĕçлет, сывлăхĕ хавшаккипе ăна фронта илмен.

Паятампа пăянам валли ĕçмелли-çимелли туянтăм та Ларисăна патăм. Вăл хура сумкăпа хучĕ. Ураккассин тӳрĕ урамĕпе хурăн çулĕ çине тухрăмăр. Ватă хурăнсем çулçисене тăкнă, шултра турачĕсене пур еннелле сарса çап-çара лараççĕ. Вĕсене лартни ик çĕр çула яхăн: Иккĕмĕш Кĕтерне патша Питĕр хулинчен тытăнса, Аçтăрхан хулине çитиччен анлă çулăн икĕ енĕпе тăватшар рет ларттарнă. Çулне те хăйне вун виçĕ лаша кӳлнĕ кӳмепе иртме аллă чалăш сарлакăшĕ тутарнă. Хăйне хирĕç пулакан тĕрлĕ тӳре-шара кӳмисемпе ирĕккĕн иртме чăнах та сарлака çул кирлĕ пулнă.

Паллах, вăл çулпа Раççей çарĕ те пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçнă, Çĕпĕре пуç янă çынсене те вăл çулпах тухăçалла хăваланă; суту-илӳ çыннисем те хăйсен тулли лавĕсене çак çулпа пĕр хуларан тепĕр хулана çитернĕ. Кам çӳремен-тĕр ку паллă çулпа, халĕ аса илсе те çитереймĕн. 1825 çулта раштав пăлхавне хутшăннă дворянсен офицерĕсене инçе Çĕпĕре ссылкăна çак çулпа ăсатнă. Александр Пушкин — вырăссен

поэзи хĕвелĕ — Пугачев пăлхавĕ çинчен çырма материал пухнă чух шăпах çак Хурăн çулпа Питĕр хулинчен тытăнса Чĕмпĕр хулине çитнĕ; Максим Горькийпе Хветĕр Шаляпин ку хурăнлă çулпа Чулхуларан тытăнса Хусана, Хусанран Саратова çити пĕрре мар тухнă.

Эпир Ларисăпа алла-аллăн тытăнса çулпа Пăркан пуçне çитиччен савăнса пытăмăр, ача чухне Етĕрнене çитиччен çак çулпах пĕрре мар танкканине аса илтĕмĕр. Эпир вун пĕр — вун икĕ çулсенче çак çул çинчи хурăнсем йышлăччĕ, хăрса кайнисем пачах курăнмастчĕç. Халĕ вырăнăн-вырăнăн сайраланса юлнă, турачĕсем хăрнисем йышлансах пыраççĕ... Ман вĕсене татах нумай çул упрас килет.

Пăркан ялне кĕрсен, лампăсем çутрĕç. Эпир ялпа анаталла утрăмăр. Акă урамалла тăватă чӳречеллĕ, темиçе пӳлĕмлĕ капмар пӳрт. Шăп çакăнта ӳснĕ юнашар пыракан сарă чечекĕм — Лариса. Ăна кунта яланах кĕтсе тăраççĕ Петр Михайловичпа Мария Павловна.

Урам алăкне те, пӳрт алăкне те питĕрменрен пĕр чăрмавсăр пӳрте кĕрсе тăтăмăр. Пăятампа пăяхам пире хапăл туса кĕтсе илчĕç, тӳрех сĕтел хушшине кĕртсе лартрĕç. Эпир те сĕтел сине Мускав эрехне, премĕксемпе канхветсене шурă турилккесене кăларса хутăмăр.

Петр Михалччă мана черкке хыççăн черкке тыттарчĕ, вıçĕ черкке ĕçнĕ хыççăн, юратнă лайăх кĕрӳ тесе, питрен чуп турĕ. Мария Павловна ман ума çупа шăратнă чăкăт, çăмарта хăпартни, чăх какайĕ ларта-ларта пачĕ: «çисем, кĕрӳ, çисем, кĕрӳ» тесе, ăшшăн сĕнчĕ. Кăпăклă сăра тыттарчĕ, тĕппипе ĕçме хистерĕ. «Йăлтах тăрантăм. Урăх эрех те, сăра та ĕçместĕп», — терĕм кил хуçисене.

Лариса та, мана хӳтелесе, ашшĕ-амăшне урăх ĕçтерме хушмарĕ.

Самрăк арăм мана лайăх ăнланать: эрех-сăра суранлă çынна нихăш енчен те сыватма, вăй илме пулăшмасть, пачах урăхла, хăвартрах сиен кӳме, сурана аталантарма пултарать. Вăл, медицина сынни пулнă май, эрех-сăра йăх хăварассинче те пысăк сиен кӳнине лайăх пĕлет. Ăнланакан арăмпа пурăнма мĕн чухлĕ ансат та çăмăл. Сисмесĕрех çакна ăнланса илтĕм.

Пăянам пире верандăна вырăн сарса пачĕ. Ялти чаплă столяр ăсталанă кравать çине хур мамăкĕнчен тунă çемçе тӳшек сарса хучĕ, пуç айне кăвакал тĕкĕ тултарнă икĕ минтер, çие çăмăл та ăшă утиял витрĕ.

Лариса мана çăвăнма чĕнчĕ, амăшĕ шăпах мунча хутнă-

мĕн. Мунчана çутсен, пăлтăрта вăшт-вашт хывăнтăмар та шала кĕрсе тăтăмăр. Краççин çутинче хамăра урараи тытăнса пуç тӳпине çитиех пăхса илтĕмĕр. Ку таранччен çаппа- çарамассăн юлса хамăра сăнаман, майлă самантсем те пулман. Эпĕ унăн çаврака кăкăрне тытса ачашларăм, тӳме пек хăмăртарах пуçĕнчен çăвара чиксе ĕмме тытăнтăм, вăл ĕмнĕçемĕн ман çума пăчăртанма, манăн хырăма ачашлама, аллине кăтăкланакан çĕре яма пуçларĕ. Эпĕ ăна хĕрӳленсе хам ытама илтĕм.

Мунча хыççăн таса кĕпе-йĕм тăхăнатпăр, верандăрах пылпа вĕри чей ĕçтепĕр, çемçе вырăн ăшне чăматпăр та ыталанса çывăрса каятпăр. Пирĕншĕн халĕ çăтмахри пек пурнăç. Пулĕши пирĕншĕн ун пек пурăнăç татах? Çывăх кунсенче пĕр-пĕринчен уйрăлатпăр та пире малта мĕнле шăпа кĕтнине те пĕлейместпĕр. Пурнăçри пĕр самант та çакăн пек телейлĕ пулни этемĕн пĕтĕм пурнăçне ялкăштарса çутатса тăрать. Çынсенчен нумайăшĕ пĕр çавăншăнах çĕр çинче хăйсен пурнăçне упрама хатĕр. Çав вăхăтрах вĕсенчен чылайăшĕ çĕр çинче мĕншĕн пурăннине те ăнкарса илмесĕрех чуххăмăн пурăнса иртterет. Питĕ шел, мĕн тăвăн. Вĕсене никам та пурнăçăн тĕллевĕ çинчен ăнлантаракан та, уçса паракан та пулман.

Паллах, пурнăçри телей шутне çакна çеç кĕртмелле мар. Ку фронта каякан çыншăн ырлăх саманчĕ, ăна телей тесе калама та çукрах. Телей сăмахăн пелтерĕшĕ çав тери пысăк. Кам ачаран пысăк тĕллевпе пурăнать, çав тĕллеве темĕн пек йывăр та чăрмавлă пулсан та пурнăçлама пултарнине телей тесе шутламалла.

Акă, тĕслĕхрен, Хусанкай Петĕрĕ хăйĕн 1926 çулта тухнă «Уяртсан» сăвăсен кĕнекинче «паллă лирик» пулма ĕмĕтленет. Вăл чăнах та 1950 çулта çав тĕллеве ĕçе кĕртет, Чăваш республикин Аслă Совечĕ хăйĕн указĕпе Хусанкая Чăваш халăх поэчĕ ятне парать. Ку уншăн чăнах та телей, чыс, хисеп.

Эпир тепĕр кунне пăятампа тата пăяхампа ăшшăн уйрăлтăмăр та хамăр яла таврăнтăмăр. Килте пурăнăç мĕнле иртнине сăнлама та кирлĕ мар: маншăн вăл ырлăх енчен асăмра юлчĕ. Анчах ял халăхĕшĕн кашни кун йывăрланса пынине пĕлсе тăтăм. Усал хыпарсем час-часах килме тытăнчĕç.

Камăн та пулин упăшки, ашшĕ, ывăлĕ, тăванĕ фронтра

вилнĕ. Çак усал хыпар ялти çынсен килĕсене çитсе тӳсме çук пысăк хуйăх, йĕрӳ-макăру кӳретчĕ, ялта пурăнма та кăмăллă марччĕ.

Кунсăр пуçне çынсене патшалăха парăмшăн — ял хуçалăх налукĕшĕн, заемшăн тата тĕрлĕ тӳлевшĕн хĕсетчĕç, налук инспекторĕсем кунсерен килĕрен çӳретчĕç, укçа ыйтатчĕç, вăхăтра тӳлеменшĕн пени хăпартса паратчĕç, татах тӳлемесен — парăмри çыннăн япалисене, ĕне-сурăхне илсе тухса сутатчĕç. Çав инкекрен хамăр урамри виçĕ кил-йыш çыннисене, ик-виç пĕчĕк ачаллă хĕрарăмсене хамăн укçана парса, хăтарса хăвартăм.

Лариса мăшăрăм юлашкинчен кăмăлсăрланчĕ:

— Хăвăн юлашки укçуна та тăкаклатăн ĕнтĕ, Мускава çитсе ӳкме юлчĕ-и хуть?

— Упăшкисем фронтра çĕршывшăн пуçĕсене хунă, йывăрлăхра вĕсене кӳршисен те пулин пулăшас пулать, вĕсен ахалех пуç тӳпи таран хуйхă, виç-тăватă вĕтĕр-шакăр ача, хăйсĕр пуçне никам колхозра ĕçлекен çук, налукне хытă ыйтаççĕ, укçине ăçтан тупмалла вĕсен, мĕншĕн хĕрхенес мар вĕсене? — ăнлантаратăп эпĕ Ларисăна.

— Тĕрĕсех калатăн, Аркаш, сана ăнланатăп, анчах эсĕ пĕччен, ун пеккисем ялта вăтăр-хĕрĕх кил-йыш, ăçтан пулăшса çитерĕн? Тăван кил-çурта сутсан та çитес çук ун чуль укçа. Сана çавна çеç ăнланма хушасшăн, тусăм, — ӳкĕтлесе сăмахлать çамрăк мăшăрăм. Хăйĕн сăмахне вăл малалла тăсрĕ. — Асăрхарăн-и? Епле килме тытăнчĕç пирĕн пата чухăн хĕрарăмсемпе ватăсем? Вĕсем санран ыйтма вăтанаççĕ, аттеаннерен ыйтса тăнран кăлараççĕ... Эсĕ кайсанах килме пăрахаççĕ-ха ĕнтĕ. Илтнĕ вĕсем эсĕ йывăра лекнĕ хĕрарăмсене пулăшнине. Ялта ун пек хыпар хăвăрт сарăлать.

Лариса сăмахланине тимлесе итлерĕм, чăнах та, атте-аннене ним çук çĕртенех чăрмав кӳнине сисрĕм, анчах мĕскĕн хĕрарăмсене укçа парса пулăшнине тĕрĕс турăм тесе йышăнтăм. Пирĕн ума, акă, хамăр урамри Матĕрне инке тухса тăчĕ. Эпĕ шăп вĕсен умĕнчен иртеттĕм. Вăл хăйсенчен инçех мар пусăран икĕ витрепе шыв çĕклетчĕ. Пире курчĕ те витрисене сукмак хĕррине лартрĕ, пуçне тайсах ăшшăн саламларĕ. Мана вăл ачаранах пĕлет, упăшки унăн манран икĕ çул малтан шкулта вĕренсе пычĕ, хурт-хăмăр ĕçне ашшĕпе пĕрле туса пыратчĕç, тĕрĕсрех каласан, ашшĕ ăна ку ĕçе явăçтарса пыратчĕ. Улмуççи карти вăйлăччĕ вĕсен. Ваçлей колхозра ĕçлеме юлчĕ, хурт-хăмăр ĕçне аталантарчĕ. Манăн аттепе тата Гри-

горий Павлович Ялтутпа. Халĕ вĕсем иккĕшĕ те Хĕвел-анăç фронтĕнче нимĕç çарĕпе юн такса çапăçаççĕ. Чăнтай Васлейĕ темиçе уйăх çыру яманнине Лариса яла килсенех пĕлтерчĕ, Ялтутне ик уйăх каялла вăрçа илсе кайнă.

Атте халĕ колхоз хурт-хăмăрне пĕччĕнех пăхса пурăнать. Çăмăл мар ăна, анчах вăл ывăнтăм тесе ўпкелешмест, ĕçне юратса тăвать.

Матĕрне инкем пирĕнпе сăмахлама тытăнчĕ.

— Аманнă хыççăн яла килсе курас терĕн-им? Халĕ, Аркадий Петровчча, сывлăху мĕнле? Нумайлăха ячĕç-и? — ыйту хыççăн ыйту пачĕ кўршĕ хĕрарăмĕ.

Эпĕ пурин çинчен те кĕскен хуравларăм. Вăл хăйĕн начар пурнăçне ўпкелешрĕ, колхоз ĕçленĕшĕн аванса та пулин тырă паманнине, тĕрлĕ тўлевĕ валли укçа çуккипе аптраса çитнине пĕлтерчĕ, пире пĕр минутлăха та пулин кĕрсе курма ыйтрĕ. Эпир, вăл кăмăлласа чĕннипе, кĕме хирĕç пулмарăмăр.

Эпĕ инке витрисене çăмăллăн çĕклерĕм те пўрте кĕртсе лартрăм.

Пўртре, сак çинче, виçĕ çулхи хĕр ачапа пилĕк çулхи арçын ача пысăк мар кĕрен, хăмăр яка чулсемпе выляса лараççĕ, иккĕшĕ те çара уран... Вĕсен çывăхĕнче хура пысăк кушак ĕнтĕркесе ларать.

Ман хыççăнах кил хуçи пўрте васкаса кĕрет, унтан — Лариса.

— Пирĕн япăха курăр ĕнтĕ. Ĕç пирки пĕр тирпей те çук. Ачасем вак, иккĕшĕ шкулта, ак, кусем, пўрте çўпĕлекенсем, пĕр япалана та вырăнта тăратмаççĕ. Сире çăмарта та пулин пĕçерсе çитерем-ха. Эсир канса кăшт ларăр, эпĕ çиччас, — пўртрен васкаса тухрĕ.

— Пирĕн кĕрсе чăрмантармалла та марччĕ, — пăшăрханса илет Лариса.

Чăнах та, пўрт ăшчикки тирпейсĕр: сăрламан йывăç урайĕ хуралса ларнă, унта-кунта хут татăкĕ, вĕтĕ турпас, чул катăкĕ çўпелесе тăрать. Урайне пĕр-икĕ кун шăлман. Сĕтел çинче те чашăк-тирĕк, йывăç кашăк, çăпала сапаланса выртать.

Ачисен урисем хуп-хура, чылай вăхăт мунча курман пулас.

— Эх, пурăнаççĕ çав ял хĕрарăмĕсем, тасалăхшăн ним чухлĕ те тăрăшмаççĕ! — вĕчĕрхенчĕ манăн Лариса.

— Вăл санран та нумай килет, — тĕртсе илтĕм ăна.

Маччапа пўрт стенисем çинче, турăш кĕтессинче эрешмен

картисем çакăнçа тăраççĕ, вĕсене мăнкунран вара тасатманни паллă.

Пÿрт алăкĕ яри уçăлса кайрĕ. Матĕрне инке пÿрте васкаса кĕчĕ. Хура çатма тулли пĕçернĕ çăмарта шăранса тăрать. Лариса ывăс тупса тухрĕ, сĕтел çине пырса хучĕ, ун çине Матĕрне вĕри çатмана лартрĕ. Васкаса çăкăр касрĕ те пире сĕтел хушшине ларма сĕнчĕ.

— Пирĕн те çиес килет, — терĕ пĕчĕк хĕр ачи, сăмсине кепе çаннипе шăлса.

— Сире — кайран. Халĕ хăнасем апатланччăр, — терĕ ăна амăшĕ. Пире ирĕксĕрлесех çиме лартрĕ.

Арçын ачипе хĕр ачи тутисене тăсса, пĕр тапхăр пирĕн çине пăхса ларчĕç те тенкел çинчен анса, тула тухса кайрĕç.

— Инкем, ачасене те çиме лартмаллаччĕ, вĕсене кÿрентертĕн, — терĕм эпĕ.

— Вĕсене кайран, ĕнерхи сĕт яшкине ăшăтса паратăп, — кĕскен хуравларĕ вăл.

Эпир Ларисăпа шаритленĕ çăмартана çур çатма таран çирĕмĕр те ыттисене ачасене валли хăвартăмăр. Кил хуçи пĕрер стакан вĕретнĕ сĕт пырса лартрĕ, хăйĕн апатне тиркеме хушмарĕ.

Сĕтел хушшинчен тухсан, пире Матĕрне инкем хăйĕн нушине пĕлтермесĕр хăвармарĕ.

— Акă, пăхăр, Аркадий Петровччă, кинĕм, мĕн чухлĕ патшалăха тÿлемелли парăм: ял хуçалăх налукĕ, сад пахчи налукĕ, выльăх-чĕрлĕх налукĕ, икĕ тĕрлĕ заем, страховка. Пĕтĕмпе 735 тенкĕ те 63 пус. Укçине таçтан тупмалла? Нимĕн те сутмалли çук. Упăшка фронтра, хам колхозра пĕччен ĕçлетĕп, ĕç кунĕпе тыррине паман, колхоз патшалăха тырă парса татсан кăна парти райкомĕ тырă валеçме ирĕк парать, терĕç. Унччен хуть выçса вил. Ачасене тем çитермелле, хам та йăлт аптратăп. Кашни эрнере налук агенчĕсем килсе вăрçса каяççĕ, ĕне-сурăхна сутатпăр тесе, хăратса хăвараççĕ. Ĕне сутсан, ачасене мĕн çитермелле? Вилме те пултарĕç. Укça çуккипе ним тума аптăратăп, — куççульне кăларса, хурлăхлăн сăмахлать салтак арăмĕ. Мана, çар командирне, унăн хурлăхлă, нушаллă калаçăвĕ чĕрене ыраттарсах ячĕ. Эпĕ сисмерĕм те, сылтăм аллăма гимнастеркăн кăкăр çинчи кĕсйине чиксе ятăм, унтан укçа туртса кăлартăм, пĕр шутламасăрах, ăна хайхи кулянчăк кил хуçине сĕнтĕм. Матĕрне инкем малтан укçана тÿрех ярса тытрĕ, унтан тем шухăшларĕ те илесшĕн мар пулчĕ, каялла пама пикенчĕ. Эпĕ те, Лариса

та ăна илме хушрăмăр, ӳкĕтлерĕмĕр, вара килĕшрĕ, кайран, вăй илсен, тавăрса пама пулчĕ.

— Юрать, юрать, пурăнсан çӳç шăтĕ, — тесе лăплантартăм эпĕ.

Кил хуçи пит-куçĕ ирхи хĕвел шевли пек çуталчĕ, кăмăлĕ çĕкленчĕ, сасси те уççăн янрама пуçларĕ, пире вăл, тав туса, хавассăн ăсатса ячĕ.

— Сире, Ларисăпа иксĕре, мана ырă гунăшăн нихçан та манмăп, хăвăра çак йывăр вăхăтра инкек пуласран турă пулăшса пытăр тесе, чиркĕве кайса çурта лартăп, кĕл тăвăп, — пуплерĕ хĕрарăм.

Лариса мана нушари Матĕрне инкеме укçа перса пулăшнăшăн ӳпкелешсе сăмахламарĕ, миçе тенкĕ панине те ыйтмарĕ. Кайран, хам шутланă тăрăх, пилĕк çĕр тенкĕ ытла панă. Кӳршĕ хĕрарăмне йывăрлăхран хăтарма пулăшнăшăн хам та кăмăллă юлтăм.

## ВĂРÇĂ ХИРНЕ КАЯЛЛА ТАВРАННИ

Эпĕ Тураев майорпа чӳк уйăхĕн пуçламăшĕнче Мускав патĕнчи фронта çитрĕмĕр. Волоколамск шоссепе пире пĕр грузовик Деньково станцине илсе çитерчĕ. Пирĕн резервăри полк вăрманта вырнаçнă, ăна кĕç-вĕç фашистсемпе çапăçма кĕртсе ямалла.

Мана çар штабĕнчен полка йышăнма приказ тыттарчĕç. Вăхăтлăх полк ертӳçи — Гурий Иванович Тарасов майор, терĕç. Эпĕ полка йышăнсан, вăл ман заместитель пулать. «Тарасов — фронтра çапăçса курнă командир, вырăс, Смоленскри çар училищине пĕтернĕ, парти членĕ, хăюллă та хастар...» паллашатăп ун çинчен çырнă сăнлавпа.

Эпир Деньково станцине ир çинче çитрĕмĕр: фашистсем кăнтăр çутинче шоссе çулне шутсăр сыхланăран çĕрĕпе каймалла тиврĕ. Çĕрле те тăшман самолечĕсем темиçе хутчен Мускава бомбăсем пăрахма килнĕ май; çак шоссене те хăйсен «кучченеçĕсемпе» хăналамасăр иртмерĕç, пирĕн умра е хыçра ахлатса çурăлчĕç. Эпир, бомба айĕнче пĕрре мар пулнăскерсем, вăл ăçта ӳкессине ун шăхăрса анакан сассинченех чухлатпăр та пирĕнтен аяккарах ӳкессине пĕлетпĕр.

Грузовик çинчен ансан, Тураев майорпа хайхи резерври полка çул тытрăмăр. Çур километр çуран утсан, хыр вăрманĕ пуçланчĕ. Кунта икĕ машина çулĕ йӳпленсе каять. Хăшĕнпе кайсан хамăр полка çакланатпăр? Мана çар штабĕнче топо-

графи картти панăччĕ, унта пирĕн каймалли çула, ăçта çитсен чарăнмаллине те паллă тунăччĕ.

Эпĕ ăна çумри сумкăран туртса кăлартăм. Унта пирĕн каймалли çула хура кăранташпа чĕрсе паллă тунине тата ăçта çитсе чарăнмаллине кăтартнă-мĕн. Пирĕн никамран ыйтма кирлĕ пулмарĕ, карттăпа уса курса, хайхи çаçе чиперех çитрĕмĕр.

Йĕри-таврари хыр вăрманĕ шăп. Çулçăллă вăрман хăйĕн тумне улăштарнă, хыр-чăрăш вара çав тĕспех ларать. Улатакка кăна, вăрман шăплăхне пăсса, хăйне валли апат шырать, тăрри хăрнă пĕр пысăк хыр çинче хăйĕн шĕвĕр вĕçлĕ те вăрăм сăмсипе хыр хуппине ватать: так-так, так-так таклаттарать. Кунĕпех ĕçлет ĕçчен вăрман кайăкĕ, аякри тупă сасси те, шоссе тăрăх машинăсем кĕмсĕртетсе иртни те, çывăхри çулпа утакан çынсем те хăратмаççĕ ăна. Вăл хăйĕн тĕп ĕçне иленнĕ.

Унта вăхăтлăх машина кĕрсе çӳремелли алăк тунă, ăна ешĕл тĕспе пиеленĕ, хăмаран çапса будка лартнă, çуран çын унта кĕрсе, хуралçа хăйĕн документчĕсене кăтартать, шала кĕме ирĕк илет. Анчах шала кĕрсен, каллех тĕреслев. Кунта çар çыннисем пире полк штабне кайма ирĕк пачĕç.

Полк штабне сержант илсе кайрĕ. Вăл будка патĕнче тĕрĕслекенсенчен пĕри. Пысăк хырсем хушшипе, тӳп-тӳрĕ сукмакпа çĕр пӳрте илсе çитерчĕ.

— Çак полкăн штабĕ. Тăхтăр. Эпĕ кĕрсе пĕлем. Тарасов майор е Курасов штаб начальникĕ хăйсен вырăнĕнче-и?

Сержант пĕр самантрах куçран çухалчĕ. Эпĕ Тураев майорпа тăрса юлтăм.

— Эсĕ кунта ху хуçа пулатăн, — терĕ мана Юрий Михайлович те ырласа, т е юлташла шӳтлесе.

Сержантпа пĕрле тĕреклĕ çан-çурăмлă, сарлака кăкăрлă, пысăк пит-куçлă, манран çӳллĕ майор тухса тăчĕ.

— Эсир, Чайкин подполковникпа Тураев майор, пирĕн пата-и? — пĕлмĕш пулнă пек ыйтрĕ.

— Шăп çавăн пек! — çирĕплетрĕм эпĕ.

Вăл хăвăрт пирĕн ума пырса тăчĕ.

— Тахçанах кĕтетпĕр, ырлăх сунса, пирĕн çĕр пӳрте иртме сĕнетпĕр. Унччен ал тытса паллашар! — терĕ сылтăм аллине ман енне тăсса. Эпĕ те хамăн сылтăм алла ун енне тăсрăм. Икĕ алă пĕр-пĕрне çирĕппĕн чăмăртарĕç. Эпир хамăр ятсене туллин пĕлтертĕмĕр.

Гурий Иванович Тарасов уйăха яхăн запасри полка

йӗркелет, ӑна ҫитес вӑхӑтрах ҫапӑҫу уйне илсе тухма пултараҫҫӗ. Ку вырӑнти лару-тӑруран та нумай килет.

Вӑл хӑйне эп килнишӗн савӑннӑ пек кӑтартрӗ. Ним ҫук ҫӗртен полка йӗркелесе ҫитересси йывӑр та кӑткӑс ӗҫ — унан нумай чупма тивнӗ. Эпӗ ӑна лайӑх ӑнланатӑп. Тен, полка вӑрҫӑра та хӑйнех ертсе пыма тивет? Пӗрремӗш тӗл пулура вӑл хӑйӗн шалти шухӑшне уҫса памарӗ, кӑтартасшӑн та пулмарӗ.

— Ҫак сехетрен пуҫласа полка эсир ертсе пыратӑр, эпӗ сирӗн заместитель пулатӑп, эсир хушнине пурнӑҫласа пыратӑп. Ман пӗр сӗнӳ: килӗштерсе ӗҫлесчӗ.

Унӑн сӗнӗвӗ манӑн кӑмӑла кайрӗ — эпӗ пӗр сӑмахсӑрах килӗшрӗм.

Хампа пӗрле килнӗ Тураев майора артдивизион командирне лартрӑм, унӑн аллинче виҫӗ батарея, кашни батарейинче 122 миллиметрлӑ тӑватӑ тупӑ. Кашни туппине сакӑр ҫын ӗҫлеттерет: тупӑн командирӗ (сержант), наводчик снаряд кӗртекенӗ, туппа вырнаҫтараканӗ (2 ҫын), снарядсем ҫӗклекенӗ (2 ҫын), туппа турттаракан машинӑн (тягачӑн) шоферӗ.

Тураев майор хӑйӗн дивизионӗпе паллашма кайрӗ, ӑна йышӑннӑ хыҫҫӑн мана килсе пӗлтерме хушрӑм.

Ҫарти йӗркепе ир ҫинче штаба ҫынсем килме тытӑнчӗҫ. Чи малтан штаб пуҫлӑхӗ Курасов майор персе ҫитрӗ. Тарасов ӑна манпа паллаштарчӗ.

Яштака илемлӗ ҫын, пысӑк кӑвак куҫлӑ, сарӑ ҫӳҫлӗ, алли ҫирӗп, хытӑ пӑчӑртамасть, интеллигент пулни тӳрех паллӑ, ытларах хут ӗҫӗпе ларать. Ҫемҫе сасӑллӑ, ҫӗнӗ ҫынна пур енчен те пӗлме тӑрӑшать, сӑмахланӑ май тимлӗ сӑнать, мӗнле кӑмӑллине тата ку ҫӗнӗ ҫынпа мӗнле пуплемеллине пӗлет. Хӑйне Иван Кузьмич тесе чӗнеҫҫӗ, анчах ҫарти йӗркепе Курасов майор тесе чӗннипе ҫырлахать.

Курасов нимӗҫсемпе ҫапӑҫса курман, ӑна пулас ҫапӑҫу чылай шиклентерет. Хӑй ун пирки уҫҫӑн сӑмахламасть, анчах ӑна нимӗҫ ҫарӗ кунталла, Мускав патнелле, хӑвӑрт шуни тата анӑҫран килекен ҫулсем тӑрӑх, ҫав шутра Волоколамск ҫулӗпе, тарса килекен мирлӗ халӑх татти-сыпписӗр Мускав еннелле ирти хытӑ пӑшӑрхантарать. Хӑйсен чаҫӗсене ҫухатнӑ е аманнӑ ҫар ҫыннисем ҫар хатӗрӗсене пӑрахса, салтак нӗрне ярса, иккӗн-виҫҫӗн пӗрле пулса каялла танккани ырӑ япала мар. Унӑн вӗсемпе те каласма тивет.

— Аҫта сирӗн чаҫ? — тесе ыйтать вӑл.

— Йирĕн чаҫе Вязьма патĕнче аркатса такрĕҫ. Юлашкисене ҫаварса илчĕҫ, вăрман чăтлăхĕнче пытана-пытана ҫав вутлă ункăран аран-арен тухрăмăр. Халĕ Мускав хӳттине ваекатпăр.

Темиҫе кун ҫимен, ывăнса ҫитнĕ салтаксене курса, унăн хĕрхенме тивет.

Ҫапăҫма тытăнсан, ҫапла ҫапса аркатасран хăраса шухăшланă вăл, анчах ăна никама та калама пултарайман.

Курасов хыҫҫăн штаба Зиновий Ильич Гаркуша, полк комиссарĕ, персе ҫитрĕ. Вăтам пӳллĕ, тачкарах этем. Куҫлăхпа. Ҫар формипе, шинельне типтер тытать, таса. Сăмси тӳрĕ те пысăк. Сасси уҫă, вырăсла пуплет пулсан та, украина акценчĕ уҫҫăн палăрать. Хăй Полтава таврашĕнчен. Нимĕҫсемпе Витебск хули патĕнче ҫапăҫса курнă, аманнă хыҫҫăн ман пекех запасри полка лекнĕ. Эпир унпа кăштах паллашрăмăр, хамăр умри задачăсене аса илтĕмĕр. Вара полкра ку таранччен мĕнле ĕҫсем тусаирттернине пĕлтĕм.

Гаркуша мана пирĕн полкра хамăн ентеш Орлов майор пурри ҫинчен пĕлтерчĕ. Вăл 1-мĕш батальон командирĕ, халь кăна ĕҫе тытăннă.

Полкри йĕркепе штаба батальон командирĕсем те килсе ҫитрĕҫ. Вĕсем виҫҫĕн: Орлов, Комаров тата Кислов. Эпĕ виҫҫĕшĕнпе те ал тытса паллашрăм, Орлов хамăн ентеш пулнă май, унран батальон ҫинчен ыйтса пĕлтĕм. Комаровпа Кислов капитансемпе те самаях сăмахларăм.

Чаҫри дежурнăй ирхи апата пурне те чĕнчĕ. Иван Савелькин адьютант (штаба ҫитсенех Тарасов майор пĕр сержанта чĕнсе илчĕ те ҫак сирĕн адьютант пулма малтанах килĕшрĕ, терĕ, эпĕ ăна йышăнтăм) кухньăна кайса мана валли аш яшки, вир пăтти тата вĕри чей илсе килчĕ. Вăл штабри лайăх савалана шурă яка сĕтел ҫине ҫимеллисене кĕрсе лартре, элмен турилккене кашăк хучĕ, тăваткал пĕҫернĕ ҫăкăра тăватă чĕлĕ туса касрĕ.

— Подполковник юлташ, сире ирхи апата чĕнетĕп. Тархасшăн, — терĕ ҫарти йĕркепе.

Эпĕ ăна хампа ларса апатланма сĕнтĕм, анчах адъютант хăй ҫиме ĕлкĕрни ҫинчен пĕлтерчĕ.

Мана апатланма ирĕклĕ пултăр тесе, штаба пынă командирсемпе политработниксем тулалла тухрĕҫ, эпĕ пĕчченех юлтăм.

«Пĕчĕк пуҫлăх пулсан та, субординацине ҫирĕп тытаҫҫĕ»,— тесе, ырласа шухăшларăм эпĕ. Яшкине лайăх пĕҫер-

нӗ, техӗмлӗ, ҫуллӑ. Ӑна элмен чашӑкран ӑсса илтӗм, васкамасӑр ҫирӗм. Ҫуллӑ вир пăттине те кӑмӑлларӑм. Тутлӑ чее васкамасӑр ӗҫрӗм. Самаях тӑрантӑм.

Эпӗ ҫисе тӑраннӑ-тӑранман Савелькин ман пата кӗчӗ, ӑна тав турӑм, вӑл ҫинӗ юлашкисене ҫӗклесе тухса кайрӗ. Эпӗ вӑхӑтлӑха пӗччен юлтӑм.

Штаба Курасовпа Тарасов хумханса кӗчӗҫ, иккӗшӗ те мана тем пӗлтересшӗн. Тарасов малтан пуҫларӗ сӑмахне.

— Подполковник юлташ, пире связист пӗлтерчӗ: нимӗсем Волоколамска ҫитнӗ...

— Подполковник юлташ, полка паян-ыран нимӗҫсемпе ҫапӑҫма чӗнеҫҫӗ, сирӗн хӑвӑртрах паллашма тӑрӑшмалла, — вӗрентерех каларӗ Курасов. Чӑнах та ҫулӗпе манран виҫ-тӑватӑ ҫул аслӑрах. Ун сӑмахӗнче чӑнлӑх пуррине хирӗҫлеймӗн.

Эпӗ Тарасов майора батальон-батальонӑн полка халех хатӗрлесе тӑма хушрӑм. Курасов, штаб пуҫлӑхӗ май, хӑй сӗтел хушшине вырнаҫса ларчӗ, сӗтел ещӗкӗнчен кӑвак хупӑллӑ хулӑн папкӑсем туртса кӑларчӗ, кашни батальонӑн уйрӑм папка. Унта командирсемпе боецсен списокӗ: кам ӑҫта, хӑш ҫулта ҫуралнӑ, ӑҫта тата миҫе ҫул вӗреннӗ, кашнин килти адресӗ — йӑлт паллӑ.

— Зиновий Ильич, командирсемпе боецсене медальонсем панӑ-и? — кӑсӑклантӑм эпӗ.

— Подполковник юлташ, икӗ батальона панӑ, 3-мӗшне медальонсем ҫитмерӗҫ. Кислов капитана каларӑм: ҫар штабӗнчен урӑх кӗтме ҫук пулас, вӑхӑтлӑха уйрӑм хут листине ҫурмалла пайласа, ун ҫине кашни боеца хӑйӗн хушаматне, ятне, ашшӗ ятне, хӑш ҫулта, ӑҫта ҫуралнине, мӗнле чаҫре тӑнине, ҫарти званине кӑтартса ҫырма, ҫав хута виҫӗ кӗтеслӗ хутлатса гимнастеркӑн кӑкӑр ҫинчи кӗсйине чикме хушрӑм.

Ҫапӑҫура вилнӗ ҫынна ҫак медальонра е ҫырура ҫырнӑ тӑрӑх пӗлме пулать. Унсӑрӑн ӑҫтан пӗлсе ҫитӗн, вилни пӗр хыпарсӑр ҫухалнисен шутне ҫеҫ кӗрет. Вӗсен йышӗ иртнӗ вӑрсӑра ҫурри ытла пулнӑ.

Пилӗк минутран Тарасов мана батальонсене пӑхса тухма чӗнчӗ. Вӑрман уҫланкисенче батальонсем стройра тӑраҫҫӗ.

Эпӗ пӗрремӗш батальон патне ҫирӗппӗн пусса утса пыратӑп. Боецсем пӗр тикӗс тӑраҫҫӗ. Вӗсем кӑвак шинеллӗ, кирза атӑллӑ, кӑвак пилоткӑллӑ, хулпуҫҫи ҫинче винтовка, хулпуҫҫи урлӑ противогаз ҫакнӑ. Строй умне пырса тӑтӑм, кура-

тăп: маттур çамрăксем. Ман пата пысăк утăмсем туса батальон командирĕ Орлов майор пырса рапортларĕ.

Эпĕ ун рапортне йышăнтăм, хам камне пĕлтертĕм. Боецсем ман çинчен куçне илмеççĕ, вĕсем эпĕ мĕнле командирне пĕлесшĕн: çирĕп-и, хаяр-и, пултаруллă-и, ăс-тăнлă-и, çапăçура пулнă-и тата ыттине те. Кĕскен каласан, эпĕ вĕсен учителе вырăнĕнче.

Строй умĕпе кашни боеца куçран пăхса, васкамасăр утса тухрăм, кашнин куçĕнчех тĕрлĕрен вăйпа хĕлхем çиçнине асăрхарăм. Чылайăшĕн куçĕнче мана кăмăлласа пăхни сисĕнет, хăш-пĕрин — манпа кăсăкланни палăрмасть. Тен, вĕсен хăйсен шалти вăйлă туйăмĕ пур. Тен, ман вырăна урăх командира кĕтнĕ вĕсем. Пĕрре пăхнипех кашни сын сана епле йышăннине пĕлме йывăр.

Эпĕ строй маррине çитсен, чарăнса тăтăм, манпа юнашар Тарасов майор вырăн йышăнчĕ.

Батальона сывлăх сунтăм, полка малашне ертсе пыма мана хушнине, хам камне, çар енчен ăçта, мĕн вĕренсе пĕтернине, фашистсемпе Смоленск патĕнче çапăçса аманнине, халĕ госпиталь хыççăн каллех тăшманпа çапăçма килнине пĕлтертĕм. Ман сăмаха боецсем тимлĕ итлерĕç.

— Пирĕн çитес вăхăтра фашистсемпе хаяррăн тытăçма тивет, унăн Мускава каяс çулне пăрахăç тумалла та йăнăш килнĕ тесе каялла хăваламалла. Çак йывăр та чыслă ĕçе пирĕн пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса пĕрле тумалла. Пит йывăр та пархатарлă ĕç. Совет çĕршывĕ ăна пире шанса панă. Çĕршыв шанăçне пирĕн тивĕçтермелле. Тивĕçтеретпĕр-и, юлташсем, боецсемпе командирсем?!

— Тивĕçтеретпĕр! — пĕр харăссăн кăшкăрчĕ батальон.

— Аттепе анне, пиччепе йăмăксем, арăмпа ачасем умĕнче намăс курмастпăр-и, хаклă юлташсем, боецсемпе командирсем? — каллех ыйтатăп эпĕ.

— Тем пулсан та, намăс курмастпăр! — хĕрӳллĕн те харăс кăшкăраççĕ стройрисем.

Кун пек хурав командирсен кăмăлне çĕклет, вĕсене ертсе пыма та хăюллантарать.

Тарасовпа иккĕмĕш батальона çул тытатпăр, вăл юнашар уçланкăра. Унăн командирĕ Комаров капитан. Хайпе паллашиччен ман ун çинчен пĕлмелле. Тарасовран ун çинчен каласа пама ыйтрăм. Вăл кĕскен ăна çапла сăнласа пачĕ:

— Виктор Федорович Комаров Горький облаçĕнчен, Лысково хулинчен, 1916 çулта çуралнă, интеллигенци кил-йышĕн-

чен, ашшĕ инженер, амăшĕ учительница, хăй Мускаври çар училищинче вĕреннĕ, анчах темле инкеке пула вĕренсе тухайман. Кайран, темиçе çул иртсен, каллех çав училищĕнех кайса кĕнĕ, аванах веренсе тухнă. Хăйне пысăка хурать, тепер чух хирĕç калама та пултарать. Пăхăнакансенчен хытă ыйтать, финсемпе 1939—40 çулсенче рота командирĕ пулса çапăçнă, «За боевые заслуги» медаль илме те тивĕçлĕ пулнă. Нимĕçсемпе çапăçса курман, вĕсемпе те çапăçма хатер. Хăюллă та пултаруллă, ытларах тавçăруллă командир ертсе пынипе çапăçса курасшăн.

Тарасов полк, дивизи командирĕсем мĕнле пулма кирлине. Комаров çине ярса калани мана систерсе е тĕртсе каланă пекех туйăнчĕ. Халлĕхе Тарасов та, Комаров та эпĕ мĕнле командирне пачах пĕлмеççĕ-çке, мĕншĕн ун пек пулассинчен шикленеççĕ. Тен, эпĕ урăх халăх çыннишĕн иккĕленеççĕ. Иккĕмĕш батальон та лайăх йĕркеленсе тăнă, унăн командире тĕреклĕ те яштака Комаров, пире курсан батальона тăп тăма команда пачĕ, хăй ман пата çӳллĕ те вăрăм пусса пырса тăчĕ, чыс туса, батальон черетлĕ занятисем ирттерме хатĕрленнĕ тесе пĕлтерчĕ. Батальон командирĕ хăй пулнине уççăн каларĕ.

Эпĕ батальона ирĕклĕ тăма хушрăм. Тарасов сăмах илчĕ те пурне те илтмелле янратрĕ:

— Боецсемпе командирсем! Малашне пирĕн полка Аркадий Петрович Чайкин подполковник ертсе пырать. Эпĕ унăн заместителĕнче юлатăп. Вăл çар енĕпе аслă пĕлӳ илнĕ, финсемпе çапăçнă чух стрелоксен батальон командирĕ пулнă, пултаруллă ертсе пынăшăн тата çапăçура хăюллă пулнăшăн «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ илнĕ. Фашистсемпе çапăçнă чухне те хăйĕн çарти пултарулăхне, ăсталăхне кăтартасса шанатпăр.

Тарасов майор сăмахĕсем боецсемпе командирсене хаваслăх кӳчĕç, вĕсем ман çине кăмăллăн пăхнине куратăп.

Эпĕ кунта нумай сăмахламарăм, анчах чи кирлине калама тăрăшрăм.

— Эсир, боецсем, вăрçа кĕриччен кашниех винтовкăран, автоматран, пулеметран е минометран питĕ лайăх пеме вĕренĕр, пĕр пуля та, мина та сая ан кайтăр. Хăвăрăн пемелли хатĕре таса тытăр, чакма тивсен те пăрахса ан хăварăр. Хăвăра кăтартнă вырăнтан приказсăр чакса ан кайăр. Хăравçă пулса тăшманран мулкачсем пек ан тарăр. Çарти çирĕп йĕркесĕр эпир тăшмана çĕнтерейместпĕр. Эпĕ боец-

ран та, командиртан та пĕр пекех çирĕп ыйтатап.

Юлашки сăмахсене Комаров капитан çине пăхса каларăм, вăл мĕнле йышăннине пĕлесшĕн пултăм. Ман шутпа, эпĕ калани ун кăмăлне кайнă пек туйăнчĕ.

Кун хыççăн виççĕмĕш батальона çитсе куртăмăр. Унăн командирĕ — Иван Кириллович Кислов, мордва çынни. Çӳллĕ те яштака, хăмла çырли пек сăн-питлĕ, çӳçĕ те хĕрлĕ. Самахсене тăсарах калать, çемçерех кăмăллă, нумай пуплемест, ĕçне ытларах тăвать. Вăл пулемет взвочĕн командирĕ, миномет ротин командирĕн çумĕ те пулнă. Ун çинчен çакăн пек çырнă: «Боецсене вăл пулеметпа минометран пеме хăнăхтарса пырать. Сăмахпа сахал, ĕçпе ытларах тăвать. Çавна пула боецсем ăна хисеплеççĕ.

Эпĕ батальонсемпе тата вĕсен командирĕсемпе паллашса тухрăм, мана та вĕсем çиелтен пĕлекен пулчĕç темелле.

Батальонсем хăйсен расписанийĕпе кунĕпех занятисем ирттерчĕç, ытларах стрельбищĕне кайса винтовкăран, станоклă пулеметран тата 81 миллиметрлă минометран пеме хăнăхрĕç. Танксемпе кĕрешекен взводсем ман полкра улттă, кашни батальонра икĕ взвод. Кашни боец РПГ—6-па (танка хирĕç алăпа пемелли гранатăпа) вĕренмелли танкăн шуçлавĕсене персе татма е танк рульне тытса пыраканăн пăхмалли хушăкне тивертме хăнăхать. РПГ-6 танка тивсе çурăлсан, чылаях сиен кӳме пултарать, уйрăмах шуçлавсене тивсен, танк чарăнса ларать, малалла каяймасть. Ку йышши гранатăсăр пуçне кĕленчсене çунмалли шĕвек тултараççĕ те çавсене танксем çине ывăтаççĕ. Кĕленче çĕмĕрĕлнипе шĕвекĕ танк çине юхса тухать, танк çавăнтах хыпса çунать. Тул енчен танка вут хыпса илсен, шала та вĕри çапать, экипаж тула тухса хăтăлма тăрăшать, анчах люк уçса тухакан кашни çынна боецсем сыхласа тăраççĕ, тухнă-тухман персе ӳкереççĕ...

Кĕрхи кун иртет. Каçхи апат тума Тарасов майор мана хăйсен çĕр пӳртне илсе кайрĕ.

— Хаклă хăнана йышăнма пĕлес пулать, — терĕ вăл урап варринче ларакан сĕтел çине коньяк кĕленчи кăларса лартса. Иван Савелькина кухньăна кайса çимеллисем илсе килме хушрĕ.

Эпĕ кун пек хаклă эрехпех аппаланма кирлĕ мар терĕм, анчах Тарасов мана итлесшĕн пулмарĕ, эпĕ мĕнлине тĕрĕслесшĕн те пулчĕ пулас.

Часах Савелькин çимеллисем илсе çитрĕ, пирĕн ума эмален мискăпа вĕри аш яшки, теприпе гуляш тата стаканпа

кофе лартса пачӗ. Кашнин умне пилӗкшер сухари сарса хучӗ.

Эпӗ Савелькина ӗҫе хӑвӑрт тунӑшӑн ырларӑм. Вӑл тулти пӳлӗме тухрӗ.

Гурий Иванович коньяка уҫрӗ те икҫӗр грамм кӗрекен кӗленчене ярса тытма сӗнчӗ, хӑйӗн черккипе хуллен шаклаттарчӗ, мана та хӑй пек ӗҫме чӗнчӗ. Эпӗ хамӑн черккен ҫуррине ӗҫрӗм те сӗтел ҫине лартрӑм, вӑл тӗппипех пушатрӗ. Эпӗ ӗҫсе яманнишӗн тӗлӗннӗ пек пулчӗ.

— Сирӗн кӑмӑлӑра каймасть-им коньяк? — пӗлесшӗн пулчӗ вӑл.

— Ҫук, уншӑн мар: ман вар-хырӑм чирлӗрех — гастрит, — терӗм эпӗ, — хаяр эрехсене тиркеме тивет, асӑрханмалла.

— Апла пулсан, нимӗн те калаймӑн. Камӑн мӗнле телей.

Хӑй тепӗр тулли черкке тултарчӗ те пирӗн сывлӑхсемшӗн тӗппипе ӳпӗнтерсе ячӗ. Эпӗ вӑл ӗҫнине ырларӑм.

— Вырӑссен ҫапла ӗҫмелле. Ӗҫе те ҫавӑн пек тумалла! — терӗ вӑл хӑйӗн кӑмӑлне кӑтартса. Ҫакӑ мана, вырӑс мар ҫынна, тӗртсе илнӗн туйӑнчӗ.

— Ӗҫме пӗлни ӗҫлеме пӗлнине пур чухне те кӑтартмасть-ха вӑл! — сисмелле хирӗҫлерӗм эпӗ.

— Ҫапах та нумай чухне...

Эпӗ Гурий Ивановичпа тавлашма та, урӑх хирӗҫлеме те шутламарӑм, кашни хамӑр шухӑшпах юлтӑмӑр.

Пирӗн калаҫу тӳрех Мускава хӳтӗлесе хӑварас ыйту ҫине куҫрӗ. Вӑл кашнин ӗнсине пусса тӑрать.

— Пире запасра нумай тытас ҫук, кирек хӑш сехетре те чӗнме пултараҫҫӗ, — терӗ Тарасов. — Нимӗҫсем, ав, Волоколамскра атакӑлаҫҫӗ. Ӑна илсен, вӗсене тепӗр талӑкран Деньковӑра кӗт.

Вӑл сӗтел ҫине топографи картти сарса хучӗ те фронт ӑҫтан иртнине кӑранташ вӗҫӗпе йӗрлесе кӑтартрӗ, хамӑр ӑҫта тӑнине те куртӑмӑр.

— Гурий Иванович, боецсемпе командирсем фашистсемпе тӗл пулсан, хӑйсене мӗнле тытас пек туйӑнать? — пӗлесшӗн пултӑм.

— Ну, паллах, тӑшман хӑрушӑ: пӗрисем хӑраса ӳкме те, каялла тарма та пултараҫҫӗ, ну, анчах, тӗпрен илсен, чылайӑшӗ тӳрех ҫапӑҫма, тӑшмана пӗтерме тӑрӑшӗҫ. — Вӑл каласа пӗтериччен эпӗ хушса хутӑм:

— Шӑп пирӗн ҫак йыша шанмалла, вӗсене тӑшманпа ҫапӑҫма хавхалантармалла. Вӗсене курса, шиклисем те, иккӗленсе тӑраканнисем те ҫапӑҫава хутшӑнччӑр, вӑй илччӗр. Шӑп

ҫавӑнпа командирсемпе политработниксен боецӗсемпе ҫывӑх пулмалла, вӗсене хавхалантарса пымалла.

— Тӗрӗс калатӑр, — тет Тарасов ман шухӑшпа килӗшсе. — Хӑшпӗр кӗҫӗн командирсем салтаксем хыҫнерех юласшӑн, хӑйсене упраса хӑварасшӑн тӑрӑшаҫҫӗ. Чӑн-чӑн ҫапӑҫура кӗҫӗн командирсемпе замполитсем анчах мар, ротӑпа батальон командирӗсем те ҫав чирпе чирлеҫҫӗ, ун пеккисене те сахал мар тӗл пулнӑ, — тет Гурий Иванович.

Эпӗ кунта Тарасова тӳрлетесшӗн пултӑм:

— Эсир каланинче, тен, тӗрӗслӗх пулӗ, анчах оборона министрӗн кӑтартӑвне те шута илмелле.

— Тӑшмана хирӗҫ атакӑланӑ чух рота е батальон командирӗсем (лейтенантсемпе майорсем) сиксе тухса хӑйсен подразделенийӗсемпе тӑшман ҫине ыткӑнаҫҫӗ, ҫавна май чи малтан пӗтеҫҫӗ, вӗсем вилнӗ хыҫҫӑн ертӳҫӗсӗр юлнӑ подразделнисем командир лартнӑ тӗллеве пурнӑҫлаймаҫҫӗ, атакӑсем путланса лараҫҫӗ. Ҫавна шута илсе, оборона министрӗ подразделение атакӑна ҫӗклеме командир ҫумӗсемпе парти вожакӗсене хӑйсем ҫине илме сӗнет. Ҫавӑнпа та рота е батальон командирӗсем атакӑна ҫӗклеме хӑйсен ҫумӗсене, замполитсене е парти вожакӗсене хатӗрлемелле. Кун пек туни — оборона министрӗн инструкцине пурнӑҫлани пулать. Уншӑн командирсене айӑплама та , хурлама та кирлӗ мар.

— Апла, полка атакӑна ҫӗклеме мана тивет, — хушса хучӗ Тарасов.

— Питӗ тӗрӗс ӑнланнӑ, — тесе ырларӑм ӑна.

Пирӗн калаҫу полк фашистсемпе ҫапӑҫма мӗнле хатӗрленсе ҫитни ҫине ҫитрӗ. Тарасов мана ку ыйтупа полка тӗрӗслесе тухма хушрӗ. Эпӗ ун сӗнӗвӗпе килӗшрӗм.

Ирхине тӑнӑ ҫӗре ҫурҫӗр ҫилӗ хӑй ӗҫне тунӑ. Ҫӗре шӑнтса лартнӑ, шыв кӳлленчӗкӗсем тӗкӗр пек шӑнса ҫуталса тӑраҫҫӗ, ырӑн-ырӑн пӑрлак. Чӳк уйӑхӗнче мӗн кӗтӗн ӗнтӗ. Кӗҫвӗҫ шурӑ юр ҫуса лартать те хӗл пуҫланать. Никам та сивӗ хӗле савӑнӑҫлӑ кӗтмест, уйрӑмах фронтри салтак. Сивӗ ӑна сахал мар пӑчӑртать, хуҫлатать, ытларах ташлатать. Ун синче шинель те пуҫра сӗлӗк. Уринче — кирза атӑ. Ҫӗнӗ ҫул умӗн кӑна кӑсатӑ параҫҫӗ. Унччен темле сивӗ пулсан та, шӑла ҫыртса чӑт. Салтак чӑтать, вӑл пурне те чӑтма вӗреннӗ.

Эпӗ ирхине батальон командирӗсене пухрӑм та вӗсене тактика занятийӗсем ирттерме хушрӑм.

Анчах пирӗн тӑнӑҫ пурнӑҫ вӗҫленчӗ. Штаба уазик вӗҫтерсе ҫитрӗ. Тӑшман Волоколамска илнӗ хыҫҫӑн Мыканинопа

Гусеново патне çитсе тухнă, вăл шоссе икĕ енĕпе те кунталла хăвăрт шăвать, ман запасри полка Новопетровска чакса позици йышăнма хушать. Эпĕ 16-мĕш арми полковникĕнчен çĕнĕ кăтарту илтĕм, ăна штабран çырса янă. Хушăвне Рокоссовский генерал ячĕпе çырса ăсатнă.

Хута илтĕм те полковник журналĕ çине алă пусрăм. Полковник манăн алла чăмăртарĕ те полка пĕр сехет хушшинче кунтан илсе тухма сĕнчĕ, фронтри лару-тăру хăвăрт улшăннине шута илмеллине асăрхаттарчĕ.

Çамрăк полковник ман патран хăвăрт тухса кайрĕ — эпĕ ăна ăсатса яма та ĕлкĕреймерĕм.

## ЭПИР ҪАЯЛЛА ЧАКНИ

Хамăр полк Новопетровск станципе сали патне чаксан, хӳтĕленме шăтăксемпе «каюра çулĕсем» турăмăр. Çуран çар хăйне пытанма часах çĕре шăтарса кĕчĕ, нимĕçсене кĕтсе илме хатĕрленсе тăчĕ.

Мана валли СВ (сăнавлă вырăнпа[1]) командирăн СÇ (сыхланмалли çирĕплĕхне[2]) туса пачĕç. Эпĕ пĕрремĕшпе иккĕмĕш батальонсем хушшинче, вĕсенчен виç çĕр метр хыçаларах пулин те, малти линие лайăх куратăп. Нумай хут çывхартакан бинокль çĕр çумĕнчи пысăк йĕпе те кăтартать.

Ҫăнтăр тĕлнелле нимĕçсен йышлă самолечĕсем пирĕн çине вĕçсе килчĕç, хăйсен вилĕм кучченеçĕсене пĕрре те хĕрхенмерĕç. Акă йышлă самолет вĕçсе килет те пирĕн позици тĕлне çитерехпе хурчăкасем пек аялла чăмать, унтан хура бомбăсем тăкать, хăйсем çӳлелле çĕкленсе вĕçсе каяççĕ. Аялтан, пирĕн таврара, бомбăсем татти-сыпписĕр çурăлаççĕ, тусан-тĕтĕм, вут-хĕм хупласа илет. Тар шăршипе тĕтĕме пула сывлама çук. Ӳпке хупланса ларать, чыхăна-чыхăна каятăн. Пĕр сăтăрăм хыççăн тепĕр сăтăрăм бомба тăкăнать, ура айĕнчи мĕскĕн çĕр тăр-тăр, тăр-тăр чĕтресе тăрать.

Нимĕç самолечĕсем пирĕн тавралăха аркатаççĕ те вĕçсе каяççĕ. Вĕсем пире çеç мар, салапа станцие те бомбăсем тăкнă-мĕн, хыçри сала ялкăшса çунать... Тăшман ниме те хĕрхенмест — пĕтĕмпе çунтарса пĕтерсе хăварасшăн.

Чунра тарăху хаярланса хăпарать, курайманлăх ӳссе пырать.

---

[1] Сăнавлă вырăн — наблюдательный пункт.

[2] Сыхланмалли çирĕплĕх — блиндаж.

Эпĕ Савелькинпа блиндажран сăнамалли вырăна тухрăм. Бинокльпа пĕтĕм тавралăха тишкертĕм: пирĕн санитарсем аманнă боецсене шăтăксенчен е «каюра» çулĕсенчен çĕклесе кăлараççĕ те нащилкка çине çĕклесе хураççĕ, каялла сала патĕнчи санчаçе васкаççĕ.

Эпĕ телефон трубкине илетĕп те пĕрремĕш батальона шăнкăравлатăп.

— Алло-алло! Орлов, çухату çинчен пĕлтер.

— Ултă боец пĕтнĕ, тăххăр аманнă, ыттисем тăшмана çапăçма хатĕр, командирсем пурте сывă.

— Майор юлташ! Нимĕçсем танксемпе тапăнассинчен хатĕрленсе кĕтсе тăр. Вĕсем йышлăн, сĕмсĕррĕн тапăнаççĕ. Анчах пĕр утăм та приказсăр чакма ан шутла.

Эпĕ иккĕмĕш батальонпа çыхăну тытатăп — Комаровран миçе боец вилнипе аманнине ыйтса пĕлетĕп. Унăн йышлă мар — виççĕ вилнĕ, тăваттă — аманнă, иккĕшĕ — тăнне çухатнă...

Виççĕмĕш батальон командирĕ Кислов капитан хыпарланă тăрăх çухату ытларах тўснĕ: вилнисен шучĕ вуннăран иртет, аманнисемпе тăнне çухатнисем (контузи туяннисем) вун икĕ боец, вĕсен шутĕнче икĕ сержант, отделени командирĕсем.

Эпĕ Кислов капитана пытару ĕçне хăвăрт туса ирттерме хушрăм: тăшман çак сехетрех хăватлăн тапăнса килессине, ăна хирĕç тăма кашни минутра хатĕр пулмаллине çирĕп асăрхаттартăм.

Иван Кириллович пытару ĕçне кашни ротăра виçшер боеца уйăрнă терĕ, çавсем бомба шăтăкĕсене вăрăмлатса вилнисене майлаштарса пытараççĕ те юпа лартса хăвараççĕ. Ытти боецсемпе командирсем нимĕçсемпе çапăçма хатĕр танине хыпарларĕ вăл.

Кислов капитан вăрçă хирĕнче пуçласа çапăçнăран вилĕм сывлăшне туйнине ăнланса, эпĕ ăна сехĕрленсе ўкме юраманнине систертĕм. «Вилĕм çинчен пĕрмай шухăшласассăн, чăнах та, сана вăл ăнсăртран пырса хуплать — ху та сиссе юлаймастăн, терĕм эп ăна. — Вилĕм тени хаяр çапăçура санран хăй хăраса тарса тăтăр — çавăн пек паттăр тем пек йывăр пулсан та çапăçура упранса юлать, пĕтĕм çара ăнăçлăх кўрет».

Кислов капитанпа уйăрлнă хыççăн эпĕ хамăн сăнав вырăнне таврăнтăм. Кунтах Иван Савелькин та.

— Аркадий Петрович, илтетĕн-и? — анăçалла аллине тăсса кăтартрĕ вăл. — Чуна çўçентерекен кĕрлев илтĕнме тытăнчĕ. Итле-ха!

Эпĕ сылтăм хăлхана анăçалла тытсах итлетĕп. Чăнах та, адьютант калани тĕрĕсех: кĕрлев вăйлансах пырать. Нимĕçсем танксемпе тапăнса килни лайăхах сисĕнет.

— Илтетĕп. Хăйсен хурçă çарне илсе тухнă. Çапăçу хаяр пулать. Ну, пирĕн вĕсене хамăр патăмăртан ирттермелле мар. Чукун юпа пек тапранмасăр тăмалла.

Савелькин мана хирĕçлемест, эпĕ каланипе килĕшет пулас, анчах чунĕ ун вырăнта мар, çитес юнлă çапăçу йывăр пулассине чухлать вăл. Пĕлет Савелькин: нимĕçсен хурçă çарне хирĕç кĕрешме пирĕн те хурçă çар кăларса тăратмаллине, анчах вăл хальхаççăн кунта çук, апла пулсан, пирĕн çарнах ăна чарса лартмалла, малалла сĕкĕнме памалла мар. Ăна мĕнле майпа тăватăн — пуринчен яваплă — командир, пĕтĕмпех унран ыйтаççĕ.

Эпĕ çавăнтах рацине артиллери полкĕн командирĕпе, Нарядов полковникпа, çыхăнатăп:

— «Аслати», «Аслати». Санпа «Сăр» калаçать. Илтетĕн-и? Çил-тăвăл килет, — тетĕп Нарядов полковнике асăрхаттарса.

— Илтетĕп, «Сăр». Мĕн пĕлесшĕн? — кăсăкланать полковник.

— Пире йывăр килсен, эсĕ, «Аслати», аça-çиçĕм ярасса кĕтетĕп.

— «Сăр», вăхăтра систерме.ан ман, эпĕ хатĕр, анчах кĕске вăхăта кăна, — систерет мана Нарядов, снарядсем сахаллине палăртать.

«Шел, — шухăшлатăп ăшра. — Çавна та кирлĕ таран параймаççĕ. Йышлă танксене хирĕç сахал снарядпа мĕн тăвăн. Вăл хăйсене те таптаса кĕрсе каять, — пăшăрханса илетĕп çав авăкра. — Ытларах хамăр вăй сине шанма тивет».

Эпĕ рацине Орлов майорпа çыхăнатăп, ăна тăшман танксемпе тапăнса килнине систересшĕнччĕ, вăл хăй ăна кĕтсе илме хатĕр тăнине мана пĕлтерчĕ.

Комаровпа Кислов капитансем те нимĕçсем танксемпе тапăнса килнине сисиĕ, хăйсен батальонĕсене, уйрăмах танксемпе кĕрешекенсене хăйсен вырăнĕсене йышăнма хушнă.

Кĕскен каласан, полк тăшманпа кĕрешме хатĕрленсе тăчĕ, анчах ĕç-пуç мĕнле пырассине малтанах пăхса хума йывăр: унăн тухăмĕ тăшман мĕнле вăйпа тапăннинчен тата мĕнле тактикăпа çапăçнинчен ытларах килет. Малтанах эпир парăнмастпăр, ăна çĕнтеретпĕр тесе калама та пултараймастпăр. Халлĕхе пирĕн тĕп задача — тăшмана хамăр йышăннă вырăнтан иртме памалла мар.

Эпĕ хамăн полкпа çыхăну тытса хатĕрленнĕ хушăра хайхи хурçă çар кĕрлеттерсе те çитрĕ.

Анлă шоссе тăрăх унăн тĕксĕм кăвак та хăмăр танкĕсем шоссе çулне чĕтретсе килеççĕ, кашни ретĕнче виççĕр танк. Парада тухнă пек хăйсен ретне пĕр пăсмасăр хастарланса куçаççĕ. Кураççĕ: вĕсене никам та, ниçта та чарса тăракан çук, çак хăвăртлăхпа кайсан, паян вĕсем Мускава çитсе кĕреççĕ. Мĕн пек савăнăç вĕсемшĕн!

Эпĕ ăнланатăп: пĕрремĕш хут тăшман танкĕсемпе кĕрешесси урса кайнă пысăк вăкăра хирĕç чышкăпа тухнинчен те йывăртарах пĕрремĕш хут çапăçакансемшĕн. Кунта пĕр танк мар, танксен кĕтĕвĕ тапăнса килет, гранатăсене майлă ывăтса лектерейменсен, сан урлă нăчăртаттарса каçса каять, санран çĕр çине йĕпе вырăн çеç тăрса юлать. Вăт танка хирĕç тухса çапăç! Шухăшласа кайсан тата ытларах хăраса ӳкетĕн...

Çук, урăх шухăшламарĕ Кислов, халĕ унăн тем пулсан та танксен тапăнăвне сирсе ямалла е пĕтерсе хумалла. Çавăнтах бронебойщиксем патне васкарĕ, хайхисем траншея хĕрне хăйсен пемелли хатĕрĕсене вырнаçтарса лартнă та танксем çывхарасса кĕтеççĕ. Кунта вĕсем вуннăн — пĕр отделени.

Кислов капитан çитсен, отделени командирĕ Паркин сержант бронебойщиксем танксемпе çапăçма хатĕрри çинчен пĕлтерчĕ.

— Эпĕ сире шанатăп. Пĕри амансан е стройран тухсан, тепри ăна ылмаштарма пултарать-и? — кăсăкланчĕ капитан.

Паркин çакăн пек ыйтăва кĕтнĕ пекех тӳрех хуравларĕ:

— Капитан юлташ, пултараççĕ.

— Çирĕп тăрăр. Пĕр танка та малалла ирттерме ан парăр, — юлашки сăмахне вăл уйрăмах çирĕппĕн палăртса каларĕ.

— Мĕн пур вăйран тăрăшатпăр, — кĕскен пулчĕ Паркинăн хуравĕ.

Эпĕ Тарасова Истрино водохранилище енчи пулеметчиксене тĕрĕслеме хушрăм, траншейăсем тăрăх унта васкарĕ.

Пулеметчиксен взвод командирĕ Стрельнов лейтенант хăш-пĕр пулеметчиксемпе килĕштерменни çинчен пĕлтернĕччĕ мана, икĕ пулеметчика тытса силлени те пулнă. Халĕ, çапăçу вăхăтĕнче, вĕсем хушшинче хирĕçу тухасран хытă асăрхаттарма васкатрăм эпĕ Гурий Ивановича. Вăл ĕçе маларах тумалаччĕ, анчах вăхăт çитейменнипе юлашкинчен те пулин сивленине Стрельнов лейтенант патне çитерме шухăшларăм,

Малта сăнă пек килекен вăйлă танк пирĕн çине снаряд кăларса ячĕ, ку танксем тапăнăвăн пуçламăшне пĕлтерчĕ. Кун хыççăн йĕркипе килекен виçĕ танк хăйсен тупписенчен пирĕн позицие пеме тытăнчĕ. Вĕсем хыççăнхи виçĕ танк пĕр харăс кĕрĕслеттерчĕ. Вара пуçланса кайрĕ хире-хирĕç вутлă-çулăмлă аркату. Пирĕн ПТОсем, бронебойщиксем малти танксене тĕл тивертсе хыптара-хыптара ячĕç. Хайхи кăвак хăмăр тĕслĕ пысăк танксем утă куписем пек ялкăшса çунаççĕ.

Малтанхи танксем пĕтнине пăхмасăр нимĕç командованийĕ ытти танксене шоссе икĕ енĕпе кĕрсе çул тумаваскатать. Тăшман танкĕсем икĕ пая пайланса хирпе тапăнаççĕ. Эпĕ хирĕн сылтăм енне Орловпа Комаров батальонне вырнаçтарнипе тăшман вĕсене таптаса иртеймест тесе шанатăп, сулахай енче — Кислов капитанăн бронебойщиксемпе минометчиксем кăна — çителĕксĕр вăй тесе шикленетĕп. Çунакан танксем хыçĕпе нимĕçсен броневиксем, вĕсен хыçĕнче — сăрă каска тăхăннă автоматчикĕсем. Вĕсем пурте пуçа çĕклеме çук вут-хĕм тăкаççĕ.

Эпĕ Орлов майора тăшманăн çĕнĕ вăйĕпе кĕрешме бронебойщиксемпе пулеметчиксене хăвăрт явăçтарма хушрăм. Вăл хăй тĕллĕнех çак вăйсене тăшмана хирĕç çĕкленĕ. Шоссе çинче аякран пăхсан нимĕн те ăнланмалла мар: хуп-хура тĕтĕм йăтăнса тăрать, унта-кунта хĕп-хĕрлĕ çулăм тухса каять, пулеметпа автоматсем тăрлатса тăни хăлхана хупласа хурать. Икĕ енчи вăй та вут-хĕм тăкать, нихăш енĕ те парăнмасть, тĕл пулнă çĕртен чакмасть.

Шоссен икĕ еннелле те вут хыпнă танксем е броневиксем сирпĕнсе анаççĕ.

Пирĕн бронебойщиксем, артиллеристсем танка хирĕç кĕрешекенсем, тăшман вăйне малалла иртме памаççĕ. Нимĕçсен çар ертӳçисем хыçалти танксене хирпе эпир йышăннă вырăна, урăхла каласан, позицие, ĕрĕхтерсе яраççĕ.

Шоссе сылтăм енче манăн Орловпа Комаров батальонĕсем вырнаçнă, вĕсем çине эпĕ шанатăп. Шоссен сулахай енче Кислов капитан батальонĕ, минометсен роти, - хыçаларах Скриманово салине хӳтĕлеме вун икĕ тупă вырнаçтарнă гаубица дивизионĕ Нарядов полковникăн артиллери чаçĕнчен килсе йышăннă. Ку дивизиона темле майор ертсе пырать, эпĕ ăна пĕлсе те çитмен. Вăл мана мар, хăйĕн полк командирне, Нарядов полковника, пăхăнса тăрать, ун умĕнче яваплă.

Эпĕ ăна хам мар, Нарядов полковника е Тураев майора

(командиран заместительне) пулăшма ыйтсан, вăл итлеме пултарать.

## АХМЕД ПАТТĂРЛĂХĔ

Эпĕ стериотрубапа нимĕçсен танкĕсем çывхарнине сехĕрленсе пăхса тăратăп. Акă, танксем траншейăсене тĕллесе пеме тытăнчĕç. Траншейă умĕнче снаряд çурăлчĕ те вут-хĕм ялкăшса илчĕ, тĕтĕмпе сарăрах çăмăл тăпра йĕри-тавра сирпĕнчĕ. Траншейăри боец пуçне пĕкме ĕлкĕрнĕрен сывах юлчĕ. Эпĕ ана пĕлетĕп. Орлов батальонĕнчи Ахмед Зайдуллин сержант, тутар çынни, вăл гранатăна инçе ывăтма пултарать, снайпер, чăвашла та пĕлет. Сержант май ытти боецсене те граната çыххисемпе кĕтсе илме чĕнчĕ пулас.

Анчах ку хутĕнче хайхи танксене ПТОран персе тĕл тăваççĕ те — çак хурçă куписем чарăнса лараççĕ, тепĕр минутран танк хыпса илет, çав вăхăтра танк экипажĕ люксем уçса аялтан та, çӳлтен те тухма тытăнать. Хайхи Ахмед хăйĕн винтовкине ĕçе ярать: пĕрин хыççăн теприне шĕкĕлчет, танк хыçне пытанма ĕлкĕрни çеç сыхланса юлать.

Акă тепĕр ретри танксем каллех вут кăларса траншейăсем патне çывхараççĕ. Каллех ПТОсем ку ретри танксене вирлĕн кĕтсе илеççĕ, анчах Зайдуллин çинелле килекен танка лектерейрен е лектерсен те бензобакне тивмен.

Ахмед ăнланчĕ: унăн хăйĕн çак тискерпе куçа-куçăн тăрса кĕрешмелле. Акă çак вут сапакан хурçă машина кĕç-вĕç уп траншейине çĕмĕрсе, ăна тăпра айне туса каçса каять, гаптаса тикĕслесе хăварать. Ун хыççăн ытти танксем те... Ак епле уçаççĕ çул Мускава.

— Çук, ăна тума памалла мар! Халех ăна лайăх кучченеç тыттармалла. Лартăр вăл çунса, чыхăнса.

Вăл траншея хĕрринчи граната çыххине илет те кĕрлесе килекен танк айне вăркăнтарать. Гранатăсем шуçлав айне лăпах пулнă-мĕн — кĕрĕслетсе çурăлаççĕ, хайхи хăрушă танк кăшт каять те чарăнса ларать.

Ахмед анчах мар, кӳршĕри боецсем те, эпĕ стериотрубапа пăхаканскер те, Зайдуллин тӳр лектернишĕн савăнатăп. Ман çак маттур сержант çинчен ытларах пĕлес килчĕ...

Çапăçу малалла пырать. Нимĕç танкĕсем пĕр рет хыççăн тепри хĕрсе кайса тата хытăрах та хăвăртрах тапăнаççĕ. Куратăп: хальхинче Ахмед çине пĕр харăс икĕ танк тапăнса килет. Сисетĕп: пĕрне чарса тăрсан та, тепри ăна таптаса каçса каять.

Çав самантра пĕтĕм сылтăм енчи çапăçу хирне пăхса илетĕп. Пур çĕрте те пирĕн боецсем пĕр чаранса тăмасăр нимĕç танкĕсемпе кĕрешеççĕ, пĕр танкне хăйсем йышăннă траншея урлă каçарса яман, анчах хӳтĕлекенсен йышĕ чакнăçемĕн чакни сисĕнет.

— Мĕнле тытса чармалла ку хăрушă вăя? — пуçра пăталать çак ыйту, пĕтĕм чуна çӳçентерсе ярать.

Каллех витĕмлĕ куç тĕлне Ахмед курăнса каять. Траншея пĕтне çитиччен тĕрлĕрен выранта виçĕ танк чаранса ларнă, перине малтанах чарса лартнăччĕ, халĕ тата иккĕ хутшăннă, пĕри сунать, тепри чаранса ларнă та нимĕç танкисчĕсем хăйсем пирĕн герой çине тапăнаççĕ, автоматсенчен ун çине кĕрлеттереççĕ. Ахмеда пуçа çĕклеме памаççĕ. Паллах, Ахмед хăйне упрасшăн çак авăкра пуçне çĕклемест, хăйне вилнĕ тесе тăшмана шутлаттарасшăн та пулĕ. Вилнĕ тесе фрицсем пĕр шикленмесĕрех ун трашейине пырса йышăнма шутлаççĕ. Ахмед тавра çывăхра боецсем те курăнмаççĕ, вăрçă вучĕ вĕсене ĕнтсе янă пулас (пĕрисем вилнĕ, теприсем санчаçе ăсаннă).

Эпĕ пĕрре пăхсах ăнлантăм: нимĕçсем сакăнтан çăмăллăных фронта татса кĕрсе каяççĕ: Ахмед пĕччен тытса тăраймасть.

Эпĕ Орлов майора шăнкăравласа асăрхаттартăм: халех Ахмед хӳтĕлекен выранa кирлĕ вăй ямалла: граната ывăтакансем, автоматчиксем е пулеметчиксем.

Орлов майор хăй манран артиллери вутне ыйтрĕ, унсăрăн тăшманăн арăслан пек тапăнакан хурçă вăйне сирсе ярайместпăр, терĕ.

Шоссен сулахай енче Скриманово сали енче нимĕçсен танк тапăнавĕ вăй илсе пынине Терехов связной вĕçтерсе çитсе манаваскаса пĕлтерчĕ.

— Подполковник юлташ, Кислов капитан сиртен пулăшу кĕтет. Артиллери вучĕпе хăвăртрах пулăшу!

Эпĕ çавăнтах Нарядов полковника шăнкăравлатăп. Нарядов хăй те лайăх ăнланать, вăл Тураев майора васкавлă ĕç парать:

— «Сăр» йышăнакан пахчапа хура-хăмăр хуртсенчен тасатмалла.

Эпĕ Тураев-майора тупăран хăш выранa пемелли çĕрс кăтартатăп, тепĕр тĕрлĕ каласан — координатсене.

Тураев майор хапăл туса ман ёçе йышăнчĕ, кайран ёçĕн тухăçлăхне пĕлтерме хушрĕ.

Тепĕр ик-виçĕ минутран аслати пек кĕрлерĕ шоссен сулахай енчи вырăнта, нимĕçсен асар-писер тапăнăвĕ хăвăрт путланать, çапăçу уйне çирĕме яхăн танк çунса кайса тимĕр-тăмăра тухать. Сылтăм енчи çапăçу уйне куçран çухатмастăп. Орлов ман приказа хăвăрт пурнăçлайман иккен: хайхи тепĕр улăп пек танк Ахмед çине пырса кĕрет, вал автоматчиксем персе тăнăран, танка граната çыххипе хăналама ĕлкĕреймест. Йывăр танк унăн траншейине ишсе антарать, Ахмедан кĕлетки-çурăмĕ çине тăпра йăтăнса анать, унăн пуçĕпе аллисем кăна ирĕке юлаççĕ. Анчах танка ПТОран персе траншейăран тухма памаççĕ. Çав самантрах Орлов майор яна гранатометчиксем траншея тăрăх чупса Ахмед кĕрешнĕ вырăна çитеççĕ, нимĕç танкисчĕсемпе тата тапăнса килекен автоматчикĕсемпе вирлĕн кĕрешеççĕ, виçĕ гранатометчика çухатаççĕ, траншея тĕпĕнче йăнăшса выртакан Ахмеда асăрхаççĕ.

Хайхи гранатометчиксем çумри кĕреçесемпе хăйăрлă-тăмла çĕре чавса Зайдуллина çĕклесе кăлараççĕ. Унăн юлашки çапăçура сылтăм хуллипе ури те аманнă пулнă, çавна пула ун çине пырса кĕрекен танкран пăрăнма пултарайман.

Ахмеда чавса кăларсан, суранĕсене çыхаççĕ те Новопетровское сали хыçснчи санчаçе ăсатаççĕ.

Анчах нимĕçсем малтанхи пекех тапăнмаççĕ пулсан та, тĕттĕм пуличченех çав таврара çапăçу кĕрлерĕ, нимĕçсем пирĕн участокра нумай танк çухатрĕç, шоссе çинче те, ун икĕ енĕпе те вутра çуннă хура сĕмсĕр танксен кӳлеписем чуна хăратмалла ишĕлсе лараççĕ. Вĕсем çине йĕрĕнсе пăхатăн.

Эпир хамăр та тăшмана хирĕç çирĕп тăнипе кăмăллă, паянхи çапăçу эпир ăна парăнтарас шухăша çирĕплетме тытăнчĕ.

Анчах каçчен нимĕçсем Скримановăран кăнтăр еннелли çар чаçĕсем йышăннă вырăнтан фронта татса каçнă-мĕн. Вĕсем темиçе километр кĕрес каяççĕ.

## ИСТРА ХУЛИНЕ ХӲТĔЛЕНИ

Эпир çĕрле çак начар хыпара пĕлетпĕр те 16-мĕш çар приказĕпе каялла чакатпăр. Нимĕçсем шоссе çулне илме ĕлкĕрейменччĕ. Эпир çĕрĕпе шоссе çулĕпе Мускав еннелле тарăха-тарăха утатпăр. Ир енне Истра хули патне çитсе чарăнтăмăр.

Хамăр çĕрĕпе утнăскерсем, шутсăр ываннă. Хула тавра шĕнче çакăнти водохранилищине тунă чух пурăннă бараксене вырнаçма хушрĕç. Кунта юлашки вăхăтра никам та пурăнман-мĕн. Пире çак бараксене кĕрсе ирччен канма питех майлă.

Ирхине ирех мана 16-мĕш арми штабĕнчен Истра поселокпа станцине кăнтăр-хĕвеланăç енчен хӳтĕлеме приказ пулчĕ, манпа юнашар кăнтăр-хĕвелтухăç енчен 131-мĕш полк вырнаçнă.

Нимĕçсемпе çапăçма ку чаçе те çĕнĕрен илсе килнĕ пулмалла, ун пирки нимех те пĕлместĕп.

Юрать Мускав çыннисем тăшманран хӳтĕленме тесе юпа уйăхĕнчех тарăн траншейăсемпе блиндажсем хатĕрлесе хунă. Эпĕ хамăн полка шоссен сулахай енне пĕр çухрăм ытла вăрман таран йышăнма хушрăм. Кашни батальон тăват çĕр метр сарлакăш хӳтĕлеме йышăнчĕ.

Паллах, халĕ, чӳк уйăхĕн вĕçнелле, çĕр чылаях шăнчĕ, хамăр çумри кĕреçепе кун пек траншейăсем алтма темиçе талăк кирлĕ. Тăшман ăна кĕтсе тăмасть — кĕрлесе çитет те таптаса каçса каять. Çуран çар тӳп-тӳрĕ таса уйра хӳтĕленмелли тумасан вăйлă хурçă çара хирĕç тăрса çитерейместь — пĕтет.

Эпĕ батальон командирĕсене хăйсем хӳтĕлекен лаптăкра çирĕп тăма, уйрăмах танксен тапăнăвне хăюллăн та пултаруллăн сирсе яма ас тутартăм. Хăшĕн лаптăкĕнче тӳсме çук йывăрлăх килсе тухать, мана çавăнтах хыпарлама, вутпа пулăшма ыйтма чĕнтĕм.

Орлов майор хăйĕн батальонĕ шоссе çулĕпе шоссен сулахай енне йышăннăран тапăну хăрушлăхĕ йывăр пуласине тӳрех чухласа илчĕ.

— Аркадий Петрович, мана (пĕр ӳстермесĕр калатăп) артиллери вучĕпе пулăшсах тăрăр, унсăрăн тытăнса тăма йывăр, таптаса каçса кайма пултараççĕ, — малтанах систерсе хучĕ.

Вăл систеричченех маншăн паллă: Гитлер хĕле кĕриччен Мускава илесшĕн, çавăнпа вăл пирĕн çара тайфун пек килсе çапса пăрккăн аркатса тăкасшăн та Мускава кĕске вăхăтра кĕрсе каясшăн, унта хăйĕн çарĕпе парад ирттересшĕн. Вăл парада чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕнче ирттерме палăртнăччĕ, анчах ун чухне ĕç тухмарĕ, пирĕн çарсем паттăр çапăçнипе унтан вара çирĕм кун иртрĕ ĕнтĕ, анчах паянхи кунра вăл Мускавра мар, унтан 30—40 çухрăм аякра, шăлне кашкăрла шатăртаттарса тăрать. Çапах та Мускавшăн хăрушлăх пĕтмен,

эпир чарса тăмасан, кĕске вăхăтрах çĕршыв чĕрине вилĕм кўме пултарать. Пур совет çыннисемшĕн — питĕ пысăк хăрушлăх. Эпĕ çак пысăк явапа кашни авăкрах хытă туйса тăратăп. Çак хаяр çил тăвăла епле сирсе ямалла!

Ман пĕтĕм кўлепене, пуçа, ăс-тăна хупласа таракан, темĕн йывăрăш çăкă мана пусарса тăрать, ирĕккĕн утма, куçма, ĕç тума памасть. Мĕн пек явапла та йывăр...

Тавралăха тĕтре карса илнĕччĕ. Вăл тăшман авиацине сывлăшра ирĕккĕн хуçаланма чăрмантарса тăчĕ. Çапах та «Рама» текенни чылай аялтан вĕçсе пирĕн çар ăçта вырнаçнине пĕлме килчĕ, икĕ-виçĕ хутчен çаврăнса çўрерĕ те каялла вĕçсе кайрĕ. Пирĕн енчен çўлелле перекен тупăсем те шарламарĕç, хăйсем ăçта вырнаçнине пĕлтересшен пулмарĕç ши е урăх сăлтавпа.

Ирхине вуннă тĕлнелле тĕтре чылаях сирĕлчĕ, ик çĕр метрти курăнакан пулчĕ. Анăçран пĕр вăхăтрах çĕр çинче те, сывлăшра та кĕрленĕ сасăсем илтĕнсе кайрĕç, вăл вайланнăçемĕн вăйланса пычĕ.

Эпĕ раципе Орлов майорпа ытти батальон командирĕсене, артиллери тата миномет пуçлăхĕсене «чĕнмен» хăнасене кĕтсе илме хатĕр пулмаллине аса илтертĕм. Тураев майорпа та сăмахласа илтĕм. Пилĕк минут та иртмерĕ пулĕ, нимĕç самолечĕсем сывлăша çурса пирĕн çине вĕçсе çитрĕç.

Акă малти самолечĕсем аялалла чăмаççĕ те хăпарса каяс умĕн хура чăмăрккасем умлă-хыçлă кăларса яраççĕ. Хайхи чăмăрккасем çĕрелле ăшчике çурса ярасла хаяр сас туса шăхăрса анаççĕ, вĕçлĕрех пуçĕпе çĕре кĕрсе кайса хаплатса çурăлаççĕ, сасартăк вут-çулăм тухса каять, йĕри-тавра бомба ванчăкĕсем шиллесе сирпĕнеççĕ, сывлăша çĕрпе тусан, тĕтĕм-сĕрĕм çĕкленет. Бомбăсем траншея таврашĕнче хаплатса çурăлаççĕ. Паллах, хăшĕсем траншейăна та çакланаççĕ, анчах ун пеккисем йышлă мар.

Мана упрас тĕллевпе Тарасов майор «Сире хўтлĕхе чĕнесçĕ, терĕ. — Эсĕ унтан та ертсе пыма пултаран».

Вăл пĕлнĕ пекех каланă иккен. Эпĕ кайнă хыççăнах траншейăна, çав вырăна, бомба ўкет те авăн вучахĕ пек шăтăк тăвать.

Пĕр авăк бомба тăкнă хыççăн «юнкерссемпе» «мессерсем» вĕçсе каяççĕ, анчах пирĕн çине тапăнасси малалла пырать.

Танксем умĕн нимĕç артиллерийĕ пирĕн йышăннă вырăна сухалама тытăнчĕ.

Аçтан пенине те курмастпăр: тĕтре пĕтĕмпех сирĕлсе çит-

мен, анчах снарядсем киле-киле ӳкеççӗ те траншея таврашӗнчи шăннă çӗре тӗпретсе сирпӗтеççӗ. Малтанах йышлах ӳкместчӗ, кашни минутрах вăйланса пычӗ... Çӗр татти-сыпписӗр кисренет, траншейăри салтакăн сехрине хăпартать. Унăн кашни çеккунтрах вутлă вилӗм кӗтмелле. Акă тӳрех ун умне килсе ӳкет те — ăна пин татăк туса пур еннелле таçта çити сирпӗнет, çавăнтах çук тăвать.

Кислов капитан, хăй те артиллери вучӗ айӗнче пӗр-иккӗ çеç пулнăскер, траншейăра урăх тӳссе тăраймарӗ, унăн çансурăмӗ чӗтрене-чӗтрене илчӗ, пӗтӗм ăшчиккине сивӗтсе ячӗ. акă çак авăкра снаряд килсе ӳксе пин татăк туса сапалассӑн тупăнчӗ. Хăйне тем пек хытарасшăн пулсан та, пурнăçшăн тăрăшакан нервсем чăтса çитерейменрӗç, траншея тӗпне хӗстерсе хучӗç. Вăл кăшт выртрӗ те упаленме пуçларӗ, хыçалалла каякан ансăр çул енне пăрăнчӗ. Çак «каюра çулӗ» блиндажа илсе çитерет, ăна та Мускав сыннисем малтанах чавса хатӗрленӗ.

Анчах вăл блиндажа çитсе ӳкеймерӗ, инçех те мар — умра снаряд хаплатрӗ те — Кислов капитан тăнне çухатрӗ.

Мӗн вăхăт вăл выртнă — хăй те пӗлмест.

Мана унăн çумӗ, Руссаков аслă лейтенант, пӗлтерчӗ: «Пирӗн капитан сасартăк çухалчӗ: те снаряд тӗл лексе тӗп турӗ, те каялла тухса шăвăнчӗ, вут айӗнче тӳссе тăраймарӗ — халлӗхе пӗлместпӗр».

Эпӗ ăна шыраса тупма висӗ боеца хушрăм. Вăхăчӗ пит явaплă: кӗç-вӗç танксен тапăнăвӗ пуçланмалла. Кислов капитан тупăниччен 3-мӗш батальона ертсе пыма Руссакова хăй сине илме хушрăм.

Эпӗ стереотрубкăпа мал енне сăнатăп. Тӗтре сирӗлнӗ. Шупка кăвак мăнттай ещӗксем шоссе çулӗпе те, çул тăршшӗпе те пирӗн еннелле шăваççӗ...

— Нимӗç танкӗсем пирӗнпе çапăсма килеççӗ. Кӗске вăхăтрах юнлă çапăçу пуçланмалла. — рацине васкаса хыпарлатăп эпӗ хамăн командирсене. Вӗсем те сывăрмаççӗ иккен — пурте сыхă тăраççӗ. Танка хирӗç перекен пăшалсемпе тупăсем те, граната перекеннисем те сителӗклӗ темелле, анчах тăшман вăйне кирлӗ пек пӗлместпӗр: хирӗç тăрса çапăçмасăр пӗлме йывăр: тăшман тылне янă разведка таврăнман, вăл пӗтнӗ пулас.

Акă хайхи шупка кăвак ещӗксенчен пысăк танксем пулса тăчӗç, кашниех хăйсен туппине малалла тӗлленӗ... Пирӗн пата çитме тăват çӗр метр юлчӗ-и е çук — малти ретри танк-

сем вут тăкма тытăнчĕç, снарядсем траншея урлă вĕçсе каçса хыçра хаплатса çурăлчĕç, иккĕмĕш хутĕнче — траншея умĕнче çурăлса шăннă тăпрана çиелтен чаваларĕç.

Шăп сав авăкра пирĕн танка хирĕç перекен хатĕрсем персе яраççĕ — малти танксем чарăнса лараççĕ, иккĕшĕ хĕрлĕ çулăм сапса çунма тытăнчĕç, унтан тата икĕ танк латсăр шултра тимĕр шапасем пек, пирĕн çине кĕрлеттерсе килеççĕ: кусене тĕл лектереймĕн. Вĕсем тупăран та, пулеметран та траншейăна вут тăкаççĕ. Хыçалти танксем юрăхсăра тухнă танксенчен иртсе, малалла васкаççĕ.

Эпĕ танка хирĕç перекенсене пеме васкататăп, нимĕс автоматчикĕсем танксем çинчен анса, пире талккăшĕпе атакăлаççĕ.

Хăшпĕр танксемпе нимĕç автоматчикĕсем пирĕн траншейăна çитсе пыраççĕ. Эпĕ пулеметчиксемпе минометчиксене вут уçма васкататăп, батальонпа рота командирĕсене мĕншĕн тăшмана хĕрхенетĕр тесе вăрсатăп.

Сапăсу вăйланса пырать, тăшман танксене хирĕç пĕрремĕш батальонри Быстров тата 2-мĕш батальонри Крепков граната перекенсем траншейăран тухаççĕ те хăйсем çине килекен хурçă машинăсен шуçлавĕсене (урăхла каласан гусеницăсене) пырса татса пăрахаççĕ. Хăйхи танксене малалла кайма чарса лартаççĕ. Виççĕмĕш батальон хӳтĕлекен вырăнтан нимĕс автоматчикĕсем касса кайма тытăнаççĕ. Вĕсем пирĕн боецсене çĕр метр таран сирсе пăрахаççĕ (хăшне вĕлереççĕ, хăшне йывăр амантаççĕ, юлашкисем аяккалла тараççĕ) траншея урлă хăвăрт каçса каяççĕ.

Çав вырăнтан виçĕ нимĕç танкĕ те çул тăвать, Волоколамск шоссе çине тухма васкать.

Мана Руссаков аслă лейтенант, хăраса ӳкнĕскер, васкаса пĕлтерет, малалла унăн мĕн тумаллине тилмĕрнĕ пек ыйтать.

«Пирĕн участокри фронта нимĕççем татрĕç. Эпĕ хăрушлăхра, халех пулăшу кирлĕ!» — сисĕмле хăвăртлăхпа шухăшлать пуçăм.

Эпĕ раципе Тураевран васкавлă пулăшу ыйтатăп артиллерирен пемелли координатсене пĕлтеретĕп.

Тураев майор савăнтах ĕçе тытăнать. Вун икĕ тупăран тăракан пĕр дивизионне 3-мĕш батальонран виç çĕр метр хĕвел-тухăçнелли лаптăка хуплама хушать хайхи танксем пыракан вырăна снарядсем килсе аркатаççĕ. виçĕ танкĕ те тĕл çивнипе кĕрлесе хыпаççĕ.

Тĕпрен илсен, 3-мĕш батальона нимĕççен автоматчикĕсем

траншейăран чылайăшне хĕссе каларaççĕ е вĕлерсе пĕтерĕççĕ. Эпĕ ăнланатăп: Руссакова пулăшаймасан, нимĕçсем унтан татса кĕрсе каяççĕ.

Эпĕ раципе Комаров капитана хăй батальонĕнчен ручной пулеметсемпе пĕр взвод чухлĕ боецсем ярса 3-мĕш батальона пулăшма васкаса ыйтатăп.

Комаров хăй йышăннă вырăна çирĕп тытать, анчах хăйĕн вăйне перре те чакарасшăн мар пирки тӳрех килĕшесшĕн пулмарĕ, эп ыйтнине хирĕçлемерĕ. Хаех ăнланчĕ: кӳрше пулăшмасан, тăшман унтан каçса каять те хăйĕн те чакма тивет.

Вăл хăйĕн пулеметчикĕсемпе автоматчикĕсене васкасах траншейăпа ăсатать. 3-мĕш батальонра хĕрӳ çапăçу пуçланать: пулеметпа автомат сасси татти-сыпписĕр кĕрлет. Нимеç автоматчикĕсем те траншейăра хытă çапăçаççĕ, вĕсем пачне çĕнĕ вăйсем пырса тăраççĕ. Пирĕн алăри пулеметчиксемпе автоматчиксем малтанах нимĕçсен автоматчикĕсене хĕсеççĕ, анчах çĕнĕ танксем çитеççĕ те вĕсем çинчен йышлăн автоматчиксем анаççĕ, вĕсем сасартăк пирĕн боецсене хыçал енчен вут çунтарса тапăнаççĕ, нумайăшĕ вилеççĕ е йывăр аманаççĕ, юлашкисем траншея тăрăх кăнтăр-хĕвеланăç еннелле тараççĕ, вĕçене аран-аран тытса чарать Руссаков аслă лейтенант. Вăл вĕсем умне тухса тăрать те револьверне çĕклесе кăшкăрать:

— Ăçта таратăр?! Халех чарăнăр та хăвăр алăри хĕç-пăшала фашистсене хирĕç тытăр. Куратăр-и: вăн нимĕç танкĕсем траншея урлă каçма хатĕрленеççĕ! Халех гранатăсемпе хăналăр, траншея урлă каçса кайнă нимĕç автоматчикĕсене инçене ан ярăр.

Чăнах та, эпĕ Орловпа Комарова траншея урлă каçакан тăшман атоматчикĕсене халех пĕтерсе тăкма приказ патăм.

Çапăçу хĕрӳлленсех пычĕ, Комаровпа Руссаков боецĕсем нимĕç автоматчикĕсемпе хире-хирĕç штыкпа чиксе çапăçрĕç, пирĕн салтаксем, хаярланса кайнăскерсем, ютсене траншейăран сирпĕтсе кăларчĕç, тарма ĕлкĕрейменнисене пĕтерсе тăкрĕç, паллах, пирĕннисем те хăш-пĕр хастар боецсене çухатрĕç, аманнисене те санитарсем çывăхри санчаçе ăсатса тăчĕç.

Шупашкар хĕрĕ Зоя Синицина, çирĕм çулхи хĕр, хăй ирĕкĕпе Мускава хӳтĕлеме килнĕскер, ку çапăçура вун виçĕ салтака вăрçă хирĕнчен илсе тухрĕ. Унпа пĕрлех тепĕр санитар Володя Галкин, Етĕрне район каччи, фельдшер шкулĕнче çур çул вĕреннĕскер, урăх вĕренме май килмен — фронта кирлĕ

пулнă, каллех тĕп хулана хӳтĕлеме васкасах илсе килнĕскер, варçă хирĕнчен вун икĕ аманнă боеца илсе тухать, вилĕмрен хăтарса хăварать.

Акă, Володя траншейăпа пынă чух йывăр аманнă Кольцов гранатометчик патне çитсе тухать, унăн икĕ ури те йывăр аманнă-мĕн, юн юхтарса выртать, бомбăн металл ванчăкĕсем урисене лексе, шăммисене çĕмĕрсе кайнă. Кольцов йанăшса выртнă. Володя унăн суранĕсене çыхса ярать, анчах ăна пĕччен çеклесе кайма вăй çитерейместь, тĕрекле вырăс салтакĕ. Çакна пулăшма Зойăна чĕнсе илет. Вĕсем плащ-палатка сарса пăрахаççĕ, хайхи гранатометчика ун çине хурса, траншейăран илсе тухаççĕ, çапăçу хирĕнчен кана-кана çеклесе тухса, санчаçе леçсе яраççĕ. Иккĕшĕ те чăм тара ӳкеççĕ.

Кĕске тăхтав хыççăн пирĕн çине нимĕç командованийĕ каллех тапанса килессе кĕтсех тăмалла. Хăйсен тĕп тĕллевне пурнăçлама тăрăшать. Сивĕ те хаяр вырăс хĕлĕ пуçланиччен теп хулана илмелле, пире парăнтармалла.

Халькинче вăл малтан сывлăшран хытă тапăнасса, пирĕн позицие тĕппипе аркатасса, çавăнтах танксем кĕртсе ярса, пире, вăйсăрскерне, таптаса каçса каясса, кĕтсе тăтăм.

Эпĕ тăшманăн тактикине ăнлантăм: манăн хам полка упрас пулать. Мĕнле майпа? Кунтах хăварсан, тăшман авиацийĕ ăна бомба айне тăвать. Апла пулсан, тĕп пайне иккĕмĕш эшелона каялла куçармалла, кунти позицие сыхлама пулеметчиксемпе ПТРсене хăвармалла.

Эпĕ батальон командирĕсене хăйсен пулеметчикĕсемпе ПТРсене тата хăйсен заместителĕсене çак позицие хăварса ыттисене пурне те иккĕмĕш эшелона вăхăтлăх куçма хушрăм. «Ку каялла чакнине пĕлтерместь; ку — çак самантри кирлĕлĕх», — ăнлантартăм эпĕ. Çапах та хамăр лаптăка тытма кашни батальонран икшер станоклă пулемет расчетне тата танксене хирĕç перекен гранатометчиксене, вĕсемпе ертсе пыма батальон командирĕсен çумĕсене хăварма хушрăм...

Батальонăн тĕп вăйĕсене вăхăтлăх иккĕмĕш эшелона куçма васкатăрм.

Иккĕмĕш эшалон пирĕн патран виççĕр метр хыçалтаччĕ, ăна та Мускав çыннисем сентябрь уйăхĕнчех чавса хатĕрленĕмĕн. Ун çине юр çуса лартнипе ытти вырăнтан нимпе те палăрмасть. Уйрăмах çӳлте вĕçекен нимĕç самолечĕсем çинчен уйăрса та илме хĕн. Шанчăклă хӳтĕлĕх.

Тарасов майор полк салтакĕсене васкасах иккĕмĕш эша-

лона куçарчĕ, пирĕн ретри траншейăпа окопсем чылай пушанса юлчĕç.

Хӳтĕлеме юлнă боецсемпе командирсене тăшманпа çапăçма хатĕр тăмалла терĕм. Вĕсем хăйсем те пысăк яваплăха туйса тăраççĕ, пурте çапăçăва кĕме хатĕр.

Кислов капитан çухални мана ăнран ячĕ. Пирĕн ăна шыраса тупмаллине асран ямарăм. Çав шухăшпа Зоя Синицинапа Володя Галкин санитарсене ĕç патăм.

— Сирĕн Кислов капитана чĕрĕ е вилĕ шыраса тупмалла та мана пĕлтермелле. Вăл батальон командирĕ — эп уншăн яваплă. Халех 3-мĕш батальон йышăннă трашейăпа блиндажсене, пĕтĕм лаптăкне тĕрĕслесе тухăр. Ăна тупмасăр ан та таврăнăр! — приказларăм.

Çур сехет иртмерĕ — хайхи санитарсем Кислов капитана плащ-палатка çине хурса çĕклесе çитрĕç.

— Чĕрĕ, анчах нимĕн те сăмахлаймасть, куçĕпе çеç пăхапăха илет. Контузи пулмалла, — тет Володя Галкин.

Эпĕ Кислов капитан патне пыратăп: пичĕ-куçĕ хуралсаларнă. Паллама та хĕн. Кăвак куçне хуллен уçать, тĕлсĕр пахать.

— Иван Кириллович, мана илтетĕн-и? — ыйтатăп эпĕ, анчах ним те хуравлаймасть. — Мĕн ыратать? Мĕн пулчĕ? — кăсăкланатăп эпĕ — каллех шăп.

Ăна санчаçе халех çитерме хушатăп Зойăпа Володьăна. Çамрăксем Кислов капитана çавăнтах çĕклесе санчаçе каяççĕ.

Мĕн туйни ахаль пулмарĕ. Хĕвел-анăç енчен вăйлă аслатиллĕ çумăр килнĕ пек çӳлтен сасă кĕрлени илтĕнме тытăнчĕ. Кашни минутран вăл сасă вăйланса пычĕ, сывлăша çеç мар, çĕре те çав сасă чĕтретме пуçларĕ.

Пире пурне те ăнланмалла: нимĕç командованийĕ эпир хӳтĕлекен позиции татса малалла кайма, тĕп хулана хăвăрт ситме палăртнă. Çак çул çинче мĕн чăрмантарать, ăна пурне те аркатса тăкма плаплать. Ахальтен мар ĕнтĕ вермахт сак тапăнăва «Тайфун» ят панă. Океансенче пулса иртекен пит вăйлă сил-тăвăлпа танлаштараççĕ халĕ вĕсем хăйсен сĕмсĕр тапăнăвне.

Эпир мĕнле вăйпа чарса çитерĕпĕр-ши çак тайфуна чикĕсĕр хăватлă сил-тăвăла? Кам пире пулăшĕ-ши ăна сирсе яма? Ăстан вăй тупăпăр-ши ăна путлантарса лартма?

Пирĕн ума темĕн пек пысăк ыйту тухса тăчĕ. Пĕтĕм сансурăма чĕтретсе ячĕ.

Акă хайхи «юнкерссем» вĕçсе çитрĕç. Вĕсем звенон-звенон чашкăрса вĕçеççĕ. Питĕ йышлă. Кавак тӳпене хупласа хучĕç. Аçтан чăтса тăрăн кунта? Мĕнле чугун купи пулса аркanмасăр юлăн? Хăш лаптăк çине ӳкмесĕр юлĕç ку бомбăсем? Кам сирсе пăрахĕ ман пуç çийĕнчен?

Эпĕ хамăн блиндажа кĕтĕм те стереотрубапа пăхса сăнатăп.

Акă малтанхи звено бомбисем пирĕн траншейăран темиçе метр маларах хаяррăн шăхăрса анчĕç те шăннă çĕре ӳксе кĕрĕслетрĕç, вут-çулăмпа металл ванчăкĕсем пур еннелле сапрĕç. Чугун пек хытă шăннă çĕре нумай кĕреймерĕç, лакăм пек кăна ватрĕç.

Иккĕмĕшпе виççĕмĕш звеносем пирĕн траншея тĕлĕнчех аялалла вĕçсе анчĕç те хăйсем çĕкленме тытăнсан каллех бомбисене вĕçтерсе ячĕç. Эх, хайхи хура муклашкисем шутсăр савăннипе и е хăранипе вăрăммăн çухăрса анаççĕ, траншейăра хутланса выртакан боец çине тӳррĕн ӳксе пăрккăн аркататпăр тесе чунне урари чĕрне вĕçнех çитереççĕ. Ах! Хальхаль ман çинех ӳкет тесе, ăна вĕри çатма çинчи пăрçана сиктернĕ пек, чĕтретет, пĕтĕм психикине чăрмалать.

Хыçалтарах вĕçсе çитнĕ «юнкерссем» çинчен пăрахнă бомбăсенчен хăшĕ-пĕри пирĕн траншейăпа окопсем çине ӳксе çухату кӳчĕ.

Акă пĕрремĕш батальон командирĕн çумĕ Краснов Олег аслă лейтенант пулеметсем вырнаçнă енче бомбăсем таттисыпписĕр ӳкнине курать те пулеметчиксене хыçалти блиндажа кĕрсе ларма хушас шутпа унта чупать, анчах унта çитеймест, ун хыçĕнче бомба çурăлать — ăна вунă метр малалла сирпĕтсе ярать, хăрах урине татса пăрахать, икĕ алли те аманать.

Çакна траншейăра сăнаса тăракан Володя Галкин санинструктор асăрхать. Унтан инçе мар траншея тĕпне темле муклашка вĕçсе килсе ӳкет. Хайхи санинструктор чупса пырса пăхать: темле çын кĕлетки, хăрах ури çук, пĕççинчен юн каять, аллисене те кашкăр кăшланă пек çурса пĕтернĕ. Ӳпне выртаканскерне месерле çавăрса хурать Краснов аслă лейтенант! Хăраса каять. Ăна калаçтарасшăн — нимĕн те туймасть. Тăнсăр пулнă. Ăна васкасах хăвăрт пулăшу пама тытăнать. Татăлнă ура сыппинчен çӳлерех жгут хурать, юн кайма чарăнать. Икĕ хулĕнчи сурансене йод сĕрсе марлĕпе черкесе çыхать те хăех бомбăсем пăрахнине пăхмасăрах, ик-

кĕмĕш эшалона çити çĕклесе каять, унтан икĕ боец наçилккă çине хурса санчаçе васкаççĕ.

Иккĕмĕш батальонри Шоркин лейтенант нимĕççен «юнкерссем» бомбăсем пăрахса вĕçлес умĕн траншея тĕпĕнчен çĕкленет те, ну, сывах юлтăм пулас, тесе савăнма тытăнать. Шăп çав вăхăтра юлашки самолетран пăрахнă бомба унтан виç-тăватă утăмра шăп траншейăна лекет. Хайхи Шоркин лейтенант траншея тĕпне пуçне хупласа ӳпне выртать. «Пĕтĕмпех пĕтрĕм! Пĕтĕмпех пĕтрĕм!— тесе пуçра хуйхăллă шухăш çиçсе илет.— Вăт халь ахлатса çурăлать те мана та тĕппипе аркатать».

Çак шухăш ун пуçĕнче хытса ларнă пек тăрать. Сисет: пĕр минут иртет, иккĕ... çаплах пуçне çĕклемесĕр шутсăр хăраса выртать, анчах бомба çурăлмасть. Хăранипе чĕçĕ те тухса каять.

Ҫилти ашшĕ-амăшĕ, юратнă çамрăк Верук мăшăрĕ çинчен те шухăшлама ĕлкĕрет. Юлашки çырăвĕнче арăмĕ хăйĕн пĕчĕк ывăлĕ Петюк утма пуçлани çинчен çырнăччĕ. Валерий Шоркин уншăн шутсăр савăннăччĕ.

Лейтенант хăра-хăрах пуçне çĕклесе пăхать, бомба шĕвĕр вĕçĕпе çĕре тăрăннă та çаплипех лара парать.

«Ҫу пур-пĕрех çурăлать!» — тесе вăл сиксе тăрать те траншейăпа тепĕр еннелле вĕçтерет.

«Тарса ӳкрĕм, халь çурăлсан та...» — хумханса шухăшлать лейтенант. Тин ăна чун кĕрсе каять, каллех пурăнас килет, каллех тăшманпа çапăçма хатĕр.

Вăхăт çитсен, хăй вилĕмрен епле юлни çинчен Верука çырса пĕлтерме те шухăш пур, анчах тăшман вĕсене сывласа илме ирĕк парать-и-ха.

## ТРАНШЕЙĂРИ ХАЯР ÇАПĂÇУ

«Юнкерссем» вĕçсе кайсанах, батальонсене хăйсен позицине йышăнма хушрăм. Вĕсем çитсе ĕлкĕрнĕ-ĕлкĕрмен нимĕççен артиллерийĕ вут-çулăм пуçларĕ. Эпир йышăннă лаптăка татти-сыпписĕр снаряд хыççăн снаряд ячĕ, пĕтĕм тавралăх тĕтĕм-тусан, вут-хĕм айне пулчĕ. Ура айĕнчи шăннă çĕр кисренсе тăчĕ, ăна темле хăватлă вăй çапа-çапа чĕтретрĕ тейĕн.

Паллах, артиллери вучĕ ман полка чылаях сиен кӳчĕ. Эпĕ ăна васкатсарах илсе килтĕм. Ҫашкăртан тарса упа аллине çакланнă пек пулчĕ. Ăçтан хăтăлса çитейĕн: вăрçă!

Артиллери вучӗпе уса курса, нимӗссен танк тапӑнӑвӗ пус-ланчӗ. Вӗсем ҫывӑха ҫитсен кӑна асӑрхарӑмӑр.

Комаров йышӑннӑ позици ҫине нимӗссен танк ушкӑне тапӑнчӗ. Малтанхи виҫӗ танкне унӑн танка хирӗҫ перекен пӑшалсемпе тупӑсем тӳрех тӗл тивсе ҫунтарчӗҫ, вӗсем хыҫҫӑн пиллӗкшер танк харӑс тапӑнса ҫӗмӗрсе килчӗҫ, виҫҫӗшне каллех вут хыптарчӗ, иккӗшӗ траншея урлӑ тупӑран персе каҫса кайрӗ.

Эпӗ Комаров капитана хыҫалтан гранатӑсем персе тытма хушрӑм. Вӑл гранатометчиксене шыраса траншея тӑрӑх хӑй чупрӗ. Анчах снарядсемпе бомбӑсем лекнипе траншея юрӑх сӑра тухнӑ-мӗн, чӗрӗ боецсене, уйрӑмах гранатометчиксене тупма май килмен. Траншейӑра унӑн вилнӗ салтакӗсем чылай выртнине курчӗ, чӗри ун хуйхӑрнипе ыратса тапрӗ, кӑмӑле пӑтранчӗ. Хӑш-пӗр йывӑр аманнӑ салтаксем те тӗл пулчӗҫ, мӗншӗн вӗсене санитарсем пулӑшу памаһни тарӑхтарса ячӗ, хуть хӑйӗн тӗп ӗҫне тумасӑр салтаксене пулӑшу памалла.

— Ӑҫта санитарсем? Мӗншӗн аманнисене пулӑшу памас тӑр?!

Ун кӑшкӑрнине илтсе Володя Галкин чупса ҫитрӗ, вӑл ҫавӑнтах аманнӑ боецӑн урине йод сӗрсе ҫыхма пуҫларӗ.

— Эсӗ, санитар, пурне те пулӑшу пар, вӗсем юн кайнипе вилме пултараҫҫӗ! — хушса хӑварчӗ Комаров Галкина.

Комаров капитан, яштакскер, траншейӑпа васкаса пынӑ май пуҫне пӗксе утма манса кайнӑ, бруствер урлӑ пуҫ тӳпи курӑнса пынӑ, нимӗҫ снайперӗ ҫакна асӑрхать те ӑна пуҫран шаплаттарать; юрать пуля каска тӳпинчен шӑтарать, пуҫ тӳпинчи тирне сӳсе иртет, пӗҫертсе хӑварать. Вӑл тӳрех пуҫ не пӗксе каскине хывать, ҫав вырӑна ярса тытать. Ун пӳрни сене ӑшӑ ҫӑра юн кӗрсе каять. Вӑл хӑех суран ҫине ватӑпа марля хурать те каска тӑхӑнать, гранатометчиксене шыраса чупать.

Орлов майор мана хӑйӗн батальонӗнче питӗ пултаруллӑ витӗр куҫлӑ Микулай ҫинчен каласа пачӗ. Вӑл фронта килнӗ рен вара хӗрӗх тӑватӑ нимӗҫе (салтаксемпе офицерсене) куринкене[1] ӑсатни ҫинчен хаваслана пуплерӗ. Эпӗ унран ҫак маттур снайпер хамӑр ентеш пулнине пӗлтӗм, ман унпа куҫа-куҫӑн курса пуплес шухӑш ҫуралчӗ.

Эпӗ хайхи Масков снайпера хам КПна[2] чӗнтӗм. Манӑн унпа куҫа-куҫӑн курса пуплес килчӗ.

[1] Куринке — ҫӑва, масар, автансӑр ял.

[2] КП — командӑй пункт, фронтра командир ертсе пыракан вырӑнӗ,

Тепӗр вунӑ минутран хайхи шап-шурӑ тӑхӑннӑ (ун ҫинче шурӑ маска-халатчӗ) вӑтам пӳллӗ, ҫаврака питлӗ, хура куҫлӑ ҫамрӑк пырса тӑчӗ. Вӑл сӑнранах чӑваш пулни паллӑ.

Вӑл ман пата хӑйӗн снайпер винтовкипех килчӗ, кӗпҫи ҫинче оптика тӗллевне тӑхӑнтартса лартнӑ, унпа винтовкӑн автанӗ пӗр ҫӳлӗшре. Вӑл час-часах нимӗҫсене «шуйттан илтӗр вӗсене! («Черт возьми» тенине вырӑсларан куҫарса каласа хурать. Куҫ тӗлне пулсан, вӗҫертместӗп эп вӗсене, ҫут тӗнчерен тамӑка ӑсататӑп: вӗсем пурте ҫылӑхлӑ).

Вӑл ӑҫта ҫуралса ӳснине пӗлес килчӗ.

— Эсӗ Хӗрлӗ Чутайран мар-и? — кӑсӑклантӑм эпӗ.

— Шуйттан илтӗр, ҫук, эпӗ Трак районӗнчен, Анат Кушартан. Чухӑн хресчен кил-йышӗнче ҫуралса ӳснӗ, анне эпултӑ ҫулта чухне вилнӗ, атте пӑхса ӳстернӗ, ама ҫури те пурччӗ, эпӗ ҫавӑнпа кӗтӳҫ те пулнӑ... Нушине лавӗпех курнӑ. Ҫапах та вӗренме тӑрӑшнӑ. Нурӑса педагогика техникумне вӗренме кайса кӗнӗ. Выҫӑллӑ-тутӑллӑ вӗреннипе виҫҫӗмӗш курсра туберкулезпа чирлерӗм, кӑшт кӑна вилмерӗм, Чуварлейри санаторире сиплесе сыватрӗҫ. Нурӑс техникумне вӗренсе пӗтерсен, Упи шкулӗнче учительре виҫӗ ҫул ӗҫлесе пурӑнтӑм. Тинех ҫын йӗркине кӗтӗм. Костюм, пальто тӑхӑнса ҫӳреме пуҫтарӑм.

Шуйттан илтӗр, вӑрҫӑра шур финсемпе ҫапӑҫма тиврӗ. Шуйттан илтӗр, 1940 ҫулта мана хӗсмете илсе кайрӗҫ. Эпӗ Карели ҫӗршывӗнче Кемь хулинче ҫарта пултӑм. Ҫакӑнта чухне отделени командирӗ хӑй снайпер пулнӑ май мана снайпер винтовкинчен пеме хӑнӑхтарса пычӗ. Шуйттан илтӗр, пирӗн полкра тӗл перекенсен ӑмӑртӑвӗ пулчӗ. Эпӗ те ҫав ӑмӑртӑва хутшӑнма шухӑшларӑм, унта хам пултарулӑха кӑтартма кӗҫӗн командир та хистерӗ.

Вунӑ патронран пурне те пан улмие лектерсен, савна ворошиловла перекен ятне параҫҫӗ, ҫав ятлӑ паллӑна (значока) гимнастеркӑн кӑкӑрӗ ҫине ҫакса яраҫҫӗ. Кам ӑмсанман пулӗ ҫав ята илме тата значокне ҫакса ҫӳреме!

Шуйттан илтӗр! Кашни боец, кашни командир! Эпӗ ҫав ӑмӑртура малти рете тухрӑм, ҫав ятпа значока ҫакса ҫӳреме тивӗҫлӗ пултӑм. Пӗр взводри юлташсем умӗнче сес мар, батальонра та мана хисеплетчӗҫ. Хисеплӗх хам чӗрене те ӑшӑтса тăратчӗ. — аса илчӗ Микулай Масков.

Вӑл шурӑ финсемпе ҫапӑҫнӑ чухне снайпер пулса ҫапӑҫать: финн снайперӗсем пирӗн позицирен инҫе мар (унти

вăрçă, тĕпрен илсен, финн вăрмманĕсенче пулса иртнĕ; финн вăрманĕсенче лапсăркка хырсемпе чăрăшсем йышлă ӳснĕ). Финн снайперĕ хырсемпе чăрăшсем çинче пытанса ларнă, совет салтакĕ окопран е траншейăран тухсанах персе ӳкернĕ. Финн снайперĕсене «куккуксем» («кукушка») тесе ят панă. Масков çак «куккуксене» çĕр утмăл саккăр таран персе ӳкернĕ, уншăн ăна «Хĕрлĕ Ялав» орденĕ парса наградăлаççĕ.

— Халĕ кунта миçе нимĕçе «леш тĕнчене» ăсатма май пулчĕ? — кăсăклантăм.

— Сахал-ха, мухтанмалăх çук. Эпĕ çапăçăва Никулино сали патĕнче кăна кĕнĕ. Ну, хамăр полкпа пĕрле. Çапах та хĕрĕх иккĕшне ĕмĕрлĕхех куçне хуптартăм. Плансем пысăкха, пурăнсан çӳç шăтать тенĕ пек, куç тĕлне пулнине вĕçертмĕп, ăна шантарма пултаратăп.

Эпĕ ăна çакна хушса каларăм: «Эсир нимĕç снайперĕсене, автоматчикĕсене, танкисчĕсене (танкран тухса тараканĕсене) хытă шĕкĕлчĕр. Сирĕн çине хытă шанатăп, — тесе алă тытрăм. Вăл ман алла хытă чăмăртарĕ, ман сăмахсене пурнăçа кĕртессе шантарса хăвăрт уйрăлчĕ. Çавăнтах траншейăна кĕрсе куçран çухалчĕ.

Нимĕçсем тапăнасса эпир кĕтсех тăнă. Пирĕн саперсем хамăр умри хире танка хирĕç минăсем лартса тухрĕç. Çак саперсен ĕçĕ пире чылай пулăшасса шансах тăтăмăр.

Кăнтăр тĕлне нимĕç авиацийĕ пире килсе тĕрĕслесе кайрĕ, пирĕн позицие Истра станци çине «хура кучченеçсем» чылаях тăкса хăварчĕ. Станци таврашĕнчи çуртсем хĕрлĕ çулăмпа ялкăшрĕç, пĕтĕм тавралăха хура тĕтĕм сарăлчĕ, унта темле мазут çунчĕ.

Пирĕн разведка пĕлтернĕ тăрăх нимĕçсен танк полкĕ тата мотопехота тапăнса килмелле.

Эпĕ батальон командирĕсене Гитлер çарĕ мĕнле вăйпа тапăнассине асăрхаттартăм. Комаров манран çĕнĕ вăйсем ыйтрĕ, уйрăмах гранатометчиксем, ПТРсем. Эпĕ ăна гранатометчиксен йышне пысăклатма хăвăрах пултаратăр терĕм.

— Кĕске вăхăтра-и? — сасартăк ыйтрĕ вăл.

— Ман сана, капитан юлташ, шкул ачине вĕрентнĕ пек граната çыххисем тума вĕрентмелле-и? — тесе хирĕçлерĕм, çĕнĕ вăй çывăх вăхăтра кĕтме çуккине систертĕм.

Ман асăрхаттарни мăнаçлă та никрес капитана килĕшмерĕ, вăл манпа тавлашма пăхрĕ. Эпĕ ăна татăклăн каларăм:

— Хăвăн хӳтĕлев лаптăкне сана шанса панă — çавна хăвăн батальонупа хӳтĕлесе тăмалла. Хуть вил — пурнăçла.

Мĕнле майпа пурнăçласси — санăн ĕç. Санран ыйтатпăр.

Комаров капитан хăй яваплине лайăх ăнланать. Вăл рота командирĕсене хăварт пухать те кашни ротăрах вуншар гранатометчика пайăр ĕç пама хушать.

Пĕрремĕш рота командирĕ Ветлугин лейтенант капитан хушиччĕнех гранатометчиксене хатĕрлесе хунă.

Ветлугин лейтенант Удмурти çĕршывĕнчен. Вăл Шур Атăл хĕрринчи Сарапул хулинче çуралса ӳснĕ. Ачаранах Шур Атăла пулла çӳреме юратнă, хăй те шывра пулă пек çăмăллăн ишнĕ. Каччă пулсан, Шур Атăл урлă пĕрре мар ишсе каçнă... Çара кайма вăхăт çитсен, Виктор Ветлугин тинĕс флотне кайма ĕмĕтленнĕ, анчах имшерккерех пулнă пирки унта ăна йышăнман, çуран çар ретне тивĕçлĕ пулнă. Вăл Саратоври çар училищинчен вĕренсе тухнă та лейтенант ятне илнĕ. Акă халĕ çак полкра çĕршывăн тĕп хулине хӳтĕлет.

Кăнтăрлахи апат хыççăн нимĕçсем хытă тапăнса килчĕç. Эпĕ сăнав вырăнĕнчен анăçалла пăхса тăратăп. Талккăшпе шап-шурă юр витнĕ анлă хир тăсăлса выртать. Çурçĕр енне çамрăк вăрман чылай лаптăк йышăнать. Сылтăм енче сарлака шоссе çулĕ, ăна Волоколамск шоссе çулĕ теççĕ.

Эпĕ биноклыпе инçене пăхса сăнатăп. Чĕнмен «хăнасем» килессе вĕчĕрхенсе пăхатăп. Часах акă аякра хура лаптăк тухса тăчĕ, вăл пирĕн еннелле шăвăнать.

— Фашистсем! — раципе пĕлтертĕм батальон командирĕсене. — Пур енчен те хатĕр тăрăр.

Вунă—вун пилĕк минутран çывăхарах килчĕç. Халĕ ĕнтĕ танксен колонни шăннă çĕре кисретсе çывхарнăçемĕн çывхарса килет.

Акă минăсем лартнă уя персе çитрĕ те çаплипех кĕрсе кайрĕ. Малта пыракан пилĕк пысăк танкран виççĕшĕ чĕтресе илчĕç, вĕсен айĕнчи минăсем çурăлса каяççĕ, танксен икĕ енĕпе вут-хĕм сирпĕнсе тухать, часах танксем ялкăшса çунма тытăнаççĕ. Вĕсен ăшĕнчи экипажсем люксем уçса тулалла сирпĕнсе тухаççĕ те хыçалалла тараççĕ. Акă, пирĕн снайперсем вĕсене куçран вĕçертмеççĕ — тĕллесе переççĕ.

Масков боец та окоп хĕрне выртнă та хăйĕн снайпер винтовкинчен кăрăнт! кăрăнт! туса сăтăрать, кĕске вăхăтра тăватă танкиста пĕтерсе хурать.

— Шуйттан илтĕр, эп вĕсене лайăх çунтартăм, — хавасланса илчĕ Масков.

Мина уйĕнче вун виçĕ танк çунса хуралса лараççĕ, ыттисем каялла чакса кайрĕç.

Эпĕ ыттисемпе кĕрешме Тураев майора раципе йыхрав латăп, ăна кирлĕ координатсем паратăп.

Нумай та кеттермест — Тураевăн тупписем хайхи танксем çине вут-хĕм уçаççе. Пирĕн çине персе тăракан нимĕç танкĕсем каялла чакаççĕ, хăшĕ-пĕри снаряд тивнипе вут айне пулаççĕ, е гусеница татăлнипе вырăнтан та тапранаймаççĕ, стройран тухаççĕ.

Анчах та нимĕç командованийĕ ку чăрмава сирсе яма кайĕн «юнкерссене» чĕнсе илет.

Авă сывлăша çĕмĕрсе хайхи бомба пăрахакан хура хĕрес-лĕ хурçă кайăксем вĕçсе килеççĕ. Вĕсем мина уйне çитеççĕ те хурчăка евĕр аялалла чăмаççĕ, çав хушăра хура, вăрăм «кучченеçсем» аялалла кăларса яраççĕ. Çӳлтен хаяррăн çу хăрса çĕр çине шăхăрса анаççĕ, вĕçлĕрех пуçĕпе çĕре тирĕнсе хаплатса çурăлаççĕ, çĕре йĕри-тавра сирпĕтеççĕ. Хăшĕсем çер ăшне лартна минасем çине пулаççĕ те иккĕшĕ те харăссан кĕрлесе çурăлаççĕ, танксене иртме çул тăваççĕ.

«Юнкерссем» хумăн-хумăн бомбăсем тăкса вĕçсе иртрĕç минăсен уйне сухаласа хăварчĕç...

Нимĕç командирĕ сыхланса юлнă танксен çĕнĕ колоннине каллех пире пĕтерме ярать, каллех хаяр çапăçу пуçланса кайять. Танка хирĕç перекен тупăсемпе пăшалсем (кĕскен вĕсене ПТО, ПТР теççĕ), шĕвек тултарнă кĕленчесене тĕл пенипе лайăх килекен танксемех утă капанĕ пек хыпса илеççĕ, хăш пĕр танкран экипажĕ аран-аран люк уçса тухса ӳкет, вĕсен çинчи бушлачĕсем çунаççĕ, танкистсем юр ăшне выртса йаваланаççĕ. Пиçсе кайнă нимĕç танкисчĕсем ахлатса йĕреççе сывă-чĕрĕ тухнисем хыçалалла тапса сикеççĕ, анчах вĕсенчен чылайăшĕ пирĕн снайперсен пульлинчен хăтăлса юлаймаççĕ. Икĕ енчен те пулемет, автомат сасси кĕрлесе тăрать, куççăр пуля çил-тăманлă çанталăкри пек шăхăрса, уласа тăрать, пуçа окопран, траншейăран çĕклеме çук.

Акă Орлов батальонĕнчи Юра Немчукпа Зиновий Пашугин хăйсен çине килекен танксене чарса лартасшăн гранатă çыххисем ывăтаççĕ, иккĕшĕ те траншейăран пытанса пенипе лектерейменççĕ. Кураççĕ — капла ĕç тухмасть: пульăсем шăхăрса вĕçнипе пăхмасăр хальхинче вĕсем траншея хĕрне çĕкленеççĕ — каллех гранатăсене хăйсем умĕнчи танк айне ывăтаççĕ. Юра Немчукăн гранати танкăн шуçлавне тивсе татса пăрахать, хăватлă машина чарăнса ларать, анчах танк çумĕнчи выракан автоматчик украина паттăрне тĕллесе черет кăларса ярать — ăна пĕтерсе хурать.

Ку хутӗнче Зиновий Пашугин нимӗҫ танкне чарса лартайасть. Вӑл виҫҫӗмӗш граната ҫыххине илет те киревсӗр вӑя ımле майпа та чарма пӗлмест. Пуҫра ҫиҫӗмле хӑвӑртлӑхпа ıгӑклӑ шухӑш ҫуралать: «Хыҫалта Мускав — эпӗ ӑна пурӗр унта ямастӑп. Эп вилем — ҫӗршыв чӗри ӗмӗрех таптӑр!»

Пашугин юлашки граната ҫыххине ярса тытать, кӗрлетӗрсе килекен танкӑн гусеници айне граната ҫыххине чӑмтаıть. Танк хӑйӗн йывӑрӑшӗпе ҫавӑнтах гранатӑсен запаллӗне тивертсе ярать — хаяррӑн ҫурӑлса каяҫҫӗ, гусеница таıса каять, граната ванчӑкӗсем Пашугина ҫапса ӳкереҫҫӗ. нк хӑй сулӑмӗпе пырса паттӑр пуҫӗпе ҫур кӗлеткине таптачарӑнса ларать. Пысӑк паттӑрлӑх кӑтартса Ульяновск ҫамıкӗ хӑйӗн пуҫне хӗрхенмест.

Ҫав вӑхӑтрах Комаров батальонри боецсем танк тапӑнӑвне ıрсе ярасшӑн хӑйсен паттӑрлӑхне, теветкелне кӑтартаҫҫӗ.

Пӗр отделенинче виҫӗ боец туслӑ пурӑнать, камӑн мӗн ıтмест, ӑна ыттисем яланах пулӑшаҫҫӗ, тупса параҫҫӗ. Халӗ, ıллехи вӑхӑтра, хӑшӗн алси шӑтӑк, ӑна саплама йӗп-ҫип ıнеҫҫӗ, «япаласен миххинчен» кӑларса алса, чӑлха параҫҫӗ. ӗсем сухарисене те пайласа ҫиеҫҫӗ. Туслӑх — пурнӑҫ хӳтти. ıсем ӑна кашниех ӑнланаҫҫӗ.

Олег Катейкин, Мишеркасси каччи, Хӗрлӗ Чутай районӗнıн, Хапир Ахматуллин тутар ҫӗршывӗнчен, виҫҫӗмӗшӗ — ıсиль Колесо, украинец.

Олег Катейкин вӑйлӑ йӑхран пулнӑ. Унӑн аслашшӗ тупıлли тиенӗ утӑ урапине кӗрхи лакӑм-тӗкӗмре путса ларсан, ıкам пулӑшмасӑр, пӗччен типӗ вырӑна ҫӗклесе лартнӑ, виҫıватӑ вӑйпитти арҫын ӗҫне пӗччен тунӑ. Олег ашшӗ те вӑйлӑ ıлнӑ. Вӑл пӳрт пурине никӗсрен ярса илсе кирек хӑш кӗтесıи те ҫӗкленӗ. Е ӑна хирӗҫ тӗкме пыракан ик-виҫӗ ҫулхи ıкӑра мӑйракисенчен ҫавӑрса тытнӑ та ҫавӑрса пӑрахнӑ. ıтӗм таврара, вирьял чӑвашӗсем хушшинче, ӑна ҫӗнекен ıкам та пулман. Катейкин ятне илтсен, пурте пӑрӑнса утнӑ. ıта ӑна Харсӑр Хветӗр тенӗ. Ҫак Харсӑр Хветӗр хурт ӗрıтнӗ, вӑтӑр—хӗрӗх вӗллерен пыл илнӗ. Укҫа тума Кӑрмӑш ıлине пыл сутма ҫӳренӗ. Пӗррехинче колхозран лаша илнӗ ıпыл чӗресӗсем лартса Кӑрмӑш пасарне каять, кунӗпе пыл ıтать, пӗр кушел укҫа тӑвать. Кӑрмӑш вырӑсӗсем вӑл укҫа ıмай тунине кураҫҫӗ. Ӑна каялла таврӑннӑ чух Сӑр кӗперӗ ıнче ҫаратма шутлаҫҫӗ. Ку ӗҫ ҫулла, авӑн уйӑхӗнче, пулнӑ. Харсӑр Хветӗр Сӑр кӗперӗ ҫинчен ниҫталла та тараймасть ıсе, тӗмсӗлнӗ ҫаратма шутлакансем. Лашине тытса илетпӗр

те какай тăватпăр, хăйне Сăра тарăн вырăна чăмтаратпăр, — кавар тунă хайхисем.

Катейкин пыл сутса пĕтерет те каç еннелле киле тапранать. Сăр кĕперĕ çинче ăна кĕтсе виç-тăват яш тăрать. Кӳрех тавçăрса илет: çак вăрăсем мана çаратма тухнă. Пăхать — çывăхра никам та курăнмасть. Мĕн тумалла? Каялла каяс — никам патĕнче выртмалли çук, малалла каяс — хаяр çапăçу е вилĕм. Мĕн пулать те мĕн килет, пурпĕрех ун киле таврăнмалла.

Вăл кушелти укçине икĕ атă кунчине тултарать, шăлавар кĕсйине нумай мар укçа хăварать. Çур килограмм гирине хутаçа ярать, хутаççине çирĕппĕн çавăрса тытать. Атă кунчине вăрăм çĕçĕ чиккет. Хăй ӳсĕре персе урапа çинче хăяккăн выртса пырать, кĕпер çине çитеспе лашине туртса çапать те хайхи вăйлă лаша кĕпер çийĕпе çĕмĕрттерсе каçса каять, çапах та иккĕшĕ урапа çине ларма пикенеççĕ. Катейкин малтан пĕрне мĕнле çурăм урлă туртса çапать — çаплипех ахлатса сирпĕнсе юлать, унтан — теприне. Тата иккĕшĕ ун хыççăн чупаççĕ, Сăр тухурине хăпарнă чух ăна хăваласа çитеççĕ. Харсăр Хветĕр урапа çинчен анать те пысăк та тăлпам, вăкăр пек хĕрелсе кайнă яша хайхи хутеçпа пуç урлă мĕнле çапать — лешĕ ăнсăр пулса çавăнтах сирпĕнсе каять. Тепри ăна ярса тытать, Харсăр Хветĕр çакна çӳлелле çĕклет те кучĕ çине начлаттарса лартать. Хайхи пуç мими чĕтреннипе каялла кайса ӳкет. Çапла ăс парать тапăнчăксене. Хăй васкамасăр урапа çине ларать те киле тĕрĕс-тĕкелех таврăнать.

Ывăлĕ те ашшĕнчен юлмасть. Ăна вăл çапăçура лайăхах кăтартса пачĕ.

Халĕ вăл юлташĕсемпе траншейăра нимĕçсем тапăнса килнине сăнаса тăрать. Çывхарса килекен танксене траншейăран тухса пеме çук — нимĕçсен автоматчикĕсем танк хӳттипе шăтăртаттарса переççĕ, пуça çĕклеме памаççĕ.

Мĕн тумалла? Вĕсем çине килекен танксене епле чарса лартмалла?

Катейкин траншейăра вилĕ выртакан салтакăн çĕлĕкĕпе винтовкине илет те штык тăрне çĕлĕк тирсе лартать, çавна хăй тăракан вырăнтан ултă утăм аяккалла илсе траншея хĕррине тăратса хурать, нимĕç автоматчикĕсем траншея хĕрринчи çĕлĕке курах каяççĕ, эх! шатăртаттарма тытăнаççĕ, шăп çав авăкра Юра Колесо вĕсенчен инçе мар хайхи танк айне умлă хыçлă икĕ «çыхă» ывăтать. Пĕри шăп шуçлав айĕнче шартлатса çурăлать, танк хăй сулăмĕпе кайса урлă çаврăнсе ла-

рать. Хайхи автоматчиксенчен иккĕшĕ граната ванчăкĕсем тивнипе çĕре лаплатса ӳкеççĕ, теприне Қатейкин хăйĕн гранатипе тĕп тăвать.

Вĕсем çине каллех тепĕр танк кĕрлеттерсе пырать. Шухăшласа тăма вăхăт çук. «Пĕтсен, пĕтетĕп: пурпĕр ку тимĕр шапана ирттерсе ямастăп!» — çирĕппĕн шухăшлать Қатейкин, хаяр çилĕ килнипе траншейăран хăвăрт çĕкленет те мĕнпур вăйне пухса граната çыххине танк айне вăркăнтарать. Хай çавăнтах траншейăна чăмать. Пăхать: танк чарăнса ларнă, хура çулăмпа ялкăшма пуçлать. Савăнса кайнипе Юра Колесона ыталаса илет, анчах юлташĕ унăн аллинче лĕнчĕр каять, пуля тăнлавран тивнĕ — вилсе те кайрĕ, нимĕн калама та ĕлкĕреймерĕ. Ытла та çăмăл вилĕм.

Қатейкин юлташне траншея тĕпне тăсса хучĕ, ун гранатисене илсе, каллех çапăçма тăчĕ. Унăн пĕр минут та тăшмана куçран яма юрамасть. Пĕр минут хушшинче нимĕç танкĕсем ун урлă каçса кайма пултараççĕ, вĕсен автоматчикĕсем çакăнтах вĕлерсе хăвараççĕ. Халĕ ăна çĕршыв хăй çĕклейми пысăк ĕç шанса панă — çак сăваплă вырăнтан пĕр утăм та каялла чакмалла мар, хуть Юра Қолесо пек вилсе вырт, çак хĕрлĕ йĕртен каялла ан чак. Çак çирĕп шухăш унăн ăс-тăнне, вĕри чĕрине пăта çапнă пек кĕрсе ларнă. Вăл вилсен те унпа пĕрлех юлать. Қатейкин чăваш ятне çĕртмест, хăйсен Чутай районь чысне те вараламасть. Ашшĕ-амăшĕ ăна ачаран ырă кăмăллă, таса чунлă, ĕçчен пулма пăхса ӳстернĕ. Халĕ вăл урăхла кăмăллă çын пулаймĕ. Фронтра темле йывăр пулсан та, темле инкек сиксе тухсан та, Тăван çĕршывăн, тăван халăхăн шанчăклă ывăлĕ.

Эпĕ çапăçу хирне стериотрубаран сăнаса тăратăп. Хăш батальон çине тăшман тапăннине пĕлме тăрăшатăп. Малтан пĕр тапхăр нимĕç танкĕсем Қомаров капитан батальонне хĕссе çитерчĕç, кĕç-вĕç ăна таптаса каçса каяс пекех туйăнатчĕ, анчах капитан хӳтĕлеве ăнăçлă йĕркелерĕ, танксене пĕтерекен икĕ взвод малти йĕр çине пĕрин хыççăн теприне кăларса тăратрĕ, нимĕç икĕ теçеткене яхăн танксем çухатрĕ, автоматчиксен тепĕр роти хăйсен юнĕпе вырăс çĕрне шăварчĕ.

Халĕ Орлов батальонне лăскама тытăнчĕç нимĕçсем. Ун çине танксен колонни тапăнса килет, кашни ретĕнче пиллĕкшер танк.

Эпĕ майорпа çыхăну тытатăп. Вăл мана халех пулăшма ыйтать.

— «Сăр!», «Сăр!», манран виç çĕр метр малта тăхлан çумăрĕ

кирлĕ. Сысна кĕтĕвĕ пысăк.

Тураев майор тимлĕ итлет, ăна пемелли координатсем па-ратăп, халех çумăр çутарма ыйтатăп.

— «Сăр!», сирĕн ыйтăва халех тивĕçтеретĕп. Кĕтĕр. Кайран миçе «сысна» пĕтнине хыпарлăр, — лăпкăн сăмахларĕ Тураев.

— Сире, подполковник, телефон патне арми штабĕнчен чĕнеççĕ, — терĕ Терехов связной.

Эпĕ сăнав пунктĕнчен блиндажа васкаса кĕтĕм, тӳрех те-лефон трубкине ярса илтĕм, хам çинчен пĕлтертĕм.

— «Сăр», сирĕнпе «Днепр» калаçать: сирĕн пахчана «сысна-сем» тапăнаççĕ-и? Халĕ мĕнле тытăнса тăратăр? Мĕнле пулăш-кирлĕ? — манпа сăмахлать Рокоссовский хăй, эпĕ ăна калас-нинчен чухласа илтĕм.

— «Днепр!», «Днепр!», «сыснасем тимĕр шапасемпе» хытă тапăнаççĕ, пахчана çĕмĕрсе кĕме памастпăр, хытă тăратпăр.

— «Сăр!», хытă тăрăр, аркатса кĕме ан парăр! Уяртсан, си-рĕн пата «ăмăрткайăксем» ярса паратпăр. Ик кунтан «тимер ещĕксем» те çитĕç. Хамăн та сирĕнпе тĕл пулмалла. Пурне те манран салам калăр!

Хăй калаçăвне вĕçлерĕ Рокоссовский генерал-лейтенант.

Çак калаçу мана хаваслантарчĕ, хамăр йышăннă вырăнтан пĕр утăм чакмасăр çапăçма чĕнчĕ. Пире вăл йывăр танксемпе тата самолетсемпе пулăшма пулчĕ. Манăн кунĕпе çапăçура пăлханнă чĕрене вăл çутă шанчăк парса ăшăтрĕ, кĕлетке çурăм та çăмăлланнă пек туйăнчĕ. Пысăк пуçлăхсем пирĕн вут-çулăмри пурнăçпа кăсăкланни кăмăла çĕклерĕ, сĕмсĕр тăшманпа хытăрах çапăçма вăй-хал кӳчĕ. Хăй килме пулни ăсра тĕрлĕ шухăш çуратрĕ. Ун сăлтавне ăсра тĕпчесе шыраса тупма тăрăшрăм.

Хамăн батальон командирĕсемпе сăмахласа илме шутла-рăм. Ытти чухнехи пекех, Орлов майорпа раципе çыхăнтăм, вăл ман пата хăй шăнкăравлама шухăшланă-мĕн.

— Нимĕç ытла та хĕсет, подполковник юлташ, танксемпе çапăçса йăлăхрăм, тархасшăн, пулăшу пар халех, телĕр çур-сехетрен нимĕнле пулăшу та кирлĕ пулмасть — пире таптаса каçса каяççĕ, тен, унччен те тытăнса тăраймастăп: тупăсем, минометсем стройран тухрĕç, гранатăсем те нумай юлмарĕç, станоклă пулеметсем те чăхăмласа переççĕ...

Майор калани хăратрĕ: кĕç-вĕç нимĕçсен танкĕсем баталь-она таптаса каçса кайма пултараççĕ, Орловăн вăйĕ çитмест, ăна халех пулăшмалла.

Эпĕ çавăнтах Тураевпа çыхăнатăп.



Лотошино
Яхрома
Икша
Солнечногорск
Пешки
Волоколамск
Теряева
Быково
Стріково
Ефремово
Голубцово
Рождествено
Гусенево
Чисмена
Петелино
Дубосеково
Новопетровское
Скирманово
Ядромино
Никулино
Истра
Хорлово
Трухаловка
Ленино
Нефедьево
Рождествено
Трухово
Санниково
Снегири
Матушкино
Зеленоград
Крюково
Каменка
Сходня
Химки
Кр.Поляна
Катюшки
Черная Грязь
Хлебниково
Лобня
Горки
Руза
Спасс
Осташово
Городище
Сафониха
оз.Трестенское
Звенигород
Москва
Истра
МОСКВА
Руза



Георгий Константинович Жуков маршал, тӑватӑ хутчен Совет Союзӗн Геройӗ



К.К.Рокоссовский.



Комаров капитан батальонӗ тӑшманпа кӗрешет.



Батальон тактика занятинче. 52 стр.



Пирӗн пулеметчиксем фашистсене вутпа кӗтсе илеҫҫӗ.
63 стр.



Минометчиксем Истра хулине хӳтӗлеҫҫӗ.
64 стр.



Нимӗçсен танкӗсем килсе çитни. 102 стр.



Пирĕн боецсемпе командирсем танксем хыççăн чакакан фашистсене хăваласа анăçалла васкаççĕ.
141 страницăра пулмалла.



Зоя вăрçă хирĕнчен йывăраманнă боеца шăванпа туртса тухать.



Новопетровское салине ирĕке кăлармаваскать Чайкин полкĕ.
193 стр.



Волоколамск хулине ирĕке кăларасшăн пыракан хула тулашĕнчи хаяр çапăçу.
230 стр.



Эпир парăймастпăр



И.Васильев тепĕр юлташĕпе разведкăра.



Деньково ялне тăшманран ирĕке кăларасшăн пыракан çапăçу.
198 стр.



Волокамск хулинчен тухса тарнă нимĕçсене тыткăна илни.



Пирӗн полк Мыканино ялне ҫапӑҫусӑрах пырса ҫитни.
213 стр.



— «Ока!», «Ока!», 2-04 квадрат çине çумăр çутармалла, мĕн чухлĕ хăвăртрах, çакăн чухлĕ усăллăрах. Сахалран та вун икĕ — вун виçĕ минут хушши. Тытăнăр, ăнăçлăх сунатăп!

Сăмахланă хыççăн виçĕ минут та иртмерĕ, Орлов батальон умĕнчи нимĕçсен танк колонни çине уласа снарядсем йышлăн килсе ӳкме тытăнчĕç ,пĕр харăсах ахлатса вуншар снаряд çурăлать. Часах танксем çунма тытăнчĕç. Вунă минут пене хыççăн танксен колоннинчен нумайăшĕ çунса хуралса ларчĕ, хăш-пĕр танкăн башнипе тупă кĕпçи пăрăнса ларнипе юрăхсăра тухрĕ, нимĕçсен хыçалти танкĕсем каялла çаврăнса вĕçтерчĕç, лапама анса курăнми пулчĕç.

Эпĕ çапăçу уйне хамăн СПран[1] сăнама пăрахмастăп.

Хăрушă ӳкерчĕк. Эпир хӳтĕлекен çĕр лаптăкĕ тем тĕрлĕ арканнă, юрăхсăра тухнă вăрçă техники сапаланса выртать. Вĕсем хушинче шăнса ларнă салтак виллисем тăшманăн та, пирĕн те. Вĕсене çĕрлесĕр те пухма çук. Икĕ енчен те виллесене пухма тытăнсан, çавăнтах вутпа ăшалаççĕ. Вулакан ăнланмалла: никамăн та вилнисемшĕн пуçне çухатасшăн мар.

Çапăçуччен шап-шурă юр выртнă пулсан, халĕ — çутăлсан курăнать: хуп-хура та сап-сарă, тепĕр çĕрте тĕксĕм хĕрлĕ... Çĕр çийĕ шăтăк-путăк, тăпра купи, тимĕр-тăмăр масарĕ.

Хамăн салтаксемпе командирсем хăйсен ĕçне тивĕçлĕ тунипе эпĕ кăмăллă, вĕсен паттăр ĕçĕ куç умĕнчех.

Траншейăпа окопсенче нимĕçсен автоматчикĕсемпе çапăçу каçченех тăсăлчĕ, пĕр вăхăтра иккĕмĕшпе виççĕмĕш батальонсене питĕ йывăр тиврĕ. Комаров капитанпа Ветлугин лейтенант нимĕç автоматчикĕсемпе хăйсем тăрса çапăçрĕç. Вĕсем вилнĕ боецсен винтовкисене çавăрса тытрĕç те виç кĕтеслĕ виркĕчлĕ штыка малалла тăсса хăйсен умне сиксе тухнă тăватă нимĕçе пĕрин хыççăн теприне чике-чике пăрахрĕç, лешсем автоматран пеме те ĕлкĕреймерĕç. Комаров, хĕрсе кайнăскер, Ветлугина малалла кăтартрĕ: «Кайрăмăр, лейтенант! Траншейăна ютсенчен тасатса тухар. Малалла çеç!»

Ветлугин хăйĕн командирĕнчен юлмасăр штыкне тăсса траншейăпа малаллаваскарĕ. Тепĕр икĕ çĕрте нимĕç салтакĕсене тĕл пулчĕç, анчах лешсем сывăха ямаççĕ, автоматран кĕрлеттерсе тăраççĕ.

Комаровăн кусене граната ывăтса «лăплантармалла» пулчĕ. Батальонри сывă юлнă боецсем хăйсен командирĕсене штык вĕççĕн çапăçма урăх ямарĕç, вăл юнлă ĕçе тума хăйсем çине илчĕç.

[1] СП — сăнав пунктĕнчен с выранĕнчен.

Олег Катейкина траншея «Г» саспалли пек хутланса илнĕ çĕрте сасартăк тăваттăн тапăнаççĕ, ăна «чĕлхе» вырăнне илсе каясшăн пулнă, çавăнпа вĕлерме шутламан. Ăна çĕре ӳкерессшĕн урисенчен тапаççĕ, аллисене хыçалалла пăраççĕ. Катейкин курать: вĕсем ăна çыхса хурсе каясшăн.

— Мана хăт-ар-ă-ăр! — çухăрса ярать Катейкин, тутине хупланă май юлашки сăмахне сыпăкăн-сыпăкăн калама çеç ĕлкĕрет, çавăнтах ун çăварне пысăк алсапа хупласа хураççĕ. Çук, çухалса каймасть Хĕрлĕ Чутай каччи, хăй умĕнче тăракан тата асаплантаракан тăсланкă нимĕçе сылтăм чĕркуççипе ачаш çĕртен хытă лектерет — лешĕ çавăнтах куклене ларать, аллипе тытса ахлата-ахлата илет. Çав авăкрах ун ик аллине пăчăртаса тытнă икĕ нимĕçе алă шăнăрĕсене çирĕплетет те çамкапа çамкана хыттăн çапăнтарать, иккĕшĕ те ăнсăр пулса каялла ӳкеççĕ. Ун ĕнси çине хăпарса ларнă тачка нимĕçе çĕре çавăрса çапать, хырăмĕнчен тапать, лешĕ лĕнчĕр каять. Хайĕн автоматне ярса тытать те çаксене тĕллет.

— Встать! — тесе çухăрать.

Хайхи нимĕçсем ура çине сиксе тăраççĕ.

— Аллусене хыçалла тытăр! Прямо шагом марш! Шнель, шнель!

Хайхисем харăс утма тытăнаççĕ. Траншейăпа вĕсене капитан патне васкатать. Вĕсене хирĕç хăйĕн батальонĕнчи юлташĕсем малта пыраакан нимĕçсене курах каяççĕ, пеме тытăнаççĕ. Катейкин кăшкăрса ярать: «Ан перĕр! Тыткăна илнĕ нимĕçсем. Кусенчен парăнса иртĕр! Кăшт аяккарах парăнса тăрăр!»

— Кетрет. Тĕлĕнтеретĕн эс, Катейкин. Мĕнле вĕсем парăнчĕç-ха сана?

— Майне пĕлес пулать! — кĕскен çеç хуравларĕ нимĕçсем çинчен куçне илмесĕр Катейкин.

— Ку кашкăрсем тарасран сана пулăшмалла мар-и? — кăсăкланчĕ ăна пĕлекен Хапир Ахматуллин.

— Кирлех мар, капитан патне пĕчченех çитеретĕп. Унта курăнать. Эсир халĕ эп кайнă вырăна хӳтĕлеме йышăнăр, кĕç-вĕç нимĕçсем килсе кĕме пултараççĕ, — асăрхаттарчĕ юлташĕсене Олег.

— Тĕрĕсех калатăн пулас, Катейкин иптеш,— унпа килĕшрĕ Хапир. — Якши.

Ик-виçĕ çĕрте иккĕмĕш батальон боецĕсем винтовкăран кăшт çеç пеме ĕлкĕреймерĕç хайхи нимĕçсене, Катейкин вă-

хăтра асăрхаттарма ĕлкĕрчĕ.

— Ну, эсĕ те, Катейкин! Чăнах, герой! Анчах кирлĕ-ши вĕсемпе аппаланма? Тыт та тăрлаттар! — тĕрлĕрен сăмахласа тăрса юлаççĕ боецсем.

— Хăвăр тытăр та кашкăрсене — хуть тирне сĕвĕр, кунта сирĕн ĕç мар, — хирĕçлет вăл йĕп чĕлхеллĕ боецсене.

Нимĕççем кусем пупленине ăнланмаççĕ, ăна ăçта илсе кайнине те пĕлмеççĕ. Тен, çавăнпа хăшĕсем чĕтресе пыраççĕ, траншейăран тухса тарма çуккине ăнланаççĕ, гўрех вилĕм лекет. Кăшт кайсан, шăп та лăп Комаров капитан патне çитсе тухаççĕ.

Капитан тўрех пистолет туртса кăларать, хăйĕнчен виç утăмри вăрăм нимĕçе персе пăрахма та пултаратчĕ, ăна вассасах Катейкин кăшкăрса асăрхаттарчĕ:

— Капитен юлташ, вĕсене «чĕлхе» валли тыткăна илнĕ. Пеме кирлĕ мар.

— Комаров шалт тĕлĕнсе каять.

— Эсир, Катейкин ефрейтор, кусене миçен тыткăна илтĕр? Хапирпа-и? Ăçта ыттисем? — ĕненмесĕр ыйтать.

— Куратăр, капитан, эпĕ пĕчченех тытса илтĕм.

— Мĕнле майпа? Пĕрре те ĕненес килмест, — иккĕленет Комаров капитан.

— Капитан юлташ, хăйсенчен ыйтăр, вĕсем мĕнле майпа илнине калĕç.

— Эпĕ пĕр вырăс чĕлхине çеç пĕлетĕп, нимĕçле вĕренмен, — кăмăлсăр хуравлать капитан. — Эсĕ вĕсене халĕ полк штабне илсе кай, унта вĕсен шăпине татса парĕç.

— Мана, капитан юлташ, тепĕр ик боец унта илсе кайма парăр, теприне Ахматуллина чĕнетĕп.

Комаров хăйĕн хыçĕнче тăракан тăватă боецран иккĕшне çак нимĕççене штаба çити хуралласа пыма хушрĕ.

Сарлака кĕлеткеллĕ тăлпан боец, пысăк хура куçлăскер, Комаров умне пычĕ:

— Капитан юлташ, есть. Çак нимĕççене штаба çитермелле те каялла таврăнмалла.

Олег Катейкин хăй лайăх пĕлекен Хапир Ахматуллина çак тыткăна илнĕ нимĕççем умĕнче çул кăтартса та хуралласа пыма хушрĕ. Ăна вăл хăйĕн чи шанчăклă юлташĕ тесе шутланă май. Семен Вишневские сулахай енчен, тăлпан боеца сылтăм енчен хураллама пачĕ.

Катейкинпа Ахматуллин полк штабĕ ăçта вырнаçнине пĕлеççĕ. Вăл малти позицирен тăват çĕр метр хыçалта лапамра.

Хапир хыçалалла çĕр чавса тунă сукмакпа, ăна тепĕр чухне «каюра çулĕ» те теççĕ, нимĕçсене ертсе утрĕ. Хыçалта Катейкин хăй сăнаса пырать. Нимĕçсем, хĕл сиввипе кӳтнĕскерсем, тăхăнасса та çӳхе те начар тăхăннă, пуçне пĕкерех хутланса, утаççĕ. Атă тăхăннипе шăннă урисем вăрăммăн ярса пусаймаççĕ. Ура айĕнчи сивĕ юр пусмассерен кăчăртатса илет.

«Каюра çулĕ» вĕçленсен лапам пуçланса каять. Çак лапампа пĕр тапхăр кайсан, тĕмеске патне çитмелле. Анчах çак тĕмеске айĕнче штаб вырнаçнă тесен, никам та ĕненмест пулĕ. Шăп çакăнти çĕре алтса икĕ пӳлĕмрен таракан штаб вырнаçнă. Снаряд-бомбăран хăтăлма пиллĕк рет хĕреслесе пĕренесем хунă. Ана час ватаймăн!

Штаба тул енчен часовой хуралласть. Вăл ун патне çывăха хăй çыннисене парольпе çеç ярать.

Вĕсенчен инçе мар шурă çĕлĕк тăхăннă, алла автомет тытнă хурал тăра парать. Ун уринче те шурă кăçатă.

— Чарăнăр! Перетĕп! — тесе хураçлă çак ушкăна асăрхаттарчĕ.

Пурте сасартăк чарăнса тăчĕç. Катейкин мала тухрĕ те тыткăна илнĕ нимĕçсене полк штабне илсе килнине пĕлтерчĕ.

— Çакăнтах тăрăр. Эпĕ халех...

Хайхи хуралçă шурă юпа патне пычĕ, тем çине аллипе пусрĕ — çавантах хайхи тĕмеске патĕнчи питлĕх уçăлчĕ, каллех шурă сĕлĕкпе шурă кĕрĕк тăхăннă маттур çын тухса тăчĕ.

— Хăшĕ асли? — ыйтрĕ çак çын.

Катейкин хăй асли çинчен пĕлтерчĕ. Вăл тыткăна илнĕ нимĕçсем сине кăтартрĕ. Хайхи нимĕçсем, çӳхе тăхăннăскерсем, сивĕ çанталăкран чĕтресе тăраççĕ, пурте хутланнă, хăшĕсен алсисем те çук, аллисем кăвакарса кайнă, пуçĕнче таçтан тупса тăхăннă кивĕ çĕлĕксем, урисенче — шăнса ларнă кирза атăсем. Телейпе пуян пурнăç шырама килнĕ нимĕçсем, тĕрĕсрех каласан, барон пулма шутланă фрицсем витĕр шăннипе, килсĕр йытăсем пек, чĕтресе тăраççĕ.

— Кунта килмелле. Пострн штаба вĕссене иртме ирĕк пар, — хушрĕ штабри офицер.

Катейкин пурне те штаб енне кăтартрĕ, малти боец тӳрех утма тытăнчĕ, ун хыççăн шăнса кӳтнĕ ютсем, ăшă çĕре илсе кĕнине курса, тĕнккеме пуçларĕç. Катейкинпа патмар салтак хăвăрт тапранчĕç. Кайăк хур пек карталанса кивĕ сукмакла штаб патне çитсе тăчĕç, хайхи шур тумлă çӳллĕ офицер хăй хыççăн пурне те штаба анма хушрĕ. Сĕвеккĕн лартнă пусмапа

кашни аяла анчĕ. Кунта, алăк умĕнче, каллех салтак хураллать, вăл кашнине пăхса штаба кĕртсе ярать.

Штабри ĕçе-хĕле кайран Катейкин каласа панинчен пĕлтĕмĕр. Комаровăн икĕ боецне малтанхи пулĕме хăварнă, шалти пулĕме штаб пуçлăхĕ ларнă çĕре тыткăнри нимĕçсемпе Катейкина çеç кĕртнĕ. Штаб пуçлăхĕ Курасов майор вĕсенчен тĕплĕ ыйтса пĕлнĕ. Кунта унăн икĕ сыхлавçă, адьютант тата штаб писаре пулнă.

Ашă штаба кĕнĕ нимĕçсем хăйсен пуçне тăхăннă çĕлĕкĕсене (вăл çĕлĕксене вырăс ялĕсене кĕрсе çаратса тухни пăхсанах паллă) пуçĕнчен хывса алла илчĕç, алла тупса тăхăннă тĕрлĕ алсасене (хăшĕ-пĕрин алса та çукчĕ) бушлат кĕсйисене персе чикрĕç. Хăйсем куç айĕн сиввĕн пăхса тăраççĕ.

Штаб пуçлăхĕ Курасов майор Катейкинран çаксене мĕнле нĕччен тыткăна илме пултарни çинчен ыйтса пĕлчĕ. Штаб писарĕ Катейкин мĕн каланине тĕплĕн çырса пычĕ.

— Хăш нимĕçсен çамкисене пĕр-пĕринпе çапăнтарнине кăтарт-ха: ман пĕлес килет, — кăсăкланчĕ майор.

Катейкин варринче тăракан иккĕмĕшпе виççĕмĕш нимĕçсем çине кăтартрĕ. Нимĕçсем хăйсем çинчен сăмах пынине чухларĕç. Майор хайхи çамрăк нимĕç салтакĕсенчен çак факта ыйтса пĕлчĕ. Чăнах та, иккĕшĕн те çамкисем хĕрелсе тăртăннă, совет салтакĕ çамкапа çамкана çапăнтарнине пытармарĕç, çирĕплетсе хăварчĕç.

Штаб пуçлăхĕ кун хыççăн кашни нимĕç салтакĕнчен ыйтса тĕпчерĕ: хăйсен хушамачĕпе ятне, хăш çул тата хăш вырăнта çуралнине, мĕнле çар шкулне тата хăçан пĕтернине, халĕ хăш чаçре хесметре тата мĕнле званире пулнине.

Нимĕçсен Отто Шульц ефрейтор, вăрăмми, малта тăраканни, штаб начальникне хăйсем «Адольф Гитлер» дивизийĕнчен, вĕсен чаçне Фарнци çĕрĕнчен чӳк уйăхĕн пуçламăшĕнче Волоколамска илсе çитернине, унта икĕ эрне хушши тăнине пĕлтерчĕ. Чӳкĕн вун пиллĕкмĕшĕнче Вермахт «Тайфун» ятлă кодпа хăватлă наступлени пуçласан, вĕсен дивизине те çапăçăва кĕртсе ячĕç, терĕ.

Отто Шульц каланă тăрăх, дивизи вун икĕ кун хушши вырăссемпе çапăçса аллă процента яхăн çухату тӳснине пытармарĕ.

Çак разведка ушкăнĕ умĕнче уйрăм ĕç (задани) пулнă: «чĕлхе» тытса килмелле, çав «чĕлхене» нимĕçсем енне ирĕккĕн куçма совет салтакĕсене микрофонпа чĕнсе каласмалла. Вăл хăй калани ĕненмелле пултăр тесе, хăйĕн йĕм (брюки)

кĕсйинчен пĕр листовка туртса кăларчĕ, майор сĕтелĕ çине хучĕ.

Штаб пуçлăхĕ листовкăна илчĕ, çавăнтах вуласа тухрĕ. Листовкăра нимĕç командованийĕ совет салтакĕсемпе офицерĕсене хăйсен енне ирĕккĕн каçма чĕнет. «Хĕрлĕ Çар пĕтсе çитнĕ, — çырнă листовкăра, — вăл çитес кунсенче парăнать. Нимĕç çарĕ раштавăн пуçламăш кунĕсенче Мускава кĕрсе каять, пирĕн аслă та чаплă çар пуçĕ Адольф Гитлер Мускавра Хĕрлĕ площадьре никам çĕнеймин нимĕç çарĕн Çĕнтерӳ парадне туса ирттерет. Кам хăй ирĕкĕпе пирĕн енне куçать — çавна райри пек пурнаç кĕтет. Пурте куçăр! Кам пирĕн енне куçмасть — вилĕм тупать! Çак листовка пирĕн енне куçмалли документ пулать, вăл пароль вырăнĕнче шутланать. Çак кунсенче эсир йышăннă позици çине пирĕн разведсамолетсем листовкăсем йышлă тăкса хăварĕç, эсир кашниех çав листовкăна илсе шанчăклă вырăна пытарăр. Майлă вăхăт тупса, çак листовкăна алăра тытса пирĕн енне куçăр, ан хăрăр. Никама та усал тумастпăр, тĕрмене те хупмастпăр. Германи çĕршывĕнче ирĕклĕ те савăнăçлă пурăнăр.

«Центр» армине ертсе пыраканĕ<br>Федор фон Бок фельдмаршал».

Тыткăна лекнĕ нимĕçсем пĕр задание те пурнăçлаймарĕç, пирĕн алла çакланчĕç.

Штаб пуçлăхĕ Курасов майор Катейкин разведчика тăватă нимĕçе пĕччен тыткăна илсе штаба çитернĕшĕн хĕрӳллĕн тав тăвать тата «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ илме Вун улттăмĕш çара тăратма пулать.

Катейкин тытса илнĕ «хаклă чĕлхесене» халех ятарлă машинăпа Рокоссовский генерал-лейтенант патне ăсатма пулчĕ штаб пуçлăхĕ.

## УРĂХ ПĔР УТĂМ ТА КАЯЛЛА!

Чӳк уйăхĕн вĕçнелле çанталăк хытă сивĕтрĕ, сывлăшри температура 30 градуса çитрĕ. Ура айĕнчи типĕ юр утнă май кăчăртатса сас паракан пулчĕ.

Фронтра çапăçусем хĕрӳлленсех пычĕç. Нимĕç çарĕсен ертӳçисем çĕнĕрен те çĕнĕ вăйсем илсе килчĕç. Пирĕн çапăçу участокне çĕнĕ вăй хутшăнни паллă пулчĕ.

Тăшман вăйлă тапăннипе чăтса çитерейменĕмĕр. Пирĕн полкпа юнашар дивизи чиккипе тăшман танкĕсем çĕмĕрсе кĕрсе кайрĕç. Юрать çак ĕç каç пулас умĕн пулса иртрĕ.

Вĕсем, нимĕçсем, те вунă километр çеç кайме ĕлкĕрнĕ, Трухоловка станцине çитиччен вĕсене тытса чарнă.

Каç тĕттĕмĕ çапсан, хам полка каялла чакма хушрăм. Пире хирĕç тăракан нимĕçсем ан сисчĕр тесе, пĕр сас тумасăр тапранса тухрăмăр. Паллах, каялла чакасси чĕрене хĕсcе ыраттарать. Вун улттăмĕш çар командирĕпе, Рокоссовский генералпа, хам сăмахларăм, пирĕнпе юнашар дивизи генерал-майорĕ хамăр участокри лару-тăру начаррине тĕплĕн пĕлтернĕ-мĕн. Пĕтĕмпе шута илсе, пирĕн çар командирĕ пире Снегири поселок патне чакса çĕнĕ позици йышăнма хушрĕ.

Мĕн тăвăн? Хамăр вăя упрас, тыткăна лекес мар тесе пирĕн каялла чакма тиврĕ.

Эпир тăвату сехет хушши Волоколамск шоссепе хытă юра кăчăртаттарса каялла утрăмăр. Çурçĕр тĕлне чылай ырнă командирсемпе боецсем Снегири поселок умĕнчи окопсемпе блиндажсене йышăнтăмăр. Юрать, Мускав çыннисем авăнпа юпа уйăхĕсенче тĕп хулана хӳтĕлеме çак йывăр çĕр ĕçĕсене туса хунă: темиçе километр тăсăлакан траншея, витĕнчĕк окопсемпе блиндажсем, пулемет валли дзотпа дотсем, танксене хирĕç чалăштарса лартнă чугун юпасен уйĕсем, танка хирĕç минăсем лартнă тăрăхсем тата ытти те. Кĕскен каласан, Мускав хули тăшмана çывăха ярас мар тесе хытă хатĕрленнĕ, унăн йышлă çыннисем куне-çĕрне пĕлмесĕр тăрмашнă.

Хамăрпа пĕрле батальон командирĕсене те илтĕмĕр. Чи малтан шоссепе ун сылтăм енне хӳтĕлеме пĕрремĕш батальона патăмăр. Орлов майор яланах шоссене хӳтĕлеме тивнипе килĕшесшĕн марччĕ, Комарова сĕнсе пăхрĕ, анчах кĕрмек[1] те никрес[2] Комаров килĕшмерĕ, «сана, Орлов майор, хытă хисеплетпĕр, малти вырăнтах пул», терĕ. Пĕрремĕш ротăн командирĕ Савкин лейтенант пиртен пуриччен те ун ротине ПТР-па тата гранатометчиксемпе пулăшма ыйтрĕ: шоссе çинче тăшман танкĕсемпе хаяр çапăçма тивессине пĕлсе тăнă мар. Эпĕ ун ыйтăвне пурнăçлама Тарасов майора хушрăм.

Иккĕмĕш батальон хирти траншейăсене йышăнчĕ, траншейăран хыçала тухмалли ансăртарах пĕр-икĕ сукмак хăйсен хатĕрлеме тиврĕ. Комаров пĕрремĕшпе виççĕмĕш ротăн ко-

[1] Кермек — мăнкăмăллă, мухтанчăк, мăнна хуракан.

[2] Никрес — чăркăш, киревсĕр, йăлăнтаракан, кутăн.

мандирӗсене каялла тухмалли метр çурӑ тарӑнӑш сукмаксем чавма ӗç пачӗ. Вӑл сукмаксем фронтра шутсӑр кирлӗ: малти позицирен аманнӑ салтаксене илсе тухма е тылран пемелли хатӗрсене, çимелли апат-çимӗçе, почта малти позицие илсе пыма.

Çак сукмаксемсӗр вӑрçӑ пынӑ вӑхӑтра тылпа çыхӑнма урӑхла май та çук, пӗртен-пӗр çыхӑну çулӗ вӑл.

Виççӗмӗш батальон вӑрман катине çити йышӑнчӗ, çавӑн пекех хыçала тухма икӗ сукмак хатӗрлемелле пулчӗ. Руссаков аслӑ лейтенант иккӗмӗшпе виççӗмӗш ротӑсем шӗвелсе юлнӑран çӗнӗ вӑй ыйтрӗ, сахалран та çӗр çынна яхӑн. Эпӗ ӑна хам та лайӑх ӑнланатӑп, анчах вун улттамӗш çар кӗске вӑхӑтрах ярса парасса иккӗлентӗм, çар штабӗнчен ыйтса пӗлме пултӑм.

Батальон командирӗсене траншейӑра пӗр çӗре пухрӑм та малалла планпа паллаштартӑм.

— Эпир, командир юлташсем, кунта ирччен канатпӑр та ирхине ултӑ сехетре апатланатпӑр. Апатланнӑ хыççӑн пӗр сехет хушшинче каллех ютсемпе çапӑçма хатӗрленсе çитетпӗр. Уйрӑмах танксемпе тата унӑн пехотипе çапӑçма ялан хатӗр тӑрӑр. Кашни ротӑрах ПТР-семпе гранатометчиксем çителӗклӗ пулччӑр — унсӑрӑн тытӑнса тӑраймастпӑр. Кунтан урӑхниçта та каялла чакаймастпӑр, чӑнах та хыçалта Мускав. Ку чакнии юлашки утӑмӗ пултӑр! Çакна пирӗн чун-чӗререн ӑнланса виличчен çапӑçмалла. Çак тӗп шухӑша кашни боец ӑс-танне шӑтарса кӗртсе лартӑр. Мускава тӑшмана пани — хамӑр çӗршыва, атте-аннене, пичче-аппана, шӑллӑм-йӑмӑка, арӑмпа ачасене, пӗтӗм тӑван-пӗтене пӗтерни пулать. Çакна кашни çар çынни ӑнланса тӑтӑр!

Тепӗр кунне çутӑлсан, полк ирхи апат çинӗ хыççӑн, нимӗçсемпе çапӑçма хатӗрленсе тӑчӗ. Кашни батальонра танксемпе кӗрешме ПТР-семпе гранатометчиксем хӑйсен вырӑнӗсене йышӑнчӗç. Гранатометчиксем патӗнче ещӗк-ещӗкӗпе гранатӑсем купаланса тӑчӗç. Вӗсене ирхине хыçалтан грузовиксемпе турттарса килчӗç. Станоклӑ пулеметчиксемпе ПТРсем валли те мӗн чухлӗ ещӗк илсе килнине снабженецсем çеç пӗлме пултарассӗ. Мускав хӑйне хӳтӗлеме фронта хӗç-пӑшал çителӗклӗ тӑратать.

Полк çичӗ сехетре тӑшмана кӗтме тытӑнчӗ. Тарасов майор пиçӗ сехетре нимӗçсем ӑçтине пӗлме пиллӗк çынна разведкӑна ячӗ, вӗсене Васильев кӗсӗн лейтенантпа унӑн çумӗ Катейкин сержант ертсе кайрӗç. Вӗсем ултӑ сехете таврӑнмаллаччӗ,

халĕ çиччĕ те çитрĕ, çаплах таврăнман-ха. Тарасов майор хумханмах тытăнчĕ. Вĕсем пурте нимĕçсен аллине çакланчĕç пулĕ тесе, пăшăрханма пуçларĕ. Эпĕ Тарасова ку пултаруллă та ăста разведчиксем тыткăна çăмăллăнах лекес çук-ха тесе лăплантартăм. «Кунсăр пуçне нимĕçсем Истрăра юлчĕç, вĕсем çĕрле тапранса тухма шутламан, тăраниччен канна. Вĕсен разведки эпир унта çуккине ир çинче çеç пĕлтернĕ. Вĕсем, культурнă çапăçма хăнăхнăскерсем, ирпе апатланмасăр, кирлĕ пек хатĕрленсе çитмесĕр, лиска йытă пек çăмăллăн вĕçтерсе çитмеççĕ. Паян вĕсене вун сехет тĕлнелле кĕтме хатĕр пулмалла. Эпĕ çапла шухăшлатăп. Пирĕн разведчиксем те çавна пула кая юлчĕç. Вĕсемшĕн уçăмлăх çук. Çав уçăмлăха кĕтеççĕ вĕсем.»

Чăнах, пирĕн разведчиксем сакăр сехет тĕлне таврăнчĕç, хăйсемпе пĕрле пире ĕнентерме пĕр обер-лейтенанта çаклатнă.

Васильев пире хăйсем разведкăна кайса килнине йĕркипе каласа пачĕ. Нимĕçсем, чăнах та, ултă сехетре вăранаççĕ. Вĕсен разведки вăл тĕле пирĕн позицине тĕрĕслесе каять. Вĕсем виççĕнччĕ, иккĕшĕ траншейăна анса пăхрĕç, тепри, асли обер-лейтенант пулас, çӳле юлчĕ. Шăп çакна Катейкин çапса ӳкерет те хăй хулпуççи çине хурса каялла вĕçтерет, траншейăран тухнă чухне икĕ нимĕç разведчикне Васильевпа Ахматуллин сас тумасăр кинжалпа чиксе вĕлереççĕ. Васильевпа Ахматуллин Катейкина çул çинче хăваласа çитеççĕ те «чĕлхене» черетлĕ çĕклесе, чылай чухне хăйне çуран уттарса çутăлса çитнĕ çĕре разведкăран таврăнаççĕ. Тужурка тăхăннă обер-лейтенанта полк штабне илсе кĕреççĕ. Ир çинче эпĕ, Тарасов тата Курасов (полк штабĕн пуçлăхĕ) майор пĕрле пуçтарăнса тăшманпа кĕрешме хамăр çартан «Катюша» дивизионне те ыйтма кирли пирки сăмах хускатрăмăр. Нимĕç оберлейтенантне Курасов майор хăйне хирĕç тăратрĕ те ыйтса пĕлме тытăнчĕ.

Сарă çӳçлĕ, симĕс куçлă, вăрăм пит-куçлă нимĕç малтанах «найн!» тесе çеç хуравларĕ. Хăй мĕнле чаçрен, хăçан фронта илсе килни çинчен «найн» тесе çеç тăчĕ. Вара ирĕксĕрех унăн кĕсйисенчен сĕтел çине документсем кăларса хума тиврĕ. Документсем тăрăх çакна пĕлтĕмĕр: Генрих Дениц 252 пехотнăй дивизин 148 полкра виçĕ çул хесметре тăрать.

Уйрăм разведкăри чи опытлă разведчик 26 «чĕлхе» тытса таврăннă, темиçе хутчен дивизи командирĕ паттăрлăхшăн тав тунă, юман хĕреспе те наградăланă.

Хайхи Деница Тарасов майор алăк хушшине пӳрнисене

чиксе хĕстернĕ хыççăн вĕсен участокĕнче мĕнле çар чаçĕсем пуррине каларĕ: «Анчах килсе çитрĕ 10-мĕш танк дивизийĕ, СС «Рейх» ятлă мотодивизи (командирĕ Биттрих генерал-майор), дивизире 14 пин салтакчĕ, халĕ 4 пин çурă çеç юлнă. Вырăссемпе çапăçма питĕ йывăр, дивизи пысăк çухату тӳсет. Çĕнĕрен килсе çитнĕ 18-мĕш артдивизи, вăл Мускава штурмланă чухне хутшăнмалла...

Тĕпченĕ хыççăн çакă паллă пулчĕ: нимĕç командованийĕ Мускава асар-писер вутлă çил-тăвăл кăларса тытса илме планланă, ăна вăл çитес кунсенче туса ирттересшĕн. Анчах нимĕç разведчикĕ пĕлтернĕ тăрăх, халь çапăçакан нимĕç чаçĕсем шĕвелсе юлнă, вĕсен йышĕ çурри таран чакнă, ытларах çĕнĕ чаçсем çине шанаççĕ, анчах вĕсем вăрçăра пулса курман, хăнăху çук.

Нимĕç разведчикне эпир çавăнтах вун улттăмĕш çар штабне ăсатрăмăр, унта вăл калани кирлĕ пулать.

Чӳк вĕçĕн юлашки кунĕсенчи хĕвел вунă сехет тĕлне хăйĕн вăйсăр пайăркисене шурă юр çине хăюсăр сапаларĕ, кун сутăлса кайрĕ. Хĕвел çути салтакăн чунне ăшăтса ячĕ, пурăнас шанчăк çуратрĕ, анчах вăл нумая пымарĕ.

Сăнав пунктĕнче тăракан Тарасăв майăр мана чĕнчĕ.

— Пăх-ха анăçалла! Талккăшпе хуп-хура. Танксем.

Эпĕ бинокльпе пăхатăп: чăнах та танксем!

Çĕр чĕтрене пуçларĕ.

Танксем кашни минутран хăвăртлăхне пысăклатса пычĕç. Çывхарнăçемĕн пысăкланса, лайăхрах курăнакан пулчĕç. Малта çăмăл та пĕчĕк танк. Вăл çула сăнаса, тĕрĕслесе пырать тейĕн. Вăл хăш еннелле сулăнать, пĕтĕм танк колонни çав еннелле пăрăнса илет.

Орловпа унăн çумĕ Салкин аслă лейтенант траншейăран тухса хăйсен СП-а çĕкленчĕç, хайхи чи малти пĕчĕк танка курах кайрĕç, унтан — кинжал вĕçлĕ танксен колоннине.

Салкин тĕлĕннипе шăхăрса илчĕ. Кинжал варринче çăмăлрах танксем, хăй перекен тупăсем, бронемашинăсем, автоматчиксем тиеннĕ тягачсем, кинжалăн тул енче — пысăк та йывăр танксем.

Орлова ытлашши тĕлĕнтермерĕ, анчах та тăшманăн танксен пысăк колонни шухăша ячĕ: çак вăя мĕнле пĕтерсе тăкмалла, мĕнле аркатса ямалла.

Майор тӳрех раципе мана нимĕçсен танк колонни çывхарнине систерчĕ.

— Подполковник юлташ, «тимĕр шапасен» кĕтĕвĕ пирĕн

сине кĕпĕрленсе килет, мĕн тăвăпăр. Артиллерие вут уçма хушмалла мар-и?

Эпĕ Нарядов полковник патне шăнкăравларăм, анчах хурав пулмарĕ, сăлтавне пĕлеймерĕм.

Нимĕç танкĕсем пирĕн пата çитесси çур километр юлчĕ-и е çук, сасартăк малти виçĕ танк тăррăн-тăррăн! туса кисренсе илчĕç те чарăнса ларчĕç, вĕсем мина уйне пырса çакланнă-мĕн. Малти çăмăл танк пĕр сиен курмасăр малаллах шăвать. Тĕлĕнмелле.

Хыçалти танксем аяккипе иртме тăчĕç — вĕсем те минăсем çине пулса чарăнса ларчĕç.

Пирĕн боецсемпе командирсем траншейăра «чĕнмен хăнасене» кĕтсе илме хатĕрленсе тăнă май çаксем минăсем çине пулнишĕн чĕререн савăнчĕç, кашниех ăшра хамăр минерсене тав турĕ.

Нимĕçсен танк дивизин командирĕ Биттрих генерал рацине хăйсен авиаци полкне чĕнсе илет, мина уйне сухаласа тăкма ыйтать.

Темиçе минутран нимĕç «юнкерссем» кĕрлесе çитеççĕ, хăйхи пирĕн минăсем лартнă уя вун пиллĕк — çирĕм минут хушши бомба тăкаççĕ, танка хирĕç лартнă минăсене сирпĕнтерсе яраççĕ. Çула май пирĕн позици çине, Снегири поселокне бомбăсем тăкса хăвараççĕ, çуçухату кӳреççĕ. Снегири поселокра унта-кунта вут тухать, кĕрлесе çунать.

Володя Галкинпа Зоя Синицына аманнисене траншейăран васкавлă пулăшу параççĕ, йывăртарах сусăрланнисене каялла хывнă сукмаксемпе медсанбата наçилккăпа çĕклесе каяççĕ, иккĕшĕ те сивĕ сывлăшра ĕçленĕрен пиçсе çитнĕ анис улма пек хĕп-хĕрлĕ, аллисем те хĕрелсе кайнă. Вĕсем яланах пĕрле килĕштерсе ĕçленĕрен пĕрне-пĕри çур сăмахранах ăнланаççĕ. Çамрăк чĕресем пĕр-пĕринишĕн вутлă çулăмпа çунаççĕ, хăйсен чĕринче юрату хĕмленет. Çук, вĕсем юрататăп тесе сăмахпа перкелешмеççĕ, çак вĕри те çепĕç туйăм пĕр-пĕрин патне магнит пек туртать, вĕсем хушшинчи хутшăнусем ăшă та килĕшӳллĕ.

Галкин Синицына чĕнмелле пулсан, малтанхи пек: «Зоя, пулăшма кил-ха», темест, «Зоечка, санăн çемçе аллусем сыхса яни салтака сиплĕхлĕ»; Синицына та «Володя» темест, «Вова» е «Вовочка, эсĕ пулăшасса кĕтетĕп».

Командирсемпе политработниксем умĕнче пĕр-пĕринпе хушаматпа чĕнсе сăмахлаççĕ, иккĕшĕ юлсан, хăйсен юрату туйăмне пытараймаççĕ, вăл çиеле тухать, сыхăнусенче уççăнах

палӑрать. Вĕсем пĕр-пĕрне юратнине боецсем асӑрхаççĕ, тепĕр чухне вĕсен йĕплĕ чĕлхисем тĕртсе те илеççĕ:

— Володя, сана Синицына хăй çумне çилĕм пек çыпăçтарчĕ-им? Эх, Володя, эсĕ унăн капканнех çаклантăн пулас? Тутлă-им Зоя тути? Синицынăран та йĕплесе илнине илтетĕн.

— Эсĕ, Зоя, унпа Саранска кайма та хатĕр пулас? Унта, Зоя, унăн арăмĕ сана менле кĕтсе илĕ-ши? Хăçан сирен туй пулать?

Зоя ун пек сăмахлакансемпе чарăнса тăмасть, аллине сулать те малалла утать. Пĕлет вăл: вĕсемпе калаçни усси çук.

Орлов майор йĕплесе калаçакан боецсене вăрçса илет. Зоя санитаркăна яланах хӳтĕлет.

Хайхи танксем минăсем арканнă уй урлă кĕрлесе пирĕн боецсемпе командирсем йышăннă траншейăсем патнелле шăваççĕ. Паллах, хăш-пĕр çĕрте пур-пĕрех минăсем юлнă, йĕркеллĕ шăвакан танксем мина çине çакланса чарăнса лараççĕ, ыттисем тупăран пирĕн позицие персе хăвăрт килеççĕ. Акă, малта пыракан пĕчĕк танка Илларион Васильев çунакан шĕвек тултарнă кĕленчепе лайăх хăналать, кĕленче танка тивсе арканать, пĕтĕм шĕвекĕ танк çине сирпĕнет, тӳрех вут хыпса илет. Танк экипажĕ танкран та тухма ĕлкĕреймест, шалтах çунса каять.

Ытти танксем те малти позицие çывхарса çитеççĕ. Васильевпа Ахматуллинăн пысăк танксемпе кĕрешме тивет. Васильевпа Ахматуллин траншейăран шуса тухаççĕ те хăйсем çине килекен танксем айне граната çыххисем ывăтаççĕ, Васильев шăп лектерет те танкăн шуçлавĕ татăлнипе чарăнса ларать, анчах Хапир тĕл тăваймасть — танк ун çинелле кĕрлесе килет. Тепре перет — аяккарах ӳкет, гранатăсем урăх çук. Вăл каялла траншейăна сикет, хайхи танка Васильев сылтăм енчен персе лектерет, танк хăй сулăмĕпе кайса траншейăна лекет. Хапир çине тăпра йăтăнтарса антарать, çур кĕлеткине хуплать. Васильев хăй çине килекен тепĕр танка чарса лартасшăн: акă граната çыххине траншейăран çĕкленсе илет те хăвăрт ывăтать, анчах тĕл тăваймасть, танк ун патнех çывхарать. «Çук, кăна хам урлă каçарса ямастăп» тесе, тепĕр граната çыххине ярăнтарать, чăнах та, тĕл лектерет, лӳппер танк айĕнче хаяррăн кĕрĕслетет,, танк кăшт каять те траншея патне çитесси вунă утăмра чарăнса ларать. Унăн экипажĕ аялтан та, çӳлтен те люксене уçса тухать, танкистсем хыçалалла тараççĕ. Çапах та Илларион Васильев тепĕр граната ывăтать те — иккĕшĕ лаплатса ӳкет.

Орлов майор хӑйӗн пулеметчикӗсем сас паманнине асӑрхать, вӑл ҫавӑнтах Салкин аслӑ лейтенанта траншейӑпа вӗсем патне ҫитме васкатать. Вӑл снарядсемпе бомбӑсем аркатнӑ траншея тӑрӑх чупрӗ, анчах чупма ҫӑмӑл пулмарӗ, бомба шӑтӑкӗсене кӗре-кӗре тухма тиврӗ, хӑш-пӗр ҫӗрте йӑтӑнса аннӑ ҫӗр урлӑ упаленсе каҫмалла пулчӗ. Унта-кунта вӗсен ротинчи аманнӑ е вилнӗ боецсене курса иртрӗ, никам та вӗсене пӑхманнине, пулӑшу паманнине курса тарӑхрӗ. Вӑл Хапир патне те ҫитсе тухрӗ, унӑн ҫур кӗлеткине тапра айӗнчен туртса кӑларма тӑрмашрӗ, вӑл Қатейкина чӗнсе илчӗ, ӑна юлташне хӑтарма хушса малалла чупрӗ. Траншейӑра аманнӑ боецсем йышлӑ выртнине курчӗ.

— Мӗншӗн аманнисене никам та пулӑшу памасть? Аҫта Галкинпа Синицина?

Салкинӑн чарӑнса тӑма пӗрре те вӑхӑт ҫук, кӗҫ-вӗҫ нимӗҫ пехоти, унӑн автоматчикӗсем танксен хӳттипе ҫитсе траншейӑпа окопсене тытса илме пултараҫҫӗ — кая юлсан, полк пысӑк ҫухату тӳсет. Вӑл ҫеҫ-и? Траншея кукӑрӑлса илнӗ ҫӗрте пӗр станоклӑ пулемет нимӗҫ автоматчикӗсене хирӗҫ таттаттарса ӗҫлеме тытӑнчӗ, вӑл фрицсене ҫывӑха янӑ-мӗн, халӗ, авӑ, ҫӗнӗ шӑпӑр пекех шӑлать, вилни вилет, чӗрри танк хӳттине каялла чакса тӑрать. Тапӑнса килекен икӗ танк хайхи пулемет расчетне асӑрхарӗ те тупписене ун еннелле ҫавӑрса снаряд хыҫҫӑн снаряд кӑларса ячӗ. Пулемет шӑпланчӗ, расчет стройран тухрӗ пулас. Салкин ҫав шӑпланнӑ пулемет расчетне ҫитсе пулӑшма чупрӗ. Анӑҫалла ҫаврӑнса илекен траншейӑра станоклӑ пулемет та, расчечӗ те ҫук, снарядсем хӑйсен ӗҫне тунӑ. Траншея тӗпӗнче икӗ ҫын кӗлетки выртать, пӗрин пуҫӗ ҫук, татӑк мӑйӗнчен халӗ те ҫӑра юн палкаса юхать, юн хытӑ тапнипе траншея тӗпӗнче кӳлленсе тӑрать, ҫавӑнтах кӗвӗлсе пырать, теприн икӗ ури те ҫук, сулахай енӗ арканнӑ та пырши йӑтӑнса тухнӑ, пулеметчикӑн куҫӗсем чарӑлса капна, ҫаплипех хытса ларнӑ. Те хытӑ хӑранипе, те шутсӑр ыратнипе вилекен пулеметчикӑн сивӗннӗ куҫӗсем, пӗҫернӗ пулӑ куҫҫеем пек, тулаллла тухса тӑраҫҫӗ, ҫӑвартан тӑсӑлса тухнӑ чӗлхине ҫыртса лартнӑ, ҫӑварӗ чалӑшса ларнӑ. Мӗскӗнӗн чунӗ шутсӑр асапланса тухнӑ. Пӑхма хӑрушӑ.

Салкин йӗри-тавра сӑнаса пӑхать: траншейӑн тухӑҫ енче станоклӑ пулемета сирпӗтсе янӑ, станокӗ пӗр ҫӗрте, хӳтлӗхӗ — тепӗр ҫӗрте, кӗпҫине тата инҫерех ывӑтнӑ.

Траншейӑра тулли патронсен дискӗсем икӗ ещӗк, траншейӑн мал енче пулемет пенӗ патронсем сапаланса выртаҫҫӗ...

— Çам чĕрĕ юлнă — сас парăр! — чĕнет боецсене Салкин.

— Эпир кунта — окопра, — тахăшĕ хыçал енчен сас парать.

— Халех траншейăна таврăнăр! Хăвăртрах! — васкатать вĕсене аслă лейтенант.

— Эсир пулеметчиксем-и?

— Пулеметчиксем, — хуравлаççĕ хайхисем окопсенчен тухнă май.

— Халех хăвăр пулемета пуçтарăр та майлаштарăр, иккĕ виç минутран пеме хатĕр пултăр, — приказлать Салкин.

Тăватă пулеметчик, сывă юлнисем, пулемет пайĕсене çĕклесе траншейăна анаççĕ, кĕске вăхăтра майлаштарса лартаççĕ. Пулемет каллех пеме хатĕр. Ун пĕрремĕш номерĕ Габидуллин Хамед, тутар — Арск хулинчен. Вăрçăччен пуçламăш шкул учителĕ пулса ĕçленĕ, хастарскер. Иккĕмĕш номерĕ — Вишневский Семен, пулемета патрон ленти чиксе тăрать, мари çынни, вăрçа киличчен Чикме хулинчи редакцире корреспондентра ĕçленĕ, сăвăсем те çырнă, пичетленĕ. Çырă çӳçлĕ, кăвак куçлă яштака çамрăк. Вăрçа вăл хăй ирĕкĕпе килнĕ, ача чухне вăл граждан вăрçи çинчен çырнă писательсен произведенийĕсене каçса кайса вуланă, «Чапаев» романа — вунă хут, «Хурçă мĕнле хĕрнĕ» романа — вун икĕ хут, «Çил-тăвăлра çуралнисем» — сакăр хут. Романри паттăрсен чикĕсĕр тӳсĕмлĕхпе паттăрлăхĕ юмахри пек илĕртнĕ, чун-чĕрине хаваслăх кӳнĕ, çан-çурăмне çунатлантарнă, романтика çуратнă. Унăн çĕршыв тăшманĕсемпе «Чапаев» романри Петька пек çапăçас килнĕ.

Анчах халĕ вăрçă чăнлăхне кашни кун хăй тӳссе ирттернĕ май хайхи романтика нумай тĕксĕмленчĕ, куç умне тухса таракан хăрушă ӳкерчĕксем чун-чĕрине сивĕтсе пăрахрĕç, кунта çывăх юлташĕсем сасартăк вилсе выртни чĕрине хĕссе ыраттарчĕ, ырă чунне тавăрса силлерĕ, ăшра курайманлăх туйăмĕ ӳсрĕ.

Кун çумне пирĕн чаçсене тăшман хытă хĕснипе каялла чакса пыни унăн кăмăлне пусарса хучĕ, йывăр шухăшсем капланса килчĕç, çутă пуласлăх та хупланса пычĕ, ырă ĕмĕтсем вĕçсе сапаланчĕç. Çак авăкра хăйне те пачах хаклама пăрахрĕ, хисеплес те килмерĕ. Хăйне вăл чĕрĕ пурнăçри мĕлке пек, усал тĕлĕкри пек çеç туйрĕ.

Ытти номерсем те хăйсен вырăнĕсене йышăнчĕç.

Çак вăхăтра нимĕç танкĕсем каллех тапăнса килеççĕ. Вĕсем чылай аякра.

Аслă лейтенант ытти боецсене хавхалантарма чупать. ПТР-тан перекен взвод çапăçма хатĕрленсе тăни ун кăмăлне çĕклет. Тепĕр станоклă пулемет расчечĕ нимĕç пехотине кĕтсе выртнине курать. Кĕскен каласан, батальон çапăçма хатĕр пулни Салкин чунне лăплантарать. Вăл ун çинчен Орлов майора пĕлтерме каяллаваскать.

Çук, аслă лейтенант траншейăпа кайса Орловăн КП-не çитеймест, нимĕçсем артиллерипе тапăнаççĕ. Сасартăк снарядсем килсе ӳкме тытăнаççĕ. Пĕр-ик минут иртсен, пирĕн полк йышăнакан лаптăк снарядсем айне пулать. Айри çĕр тăр-тăр-тăр-тăр туса кисренсе тăрать, пĕтĕм тавралăха тусан-тĕтĕм, вут-çулăм хуплать. Çакăнти çĕр лаптăкĕнче нимĕнле чĕрчун та юлассăн туйăнмасть.

Траншейăпа чупса пыракан Салкин умне снаряд пырса ӳкет те ун ӳт-пĕвне таткаласа темиçе метр сапаласа тăкать. пытару команди çĕре чикет. Ун чухне вилнĕ ытти боецсемпе артналет[1] хыççăн ун ӳтне пухса (пур пайĕ те тупăнмасть) командирсене те пĕр çĕре пытарса йывăç палăк лартаççĕ.

Сивĕ раштав уйăхĕ пуçланчĕ. Вăл вăрçăри çыншăн темиçе хут йывăр. Сивĕ траншейăпа окопра чĕтренсе выртнă хыççăн каллех ирхине усал тăшманпа вăй хурса çапăçмалла. Сана кунта эс шăнтăн пуль, ывăлăм, тесе никам та хĕрхенмест, кунта санăн тăван аннӳпе аçу та çук, кунта сана хупласа тăракан сивĕ тавралăх. Эсĕ çĕрĕпе пĕр енчен тепĕр енне çаврăнса выртатăн траншея тĕпĕнче. Урара çăматă пулсан та, пур-пĕр ир енне ура шăнса каять, сиксе тăрса, ташша яратăн. Алă шăнсан, ăна та вылята-вылята ăшăтатăн.

Боецсем пĕр-пĕринпе тытăçса ӳкмелле те выляççĕ. Юрать, ир çинче, ултă сехет иртсен, кашни боецпа командира çĕр грамм таса спирт парса хăналаççĕ, ăна Сталин паекĕ теççĕ. Чăнах та, çавна ĕçсен, çан-çурăм, пит-куç хĕрсе каять, алурасем те хăвăрт хутланаççĕ. Çав самантра нимрен те хăрами пулатăн, нимĕç çине тапăнма та хатар мар. Çак хаяр шĕвек сан шухăш-кăмăлна та улăштарса хурать. Нумайăшĕн çак самантра хамăра нуша кăтартакан фашистсене халех кайса пĕтерсе тăкас килет: вĕсем пирĕн çине вăрçăпа килмен пулсан, хамăр кил-йышра ăшă кил-çуртра савăнса пурăнаттămăр, юратнă ĕçе çӳреттĕмĕр. Халĕ çак тискерсене пула кашни минутра вилĕм кĕт. Мĕнпе ăйăпа кĕнĕ эпир вĕсен умĕнче? Мĕнле правăпа хусаланма шутлаççĕ пирĕн пурнăçпа?

Ыйту хыççăн ыйту çуралать, пĕринчен тепри тарăнрах та

[1] Артналет (артиллери налечĕ) — тупăсенчен сасартăк йышлăн пени.

вăйлăрах. Вĕсем умри тăшмана чĕререн курайми тăваççĕ, хăвăртрах пĕтерсе тăкма хистеççĕ.

Эпĕ хамăн юратнă Лариса çинчен аса илтĕм. Вăл ман чĕререн пĕр минут та тухман, аса илмен кунĕ те пулман. Вăл иртнĕ çырура хăйне Шупашкарти госпитальре ĕçлеме тытăнни çинчен çырнăччĕ. Терапевт уйрăмĕнчи палатăри медсестра. Ăна тăватă палата çирĕплетсе панă, кашни палатăра ултă аманнă салтак, вĕсенчен пĕр палатинче — офицерсем. Вăл яланах пĕрремĕш сменăра ĕçлет, çавна май ĕçĕ нумай. Офицерсемпе ĕçлеме мутавлипе чăрмавлине палăртать. Хăшĕсем ытла тиркешеççĕ, теприсем йăлăнтараççĕ, виççĕмĕшшисем госпитальри йĕркене пăсма хăтланаççĕ, тенĕ çырура. Госпитальре ĕçлеме хăйне пурпĕрех килĕшнĕ.

Эпĕ Лариса госпитальре ĕçленишĕн ырларăм: пултаруллă врачсенчен, медицина специалисчĕсенчен вăл кунсерен пĕлӳ илсе хаклă сиплевçĕ пуласса шантăм.

Хам выртнă госпитальре Лариса ĕçлени мана савăнтарчĕ, эпĕ ăна тăрăшса ĕçлеме вăй-хал, çирĕп сывлăх сунтăм. Юратнă мăшăрăм çак сипленекен çамрăксемпе ĕçленĕ май хăшĕ те пулин унпа çыхăнса каясран та шикленсе илтĕм, анчах хамăн çырура ун пирки çырса кăмăлне пăсас темерĕм.

Сивĕ раштав ирĕ хуллен çуталса килчĕ. Сывлăшри шыв пăсĕсем сивĕрен хытса ларнă та тĕтре пулнă. Таврана тĕтре карса илнĕ, ик çĕр-виç çĕр метртан малти мĕлкен çеç курăнать, япалине уйăрса илме пулмасть. Пас айĕнчи йывăç турачĕсем ытла мăннăн курăнаççĕ.

Эпир яланах ултă сехет ирхине юрпа çăвăнатпăр, хул-çурăма вылятса илетпĕр. Уçăлнă хыççăн кухньăран илсе килнĕ вĕри шӳрпе çиетпĕр, иккĕмĕшĕ — хуратул пăтти, тутлă чей те ĕçетпĕр.

Çурçĕр иртсен ик сехетре кайнă разведка таврăнчĕ. Ăна яланхи пекех Васильев сержант ертсе кайрĕ. Унпа пĕрле Катейкин, Вишневский пулчĕç. Илларион Васильев хăюллă та тавçăруллă, çав ăхăтрах асăрханулла Юнкăпуç каччи. Вăл нимĕçле те чухлать, вĕсемпе сăмахласа илме те пултарать.

Катейкин чикĕсĕр вăйлине юлташĕсем те пĕлеççĕ, ăна хапăл тусах нимĕçсен тылне кĕрсе пĕлме разведкăне илеççĕ. Ун пек хатар ĕçе çӳреме шутсăр майлă çамрăк. Вишневский Семен каснă лартнă нимĕç, çӳллĕ те вăрăм питлĕ, хĕрлĕрех çӳçлĕ, шупкарах кăвак куçлă, нимĕçле те пĕлет. Нимĕçсен паллă поэчĕн Генрих Гейне сăввисене пăхмасăрах калать,

анчах Гитлер влаҫа илсен аслă поэтăн săввисем хисепре марччĕ.

Разведка ирхине вĕҫтерсе ҫитрĕ. Васильев сержант ман пата кĕрсе хăйсем курса пĕлнине топографи картти ҫине катартса уҫса пачĕ. Унăн кесйинче электрофонарь пурри самаях пулăшнă, анчах нимĕҫсем йышăннă вырăнта унпа усă курма хатар пулни ахалех паллă.

Вăл пĕлтернĕ тăрăх, Никулино ялне ҫĕнĕрен танк дивизийĕ килсе ҫитнĕ, унтах мотопехота бригади вырнаҫнă. Истра хулинче 11-мĕш танк дивизийĕ, Трусовăпа Санниково ялĕсенче 5-мĕш танк тата мотопехота чаҫĕ. Фашистсем пирĕн ҫине тапăнса килме пысăк вăй илсе ҫитерне. Вĕсем ҫак чаҫсене пурне те пирĕн ҫине е хăш-пĕр чаҫсене Ленинград шоссе ҫине ярассине пĕлме ҫук, ăна нимĕҫсен командованийĕ кунти лару-тăру мĕнле пулса пынине шута илет.

Эпĕ хамăрăн разведка пĕлтернине вун улттăмĕш ҫарен штабне тӳрех хыпарларăм, ман хыпара штаб пуҫлăхĕ полковник йышăнчĕ, вăл ăна Рокоссовский генерал-лейтенанта ҫитерме пулчĕ. Эпĕ штабран мана пулăшма танксен бригадине «Катюша» дивизионне ярса пама ыйтрăм. Ҫак вăйсемсĕр пире таптаса каҫса каяссине систертĕм. Полковник такампа ҫыхăну тытрĕ пулас, тӳрех хуравлаймарĕ, тен, ҫар пуҫлăхĕн оперативлă начальникĕпе калаҫрĕ пулмалла.

— «Сăр!», илтетĕн-и: сирĕн ыйтăва кăнтăр тĕлне тивĕҫтеретпĕр. Унччен тытăнса тăма тăрăшăр. Лару-тăру мĕнле аталанса пынине систерсех тăрăр. Сире пурне те ăнăҫлăх сунатăп.

Кăнтăр тĕлне пулăшу килесси уҫăмлă пулчĕ, ырă хыпар кăмăла ҫĕклерĕ. Эпĕ хамăн батальон командирĕсене фашистсемпе улăп пек ҫапăҫма чĕнтĕм, танксемпе кĕрешекен ушкансене ҫителĕклĕ таран гранатăсем, ҫунакан шĕвек тултарнă кĕленчесем илсе пыма васкатрăм. Кашни батальонрах ПТР-семпе снайперсем, минометчиксем хатĕр тăмаллине палăртрăм, пулеметчиксен расчечĕсем тулли пулмаллине асăрхаттартăм.

Пĕлетпĕр: нимĕҫсен тапăнакан ҫар техники — танксемпе бронемашинăсем — сарлака шоссепе ҫĕмĕрттерсе килеҫҫĕ те хăй умĕнче чарса тăракан вăйсене пăрккăн аркатса тăкса малалла ыткăнаҫҫĕ. Гитлерăн «Тайфун» ятлă ҫил-тăвăллă тапăну вĕҫленсе пынине сисетпĕр, анчах вăл юлашкиччен те пулин хирĕҫ тăракенсене ҫĕмĕрсе тăкса тĕп хулана кĕрсе каясшăн.

Эпир Тарасов майорпа тата Гаркуша полк комиссарĕпе кашни батальона ҫитсе боецсемпе, рота командирĕсемпе, полит-

руксемпе курса калаçма тăрăшрăмăр. Анчах ирхи вăхăт сахал пирки эпир виççĕн виçĕ батальона салантăмăр. Эпĕ 1-мĕш батальона Орлов майор патне юлтăм, 2-мĕш батальона Гаркуша полк комиссаре йышăнчĕ, 3-мĕш батальона Тарасов майор кайрĕ.

Полк комиссарĕ боецсемпе калаçу ирттернĕ чух сехечĕ-сехечĕпе çĕршывриле тĕнчери лару-тăру çинчен пуплеме юрататъ. Хаш-пĕр чухне нумай сăмахланипе тĕп шухăшне уçса пама ĕлкĕреймест — вăхăт çитмест. Çапла май хăй темине тепĕр занятире çеç вĕçлет. Хале, фронтра, ун пек ирĕклĕ вăхăт çук. Тĕп шухăша кĕскен те витĕмлĕ каламалла, тăсса кайма вăхăт пулмасть.

Эпĕ Гаркуша политкомиссара батальона каяс умĕн кĕскен каласа боецсемпе командирсене хавхалантармалла терем.

Хам эпĕ пĕрремĕш батальонра боецсемпе командирсене çирĕм сакăр панфиловец пек танксемпе пĕр шиксĕр, паттăр çапăçма чĕнтĕм. «Вĕсем çирĕм саккăрăн кăна пулнă, фашистсен 50 танкне хирĕç гранатăсемпе кăна хирĕç тухаççĕ, пур танкне те сиен тăваççĕ е çунтарса яраççĕ, малалла иртме памаççĕ.

Сирĕн те, хаклă юлташăмсем, танксене курсан хăрамалла мар, хăюллă та паттăр пулмалла, тăшманăн пĕр танкне те малалла иртме памалла мар. Çавăн пек пулсан сире чыс та мухтав кĕтет, хăраса тарсан — намаспа ылхану тата сăвапсăр вилем!»

Вунă сехет тĕлне шурă тĕтре сирĕлчĕ, сывлама çămăлланчĕ. Çан-çурăма чĕтретекен хаяр сивĕ кăштах чакрĕ, пит-куçа çатăр! чĕпĕтсех каймасть, уншăн та хуть тавах темелле хĕл мучине.

Пирĕн çине сăнама нимĕçсен «рама» вĕçсе килчĕ, вăл траншейăпа окопсене шыраса каллĕ-маллĕ кумрĕ, хăш-пĕр боецсем ăна тĕллесе пеме винтовкине çĕклерĕç, анчах рота командирĕсем хамар ăçта вырнаçнине пĕлтерес мар шутпа вĕсене чарчĕç. Паллах, самолет-разведчик пирĕн позицие пурпĕрех ӳкерсе кайрĕ ĕнтĕ, ăна нимĕç специалисчĕсем уйрăм приборпа сăнаса пĕлеççĕ те артиллеристсемпе сывлăшран бомба тăкакан летчиксене задани параççĕ: çав вырăна вилĕм «кучченеçĕ» тăкма.

Чăнах та, «рама» вĕçсе кайнă хыççăн эпĕ малти позицирен кашни батальонрах икшер рота хыçалти траншейăна куçарма ыйтрăм. Нимĕçсен тактикине хăнăхса çитрĕм: вĕсем сывлăшран разведка тунă хыççăн пирĕн позицие малтан артиллери-

рен персе, унтан сылăшран бомбăсем такса аркатаççĕ. Пурне те малти линие хăварсан, пысăк çухату тӳсессе кĕтсех тăр — ун хыççăн танксен тапăнăвне сирсе яма вăй та юлмасть, хирĕç тăрасси те пулмасть.

Халĕ малти линие юлнисене те йывăрлăх килсен, иккĕмĕш линири Мускав çыннисем хатĕрленĕ блиндажсемпе окопсене хăвăртрах йышăнма хушрăм. Позицие сăнавçăсемпе хăш-пĕр пулеметчиксем çеç юлма кирлĕ.

Эпĕ ăнланнă пекех çирĕм минут та иртмерĕ, нимĕçсен артиллерийĕ пирĕн малти позицие вут тăкма тытăнчĕ. Снарядсем татти-сыпписĕр шăхăрса килсе çурăлаççĕ. Хаяр çилтăвăл тухнă пек тавралăх тĕтĕм-сĕрĕмпе хупланса ларчĕ.

Эпир Савелькин адьюдант тата Терехов связист блиндажа аран çитсе ӳкрĕмĕр, хамăра снаряд тивсе парккăн аркатса пăрахассăн туйăнчĕ.

Нимĕç артиллерийĕ çур сехете яхăн печĕ, эпир йышăннă вырăнта нимле чĕрчун та юлман тейĕн.

— Ну, нимĕç перет-тĕк перет — ăçтан ун чухлĕ снаряд тупăнать, — тĕлĕнсе сăмахлать Терехов сержант.

— Пĕтĕм Европа ун аллинче пулчĕ, уншăн хĕç-пăшал хатĕрлерĕ, — ăна ăнлантаратăп эпĕ.

Манăн сĕтел çинчи телефон шăнкăравларĕ, эпĕ итлетĕп.

— «Сăр!», «Сăр!» Мана илтетĕн-и? Санпа «Днепр» калаçать. Сирĕн лару-тăру мĕнле? Вутпа çунтарса илмерĕç-и?

— Çур сехет хушши вутпа çунтарчĕç, — хуравлатăп эпĕ.

— Çухату йышлă-и? — кăсăкланать «Днепр».

— Нумай пулма кирлĕ мар. Каярахпа пĕлтерĕп.

— «Тимĕр шапасене» кĕтсе илме хатĕр-и?

— Пĕтĕмпех хатĕр, анчах вĕсем йышлăн тата нумай вăхат тапăнсан — питĕ йывăр, сиртен пулăшу кĕтетпĕр, — систерсе хуратăп.

— Хăвăра каланă пек пулĕ. Хăвăр ĕç-пуç çинчен хыпарласа тăрăр.

Эпĕ Рокоссовскийпе хăйпе калаçрăм. Вăл ман ĕçпе кăсăкланни хытах савăнтарчĕ, нимĕçсене тытса чарас шанчăк ӳсрĕ.

Нимĕç пеме чарăнсан, эпир каллех СП-на тухрăмăр, кĕçех «хурçă кайăксем» вĕçсе килессе шикленсе кĕтрĕмĕр. Вунă минут та иртрĕ — тӳпере сывлăша çурса килекен сас илтĕнмерĕ. Ун вырăнне анăçран кĕрленĕ сасăсем хăлхана кĕрсе кайрĕç. Вăл сасăсем кашни минутран вăйланса пычĕç.

— Подполковник, ку танксен сасси пулас, — куҫне чарса каларӗ Савелькин адъютант.

— Эпӗ те ҫапла шутлатӑп. Терехов юлташ, халех иккӗмӗш траншейӑна вӗҫтер, батальон командирӗсене кала: хӑйсен вырӑнӗсене халех таврӑнччӑр, тӑшмана кӗтсе илме хатӗр тӑччӑр, — приказларӑм эпӗ.

Вӑхӑт хӑвӑрт шӑвать. Хайхи танксен колонни шоссепе те, хирпе те кӗрлеттерсе килет. Кӗҫех сабантуй пуҫланать. Эпӗ васкасах Тураева шӑнкӑравлатӑп.

— «Ока!» «Ока!» Сирӗнпе «Сӑр» калаҫать. Хурҫӑ утсем хытӑ килеҫҫӗ. 2—300 тӑваткал вунӑ минут хушши ҫумӑр кирлӗ. Тепӗр виҫӗ минутран тытӑнсан шӑп вырӑнлӑ.

— «Сӑр», сире ӑнлантӑм. Ҫичӗ минутлӑх тупӑнать.

Хайхи хура хӗреслӗ кӑвак хӑмӑр танксем пирӗн траншея патне ҫитесси тӑват ҫӗр метра яхӑн юлчӗ. Эпӗ пирӗн артиллери сас паманнишӗн хумханма тытӑнтӑм, Тураев майор ҫине тарӑхма пуҫларӑм. Ӑсра ӑна мӗшӗлти тесе вӑрҫса илтӗм. Вӑл вутпа пулӑшмасан пире ытла та йывӑр пуласси куҫкӗретех.

Сасартӑк пирӗн пуҫ урлӑ сывлӑша ҫурса снарядсем вӗҫсе иртрӗҫ те хайхи танксен колонни ҫине ӳксе вут-ҫулӑм сирпӗтрӗҫ. Темиҫе машина ҫывӑнтах чарӑнса ларчӗҫ. Кун хыҫҫӑн снарядсем татти-сыпписӗр танксем ҫине килсе ӳкеҫҫӗ те вут хыптараҫҫӗ. Хаш-пӗр танксем вут айӗнчен хӑвӑртрах тухас тесе, пирӗн траншейӑпа окопсем патне чӑрсӑрланса килеҫҫӗ. Нимӗҫ водителӗсем лайӑх пӗлеҫҫӗ: совет артиллерисчӗсем хӑйсен позици ҫине пемеҫҫӗ.

Пысӑк танксем Орловпа Комаров батальонӗсем патне хӑварт сыхарчӗҫ. Малтанах хатӗр тӑракан гранатометчиксем хайхи танксене тӗллесе переҫҫӗ, анчах малти броня ниепле те илеймеҫҫӗ, юлашкинчен граната ҫыххине гусеница айне лекмелле ывӑтаҫҫӗ. Катейкин, Васильев, Ахматуллин траншея умне тухса выртаҫҫӗ те хӑйсем ҫине кӗрлеттерсе килекен танксене граната ҫыххи ывӑтса чарса лартаҫҫӗ, хӑшӗсем ҫавӑнтах хыпса илеҫҫӗ. Олег Катейкин ҫак ҫапӑҫура виҫӗ танка хытӑ сиен кӳрет. Васильевпа Ахматуллин — иккшер.

Ытти танксенчен нумайӑшне артиллери вучӗ ҫунтарса ярать те юрӑхсӑра кӑларать.

Нимӗҫсен танк колоннин тапӑнӑвне сирсе пӑрахнипех ӗҫ вӗҫленмест-ха. Тарӑхса кайнӑ нимӗҫ командованийӗ часах авиаци чӗнсе илет.

Эпӗ ҫар штабӗпе тӳрӗ ҫыхӑнатӑп, истребительсен полкне

ыйтатăп, Рокоссовский çар пуçĕ хăй мана пулăшма пулнине ас тутаратăп.

Чăнах та штаб пуçлăхĕ Маландин полковник çар пуçлăхĕ каланине шута илсе, мана халех пулăшма пулчĕ.

— Кĕтĕр, истребительсемпе штурмовиксем кĕçех çитеççĕ.

Нумай та вăхăт иртмерĕ — нимĕçсен «юнкерссĕсемпе» «мессершмидтсем» вĕçсе çитнĕ çĕре пирĕн истребительсем те персе çитрĕç. Нимĕçсен «юнкерссĕсем» пирĕн позици çине бомбăсем тăкма тытăннăччĕ, пирĕн истребительсем çав авакрах хайхи «юнкерссем» çине кайăк хурчкисем пек тапăнчĕç те тупă-автоматран ăшалама тытăнчĕç. Акă снаряд тивнĕ «юнкерсс» аялалла чалăшшăн анма тытăнать, тĕтĕм тухса пырать, экипаж самолетран сирпĕнсе тухать, парашют сарăлма ĕлкĕрет, çав вăхăтрах самолета вут хыпса илет, аялалла ялкăшса анать. Эпир тăшман самолечĕ ӳкнĕ чух чун-чĕререн савăнатпăр.

Нимĕç летчикĕпе бомба тăкаканĕ пиртен аяккалла кайса анать. Çунса анакан иккĕмĕшпе виççĕмĕш самолет çинчен сикнĕ летчиксене Масков снайпер сыхласах тăрать, вĕсем çĕре анса çитиччен хăйĕн винтовкинчен юри ураран персе амантать: çĕре ансан — тăраймасть, пытанма та пултараймасть.

Сывлăшри çапăçу нумая пымасть, пирĕн истребительсем нимĕçсен çичĕ бомбардировщикне çапса антараççĕ, ыттисем каялла веçтереççĕ, пирĕн пĕр самолет та никек курмасть. Эпир пирĕн истребительсем сывлăшра ăста çапăçнăшăн савăнтăмăр, боецсем вĕсене ура! кăшкăрса ăсатрĕç.

Кăнтăр иртсен, пирĕн çине каллех артиллери пеме тытăнчĕ. Снарядсем траншея таврашĕнче самаях çурăлчĕç, аманнă боецсем кăшкăрса санитарсене чĕнчĕç. Володя Галкинпа Зоя Синицынăна вут-çулăм айĕнчех вĕсене пулăшу пачĕç, утап маннисене наçилкка çине хурса санчаçе ăсатрĕç. Траншейăпа окопсенче «санитар!», «санитар!» тесе чĕннĕ сасă янраса тăчĕ.

Нимĕç тупăран çеç мар, минометран хытă печĕ, çав çухату чылай кӳчĕ.

Ахматуллин, Вишневский боецсемпе Гурянов лейтенанта, йывăр аманнипе, Володьăпа Зоя санитарсем санбата çĕклесе ăсатрĕç. Вĕсене Васильев, Катейкин тата ытти юлташсем кăмăлсăррăн ăсатса ячĕç, хăвăртрах сывалса хамăр чаçе таврăнма чĕнчĕç.

Нимĕçсем артиллерипе миномет вучĕ хыççăн, пире вăйсăрланнă тесе, хăйсен пехотине кĕртсе ячĕç. Хăюллăн тапăнса килме хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсене çĕр-çĕр аллăшар

грамм шнапспа хăналанă. Эрехпе илĕртнĕ салтаксем каппайланса, автоматран татти-сыпписĕр персе пирĕн малти позицие атакăларĕç. Пирĕн окопра траншейăри боецсене хăратма тăрăшрĕç, микрофонпа вĕсене парăнма чĕнчĕç.

Виççĕмĕш батальонра икĕ сутăнчăк тупăнчĕç, вĕсем траншейăран нимĕç енне тухса çĕр метра яхăн упаленсе каяççĕ (пирĕн боецсем малтан вĕсен шухăшне ăнланман), нимĕç салтакĕсем патне çитерехпе аллисене çӳлелле çĕклесе хытăрах утма тытăнаççĕ. Масков снайперпа тепĕр тĕл перекен боец, шутсăр тарăхса кайса, çаксене хыçалтан шаплаттараççĕ, икĕ сутăнчăк нимĕçсем патне çитсе ӳкеймест, пĕр чыссăр пĕтет.

Пирĕн кашни батальонрах траншея хĕрне станоклă пулеметсем майлаштарса лартнă-мĕн, хайхи нимĕçсен ӳсĕр салтакĕсем малти линие çывхарса çитсен, пулеметсем кĕрлесе каяççĕ. Çакна кĕтмен нимĕç салтакĕсем йывăр аманса е вилсе тăкăнаççĕ. Хыçалта пыракан нимĕç офицерĕсем хăйсен салтакĕсене малалла хăвăрт чупма, траншейăна çитсе вырăссене аркатса тăкма васкатаççĕ.

Паллах, пирĕн автоматчиксемпе пулеметчиксем пĕр нимĕç салтакне те траншейăна çитме памарĕç, çулса тăкрĕç. Нумайăшĕ пĕтнĕ хыççăн юлнисемпе пĕрле офицерсем те каялла тапса сикрĕç.

Шап-шурă юр кăна этем юнĕпе лаптăкĕ-лаптăкĕпе хĕрелсе хăмăрланчĕ. Гитлер нимĕç халăхĕн юнне çавăн чухлĕ юхтарнине килсе пăхасчĕ хуть, хĕлле вăл таса шурă юр çинче ытла яр-уççăн курăнать, чуна çӳçентерсе ярать. Тăшман юнĕ пулсан та, этем юнĕ-çке вăл!

Тен, савăнмалла манăн? Çук, эпĕ ачаран çыннăн е выльăхăн юнне курсан, çан-çурăм çӳçенсе каятчĕ, чĕре хыттăн тапма тытăнатчĕ, ăшчик пăтранатчĕ, хăсăк тухатчĕ, куç хуралса килетчĕ, пуç çаврăнма пуçлатчĕ. Вăй кайса килнипе лармалли е выртмалли шыраттăм.

Пĕррехинче анне мана, кĕркунне IX-меш класра вĕреннĕ чухне, чăх тытса пусма хушрĕ. Пирĕн вĕсем йышлăччĕ, вăтăр таранчченех. Эпĕ ăна пусаймастăп тесе хирĕçлерĕм, анчах вăл итлесшĕн пулмарĕ. Эпĕ кил картине тухрăм та кĕтӳпе çӳрекен чăхсене урама хăваласа тухрăм, çырмана хăваласа антартăм. Пӳрте кĕрсен, кил хушшинче пĕр чăх та çук терĕм, анне ĕненмесĕр кил хушшине тухса пăхрĕ, чăнах та кил картинче пĕр чăхха та курманнипе шалт тĕлĕнчĕ, какайсăрах яшка пĕçерсе пачĕ.

Тепрехинче атте сурăх пуснă чух мана сурăх картине тух-

ма чĕнчĕ. Эпĕ, вĕренмелле тесе, юлташ патне тухса вĕçтертĕм, киле каççăр та таврăнмарăм.

Аттепе анне мана пихçан та килти выльăха пусма явăçтараймастчĕç, эпĕ вĕсене пусма шутсăр хĕрхенеттĕм, пуснă чух юн юхнине курсан, ăш пăтранса килнипе хăсăк килетчĕ, ура çинчен ӳкме пултараттăм. Пĕр айăпсăр кайăк-кĕшĕкĕн, выльăх-чĕрлĕхĕн чунне татнине хирĕçчĕ манăн ăс-хакăл, çав тискерлĕхе тӳсме пултараймастчĕ манăн психика. Эпĕ мĕн пĕчĕкренех нимĕнле кăпшанкăна, кăткăпа лĕпĕше, шăнапа ӳпрене, ăманпа шĕвĕрĕлчене, хăнкăлапа таракана таптаса вĕлерме пултарайман, вĕсене те хĕрхеннĕ. Çавăн пек хĕрхенекен чун-чĕреллĕ ӳснĕ эпĕ. Чĕрчунсене çеç мар, йывăç-курăка та хуçма, чечексене татма шутсăр хĕрхенеттĕм, темле усал ĕç тунă пек туяттăм хама хам. Тепĕр хĕр ачасем çаран çинче е улăхра чечексем юри татса çӳретчĕç, сахал мар, йышлă тататчĕç... Эпĕ ун пеккисене курсан, вĕсене чунсăр, хĕрхенме пĕлместĕр, тесе вăрçаттăм. Эпĕ вăрçнинчен питĕ тĕлĕнетчĕç. Вĕсенче çав пысăк хĕрхенӳ туйăмĕ аталанман иккен, çавăнпа та хĕр ачасемпе арçын ачасем те çав туйăмсăр чăлах та чурăс ӳсеççĕ. Вĕсемшĕн çул çинче хитре ӳсекен хыр-чăрăша хуçасси нимĕн те мар, нимĕнле туйăм та хускатмасть.

Хаяр та юнлă çапăçу вĕçленнĕ çĕре бронемашинăпа ман КП-на аслă командирсем килсе çитеççĕ. Манран малтан вĕсене Иван Савелькин асăрхать.

— Подполковник, пăхăр-ха, пирĕн енне бронемашина парăнчĕ. Вăл пирĕн патах килет пулас. Камсем-ши?

Эпĕ шоссе еннелле çаврăнса пăхатăп та чăнах шупка сăнлă хайхи машинăна куратăп. Вăл пирĕн сăнав пунктнех килни паллă пулчĕ. Кам килессине тӳрех тавçăрса илтĕм те хумханма тытăнтăм.

Эпир машинăна кĕтсе илме çул çине тухрăмăр. Ман блиндаж умĕнче вăл чарăнчĕ. Машинăран çӳлле те çамрăк адьютант тухрĕ, ун хыççăн яштака та вăрăм, шурă кĕрĕкпе шурă çĕлĕк тăхăннă, тăрăхла та кĕрен питлĕ, кăвак куçлă, çутă сăнлă, питĕ типтер курăмлă çӳллĕ генерал тухрĕ. Эпĕ ку Рокоссовский пулнине тавçăрса илтĕм.

Вăл вăрăм аллине ман паталла тăсрĕ:

— Рокоссвский, — терĕ сăпайлăн, ман алла чăмăртарĕ, эпĕ хам хушамата пĕлтертĕм.

— Акă «Сăр» мĕнлескер, ятарласа курма тата ĕçпе килтĕм, — терĕ ăшшăн генерал.

Ун хыççăн çĕнĕ дивизи командирĕ Воронов Виктор Васи-

льевич генерал-майор тухрӗ, унӑн адьютанчӗ тата дивизин штаб пуҫлӑхӗ Ястребов Маркел Иванович полковникпа писаре.

— Малтан сирӗн вӑрҫӑ уйне пӑхар, унпа ҫиелтен те пулин паллашар, — тесе Рокоссовский траншейӑна анчӗ, ун хыҫҫӑн — ыттисем те. Вӑл траншейӑпа сылтӑмалла утрӗ, траншея тӗпӗнче патрон ещӗкӗсем, ҫӗмӗрӗлчӗк винтовкӑсем, нимӗҫ автомачӗсем, пулемет станокӗсем, кӗпҫисем; патронсем сапаланса выртаҫҫӗ, вырӑнӑн-вырӑнӑн хытса ларнӑ юн кӳлленчӗкӗсем. Генерал хӑйӗн шурӑ кӑҫаттипе тирпейсӗр ҫӗре пусмасӑр иртрӗ, вун пиллӗк—ҫирӗм метр кайсан, тӑпах чарӑнчӗ те анӑҫ енне ҫаврӑнса тӑчӗ.

Ун куҫӗ умне аплӑ вӑрҫӑ уйӗ тухса тӑчӗ. Кунга мӗн пулса иртнине тата мӗнле вӑрҫӑ хатӗрӗ юрӑхсӑра тухса юлнине каласа та ҫитерейменӗн. Тӑшманӑн ҫунса кайнӑ йышлӑ танкӗсем, бронемашинисем, урапасӑр тӑрса юлнӑ тягачсем, ҫӗмрӗк пулеметсемпе миномётсем, ещӗксен купнсем, немӗс ӗлкӗреймен минӑсемпе снарядсем... Хутран-ситрен кӑна юр курӑнкалать, пӗтӗм вӑрҫӑ уйӗ хуп-хура та хӑп-хӑмӑр, снаряд-бомба ӳкнипе лакӑм-тӗкӗм, пӗр тикӗс вырӑн та курӑнмасть. Куҫ умне хӑрушӑ ӳкерчӗк ҫаларса тӑратать.

Рокоссовский ман ҫине пӑхрӗ те:

— Фашистсене лайӑх тӳнӗ. Маттур. Сире тата сирӗн боецсемпе командирсене тӑшмана лайӑх аркатнӑшӑн тав тӑватӑп, малашне пысӑк ӑнӑҫлӑх сунатӑп, — тесе ман алла чӑмӑртарӗ.

Эпӗ хӑнасене хам блиндажа илсе кӗтӗм.

Иван Савелькин эпир траншейӑра пулнӑ вӑхӑтра хаклӑ хӑнасене валли кухньӑна кайса ҫимелли-ӗҫмелли сӗтел ҫине хатӗрлесе лартнӑ.

— Вӑт мӗн каласшӑн сире, Чайкин полковник, — терӗ мана кусран камӑллӑн пӑхса.

— Генерал-лейтенант, эсир мӗншӗн мана полковник тетӗр, эпӗ подполковник кӑна, — тесе тӳрлетме пӑхрӑм.

— Эпӗ сире полковник тесе тӗрӗссех каларӑм. Акӑ пӑхӑр: сумрах Жуковӑн приказӗ.

Рокоссовский хӑй планшетӗнчен Мускав фрончӗн командующийӗн приказне туртса кӑларчӗ, унта камсене майортан подполковник, подполковникран полковник ячӗсен спискне кӑтартрӗ. Чӑнах та, вӑл приказра полковник ятне панӑ командирсем хушшинче хам хушаматпа ята та куртӑм.

— Ну, мӗнле? Эпӗ тӗрӗссех каланӑ-и? — кӑсӑкланчӗ вӑл.

Эпӗ генерал-лейтенанта тав турӑм.

— Çак ятпа сире тост çĕклесе саламлар. Килĕшетĕр-и, юлташсем? — Рокоссовский Вороновпа Ястребов çине пăхса каларĕ.

— Паллах килĕшетпĕр, — иккĕшĕ те харăсах хуравларĕç. — Ун пек ӳсĕме яланах паллă тăваççĕ. Вăл пирĕн çарта йăлана кĕнĕ йĕрке, — хушса хучĕ Воронов генерал.

Эпĕ пурне те сĕтел хушшине чĕнтĕм.

Савелькин пурин черккине те спирт ярса пачĕ. (Эпир хамăр çумра эрех тытман, хаяр сивĕ пирки пире кашни куп офицерсене 200 грамм спирт панă.)

Константин Константинович пĕрремĕш сăмах каласа маншăн тост çĕклерĕ, ăна пурте тĕппипе ĕçрĕç. Пурте сĕтел çинчи çимĕçе юратса çирĕç. Уйрăмах гуляш, сысна какайĕпе пĕçерне патă тата кофе пурне те килĕшрĕ.

Рокоссовский, сивĕре пулнăскер, спирт ĕçнĕ хыççăн пиçне помидор пек хĕрелсе кайрĕ, каллех планшетран тепĕр приказ туртса кăларчĕ.

— Полковник юлташ, эсир текех запасри полк мар, халĕ 76-мĕш дивизири виççĕмĕш полк ретне кĕтĕр. Сирĕн командир — Воронов Виктор Васильевич — генерал-майор, штаб начальникĕ. Ястребов Маркел Иванович, иккĕшĕ те парти членĕсем, иккĕшĕ те финсемпе çапăçса орденпа медальсем илме тивĕçлĕ пулнă, опытлă командирсем. Сире вĕсемпе пĕрле фашистсемпе çапăçма нумай çăмăлрах пулать. Ман шутпа, пирĕн тĕп фронтри генерал фон-Бокăн пăсĕ тухса пушанса юлчĕ, хытă уксахлама тытăнчĕ.

Кĕçех пирĕн вĕсене хăватлăн пырса çапмалла. Çав вăхăт çывхарса çитрĕ теме те пулать. Сире пурне те тăшмана хăватлăн пырса çапма хатĕрленме чĕнетĕп. Кунне-çĕрне пĕлмесĕр хатĕрленĕр. Пулас аслă çĕнтерӳ — пирĕн алăра.

Генерал-лейтенант сĕтел хушшинчен хăварт тухрĕ те, унпа пĕрле ыттисем те — мана хăна тунăшăн тав туса блиндажран тухса кайрĕç. Эпĕ вĕсене машина патне çити шӳтле шӳтле сăмахласа хавассăн ăсатса ятăм.

## АСАР-ПИСЕР ÇИЛ АНĂÇАЛЛА ВЕРЕТ

Хĕвел-тухăçпа çурçĕр çилĕ пĕрлешсе икĕ куп кĕрлерĕ. Хаяр çилпе пĕрле куç курăнми юр вĕçтерчĕ. Çывăхри икĕ утăмри çынна та уйăрса илейместĕн: те сан умра юпа, те çын мĕлки — палласа илме хĕн.

Те çак çил-тăвăл пирки, те урăх сăлтавпа вăрçă чĕртекен-

сем шăпах, хутран-ситрен кана вĕсен пулемечĕсем тат-тат-тат тунисем илтĕнсе каяççĕ, вăрçă пурри çинчен аса илтерсе тăраççĕ, анчах та вĕсен вăйсăр сасси асар-писер çил-таман çине тухаймасть. Вăрçă хăрушлăхĕ çак самантра хыçала кайса тăчĕ, вăл фронтри салтака та ним чухлĕ те шиклентермест, хăйне вăл лăпка туять. Çут çанталăк вăйĕ вилсеоĕрри куçкĕретĕнех.

Салтаксем икĕ талăк ĕнтĕ çине витнĕ окопсемпе блиндажсенче канса выртаççĕ, кам юмах ярать, кам киле çыру çырать, кам чĕлĕм туртать те каллех ал-урине вылятса ăшăтать.

Виççĕмеш кунне кăнтăр тĕлне тăман вĕçтерме пăрахрĕ, лăпкă çанталăк хуçаланма тытăнчĕ.

Мана кăнтăр иртсен, икĕ сехетре, дивизи штабне чĕнтерчĕç. Вăл икĕ çухрăмри вăрманта вырнаçнăччĕ.

Малтанах мĕншĕн чĕннине ăнланма тăрăшрăм. Пăхăнакансене ахаль чĕнмеççĕ: иртнĕ çапăçура манăн е полкри командирсен паллăрах çитменлĕхсем пулсан, дивизи командирĕн приказне кирлĕ пек туса çитермесен е малалли ĕçсемпе вăрттăн паллаштарнă чухне... Пĕлместĕн: е урăх сăлтав. Кирек мĕн пулсан та, чĕннĕ çĕре вăхăтра çитмелле. Вăл çарти çирĕп йĕрке.

Кирек мĕн пулсан та, хама чĕнни шухăшлаттарать: иртнĕ кунсенчи кашни çапăçу сехечĕ мĕнле пулни, хамăр йышăннă вырăнтан ним чухлĕ те чакманни, тăшман тапăнăвĕсене мĕнле хастарлăхпа сирсе яни, нимĕçсен хурçăпа çуран çарĕ мĕн чухлĕ пĕтни, хамăр çухатусен йышĕ... Эпĕ вăл пĕтĕмлетĕвсене çумри планшета тирпейлесе чикрĕм, вĕсене эпĕ дивизи штабне çав кунсенчех тăратрăм пулин те — çумра пулни авалхи рыцарьсене хурçă хӳтĕлев упранă пек мана кирлĕ. Эпĕ пуçлăхсенчен хӳтĕленме хам пĕлнĕ пек тăрăшрăм.

Сарă китель çине шурă кĕрĕкпе çав тĕслĕ тăрăхла çĕлĕк тăхăнтăм, пистолета сылтăм енне пилĕк пиçиххинчен çыхрăм. Çак тĕле Савелькин адьютант килсе çитрĕ. Вăл мана бронетранспортпа каймалли çинчен пĕлтерчĕ. Эпĕ хамăн заместителе, Тарасов майора, полкăн ĕçне вăхăтлăх парса хăвартăм. Гурий Иванович, екки килсен шӳтлеме юратакан скер, çакăн пек каласа ăсатрĕ:

— Чайкин полковник, эсир çук вăхăтра хам полкпа фашистсене Смоленск патне çити хăвалатăп, вăт мана шыраса тупайăр-и вара? Çакăн пек авантюрăшăн хăрамастăр-и эсир?

— Пĕрре те, Гурий Иванович, анчах эсир унта çитиччен полк мар, хăвăр пуçăра та сыхлаймастăр. Лайăхрах шухăш-

ласа пăхăр-ха! Халĕ сирĕн хурава итлеме вăхăт çук, таврăннă çĕре хуравĕ хатĕр пултăр, — сĕнсе хăвартăм ăна.

Эпир блиндажран тухса сукмака кăчăртаттарса шоссе çине тухрăмăр.

Анлă шоссе хĕвел-анăçĕнчен Мускав еннелле ниçта курăнми тăсăлса выртать. Шоссе икĕ енĕпе те нимĕçсен арканнă техники купаланса тăрать. Пирĕн машинăсем те пур, анчах çĕмĕрĕлнисене тӳрлетме илсе кайнă — юлни йышлă мар.

Савелькин мана шоссе хĕрринчи çĕмрĕк грузовикпа юнашар тăракан ултă çын вырнаçмалли бронемашина патне илсе çитерчĕ те темле кнопка çине пусрĕ. Хурçă алăк уçăлса кайрĕ. Вăл мана кĕме çул пачĕ, эпĕ аялти пусма çине пусса шала кĕрсе кайрăм. Шалта тĕксĕм пулсан та, 148 полкăн командирĕ Ударкин полковникпа адьютанчĕ ларнине курах кайрăм. Эпĕ полковника алă тытса саламларăм, вăл та мана сывлăх сунчĕ.

— Эсир те штаб дивизине-и? — кăсăкланчĕ вăл.

— Çапла. Мĕншĕн чĕннине пĕлместĕр-и? — интереслентĕм эпĕ.

— Полковник, вăрçă вăхăтĕнче ăна ыйтмаççĕ. Вăл вăрттăнлăх, — систерчĕ мана полковник.

Анăçсăр ыйтушăн хамăн пит пĕçерсе кайрĕ, хама лайăх мар туйрăм.

Пирĕн хыççăн артполк командирĕ Нарядов Кирилл Петрович подполковник хăйĕн адьютанчĕпе çитсе кĕчĕç, вĕсем хăвăрт вырнаçса ларчĕç. Водитель çавăнтах тапранса кайрĕ.

Çапах та кăнтăр çутинче пире тăшман ирĕккĕн кайма памарĕ, шоссе çине унтан та кунтан снарядсем кĕрлесе килсе ӳкеççĕ те умра е хыçра вут-çулăм кăлараççĕ. Юрать, броньăран тунă машина снаряд ванчăкĕсем пырса çапăнаççĕ те чĕтрсте-чĕтрете илеççĕ е хант! туса çĕклесе лартаççĕ. Вăрман патне çитнĕ çĕре машина умĕнче пысăк снаряд çурăлчĕ — машинăна çавăрса лартрĕ. Юрать, хайхи снаряд хамăр çине ӳкмерĕ — пĕтĕмпе аркатса тăкма пултаратчĕ, штаба çитесси те пулмастчĕ.

Эпĕ ăшăмра мĕншĕн пире штаба каçпа чĕнмен тесе ӳпкелешсе илтĕм, анчах хам шухăша уççăн калама юраманнипе пытартăм.

Вăрман хӳтлĕхĕнче нумай каймарăмăр — машина шоссерен сулахай еннелле пăрăнчĕ те çĕр—çĕр аллă метр кайсан, икĕ хуçăк юман тĕлне çитсен чарăнчĕ. Юмансене снаряд лексе, çурмаран хуçса ывăтнă — ват мĕнле вăй! Хуçăк тăррисем те çывăхра курăнмаççĕ.

Водитель алăка уçрĕ — пирĕн пата Ястребов полковник пырса та тăчĕ. Вал кĕреш юман пек тĕреклĕ вырăс, хĕп-хĕрлĕ сăн-лă, пуçĕнчи кăвакрах папаха ăна тата çӳллĕ кăтартать. Хулăн саспа пире:

— Кунта анма кирлĕ мар, эсир ман машина хыççăн пĕр юлмасăр пырăр. Пирĕн канашлу урăх çĕрте пулать. Кунтан фронт ытла та çывăх.

Водитель алăка хупрĕ, Ястребов полковник тепĕр машинăна кĕрсе ларчĕ — вездеход тапранса кайрĕ. Эпир те ун хыççăн пĕр юлмасăр вĕçтертĕмĕр.

Хайхи Волоколамск шоссе тăрăх шĕкĕр хула еннелле темиçе километр сил пек хăвăрт пытăмăр, анлă уйпа та иртрĕмĕр, унтан каллех тепĕр вăрмана кĕтĕмĕр — те хальхинче машина сылтăмалла сул тытрĕ: сăра вăрман варрине ситрĕмĕр. Кунта кашни сĕр метрта салтак тăрать, икĕ çĕрте пире тĕрĕслерĕç. Тĕрĕсленĕ сĕрте вунă салтак, икĕ офицер. Аслă офицер, тĕрек-лĕскер, пиртен кашнинченех кирлĕ документсене ыйтса тĕрĕслерĕ. Документсем йĕркеллех пулнипе пире малалла кайма ирĕк пачĕ. Ытла та хытă тĕрĕслени пире шухăша ячĕ.

Пирĕн машинăсем тимĕр хапха умĕнче чарăнчĕç. Хапха умĕнче каллех темиçе хуралçă. Вĕсем автоматсемпе тăраççĕ. Пурте шурă кĕрĕксемпе, шурă калпаксемпе.

Ястребов полковник хăйĕн документне кăларса кăтартрĕ те ыттисене тăхтама хушрĕ. Эпир йĕркипе командир удостоверенисене уса кăтартрăмăр. Сумри пистолетсене тĕрĕслерĕç тата урăх пемелли пуррипе суккине ыйтрĕç. Ун пекки никамăн та тупăнмарĕ. Тимĕр алăк пĕр сассăр уçăлчĕ те — эпир темле пĕр хытлă кивĕ чул сурта курах кайрăмăр. Ăна шурăпа сарланăран шурă юр айĕнче сӳлтен ним чухлĕ те уйăрса илме çук. Вал вырăнти пейзажпа пĕр пек. Нимĕç кукурузникĕ ăна шеппле те асăрхаса илме пултараяс çук.

Тимĕр алăкран сурт патне тӳп тӳрĕ сул тăсăлать, ăна халĕ шурă юр хупласа тăрать. Таптанă çулпа васкамасăр çурт патне ситсе тăтăмăр, алăк умĕнче икĕ хуралçă тăраççĕ, каллех документсем ыйтаççĕ.

Документсене кăтартнă хыççăн сарлака алăк уçăлать те шала фойене кĕретпĕр. Пирс кунти майор дежурнăй шалаллла илсе кĕрет, зала кĕме сĕнет. Залра çар сыннисем висĕ теçеткене яхăн малалла пăхса ларассĕ, эпир вĕсем хыçне пĕр ретри пукансем çине пырса вырнаçатпăр. Малта хĕрлĕ пуставпа

витнĕ вăрăм сĕтел, сĕтел тепĕр енче — хысла пукансем, вăл президиума суйланă сумлă çынсем валли.

Пирĕн хыççăн тепĕр ушкăн командирсем зала кĕчĕç те хыçри рете йышăнчĕç.

Вăхăт шăп 15 сехет.

Малти пӳлĕм алăкĕ уçăлчĕ те — тăвата генерал сĕтел патне пычĕ. Пурте кăвак кительпе, иккĕшĕ вăтам та сарлака пӳллĕ, патмар. Китель çухави çинче шпалсем, çавăн тăрăх вĕсен чинне пĕлме пулать. Эпĕ хамăр армин генералне тӳрех уйăрса илтĕм, вăл çӳллĕ те çамрăк, сĕтел хушшине варринче ларчĕ, ун çумне вăтам та тăлпам генерал йышăнчĕ, китель çинчи паллăпа — арми генералĕ, кăкăр çинче Ылтăн çăлтăр — Совет Союзĕн Геройĕ. Ку кам иккенне тӳрех чухларăм: Жуков, ятлă-сумлă çар пуçĕ. Вăл Мускав фрончĕн тĕп ертӳçи, ăна Сталин хăй кунта чĕнсе илнĕ. Ун çинчен эпĕ пĕрре мар илтнĕ, анчах хăйне пĕрре те курман. Эпĕ ун çинчен куçа илмесĕр пăхатăп. Вăл кунта пурри пĕтĕм зала çутатса янăн туйăнать. Ак мĕншĕн хытă тĕрĕслев!

Паллах, нимĕç разведки ун кашни утăмне пĕлмеваскать, ăна тупасшăн ырми-канми тăрăшать, ун йĕрне ӳкесшĕн, май килсен, ăна тĕп тăвасшăн, тен, тонна ылтăн пама та хатĕр.

Акă 16-мĕш армин ертӳçи Рокоссовский çĕкленчĕ те паян кунта мĕншĕн пухăннине кĕскен хыпарларĕ.

— Малалла пирĕн Мускав фрончĕн мĕнле задачăсем танине, çывăх вăхăтри стратегипе тактика çинчен Совет Çарĕн арми генералĕ, Совет Союзĕн Геройĕ Жуков Георгий Константинович сăмахне тимлĕ тăнлар, çырма кирлĕ мар, пĕтĕмпех асра тытмалла: вăхăт çапла ыйтать.

Хыçалти ик-виçĕ полковник алă çупса ячĕ, анчах Жуков сиксе тăчĕ те хĕçпе каснă пек сылтăм аллипе аялалла хыттăн сулса ячĕ — халĕ алă çупмалли вăхăт мар тенине пĕлтерчĕ.

Вăл пăхăнакансенчен çирĕп ыйтнине ун сассинчен те, сăмахĕсенчен те, хăйне тытнинчен те уççăнах курма пулчĕ.

Мускав фрончĕн ертӳçи тăрăхларах пит-куçлă, тӳрĕ сăмсаллă, кăвак хăмăртарах куçĕ ăмăрткайăкăн пек пĕр вылятмасăр шăтарасла пăхать, тӳрĕ çамки урлă икĕ—виçĕ йĕр кăшт палăрать, кĕске çыра çӳçлĕ, сăнĕ кăра.

Жуков генерал хăй сăмахне çĕкленӳллĕ пуçларĕ:

— Полковник, подполковник, генерал юлташсем! Çӳлти пĕтĕм çар пуçĕсен ставка ячĕпе кунта пухăннисене сире ăшшăн саламлатăп, малашнехи татăклă çапăçура тăшмана çапса аркатас ĕçре ăнăçлăх, пурне те пысăк ӳсĕм сунатăп.

Иккĕмĕшпе виççĕмĕш ретре ларакансенчен хăш пĕрисем алă çупса илчĕç, анчах ку хутĕнче алă сулса татмарĕ. «Ку маншăн мар, хăйсне ăнăçлăхĕшĕн алă çупаççĕ», — тесе шухăшларĕ пулас.

— Эпĕ хамăр ĕç пирки тӳрех тытăнатăп. Çапма пĕлмен пушă хăйне çавăрса тивет тенĕ евĕр Гитлер пуçланă юнлă ĕçе пирĕн татса памалла. Вăл пирĕн çине тапăнас умĕн хайĕн «Барбаросс» вăрттăн планĕпе тухăçри компание уйăх çурă— ик уйăх хушшинче вĕçлеме шутланă. Чăнах та, çак тискер плана пурнăçлама 140 дивизи, 5 миллион салтакпа офицер, 4 пин танк, 4900 самолет, 50 000 артиллерипе минометсем хатĕрлесе хунă. Вăл числосене хăвăр та пĕлетĕр, сире калама та кирлĕ мар. Гитлер çак компание çиçĕмле хăвăртлăхпа туса ирттересшĕн пулчĕ. Чăнах та эпир Брестра, Одессăпа Крымра, Смоленскпа Лугăра, Тулăпа Орел хулисенче питĕ вирлĕ хирĕç тăман пулсан, Мускав патне ик—виçĕ уйăх малтан çитсе тухатчĕ, ăна тепĕр уйăх хушшинче парăнтарма та, тен, пултаратчĕ: пирĕн çарсен кĕрешӳ опычĕ сахалччĕ.

Гитлер хăйĕн «Барбаросс» планне пурнăçлама нимĕçсен пĕтĕмĕшле çарне виçĕ ушкăна пайлать, çарсен кашни ушкăнне ертсе пыма чи ăслă та паллă генерал-фельдмаршалсене лартать: çурçĕр ушкăнне ертсе пыма Лееб генерал-фельдмаршала, 1-мĕш сывлăш çарне Келлер генерала, хĕвел-анăç фронтăн («Центра») ертсе пыма Федор-фон Бок генерал-фельдмаршала, танк çарĕсемпе ертсе пыма Гудерианпа Гот генералсене, сывлăшран 2-мĕш сывлăш флочĕпе Кессельринг генерала хушать. «Кăнтăр» çарĕсене ертсе пыма фон Рундштедт генерал-фельдмаршала, сывлăшран 4-мĕш сывлăш флочĕпе — фон Лĕр генерала лартать. Пĕтĕм çĕр çинчи çарсене ертсе пыма фон Браухич фельдмаршалпа унăн тĕп штаб начальникне фон Гальдер фельдмаршала влаç парать. Çак пысăк опытлă çар командирĕсем пĕтĕм Европăри патшалăхсене икĕ çул хушшинче çĕнтерсе тухаççĕ те Германи вассалĕсем туса хураççĕ. Вĕсен тăшманпа çапăçас опыт пысăк та ăнăçлă, ниçта та вĕсем чакса тăман, яланах çĕнтернĕ.

Вăрçă пуçланнăранпа уйăх иртнĕ хыççăн Адольф Гитлер ăнланать кунта «блиц-криг» çиçĕмле вăрçă пулайманнине, штаб начальникĕ фон Гальдер пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсене хирĕç Совет çарĕн 96 дивизийĕ хăватлă кĕрешнине палăртнă. Çак пысăк вăй пулнине Гитлер каламасăрах ăнланнă.

Августăн 4-мĕшĕнче Гитлер тата нимĕçсен Çар ставки Борисов (Белоруссi çĕрĕнче) хулинчи бункерта çар канашĕ ту-

са ирттереççĕ. Кунта килме фон Бок, фон Лееб тата фон Рундштедт генерал-фельдмаршалсене чĕнет.

Гитлер хăйĕн малашнехи планĕпе паллаштарать: хĕле кĕриччен фон Леебăн Ленинграда пĕтĕмпех аркатса тытса илмелле, фон Бокăн Мускава тĕп тумалла, ун вырăнĕнче пысăк кӳлĕ пулмалла, унтан пĕр совет çынни, пĕр салтак тухса каймалла мар, вырăс халăхĕн тĕп хули шыв айĕнче пулмалла.

Çак хăрушла плана пурнăçлама Гитлер тем пек тăрăшрĕ. юпа уйăхĕн 2-мĕшĕнче пуçланчĕ. Нимĕççен 2-мĕш танк çарĕ

Федор фон Бок генерал-фельдмаршалăн кĕркуннехи тапăну 3 тапхăртан тăрать: пĕрремĕшĕ — «Тайфун» ятлă. Вăл хăвăрттăн кĕрсе кайса юпан 5-мĕшĕнче Орел хулине йышăнчĕ, унăн çурçĕр енчи ушканĕ 3-мĕш танк çарĕ (Геппнер генерал ертекенĕ) юпан 7-мĕшĕнче Вязьма хули патне çитет. Вязьмăпа Брянск хули патĕнче пирĕн темиçе дивизи «миххе» çакланать. Юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнче Можайскпа Малоярославец хулисем патне çитсе тухаççĕ.

Совет çарĕсем хытă çирĕп тăнипе Федор фон Бок генерал-фельдмаршалăн вăрçă машини 100 км Мускава çитеймесĕр чарăнать.

Юпан 25-пе чӳкĕн 10-мĕшĕнче фон Бок 2-мĕш хут тапăнса пăхать, анчах паллă çитĕнӳ тăваймасть. Чӳкĕн 15-мĕшĕпе раштавăн 2-мĕшĕнче 3-мĕш хут хыттăн тапăнать. Чăнах та, ку хутĕнче унăн танк çарĕсем Мускав патнех çитсе тухаççĕ: Крюковăпа Истра хулисем патне çитсе чарăнаççĕ, Мускава çитме 25—30 км юлать кăна. 62-мĕш саперсен батальоне Химкири вокзала çитсе кĕрет, вĕсене пирĕн чаççем часах пĕтерсе тăкаççĕ.

Эсир хăвăр та куратăр: Федор фон Бокăн çарĕ хытах чăхăмлать. Готпа Геппнер генералĕсен танкĕсем Волоколамск шоссе çинче арканса тимĕр-тăмăра куçрĕç, халĕ Гудериан генерал юлашки сывлăш тухиччен мекерленет, анчах унăн хĕллехи маççăр юлнă танкĕсем вырăнтан та хускалаймаççĕ, хытса ларнă.

Вăт çавăн пек Мускав фронтĕнчи лару-тăру.

Пирĕн Ставкăн планĕпе раштавăн малтанхи кунĕсенчех кашни чаçĕн командирĕн тăшмана тапăнма хатĕр тăмалла, кирлĕ таран хĕç-пăшал илмелле, салтаксемпе командирсен йышне ӳстермелле, кашни командирăн аллинче çапăçу операцин пайăр планĕпе маршручĕ пулмалла.

Жуков калаçнăçемĕн хĕрсе пычĕ, тăрăхларах пичĕ çурхи хĕвеллĕ кун пек ялкăшса ;ичрĕ, кĕрен сăн çапрĕ.

Эпĕ ун сăмахĕсене илтнĕçемĕн хавхаланса кайрăм, пилĕк уйăха яхăн хамăр пĕрмай чакни чуна пусарса тăратчĕ, ютсен вăйне çĕнтерейменнипе хамăр пуласлăха шанми пула пуçларăмăр, чылайăшĕ ĕненме пăрахрĕ, анчах вăрçăри пĕр шелсĕр саккунсем тăшмана хирĕç тăма вăйпах хистетчĕç.

Георгий Константиновичăн витĕмлĕ те ĕнентерӳллĕ сăмахĕ электричество токĕ пек кашни командирăн ăс-тăнне пырса хастарлăх, яр-уçăмлăх, çирĕп шанчăк кӳчĕ, малалла мĕн тумаллине уçса пачĕ.

Кашни командир ун хурçă пек çирĕп сăмахне тимлĕн итлет, ставка планне итлесе ăшра ырлать, çак план ĕçе кĕрессе чунпа ĕненет.

Мускав фрончĕн ертӳçи хăйне пурте тимлĕ итленине, командирсен куçĕсем хĕмленсе çуннине курать, вĕсем çитес хирĕçле тапăнура (контрнаступленире) паттăр çăпăçасса ĕненет.

Жуков ура çине тăчĕ, хăй сăмахне хĕрӳллĕн чĕнсе вĕçлерĕ:

— Хаклă юлташсем! Генералсемпе полковниксем! Пирĕншĕн çăлтăр сехечĕ çитрĕ: сĕмсĕр тăшманăн сĕлĕх пуçне çапса аркатмалла, Тăван сĕр-шыв чĕри патĕнчен ăна яланлăхах сирсе ывăтмалла. Сире çак аслă ĕçре Кутузовпа Суворов сăнарĕсем хавхалантарса пыччăр. Ырă та çĕнтерӳллĕ çул пултăр! Çак тĕл пулу çинчен урăх никамăн та пĕлмелле мар.

Залри командирсем пурте çĕкленеççĕ, хăйсене асăрхаттарнине шута илчĕç.

Жуков сĕтел хушшинчен тухать те хыçалти алăк патнелле утать. Сĕтел хушшинче пĕрле ларнă генералсем ун хыççăн çав алăк патнелле васкарĕç. Вĕсем тухса çухалсан, залри командирсем пĕр-пĕринпе ним сăмахламасăр тула тухма тытăнчĕç. Çакăнти тĕл пулу çарти вăрттăнлăх пулнине кашни шута илчĕ, ситес кунсенчех тăшман сине пирĕн çарсем арăсланлан пек сиксе ӳкесси паллă пулчĕ.

Эпир залра ларнă вăхăтра кас пулнă. Эпĕ çак вăрттăн сунтран тула тухрăм. Тулта тĕттĕм. Сурт умĕнче мана Иван Савелькин адъютант кĕтсе тăрать-мĕн, унпа ним сăмахламасăрах утса тимĕр карта патне çитрĕмĕр. Карта алăкĕ уçăлчĕ те пире постри хуралçăсем ăсатса ячĕç. Эпир хамăрăн бронемашинана çитсе лартăмăр, ытти командирсем килсе хăйсен выранĕсене йышăннă та пире кĕтеççĕ. Эпир вырнаçса ларсан, машина тапранса кайрĕ.

Вăрманти сулпа машина васкамасăр пычĕ, шоссе сине тухсан хăвăртлăхне пысăклатрĕ. Çанталăк сивĕ те лăпкă. Вăрманти йывăççем сивĕрен шарт та шарт туса çурăлаççĕ. Хăшĕ-

сем пăшал пенĕ пек янратса илеççĕ. Эпир вăрмантан тухсан хамăр блиндажсем патне çитиччĕн икĕ снаряд умлă-хыçлă пырса çурăлчĕ, юрать пирĕнтен çĕр метр малта кĕрĕслете-кĕрĕслете илчĕ...

Водитель хăвăртлăхне чакарчĕ, вăл татах снаряд килсе ӳкессе кĕтрĕ пулас, анчах урăх пирĕн çывăхра вилĕм чăмăрккисем çурăлса янрамарĕç. Эпир хамăр блиндажа çитсе кĕтĕмĕр.

## ХИРĔÇЛЕ ÇИЛ-ТĂВАЛ

Çурçĕр çилĕ пĕтĕм тавралăха сивĕтсе ячĕ. Юр сахал ӳкнĕрен ура айĕнчи çĕр чугун пек янрать, вăл хытă шăннă. Чӳкпе танлаштарсан, раштав пит-куçа, хăлхана чĕпĕтет те чĕпĕтет, хӳтлĕхе хăвалать, анчах мĕльюн çар çынни — салтаксем, командир çанталăка пăхмасăр хаяр тăшманпа ниме пăхмасăр кĕрешме хатĕр. Хĕвел-тухăç-çурçĕр çилĕ хуллен вĕрет, анчах тавралăха сивĕтнĕçемĕн сивĕтсе пырать...

Артполкăн командирĕ Нарядов Кирилл Петроввич подполковник çĕр çирĕм миллиметрлă тупăсене Волоколамск шоссен икĕ енĕпе те вырнаçтарса лартма дивизи штабĕнчен приказ илчĕ. Кунта малтан Тураев майорăн артдивизионĕ хĕрĕх пилĕк миллиметрлă тупăсенчен тăшман танкĕсемпе вирлĕн кĕрешрĕ, чӳк уйăхĕнче фашистсен танк атакисене кунне виçшер—тăватшар хут сирсе пăрахатчĕ, темиçе теçетке танкне çунтарса ячĕ, анчах хăй йышăннă вырăнтан пĕрре те чакмарĕ... Уйăх хушшинчи юнлă çапăçура Тураев майорăн дивизионĕ пысăк çухату тӳсрĕ, темиçе хутчен çĕнĕ артиллеристсем килнипе сыхланса юлчĕ.

Тураев майор тупăсене вырнаçтарса лартма кашни расчет командирне хăй кăтартрĕ: вырăнне, пĕр-пĕрин хушшине, снарядсен вăхăтлăх складне... Ултă çынран тăракан расчет çĕрле пулсан та раштав сиввине пăхмасăр ĕçе кӳленчĕ. Шăннă çĕре лумсемпе, пешнесемпе çĕмĕрсе шаларан та шала кĕрсе пычĕ, артиллеристсем хăйсене валли çĕр пӳртсем йĕркелерĕç, çывăхри вăрмантан шултра йывăçсем çĕклесе, маччаллă турĕç, çине çĕр тултарчĕç.

Оруди командирĕ Чамжаев сержант, шӳтлеме юратаканскер:

— Ну вăт, хамăра валли кермен турăмăр, халĕ — оруди валли майлă вырăн хатĕрлемелле, ăна тăшмана курăнмалла мар тумалла. Тепре пăс кăларса ĕçлер.

Снарядсем туртса пыракан Гаврилов ыйтмасăр тӳсеймест:

— Сержант юлташ, чӗмере пулман-и нимӗҫсене тăваттăмӗш кун пирӗн ҫине тапăнмаҫҫӗ.

— Кичем-и? — кăсăкланать Чамжаев.

— Е вăй пухса пирӗн ҫине питӗ хытă тапăнма хатӗрленеҫҫӗ?

— Эпӗ, Гаврилов тусăм, нимӗҫсем патӗнче хăнара пулман ҫав — пӗлместӗп. Тен, санăн кăтлав пур?

Артиллеристсенчен пӗри Тураев майор вӗсем патне ҫывхарнине асăрхарӗ.

— Шăпланăр, зам килет, вăт ҫавăнтан ыйтса пӗлӗр.

Салтаксем хăйсен аллинчи ӗҫ хатӗрӗсемпе тата тăрăшуллăрах ӗҫлеме тытăнчӗҫ, тупă лартмалли вырăна хатӗрлесе ҫитерчӗҫ темелле.

Чамжаев сержант сиксе тăчӗ те майор патне урисене хыттăн пусса пырса тăчӗ:

— Артиллери расчечӗ тупă валли вырăн туса пӗтерет. Оруди командирӗ Чамжаев сержант.

— Ӗҫе вӗҫлӗр те ирччен лайăх канăр, — терӗ Тураев майор.

Гаврилов ку хутӗнче те майортан ыйтмасăр тӳсеймерӗ:

— Майор юлташ, нимӗҫсем тăпăҫ тăнине мӗнле ăнланмалла?

— Пӗлес килсен «чӗлхе» тытса килмелле, вара тӗтре уҫăлать, — хуравларӗ Тураев майор.

Артиллеристсем пурте шăпланчӗҫ: халӗ нихăшӗн те «чӗлхе» тытма каяс килмерӗ, ӗҫлесе ӗшӗннӗскерсен, канас килчӗ. Кашниех ăшра: мана «чӗлхе» тытма ан ятăрах тесе кӗл турӗ. Тахăшӗ: «Гаврилов шутсăр пӗлесшӗн, ҫавна «чӗлхе» тытма нимӗҫсем патне ямалла», — терӗ, анчах Тураев нимех те каламарӗ, ытти расчетсен ӗҫне тӗрӗслеме малалла утрӗ.

Артиллеристсем ҫывăриччен хăйсен туппisене пеме хатӗрлесе ҫитерчӗҫ.

Блиндажра тӗттӗм, нимӗн те курăнмасть. Нарядов подполковникпа Тураев майор, Синяков артиллери полкӗн комиссарӗ тата вӗсен адьютанчӗсем блиндажра ыйха туртаҫҫӗ.

Нарядов подполковник пуҫӗнчен инҫех мар тумбочка ҫинче телефон аппарачӗ. Кирилл Петрович ҫӗрле пӗр-икӗ хутчен те тăрса тула тухса кӗчӗ. Арми штабӗнчен асăрхаттарса калани ăна йӗркеллӗ, лăпкă ҫывăрма памарӗ. Вăл ирхине шăнкăрав пуласса кӗтсех выртрӗ. Иккӗмӗш хут выртнă хыҫҫăн вăл хăвăрт ҫывăрса кайрӗ — ирччен ырнă пуҫне шутсăр кантарас килчӗ.

Ҫӗнӗ кун ирхине унăн полк, ытти артиллери полкӗсем пекех, тăшман ҫине чи малтан вут-ҫулăм тăкма пуҫлать, миҫе тупă пӗр харăс кӗрӗслеттерсе, ҫӗре кисретсе пеме тытăнать.

Çак хĕрӳллĕ вăхăта унăн тивĕçлĕ кĕтсе илмелле, кашни тупă расчечĕ çак явапла ĕçре хăйĕн пултарулăхне кăтартмалла.

Акă шăнкăрав янраса кайрĕ — Кирилл Петрович яшт çеç сиксе тăчĕ, телефон трубкине сылтăм хăлхи патне тытрĕ:

— Алло, алло, Виктор Васильевич, эп сире итлетĕп.

Кирилл Петрович дивизи командирĕ хыпарланине, тĕрĕсрех каласан, паян ирхине ултă сехетре пеме тытăнмаллине, аса илтернине тимлесе итлерĕ.

— Виктор Васильччă, пăчкăсем хатĕр, шăп кăтартнă вăхăтра вăрман касма тытăнатпăр.

Воронов генерал Нарядов подполковник хуравĕпе кăмăллă юлчĕ. Вăл дивизири ытти полксен командирĕсемпе те сăмахласа илчĕ. Тепĕр вунă минутран мана та шăнкăравларĕ. Эпĕ шăнкăравччен ыйхăран вăранса блиндажран тухрăм. Тавралăх шăп. Тул çутăлман-ха. Тĕттĕм. Эпĕ аялти кĕпепе кăна. Сивĕ çара вырăнсене тӳрех ярса тытать. Эпĕ шурă юра чавса илетĕп те çаплипех пите нăтăртаттарса çăватăп. Ăшă пите сăтăрниппе юр ирĕлет, шыв пулса пӳрнесем хушшипе юхать. Пит-куç вĕриленсе каять, эпĕ çаплах сивĕ юрпа çăвăнатăп.

Васкасах блиндажа кĕретĕп, стена çумĕнчи пăтаран ал шăлли илетĕп те пит-куçа, мăя типиччен шăлатăп. Хам çине гимнастерка, телогрейка тăхăнма ĕлкĕретĕп — телефон янраса каять.

Эпĕ трубкине ярса тытатăп, итлемеллине хăлха патне илсе пыратăп, мана чĕннине илтетĕп.

— «Атăл!» «Атăл!» Сире «Сăр!» итлет, калăр.

Воронов генерал, кĕтӳ яма хатĕр-и, тесе ыйтать. Эпĕ лайăх ăнланатăп: хамăр хатĕрри çинчен пĕлтеретĕп. Вăл мана хамăн полкăн маршрутне çирĕп тытма хушать. Çарти вăрттăнлăх чĕлхипе унпа сăмахласа илетĕп.

Эпир калаçнă хушăра Тарасов, Орлов майорсем тата ытти командирсем вăранса ура çине тăраççĕ. Вĕсем тула хăвăрт тухса кĕреççĕ.

Эпĕ планшетран картта туртса кăларатăп, унта пирĕн полкăн хальхи наступленире фашистсенчен мĕн ирĕке кăлармалла, кашни кун ăçта çитсе чарăнмалла — йăлтах паллă тунă. Пирĕн полка Волоколамск шоссен сылтăм енĕпе артполкпа пĕрле паян Кострово, Ядромино, Новопетровское салисемпе райцентрне ирĕке кăлармалла. Вăл сахалран та вун пиллĕк километр анăçалла каймалла. Дивизи штабĕнче хатĕрленĕ операци планĕ тĕлĕнмелле аван, анчах пурнăç урăхла, кĕтмен япаласем кăларса тарăтма пултарать. Нимĕçсем

пире мĕнле кĕтсе алнинчен нумай килет, тен, çак плана висĕ кунран та пурнăçлаймастпăр: тăшмана вăйсăр тесе шухăшламалла мар, вăйсăр пулнă пулсан, пирĕн çара çак Истра хули патне çитиччен хăваласа килмен пулĕччĕç. Эпĕ операци картти çине тимлесе пăхатăп, пирĕн полкăн хĕрлĕ сăнни тăсăлса выртни çине пăхса сăнатăп: ăна пирĕн юна тăка-тăка тӳрре кăларес пулать, питĕ йывăр ĕç — вил те пурнăçла. Чи малтан Кострово поселока тăшман аллинчен ирĕке кăлармалла.

Раштавăн 4-мĕшĕнче разведка пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем çĕр пӳртсенче ăшăнса ларассĕ, дозорпа хуралсăр пуçне никам та курăнмасть: раштав сивви ăшă шăтăксене хăваласа кĕртнĕ, хăйсем те пирĕн çине тапăнса кĕме тăхтаса тăрассĕ. Çак шăплăхпа пирĕн уса курмалла. Чи майлă вăхăт.

— Эх, раштав, раштав — сивĕ уйăх! — тесе Тарасов икĕ аллине пĕр-пĕрин çумне çапа-çапа илет, унăн сивĕри йăли çавăн пек.

Эпĕ командирсене апатланма сахал вăхăт паратăп. Вĕсем манран Сталин парнине ыйтассĕ. Хамăн адьютанта, Иван Савелькина, нар айне вырнаçтарнă вун литрлă кĕленчерен кашнине çĕр грамм хаяр шĕвеке ярса пама хушатăп. Ку ĕçе вăл пĕрре мар тунăскер, халĕ те тӳрех тытăнчĕ. Чи малтан Тарасов майор хăйĕн элмен кружкине ăна тыттарчĕ. Пăл-пăл туса, кĕленчери шĕвек кружка хĕррипе танах юхса тулчĕ. Куратăп: çĕр вырăнне ик çĕр грамм таранах ярса пачĕ Савелькин ман заместителе, анчах эпĕ ним те чĕнместĕп. Пĕлетĕп: паян пирĕн тепĕр сехетрен сĕмсĕр тăшмана хирĕç сапăçăва тухмалла. Тарасов хăйне лăпкă тытать пулсан та, шалта пăлханать, хумханни паллă.

Эпĕ хам та сĕрĕпе тем тĕрлĕ шухăшласа выртрăм, пĕрехмай Лариса куç умне туха-туха тăчĕ.

— Эсĕ ыран тăшман çине арăслан пек чи малтан сиксе паратăн е хăвна упрас тесе тилĕ пек хыçала тăрса юлатăн? — манран ыйтать пек хăй.

— Тăшман хăйне мĕнле тытнинчен, урăхла каласан, кăтавартан[1] килет, — хуравлатăп ăна çавăнтах.

Вăл мана хăй майлă сĕнет:

— Эс полк командирĕ — ăслă пул, пуçна упра, хăвăн замсене мала яр, ху хавхалантарса варринче пыр, кун пек шанчăклă.

[1] Катавар — обстановка.

Те Лариса ҫинчен пӗрмай шухӑшланӑран ӑна тӗлӗкре курса, ҫак самахсене илтсе выртатӑп. Те урӑхла пулӑм тӗттӗмре пулса иртет. Эпӗ, ҫурма ҫывӑрнӑскер, ӑна хам ҫумра пур пек туятӑп, мана хӑлхаран шӑппӑн калать пек: — Тӑшман ҫине арӑслан пек ан сик: пӗрремӗш шуля сана валли пулать, хытӑ асӑрхан. Эсӗ — полк пуҫлӑхӗ, санӑн кирек ӑҫтан та ертсе пыма пулать. Ăслӑ пул, ытлашши ан хӗрӳллен, хӑвна алӑра тыт. Кирек епле кӑтавар пулсан та, ҫухалса ан кай, хӑраса ан ӳк. Эсӗ пӗччен мар, маттур та патвар самрӑксемпе.

Пуҫри ытти шухӑшсене сирсе пӑрахатӑп та хам та Савелькин патне пырса ҫап-ҫутӑ шӗвеке стакана тултаратӑп, хам вырӑн ҫине пырса ларатӑп, ҫимеллисем сумкӑран кӑларса хуратӑп. Сылтӑм алла стакан, сулахай алла тӑватӑ пӳрне хулӑнӑш шпиг[2] тытатӑп. Хаяр шӗвеке вӗренмен пулсан та, паянхи хумхануллӑ тӑрама пула стакана тута патне илсе пыратӑп та савара ӳпӗнтеретӗп. Ăна пӗр сывламасӑр сӑтса яратӑп. Пӗр тӑхтаса тӑмасӑр сысна сӑвне симе тытӑнатӑп. Сысна сӑвепе сухари лайӑх чӑмланать. Ик—висӗ сухарипе сысна сӑвӗ тата пулӑ консервине тасатса хуратӑп.

Пӑхатӑп: Тарасовпа ытти командирсем салтаксем патне тухса кайнӑ. Мана Савелькин кӗтсе тӑрать: манӑн та полка ситмелле.

Хам ҫине шурӑ кӗрӗкпе ӑшӑ ҫӗлӗк тӑхӑнса, ҫума пистолет илсе, блиндажран тухатӑп.

Тухӑҫран кӑштах кӑвак ҫутӑ ҫапнӑ. Те пит-куҫ, ҫан-ҫурӑм хӗрнӗрен ҫанталӑк малтанхи пек сивӗ мар пек, анчах сывлӑшри йӑсӑрланчӑк ҫӑра тӗтрене пула аллӑ-утмӑл метрти ҫынна уйӑрса илейместӗн.

Тӑшман енче шӑп. Хутран-ситрен ҫеҫ шурӑ, хӗрлӗ, кӗрен ракетӑсем тӳпенелле вӗҫсе хӑпарса тавралӑха ҫутатаҫҫӗ те сӳнсе ҫухалаҫҫӗ.

Вӑхӑт ултӑ сехет.

Эпӗ малти линири траншейӑна ситетӗп. Кунта салтаксем. Вӗсем хӑйӗн ятарлӑ вырӑнӗнче тӑшман еннелле пӑхса сӑнаҫҫӗ. Батальонпа рота командирӗсем вӗсене хатӗрлесе тӑратнӑ. Траншейӑпа малалла пыратӑп. кашни салтак тӑшмана епле тапӑнма хатӗррине тӗрӗслетӗп. Акӑ пӗрремӗш батальон командирӗ. ман ентеш, Герман Орлов майор ман ума тухса тӑчӗ, батальон атакӑна тухма хатӗррине пӗлтерчӗ, эпӗ унӑн салтакӗсене хастар ҫапӑҫма хавхалантарса ир-

[2] Шпиг — тӑварласа ҫиме хатӗрленӗ сысна ҫӑвӗ.

тетĕп. Кайнăçемĕн иккĕмĕш батальонри салталсем патне çитсе тухатăп. Вĕсен командирĕ Виктор Комаров, хăйне яланах патвар тытма юратакан капитан, Лысков хула çынни, салтаксем тăшмана çĕмĕрсе кĕме хатĕрри çинчен хыпарларĕ, анчах икĕ салтак урипе аллисене тăм илтернипе тыла сывалма кайнине пĕлтермесĕр хăвармарĕ. Эпĕ салтаксен шухăш-кăмăлне пĕлме тăрăшатăп. Капитанран иртсен, ик-виçĕ салтак траншея хĕррине винтовкисене тăратнă та хăйсем урисем шăннăран ташла-ташла илеççĕ, аллисемпе пĕр-пĕрне чышаççĕ. Эпĕ ăнланатăп: алли-ури шăннăран ăшăнма тăрăшаççĕ.

Мана курсан, çапкаланма пăрахса винтовкисене ярса тытаççĕ, винтовкисене бруствер çине кăларса хураççĕ.

Эпĕ вĕсен хыçне çитсе тăратăп, çӳлĕреххинчен çапăçу умĕн хăйне мĕнле туйнине ыйтатăп:

— Кам пулатăр эсир? — кăсăкланать салтак.

Ман хыçрах-мĕн Комаров капитан та.

— Эх эсĕ, Палейкин, полк командирне те пĕлместĕн-и? Чайкин полковник.

— Каçарăр мана, полковник юлташ, тĕттĕм пирки палласа илеймерĕм. Эсир тата халь çĕнĕ кĕрĕкпе — петлица та курмастăп.

— Комаров капитан, Палейкин салтака айăплама кирлĕ мар. Чăнах та тĕттĕмрен палласа илме йывăр. Эсĕ, Палейкин, ăçтан? — сасартăк кăсăкланатăп.

— Эпĕ Чăваш республикинчен...

— Хăш ялтан? Артышран мар-и?

— Шăп çавăнтан, полковник юлташ,— савăнса хуравлать салтак.

— Эпĕ Палейкин хушаматранах çавăнтан пуль терĕм. Мĕн ятлă?

— Зиновий.

— Чăваш енчен урăх пур-и?

— Чамжаев Михаил, Петров Яков, Яробейкин Иван (Кăкшăмран) — вĕсем пурте пирĕн батальонра...

— Атака умĕн хăвăра мĕнле туятăр? — питех пĕлес килчĕ ман.

— Хутăшла туйăм. Ним шухăшламасан, хăрамастăн. Çакăнта шăнса тăриччен траншейăран тухса таçта çитиех чупас килет. Чупнă май винтовкăран пере-пере ярас та малалла ыткăнас шухăш та пур. Шухăшласан, вилĕмрен хăратăн. Çĕр çинче сахал пурăннă, урăх пурăнасси те пулмасть.

Комаров капитан салтака çавăнтах чарать:— Çитет сӳпĕлтетме. Устава ан ман.

Улта сехет те вунпилĕк минутра сасартăк Волоколамск шоссен икĕ енĕпе те тупăсем харăс кĕрлесе пеме тытăнчĕç. Ман полкăн икĕ енче те артиллери чаçĕсем килсе вырнаçнăччĕ. Вĕсем те, пирĕн фронтри ытти артиллери чаçĕсем те тăшман çине снаряд хыççăн снаряд кăларса яраççĕ. Артиллери вучĕ вăйланнăçемĕн вăйланса пычĕ: кĕрĕс те кĕрĕс тени музыкăн чаплă кĕвви пек чуна çĕклентерсе ячĕ. Пирĕн ура айĕнчи тимĕр пек шăннă çĕр кăрт-кăрт, кăрт-кăрт туса кисренсе тăрать. Чăтать мăнтарăн совет çĕрĕ. тӳсет вутпа хаяррăн хĕненине. Хальхинче унăн шăмшакки тем пек ыратсан та вăл хăй çийĕнчен илсе пăрахма хатĕр вуникĕ пуçлă, хĕрĕх уараллă эсреметсене, тĕрлĕ йышши юнĕçенсене.

Хĕвеланăçĕ талккăшпе хĕп-хĕрлĕ вутра, унта тем çунать, тем арканать, тем сирпĕнет — нимĕн те паллă мар.

Виктор Комаров ман пата пычĕ те пирĕн артиллери вучĕ хăватне ăна савăнтарса янипе:

— Полковник юлташ! Эсĕ курнă-и кун пек кононадăна?— Мана хăех хуравлать:— Эпĕ пĕрремĕш хут куратăп. Мĕн вăхăтра хатĕрлесе хунă кун чухлĕ тупă тата снаряд! Кĕтрет: тĕлĕнтерсе ярать. Просто чудо! Кун хыççăн пире наступление кайма та хаваслă. Нимĕçне те тĕпĕ-йĕррипе кăкласа ывăтать. Ниепле те чĕрĕ юлма май çук!

Эпĕ хамăр артиллеристсене пире валли çул уçма лайăх хатĕрленнĕшĕн ырлатăп.

— Ахаль мар Мускав фронтне ертсе пыма Жукова хушнă. Питĕ ăста та пултаруллă генерал! Эсир, полковник юлташ, ăна курнă-и? — кăсăкланчĕ манпа Комаров.

Жуков пирĕнпе вăрттăн канашлу ирттернине пĕлмест иккен Комаров. Эпĕ ăна Жуков генерала курнине пытармарăм, анчах ăçта, хăçан курнине уçса памарăм, вăл çарти вăрттăнлăх пулнине асра тытса.

Мана Тарасов майор шыраса тупрĕ те дивизи штабĕнчен мана чĕннине васкаса пĕлтерчĕ.

Эпĕ Орлов майор патне хăвăрт таврăнтăм та ун телефонĕнчен Ястребов полковника шăнкăравларăм.

— «Атăл», сире «Сăр» сывлăх сунать. Эсир мĕнле ыйтупа шăнкăравланă? — пĕлесшĕн пултăм эпĕ.

— Эсир, «Сăр», хăвăр умĕн танк дивизийĕ хыççăнах ютсем çине кĕрсе каятăр. Ку хальхи çар пуçĕн тактики. Ку тактикăпа пехота сахал çухату тӳсет. Ăнланмалла-и?

— Ăнлантăм. Çавăн пек тăватăп,— кĕскен кăна хуравларăм. Пирĕншĕн кун пек çапăçма темиçе хут лайăххине пĕл-

нӗ, анчах пирен танксем сахал пирки мана та ҫапӑҫма тӳр килмен. Халӗ штабран пӗлтернӗ хыҫҫӑн чунӑм чылай лӑпланчӗ.

Сакӑр сехет тӗлне кононада вӗҫленчӗ, анлӑ шоссе талккӑшпе КВ, Т-34 хурҫӑ машинӑсем кӗрлесе иртеҫҫӗ, вӗсем йышлӑн, икҫӗр машина та пулӗ. Ҫак хӑватлӑ вӑй иртнине боецсем те хавасланса пӑхаҫҫӗ, нимӗҫсем енчен нимӗнле сас-хура та илтӗнмест. Вӗсен малти линине артиллери вучӗ пӗтӗмпех аркатса тӑкнӑран-ши — хирӗҫ пени илтӗнмест.

Танксем хыҫҫӑн каллех телефон патне мана чӗнеҫҫӗ, ман пата дивизи штабӗнчен Воронов генерал хӑй шӑнкӑравлать:

— «Сӑр», санӑн ӗҫе тытӑнмалла. Ҫак йывӑр ӗҫре сире турӑ пулӑшса пытӑр. Ҫулпуҫшӑн, ҫӗршывшӑн малалла! Кашни сехетрен ӗҫ мӗнле пынине пӗлтерсе тӑратӑн. Санӑн ик кӳрши те ҫак минутрах ҫӗкленеҫҫӗ. Вӗсемпе те ҫыхӑну тытӑр. Пӗр чарӑнса тӑмасӑр малалла!

Иван Савелькина виҫӗ хутчен ракетӑран ҫӳлелле пеме хушрӑм. Полк ҫак сингала кӗтсе выртать. Виҫҫӗмӗш хутчен хӗрлӗ ракета тӳпенелле ҫӗкленсе ҫунать — кашни батальонра рота командирӗсен бруствер ҫине ҫӗкленсе:

— Боецсемпе командир юлташсем! Аслӑ ҫулпуҫшӑн, тӑван ҫӗршывшӑн малалла!

Куратӑп: Орлов майор автомат ҫӗклесе пурне те чӗнсе малалла чупать. Комаров капитан иккӗмӗш батальона хавхалантарса бруствера хыҫала хӑварса хӑюллӑн ыткӑнать, ҫав вӑхӑтрах Кислов капитан та хӑйӗн батальонне ҫӗклесе ҫапӑҫу хирне тухать.

Тарӑн мар юра таптаса боецсемпе командирсем васкаса чупаҫҫӗ, вӗсем умӗнче танксем кӗрлесе пыраҫҫӗ.

Пурне те тӗлӗнтерет: тӑшман пемест. Акӑ пирӗн полк нимӗҫсен окопӗсемпе траншейӑна пырса ҫитет, анчах кунта нимӗн те тупма ҫук: пирӗн артиллери вучӗ тӗпӗ-йӗрӗпе аркатнӑ, ҫӗр купи кӑна тӑрса юлнӑ.

— Полк, малалла!— чӗнетӗп пурне те.

Салтаксем арканнӑ окопсемпе траншейӑсем урлӑ каҫса танксем хыҫҫӑн малалла чупаҫҫӗ.

Нимӗҫсен иккӗмӗш эшелонӗ тӗлне ҫитнӗ чух тем тӗрлӗ машина купаланса тӑнине куратӑп: ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ тупӑсем, урлӑ-пирлӗ выртакан бронемашинӑсем, тягачсем, снарядсем купи-купипе, патрон ещӗкӗсем, пулеметсем... Пирӗн артиллери вучӗ нимӗҫсен вӑрҫӑ хӗҫпӑшалне кунта та тӗпрен аркатнӑ, юрӑхлӑ япаласем, тупӑ снарячӗсемпе автомат патро-

пĕсемсĕр пуçне тупма хĕнрех. Вĕсем пурте утильсырьена кайма пултараççĕ.

Унта-кунта нимĕç салтакĕсем выртаççĕ, вĕсене салтак теме те çук: хăйсем çине ялти хресчен кĕрĕкне тăхăннă, пуçĕнче кăвак мулахай, уринче тĕпне хунă кивĕ кăçат, вырăнти вырăс хресченĕн килĕнчен илсе тухнă япаласем. Тен, хуçине вĕлерсе хăварнă та япалисене илсе тухнă нимĕç салтакĕ, чул пек хытса кайнăскер, хирте йăванса выртать, боецсем вĕсем çине сурса иртеççĕ. Нимĕçсем хăвăрт тарнипе вилнĕ юлташĕсене те пытарса хăварма ĕлкĕреймен. Пирĕн боецсен те вĕсемпе аппаланса тăма вăхăт çук — тăшман анкă-минкĕ пулнипе усă курса тăван çĕре ытларах ирĕке кăлармалла, совет çыннисене хăйсен вырнĕсене таврăнма пулăшмалла.

Шоссе çинче те нимĕçсен арканнă техники чылай тĕл пулать: танксем, тупăсем, груз турттармалли машинăсем...

Нимĕçсем çуккипе усă курса полк çаплах чупать, вăл иртнĕ кашни утăм каллех ирĕккĕн сывласа ярать, каллех хамăр çĕр пулнине пĕлтерет. Тăшман ăна кун пек пĕр кĕрешмесĕр, пирĕн юна тăктармасăр пама шухăшламан.

Эпир çапăçма тухни сехет иртрĕ, полк ултă километр чарăнса тăмасăр анăçаллаваскать. Малта пысăк мар ял, унта фашистсем пирĕн танксемпе кĕрешеççĕ. Танксене термидлă снарядсемпе персе çунтара-çунтара яраççĕ, пилĕк-ултă танк çунать, танкистсем юр çине туха-туха ӳкеççĕ, çиййĕнчи комбинезонĕсене йăваланса сӳнтереççĕ, вĕсем патне хăвăртрах пулăшу пама санитарсем чупрĕç.

Шоссене пырса яла йышăнма çук пирки танк дивизии командирĕ Катуков икĕ танк ротине яла икĕ енчен уйпа пыма задани парать.

Эпĕ Орлов майора хăйĕн батальонĕпе сулахай енчи лапампа пырса нимĕçсене сасартăк тапăнма хушатăп.

Çур сехет хушши таса уйра юр çинче выртатпăр, нимĕç çаплах шоссепе хăй патне никама та ямасть: хытă перет. Танкистсем яла икĕ енчен пырса тухсан, хăйхи нимĕç артиллерисчĕсем «миххе» юласран хăраса туписене пăрахса бронетранспортер çине ларса, Ядромино еннелле тараççĕ, анчах Катуковăн танкисчĕсем хайхисене танкран тӳррĕн персе аркатса тăкаççĕ, ултă бронетранспортертан нихăшĕ те хăтăлаймасть.

Орлов хăйĕн батальонĕпе яла çитсе кĕрет, икĕ станоклă пулеметпа ăна кĕтсе илет тăшман. Майор çухалса каймасть, кашни пулемет патне пилĕкшер боеца гранатăсемпе ăсатать.

Икĕ пулемет расчетне те хайхисем граната пăрахса пĕтересçĕ, пĕр фельдфебеле тыткăна илеççĕ.

Тепĕр вунă-вунпилĕк минутран танкистсемпе эпир шоссепе пырса яла çитсе кĕретпĕр. Ялта çынсем çук. Ялне ял теме çук, нумайăшĕн килĕ-çурчĕ çунса кайнă, кăмака мăйрисем тăрнасем пек мăйсене çӳлелле тăсса тăлăххăн пăхса лараççĕ. Кил хушшинче ăпăр-тапăр купаланса выртать, халĕ пĕтĕмпех шурă юр айне пулнă. Хурлăхлă та кичем.

Кунта чарăнса тăмасăр шоссепе анăçалла васкатпăр. Эпĕ дивизи штабне хамăр ăçтине пĕлтертĕм. «Штаб çул çине тухма хатĕрленет»,— пĕлтерчĕ Ястребов полковник.— Костровăна çитсе чарăнатпăр».

— Эпир хамăр та Костровăна çитмен-ха, тепĕр икĕ сехетрен унта çитме шухăш пур,— ăнлантаратăп эпĕ штаб начальникне.

— Унта пĕрле кĕретпĕр,— çирĕплетет вăл хăй шухăшне.— Пире арми командирĕ вырăнтан хускалма, çапăçакан чаçпа пĕрле пулма хистет.

Хам ăшра арми командирне, Рокоссовский генерал-лейтенанта, ырлатăп, çапăçакан чаçăн командирĕпе штабĕ пĕрлех пулмалла, хыçалта хӳтĕленсе లармалла мар.

Çуран полк хăвăрт каяйман пирки эпĕ танк дивизи командирĕпе Катуков полковникпа ◌ул çинчех калаçса илтĕмĕр. Ăна çуран çарсăр ăнăçлă кĕрешме йывăр, пире те техникăсăр малалла хăвăрт куçма май çук. Çавна май танксем çине пехотăна лартмалла та тăшман йĕркене кĕриччен анăçалла хăвăрт куçмалла. Калаçса татăлнă хыççăн эпĕ хам полкри салтаксене отделени-отделенин танк çине ларма хушрăм. Ултă-çичĕ минут хушшинче ман полк танксем çине вырнаçса ларчĕ, эпĕ хам та çăмăл машина «эмка» ăшне ларса малалла васкарăмăр.

Чăнах та тепĕр сехетрен Кострово хулине çитсе кĕтĕмĕр, нимĕçсем ăна чылай ишнĕ, тĕрĕс-тĕкел çуртсем сахал юлнă. Хăшпĕр çуртсене эпир çитиччен вут тĕртсе хăварнă — кĕрлесе çунатчĕç. Уйрăмах икĕ хутлă йывăç çуртсем.

Нимĕçсем чакнă чух пур машина валли бензин çителĕксĕррипе тĕрĕс-тĕкел грузовиксене, тягачсене çаплипех лартса хăварнă...

«Эмка» икĕ хутлă чул çурт умне çитсе чарăнчĕ. Ку çуртра нимĕçсен çар штабĕ пулни тултан пăхсанах курăнать. Çурчĕн урам енчи стена çинче нимĕçле çырса çапнă плакатсем çаплипех çакăнса тăраççĕ. Штаб васкаса тарнипе çуртне те çĕмĕрсе хăварайман.

Эпир машинăран тухатпăр. Кирилл Петрович малта, эп — ун хыççăн, Тарасовпа Тураев майорсем кайран тухрĕç. Пире саперсен капитанĕ çурта кĕме хушмарĕ, унта унăн саперĕсем минăсем лартнине тĕрĕслеме кĕни çинчен пĕлтерчĕ.

«Тĕрĕс тăваççĕ»,— шухăшларăм ăсра, тăшман хыççăн тӳрех кĕрсе кайма юраманнине аса илсе.

Пилĕк минут хушшинче пирĕн полк танксем çинчен анса йĕркеленсе тăчĕ, Тарасов майор миçе боец çитнине тĕрĕслерĕ, эпĕ хам та полк умне пырса тăтăм, Тарасов мана стройра миçе боец пуррине тата малалла мĕн тăвассине пĕлтерчĕ. Эпĕ боецсене Кострово хулине ăнăçлă çитнишĕн ырларăм, çак çурта кĕрсен каçхи апат тума тата канма хушрăм, анчах саперсем тĕрĕслесе тухиччен тăхтама ыйтрăм.

Çул çинче ларса килнипе хытă шăннă боецсем халех кĕрсе кайма та хатĕрччĕ, анчах сапер ротин командирĕ çурт умне çавăнтах хăйĕн саперĕсене йĕркипе тăратрĕ те никама та кĕме юраманнине пĕлтерчĕ.

Шăннă боецсемпе командирсем пĕр-пĕринпе тĕккелешме, «фокстрот» ташлама тытăнчĕç. Çĕрле те çурçĕр çилĕ витĕр кастарса вĕрчĕ, шăмшака витĕр шăнтса ячĕ. Кăçатăпа пулин те, урисем шăннипе чылайăшĕ хытă аптранă, часрах ăшă çĕре кĕрсе ăшăнасшăн...

Тепĕр пилĕк минутран саперсем тĕрĕслесе шалтан тухрĕç, мина лартма ĕлкĕреймесĕрех тухса тарни çинчен хыпарларĕç. Саперсем кайсанах эпĕ хамăн полка икĕ хутлă пысăк çурта йышăнма сĕнетĕп, хозвзводри салтаксене халех вутă хутса ăшăтма, вут-кăвар тухасран асăрханма, ытлашши хутма та хушмастăп. Хамăрпа пĕрле илсе тухнă çимĕçпе апатланма, старшинасене хăйсен подразделени боецĕсене вĕри шыв хатĕрлесе пама ыйтатăп.

Командирсем хăйсен взвочĕсене умлă-хыçлă пушă çурта илсе кĕрсе уйрăм пӳлĕмсене вырнаçтарчĕç. Нимĕçсем çак çурта хăйсем кайиччен хутнăран лĕп, анчах хăшпĕр пӳлĕмри чӳречесем çĕмĕрккипе сивĕ, вĕсене старшинасем нимĕçсем хăварнă ещĕксене ватса кантăк вырăнне фанерăсем çапса хучĕç, тӳрех сивĕ çил кĕме пăрахрĕ.

Эпĕ, Тарасов тата хамăр адьютантсемпе аялти пĕр пӳлĕме йышăнтăмăр, кунта нимĕçсен пуçлăхĕсем каннă пулмалла, анлă дивансем, çемçе пукансем, икĕ сĕтел, икĕ телефон аппарачĕ, торшерсем, анчах вĕсем халĕ ĕçлемеççĕ, провочĕсене татса хăварнă.

Нарядов полковник пĕр дивана йышăнчĕ, теприне эпĕ

вырнаçрăм, Тарасов çемçе пукансене килĕштерчĕ, адьютантсем те хăйсем валли вырăн тупрĕç.

Кирилл Петрович хăйĕн адьютантне сĕтел хатĕрлеме хушрĕ. Тапчам кĕлетлеллĕ, вăтам пӳллĕ артиллерист çавăнтах ĕçе тытăнчĕ, хура пысăк сумкăран консерва банкисем, сухари, шпиг, кăлпасси тата литр кĕленчипе спирт кăларса лартрĕ. Виçĕ çутă кружка та çавăнтах тухса ларчĕ.

Кирилл Петрович пире те сĕтел хушшине касхи апата чĕнчĕ. Пирĕн хамăрăн та çимелли çителĕклĕччĕ, анчах вăл пире хăй хăналанă пирки тепĕр кунне валли пултăр терĕ.

Эпĕ Иван Савелькина котелокпа вĕри шыв тупса килме ятăм.

Кирилл Петрович тата адьютант çимеллисене пĕтĕмпех хатĕрлесе хучĕç, кашни кружкăнах çĕршер грамм спирт ярса лартрĕç, анчах Савелькин çаплах курăнмасть, вĕри шыв ниçта та тупаймасть пулас. Кăлпассине вĕри шыва ярса ăшăтмаллаччĕ: хытă шăнса ларнă, ытти çимĕçсем аптрамаççĕ.

— Савелькина кĕтсе илейместпĕр,— терĕ Нарядов полковник кăштах кăмăлсăрланса.— Паянхи ăнăçлă кунăн, Костров, хулине ирĕке кăларнăшăн çĕклер çуттине.

Шăп çав самантра Иван Савелькин вĕри шыв çĕклесе кĕчĕ.

— Эсĕ çылăхсăр, Иван,— терĕ ăна Тарасов.— Шывна ларт та пирĕнпе çĕкле, кружка ăçта?

Савелькин çавăнтах хăйĕн япалисен «миххинчен» кружка туртса кăларчĕ, Тарасов патне вĕçтерсе пычĕ, майор ăна спирт ярса пачĕ.

Шăннăскерсем, спирта пĕр сывламасăр хăвăрт антарса ятăмăр, хаяр шĕвек çан-çурăма часах саланчĕ, тӳрех ăшăтса ячĕ.

— Ахальтен мар ăна «верховнăйĕн паекĕ» теççĕ, епле вĕри парать,— ырласа илчĕ Нарядов.

— Чăнах та сиплĕ шыв,— тесе хушса хутăм,— анчах виçине пĕлес пулать.

Пурте эп каланипе килĕшрĕç.

Сĕтел çинче мĕн пуррине кашни тимлесе çирĕ, çинĕçемĕн çиес килни вăйланса пычĕ, кăлпассине те вĕри шыва ярса пăрланнине ирĕлтерчĕç, ăна татăкăн-татăкăн пайласа çисе ячĕç.

— Ну, çиетпĕр те вара. Çак пысăк мар йышпа вăкăр çисе яма пултаратпăр,— шӳтлесе илчĕ Гурий Иванович Тарасов.

Эпӗ Савелькина хамӑр япаласен «миххинчен» ҫимеллисен пӗр пайне кӑларма систеретӗп. Иван ҫавӑнтах кашнине пӗрер консерва банки, ҫӗршер грамм шпиг, сухари тата пӗрер чӗлӗ шӑрттан кӑларса хучӗ.

Эх, ырларӗҫ те вара ман адьютанта, ытла та таранат сын, вӑрҫӑран тӗрӗс-тӗкел таврӑнмалла пултӑр тата тем те пӗр...

Тарасов, хам ҫумӗ май, мана та ырламасӑр иртмерӗ. Пӗлет вӑл: апачӗ манӑн.

Эпӗ тепрер ҫӗр грамм ярса пама хушрӑм хам адьютанта: мӗн ывӑнни, шӑнни иртгӗр терӗм. Савелькин кашнине ҫӗршер грамм ярса тухрӗ — шӑп ҫав вӑхӑтра тахӑшӗ пирӗн алӑка тултан шаккать.

Тарасов кайса уҫать — пӳлӗме шӑнса кӳтнӗ, хутланса ларнӑ ҫын кӗрсе тӑрать. Эпир тӳрех палласа илейместпӗр: пичӗ-куҫӗ лайӑххӑн курӑнмасть, пуҫӗнчи ҫӗлӗкне антарса ларткӑ.

— Кам эсӗ? — кӑсӑкланатӑп эпӗ.

— Мана та паллаймастӑр-и? Хӑйсем спирт сыпса тултарнӑ та юлташуна паллаймастӑр.

Нарядов сассинчен палларӗ: унӑн ҫумӗ Тураев майор. артполкпа пӗрле халь кӑна ҫитнӗ.

— Юрий Михайлович Тураев. Мӗнле ҫитрӗр? — сиксе тӑрса ыйтать Нарядов хӑйӗн юлташӗнчен.

— Аран-аран. Нимӗҫсен подрывникӗсем икӗ туппа стройран кӑларчӗҫ, шоссе хӗррине лартса хӑварма тиврӗ, виҫӗ артиллериста вӗлерчӗҫ, тепӗр виҫҫӗшне амантрӗҫ — вӗсене санчасть машини Мускав еннелле илсе кайрӗ. Вӑт ҫавӑн пек начар хыпар. Урӑх ним те ан ыйтӑр. Хывса ярӑр: алӑсем хытса ларчӗҫ...

Ана Нарядовӑн адьютанчӗ ҫӗлӗкне тата ҫурма кӗрӗкне хыврӗ, хӑй вырӑнне пачӗ.

— Питне, аллисене там илнӗ,— тет Нарядов ҫири тумне хывнӑ хыҫҫӑн,— халех тулта юрпа лӑтӑркаламалла, унсӑрӑн сиен куратӑн.

Нарядов адьютанчӗ, Гурьев сержант, Тураева тула илсе тухать, темиҫе минут пит-куҫне, аллисене юрпа сӑтӑрса хӗрелличчен йӑваланӑ хыҫҫӑн илсе кӗрет.

— Вӑт халӗ аптрамастӑн, хӑватлӑ шӗвеке тутанса пӑх,— тесе ӑна 150 грамм спирт ярса парать. Тураев кружка илет те пӗр сывламасӑр ӗҫсе парать: сывласан ӗҫме йывӑррине лайӑх пӗлет. Ана ҫавӑнтах кашни ҫимелли сӗнет.

— Кун пек çиейместĕп — парăр пĕрершерĕн,— асăрхаттарать вăл пурне те.

Тураев чи малтан шпиг илет Тарасов аллинчен, ăна вал çăварта ирĕлтерсе ĕмсе ярать. Нарядов ăна консерва парать, пĕр тапхăр ăна çиет вăл. Эпĕ ăна шăрттан тыттаратăп, вăл ку апата илсен пĕр тапхăр тĕлĕнсе тăрать. «Чăвашсен юратнă апачĕ», тесе ăна ăнлантаратăп, ăна мĕнле тунине каласа паратăп. Мана пурте тимлĕ итлеççĕ.

— Мăшăру посылкăпа ярса пачĕ-и? — çавăнтах эп ăçтан тупнипе кăсăкланать Кирилл Петрович. Пĕлет вăл: çапăçакан çара посылка тавраш̆ĕ сахал çакланать, ытларах таварпа почта вакунĕсем бомба пăрахнипе вырăна çитейме̧ççĕ. Пирĕн çарсем каялла чакнă чух вăл вакунсем тăшман аллине те сахал мар юлнă, килтен янă çырусене фронтовиксен аллине нумай чухне çакланайман. Тата урăх сăлтавсем те пулнă.

— Аркадий Петрович, нимĕн те калаймăн, Лариса мăшăру сире чăнах та юратать, госпитальте выртнă чухне те епле час-часах пырса тăратчĕ. Лайăх мăшăр, сирĕншĕн çунса пурăнать,— ырласа калаçрĕ ман арăм пирки Юрий Михайлович Тураев.

— Арăм тени çавăн пек пулмалла,— кĕскен пĕтĕмлетрĕ Нарядов полковник.— Эсĕ, Тураев майор, çын арăмĕсене мар, хăвăн арăму мĕнлине каласа пар, ку тĕрĕсрех пулĕччĕ.

— Эпĕ. çар çынни пулнă май, авланма ш̆ухăшламарăм, ăна та, хама та нуша кăтартасшăн пулмарăм. Эпĕ сире, Кирилл Петрович, ун çинчен каланăччĕ, эсир маннă пулас. Çар çыннин цыгансем пек пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çӳресси мĕне тăрать. Ниçта та пĕр вырăнта тымар ярса пурăнаймастăн.

Нарядов мĕншĕн хĕрарăм çинчен сăмах пуçлансанах вериленсе кайнине хăй каланинчен те, Синяков политкомиссар халапĕнчен те тĕплĕнех пĕлтĕм.

Кирилл Петрович Ульяновск облаçĕнчи пĕр ялта çуралнă. Саратоври артиллери училищине пĕтернĕ хыççăн çамрăк лейтенант Атăл тăрăхĕнчи çар округĕнче артиллери полкра хесметре пулать. Ăна артиллери батарейине ертсе пыма шанса параççĕ. Вăл боецсене малтанхи вăхăтра 45 миллиемтрлă тупăпа ĕçлеме вĕрентет. Паллах, вăл тупăн шалти тытăмĕпе паллаштарать, ăна мĕнле пăхмаллине, хăш пайне хăçан мĕн сĕрмеллине, унран епле пемеллине, пенĕ чух мĕнле тĕл тумаллине тата ытти ыйтусене пĕтĕмпех уçса па-

рать. Хăйне вăл çирĕп тытать, çарти йĕркене яланах пăхăнать, аслă командирсем хушнине вăхăтра та кăмăла каймалла тăвать. Артиллери полкĕнче виç-тăватă çул хушшинче ун ятне батальон командирĕсем те лайăххах пĕлекен пулаççĕ. Пултаруллă артиллериста аслă лейтенант, каярахпа капитан ятне параççĕ. Ун тантăшĕсем авланаççĕ, вăл çирĕм саккăрта пулин те авланман-ха.

Хăйĕн те авланас шухăш çуралать, анчах вĕсен чаçĕ вăрманта тăнăран çывăхра çын пуранакан ял-хуласем пулман, вăл хăй те, ытти командирсем пек, канма тухсан, шавлă хуласенчен пăрăннă, тăван ялне хăйĕн амăшĕпе йăмăкĕ патне таврăннă, унта хуçалăхри мĕнпур ĕçе тӳрлетсе, юсаса хăварнă. Амăшĕпе йăмăкĕ хĕлле ан шăнччăр тесе, вăрмана кайса вут-шанкă касса хатĕрлет, хăех киле турттарса килет, татсаçурса хăварать, сарайне çĕклесе шаршанласа купалать.

Каллех отпуск вăхăчĕ иртет, хăйĕн чаçне вăхăтра таврăнать те ĕçе тытăнать.

Пĕрре çапла отпускран таврăннă чух Нарядов Ульяновск хулинче чарăнса тăрать. Чугун çул вокзалĕнче икĕ хĕр унтан, çар çыннинчен, Ленин музейĕ ăçта вырнаçнине ыйтса пĕлесшĕн... сăмахлаççĕ.

Хĕрсем урăх çĕртен килни уншăн паллă пулать. Кирилл Петрович çаксемпе паллашать, хĕрĕсем ун кăмăлне каяççĕ. Пĕри — Надя, тепри Зина ятлă. Иккĕшĕ те Хусан хулинчен. Капитана Зина ятли ытларах килĕшет. Яштака, шурă хурăн пек тӳп-тӳрĕ. Куçĕ çу уйăхĕнчи кăвак тӳпе тĕслĕ. Кулли — çуркуннехи сар хĕвел кулли. Хăмла çырли пек хĕрлĕ пичĕ сăмахланă чух вăр-çаврака пĕчĕк путăк тăвать те хĕрĕн сăн-сăпатне тыткăнлакан нĕр кĕрет. Хăй çăмăллăн акăш пек утать. Сĕт хыпнă пек шурă шăлĕсем сăмахланă май иçĕм çырли шывĕпе çунă пек хĕп-хĕрлĕ тути уçăлсан йăлкăшса илеççĕ. Каччăсене курса ăсланнă куç — ăрăмласа пăхнинчен тишкерме пĕлни тӳрех паллă. Чунри ăшă кăмăл кăвак куçĕнчен хĕвел шевли пек сапалать савăнăç çути.

Капитан сисмесĕрех ăна темле вăй туртса хĕр çумнех илсе пынине, ăна кăшăлласа тытса тăнине ăшран туйса илет. Ку таранччен тĕл пулман аман хитрелĕхĕ унăн артаклăхне вăратать, унăн ӳт-пĕвĕнче юрату хĕлĕхĕсем куçа йăмăхтаракан пыл чечекĕн чи хӳхĕм нектарне астивсе пăхма вăй кӳртеççĕ арлăх тымарне.

Зина пĕрре пăхса курать: ун умĕнче çурхи кăлкан пек илемлĕ, яр пӳ-силлĕ, кĕререх сăнлă, кĕре йăлтăр ӳтлĕ, кĕр-

некле тирек пек тӳп-тӳрӗ, хунав юман пек тӗреклӗ, йатсан — кермен йатас пек, тӗртсен — хӳме ватас пек каччӑ. Каччӑн пуҫенче хура кӑшӑллӑ сӑрӑ картуз. Кӑшӑлӗ айӗнчен кӗскен кастарнӑ ҫырӑ ҫӳҫ, вӑл кӗрхи ылтӑн тӗслӗ ыраш хӑмӑлне аса илтерет. Сӑрӑ кителӗн анлӑ хулпуҫҫи ҫийӗнче тӑватӑ тӑваткал паллӑ.

Каччӑн пысӑк, хӑмӑр куҫӗ ӑна тыткӑнлакан магноли чечеке ҫинчен пӗр самант та каймасть. Вӑл ҫак илемлӗ тӗнче ҫине пӗрремӗш хут халь кӑна вӗҫсе килнӗ те хӑйне тыткӑнлакан кетрете курах кайнӑ, ӑна тилмӗрсе, халланса пӑхать.

Йекет чӗри нихҫанхинчен сиксе кӗрккет. Капитан Зинӑран нумай ыйтса пӗлесшӗн, анчах вӗсен каяс ҫулӗ кӗскелсе пычӗ — Ленин Чӗмпӗрте ачаран пурӑннӑ ҫурт тӗлне ҫитсе тӑраҫҫӗ.

— Ҫакӑ эсир ширанӑ аслӑ ҫулпуҫӑн ача чухнехи ҫурчӗ йӗрӗ. Вӑл ҫакӑнтах пурӑннӑ гимназирен вӗренсе тухиччен,— хӗрсене кӗскен хыпарлать Кирилл Петрович.

Каччӑ хӗрсенчен уйрӑлаймасӑр Ленин музейне каллех кӗрсе курма шутлать. Унӑн ҫак чупа тыткӑнлакан хӗртен уйралас килемст, Ҫыхӑну ҫиппине ҫирӗплетес ӗмӗт амаланать.

.Музее кӗме вӑл хӑйшӗн те, хӗрсемшӗн те кассӑна укҫа тӳлет. Кассирша хӑйӗнчен укҫа илесшӗн марччӗ, анчах хӗрсем умӗнче хӑйне чухӑн е хытӑ тесе шухӑшлаттарас килмерӗ — пурпӗрех тӳлесе хӑварчӗ.

Вӗсем пӳлӗмрен пӳлӗме кӗрсе ҫӳрерӗҫ. Кунта каччӑ Зинӑпа юнашарах сӑпайлӑн пуплесе, хӗрсене ӑнлантарса ҫӳрерӗ. Надьӑпа Зинӑна уйрӑм экскурсовод кирлӗ пулмарӗ.

Каччӑн евӗклӗ чӗлхи хӗрупраҫне еткӗрет[1] те ӗрехет[2]. Тӑхата[3] тесел[4] килнӗ чух елккен пике чунне вӑлталаймасан алкалӑк[5] ҫине ан шан. Тӗстерет[6] каччӑ, тӗмсӗлет теветлӗ черейрен[7] хӑпаймасть. Сӑмах шӗкӗлченӗ май капитан хӗрпе ҫывӑхах паллашать, унӑн килти адресне те, ҫыру ҫӳретмеллине те ирӗк илет. Хӑй ӑҫта хесметленине, пуштӑ ещӗкне тата хӑҫан тӗл пулассине те килӗшсе калаҫса татӑлать. Хашпӗр ҫӗрте Зина чӑхӑмласа тӑрсан, каччӑна Надя та пулӑшса пычӗ.

---

[1] Еткӗрет — витӗр кӗрет.
[2] Ӗрехет — пуҫне ҫавӑрать.
[3] Тӑхата — тапхӑр.
[4] Тесел — уҫӑ вӑхӑт.
[5] Алкалӑк — турӑ панӑ вӑй, асамлӑ вӑй.
[6] Тӗстерет — чухлать, ӑнкарать.
[7] Черей — чипер хӗр, илемлӗ пит.

Капитан хӗр ҫумне ҫилӗм пек ҫыпҫӑнчӗ, уйӑлма та пӗлмест. Хӑйӗн каяс ҫулӗ те ӑна пӗрмай йыхӑрать, ҫула тухма чӗнет. Ҫур кун хӗрсенчен уйӑлаймасӑр Кирилл (хӗрсене вӑл Кируш тесе ҫемҫетсе каларӗ) ҫулпуҫӑн музейӗнче, ун таврашӗнче ҫаврӑнса ҫӳрерӗ.

Хӗрсем ӑна Самара хулине Атӑл хӗрринчи пристане ҫити ӑсатрӗҫ, каччӑ патне хӑйсем те ҫитсе курма пулчӗҫ. Йӑрӑс та илемлӗ капитан Зинӑна юратса пӑрахнине хӗрсен черченкӗ чӗри питех те сисӗмлӗ. Надя хӑйне юратнӑ пулсан унщӑн ҫӗнӗ хӗвел тухнӑ пек туйӑнӑ пулӗччӗ. Ҫук, капитан Зинӑна куҫран илмерӗ, ӑна хӑй чӗлпӗрӗнче тытасшӑн пулчӗ. Халӗ иккӗшӗ ҫыхӑну ҫӑмхине илчӗҫ те ӑна малашне икӗ вӗҫӗнчен тытса сӳтме тытӑнӗҫ, ҫав ҫӑмха сӳтӗлсе пӗтиччен мӗнле те пулин вӗҫленӳ патне ҫитӗҫ. Пӗтӗмпех ӑна пуласлӑх татса парӗ.

Ҫулталӑк хушши тӗрлӗ майпа ҫыхӑну тытнӑ хыҫҫӑн капитан ҫуллахи отпуск вӑхӑтӗнче Зина патне Хусана вӗҫтерет, хӗре шыраса тупать. Зина амӑшӗпе тата кӗҫӗн йӑмӑкӗпе хулари пӗр хваттерте пурӑннӑ. Зина Кирилл Петрович килессе пӗлнӗ, анчах амӑшӗпе йӑмӑкне пӗлтерме тӑхтанӑ: те килет, те килеймест, сахал-и тӗрлӗ чӑрмавсем. Иккӗленнӗ хӗр, ытларах шикленнӗ: чечекӗн симпылне чее хурт ӗмсе илсе кайнӑ, халӗ вӗҫҫе килекенӗ валли таптаннӑ чечекӗ пушанса юлнӑ. Хӗре симпылӗ ҫукки хӑратнӑ: ӑҫта тесе ыйтсан, ниепле те ӑнлантарма май килмен.

Хӗр каччӑна пурпӗр кӗтет. Тулта хӳхӗм ҫанталӑк. Ир пӗчӗк сипетлӗ ҫумӑр ҫуса иртнӗ — уҫӑ. Ҫӳлте чӗкеҫ явӑнать йӗс хачӑ унки пек вӗлтлетсе.

Акӑ ҫуртсем хушшипе ҫаврӑнса тухать яштака тӳп-тӳрӗ, ҫар тумӗ тӑхӑннӑ каччӑ, аллинче сумка. Кӑвак кительпе, петлица ҫинче тӑватӑ кубик. Каччӑн пичӗ ӑшӑран хӗрлӗ хӗм сапса ялкӑшать, хӑмӑр куҫӗсем савӑнӑҫлӑн кулаҫҫӗ. Кӑкӑрти вӗри чӗри уява вӗҫтерсе тухас хӑрсӑр ӑйӑр пек сиксе ташлать. Пӗвӗ — ӑстантан тухнӑ ҫурта пек хӳхӗм, вӑрманти хыр пек тикӗс ӳснӗ. Вӑл ӑшшӑн пӑхсассӑн, хӗрӗн чӗри ҫӗкленет, хитре тути йӑл кулать, чунне савӑклӑх тулать, хӑйне телейлӗ туять.

Пилӗк хутлӑ ҫурт умӗнче тӗл пулаҫҫӗ савнисем, тӗл пуласшӑн ҫуннисем. Каччи тытать, ыталать, чуп тӑвать сар хӗре, картлатса тапать чӗре.

— Эсӗ кӗтрӗн-и мана юри тухса урама? — ыйтусем парать хӗре, ун ҫине пӑхса тӳрех.

— Кашни кун сана кётеп, килмест пуль тесе ҫӳреп, пăхапăха хам шикленеп, ăшра сана пĕрмай чĕнеп,— меллĕ хуравларĕ хĕр, куҫпа пăхать ăна вĕҫсĕр.

Кирила Зина чĕнет, хваттере кĕретпĕр, тет. Виҫҫĕмĕш хута ҫĕкленеҫҫĕ вĕсем, ик юратнă чĕресем.

Хирĕҫ йăмăкĕ тухать, капитана курсан кулать, хваттере илсе кĕрет, амăшĕ патне ҫитерет.

Тарье аппа капитана ал тытать сăна-сăна, ыйтса пĕлет ăҫтан, камне? Пĕлесшĕн ашшĕ-амăшне. Мĕн кирлине ыйтса пĕлсен, каччă ывăннине сиссен, сĕтел хушшине сĕнеҫҫĕларма, пурте пĕрле апатланма.

Кирилл Петровичпа Зина апат хыҫҫăн хула курма каяҫҫĕ. Ҫул ҫинче вĕсем пĕрлешесси ҫинчен сăмах пуҫлаҫҫĕ. Зина малтанах пĕрлешес сăмаха илтсен ĕненмест, каччăсем яланах ҫапла каласа чавса тăршшĕ лартнине пĕлет.

— Кируш, эсĕ чăнах калатăн-и ку сăмахсене е шӳтлесе?— пĕлме тăрăшать хĕр.

— Мĕншĕн ун пек шутлатăн, Зина?

— Хĕрсен пуҫне ҫавăрас тесе, качча илме пулаҫҫĕ каччăсем. Эпир ун пеккине пĕрре мар курнă.

— Ăнланмалла, — тет каччă хĕрĕн куҫĕнчен тимлĕ пăхса.— Ун пек каччăсене курма пултарнă эсĕ те, Зина.

— Курнă. Пĕлетĕп. Ҫавăн пеккисенчен шутсăр хăратăп. Лайăх тыттараҫҫĕ вĕсем, хырăм та хăвараҫҫĕ...

— Ĕнен, Зина, эпĕ ун пекки мар. Сăмахпа вылямастăп. Сана юрататăп, ман авланма вăхăт та ҫитнĕ. Эсĕ килĕшсен, паянах пĕрлешетпĕр те часе таврăнатпăр.

— Эпĕ хирĕҫ мар, анне мĕн калать — пĕлместĕп,— иккĕленсе сăмахлать хĕр.

Часах вĕсем хваттере таврăнаҫҫĕ те Зина амăшĕ умне пил ыйтма тăраҫҫĕ. Амăшĕ кăшт туртăнса тăнă хыҫҫăн килĕшет, ҫамрăксене пĕрлешме ирĕк парать, пĕр-пĕрне ĕмĕр хушши юратса пурăнма, ватăсене хисеплеме, ачасене тĕрĕс пăхса ӳстерме пиллет.

Ҫамрăксем тепĕр кунне ҫар часне таврăнаҫҫĕ.

Нарядов капитан хăй пĕрлешни ҫинчен артиллери полкĕн командирне Яснов полковника хыпарлать, вунăкунлăх кану илет, ăна командирсем пурăнакан ҫуртра пĕр пӳлĕмлĕ хваттер те параҫҫĕ.

Ҫапла пуҫланса каять унăн ҫемьеллĕ пурнăҫ.

Анчах вăл пĕр ҫул пĕрле пурăннă хыҫҫăн пăтранса каять. Нарядов пĕр уйăхлăх командировкăна кайсан, хваттере арă-

мĕ пĕчченех юлать, ача таврашĕ пулман Янкăс* тумланса çӳрекен çамрăк та илемлĕ хĕрарăма куç хывакан лейтенантсемпе капитансем тӳрех тупăнаççĕ, клубра кино е концерт хыççăн ăсатакан çамрăк капитансем пĕрре мар çыхăнаççĕ, хăшĕсем Зина пурăнакан хваттере те çепĕç сăмахласа кĕрсе кураççĕ... Хăшĕ-пĕри çурçĕр иртиччен унта юлаççĕ, сăра-эрех те сыпаççĕ.

Нарядов акă командировкăран çĕрле таврăнать, çумри уçăпа хваттере ним систермесĕр уçать. Çутă çутмасăрах çываракан пӳлĕме шăппăн пырса кĕрет. Сарлака вырăн çинче арăмĕпе тепĕр çамрăк арçын ыталанса çывăрнине курах каять. Урамри çутă карăнтăк витĕр пӳлĕме ӳкнипе мĕнле çывăрни те пĕтĕмпех курăнать. Ĕçнĕ хыççăн выляса илнĕ те çывăрса кайнă.

Нарядов пистолет туртса кăларать те вĕсем çине тĕллет— иккĕшне тăхăнса тухса кайма пилĕк минут парать. Лешсем хытă хăраса ӳкнипе пĕр хирĕçлемесĕр хăвăрт тăхăнаççĕ, Зина гардеробран хăйĕн япалисене илет, пĕр сăмахсăр тухса каяççĕ.

Çапла çухатать вăл Зина арăмне. Çавăн хыççăн хĕрарăмсене курайми пулать, ниепле те авланаймасть... Кайран вăрçă тухса каять, вăл каллех хусах...

## АНАÇАЛЛИ ÇУЛ

Ирхине ирех кăвак çутă ӳкиччен командирсемпе салтаксем каннă çурта çар штабĕнчен приказ çитрĕ — дивизин ултă сехетре наступление тухмалла, нимĕçсенчен раштавăн çиччĕмĕшĕнче Ядромино райцентрĕпе Новопетровское чугун çул станцине ирĕке кăлармалла, шоссе çулне те тăшманран тасатмалла.

Дивизи командирĕ Воронов генерал çак приказа связнойсем урлă кашни полка çитерет, кашни полкăн малалла каймалли маршрутне те кăтартнă.

Мана дивизи связнойĕ шыраса тупса хутсем тыттарчĕ, Нарядов подполковника приказ парса хăварчĕ, пире хытă хуплашкаллă кĕнеке çине алă пустарчĕ. Эпĕ çумри фонаре ялт пусса çутатрăм та машинкăпа пичетленĕ приказа вуласа тухрăм, тепринче ман полкăн каймалли çул-йĕрне хĕрлĕ сăнă туртса палăртнă.ăçта çитсе мĕне ирĕке кăлармаллине кăтартнă. Чăнах та, çарпа дивизи штабĕнчи писарьсемпе пуçлăхсен

* Янкăс — çăмăлçах та капăр, шукăль.

чылай тăрмашмалла пулнă, кашни çапçе валли приказпа маршрут хатĕрлеме йывăр.

Вăрçăра ташмана яланах пĕлсе тăмалла, унсăрăн ху палăртнă ĕç ăнăçлă вĕçленессине те пĕлейместĕн. Ташман сана менле вăйпа кетсе илессине, унăн хĕçпăшалне, мина уйĕсене — пĕтĕмпех пĕлмелле. Чуххăмăн çапăçăва тухсан, сана бăл аркатса тăкма пултарать.

Вăрçăра кашни енĕ чеерех те вăйлăрах пулма тăрăшать. Çавна яланах асра тытмалла.

Эпĕ çĕрле Орловпа Комаров батальон командирĕсене хамăн малаллахи çула Новопетровское станци таран разведка тума, «чĕлхе» тытса килме ĕç патăм.

Кашни батальон чи лайăх разведчиксене суйласа илсе нимĕçсен тылне икĕ ушкăн туса ăсатрĕ.

Орлов майор хăйĕн хастар Васильев сержантпа тăватă боеца разведкăна ăсатать, Комаров капитан Олег Катейкинпа тăватă боеца кăларса ярать. Кашни ушкăнĕ Костровран тухсан икĕ çулпа каяççĕ: Васильев сержант шоссен сулахай енĕпе, Катейкин сылтăм енĕпе чугун çул çине тухаççе. Вĕсен хушши — пĕр километра яхăн. Ике çулĕ çинче те нимĕçсен вăрçă техники йышлă выртнă, вĕсене асăрханса пăрăнса иртмелле пулнă

Васильев сержант ушкăна ертсе шоссе хĕррипе пырать, унта-кунта нимĕç тупписем, аракнă грузовиксем, çăмăл машинăсем, броневиксем лараççĕ, хăшĕсем ӳпĕнсе кайнă, çиелтен вĕсене юр хĕвнĕ

Акă разведчиксем шоссен сылтăм енче танксем тăнине асăрхаççĕ, Васильев çак хурçă улăпĕсенче нимĕç танкисчĕсем пуррипе çуккине пĕлме Бодровпа Шилов разведчиксене ăсатать, виççĕшĕ пĕр арканнă грузовик патне юлаççĕ. Пирĕн снарядсем çакăнта килсе ӳксе те нимĕç техникине хытă сиен кӳнĕ иккен.

Бодровпа Шилов хайхи танксем патне çитме çĕр метр та юлмасть — станоклă пулемет кĕрлесе каять. Хыçала хăварнă нимĕç танкисенчен пĕри разведчиксене асăрхаса пулеметран пеме тытăнчĕ.

Бодровпа Шилов кювета йăванса анчĕç, Бодрова пулемет пули купарчана шăйăрса кайрĕ. Вăл выртнă çĕрте сылтăм аллипе хыпаларĕ, пӳрнисене çăра юн кĕрсе кайрĕ.

— Шилов, мана купарчаран лектерчĕç. Сан уйрăм пакет çук-и? — шăппăн ыйтрĕ вăл.

— Мĕнле çук пултăр? Пур. Халех!— терĕ те Шилов Бодров патне упаленсе çитрĕ.

Шилов хӑйӗн пакетне уҫса юлташӗн юн каякан суранӗ ҫине лейкопластырь ҫыпӑҫтарса хучӗ.

Бодров. хытӑ шӑннӑскер, йӗмне васкаса хӑпартрӗ те тӳмелесе хучӗ.

Шилов кювета каялла шӑвӑнать, ун хыҫҫӑн — Бодров. Купарчи пӗҫерсе ыратнине пӑхмасӑр юлташӗнчен юласшӑн мар аллисене малалла тӑсса ярать те чӗркуҫҫисене хутлатса илсе туртӑнать. Ҫӗр метр ытларах чаксан, ҫул ҫинче сапаланса выртакан машинӑсем, тягачсем, тупӑсем патне ҫитеҫҫӗ. Вӗсен хӳттипе Шилов шоссе сулахай енне каҫса ӳкет, ун хыҫҫӑн — Бодров.

Нимӗҫсен пулемечӗ каллех тӑрлаттарса перет, каллех шоссе тӑрӑх хӗрлӗ, кӗрен тӗслӗ пульӑсем шӑхӑрса вӗҫеҫҫӗ, анчах хальхинче никама та сиен кӳреймеҫҫӗ. Шиловпа Бодров разведчиксем кюветпа шуҫса Васильев сержантпа юлнӑ юлташӗсем патне пырса ҫитеҫҫӗ, вӗсен ҫулӗ ҫинче виҫҫӗр метр малта нимӗҫсен танксенчен тӑракан арьергарчӗ вырнаҫнӑ тесе хыпарлать Шилов.

Васильев сержант вӗсем тӑшманӑн хурҫӑ танкӗсемпе ҫапӑҫма тӗллев пулманнипе пӑрӑнса каяҫҫӗ.

Васильев разведчиксене шоссен сулахай енӗпе тӑсӑлакан хире илсе кӗчӗ, кашни утӑма асӑрханса пусма сӗнчӗ, хайхи танксем тӗлнелле ҫитнӗ ҫӗре кукленсе малалла каймалли пирки асӑрхаттарчӗ. Ҫак тӗлтен ҫӗрлехи тӗттӗме пула разведчиксем пӗр чӑрмавсӑрах кукленсе иртрӗҫ.

Аслӑ сержант ушкӑн пуҫӗнче пычӗ, ун хыҫҫӑн ыттисем хыҫаларах юлса шӑвӑнчӗҫ. Малта каллех ҫиелтен юр витнӗ шупкарах мӗлкесем. Шиловпа Бодров каллех задани илеҫҫӗ. Васильевпа ыттисем чарӑнса тӑраҫҫӗ, тӗрӗсрех каласан, юр ҫине выртаҫҫӗ. Икӗ разведчик хальхи мӗлкесем патнелле ҫывхарса ҫитеҫҫӗ: икӗ фургон икӗ ҫӗрте йӑванса выртаҫҫӗ. Унтан малалла, хӗвеланӑҫнелле, нимӗҫсен артиллери установки: тупӑ кӗпҫи пӑрӑнса ларнӑ... Ун тавра снарядсем йӑтӑнса выртаҫҫӗ.

Хӑрушлӑх суккине кура Бодровпа Шилов хӑйсен юлташӗсене ҫитсе пӗлтереҫҫӗ. Васильев сержант алӑ сулать — пурте анӑҫалла васкаҫҫӗ.

Ядромино поселокне ҫитесси нумай юлмасть, разведчиксем унта пулеметпа автоматран пенӗ сасӑсем илтеҫҫӗ, нимӗҫсем поселокра пурри каламасӑрах паллӑ.

— Сержант юлташ, — тет хайхи Бодров, Владимир вырӑсӗ, вӑтам пӳллӗскер, халӗ шӑнса хутланнӑскер,— Катейкин разведчикӗсем Ядроминона ҫитнӗ те ҫавсемпе ҫапӑ-

çаççĕ, тен, фашистсем. Вĕсене пирĕн пулăшмалла мар-и?— çапăçăва хутшăнма чĕнет вырăс салтакĕ.

— Пулма пултарать, анчах пирĕн нимĕççемпе çапăçăва кĕме кирлĕ мар, вĕсем поселокра мĕнле вăйпа ларнине пĕлмелле кăна,— ăна хирĕçлет Васильев сержант.

Вăл ушкăна ертсе поселок патне пырать, анчах поселокри çурт-йĕрсем вырăнне разведчиксем çунса кайнă, ишĕлсе аннă кирпĕч куписене, çуннă пӳртĕн кăмака мăрйисене, тăрăсăр йывăç вуллисене кураççĕ. Чуна ыраттаракан синкер картина.

Çак аркатнă çурт-йĕр хушшинче тăшман хăнкăла пек пытанать, ăна разведчиксен пĕлмелле: вăл мĕнле йышпа тата мĕнле вăйпа?

Вăл Шиловпа Бодрова, опытлă разведчиксене, поселок тепĕр вĕçне çитсе нимĕçсен мĕн пуррине тĕрĕслеме ĕç пачĕ, хăй икĕ разведчикпа поселокăн хĕвеланăç енне тишкерме тытăнчĕ. Тепĕр икĕ сехетрен çак вырăнтах тĕл пулма палăртрĕ.

Бодровпа Шилова «чĕлхе» тытсан, тăхтаса тăмасăр хамăр чаçе таврăнма хушрĕ сержант.

Разведчиксем икĕ пая пайлансаа ĕçе тытăнчĕç.

Васильев сержант пĕлет: тăшманăн поселокăн хĕррийчи çурт вырăнĕнче дот и дзотсем пулмаллах, çавăнпа та вăл разведчиксене поселокран виççĕр метр хирелле илсе тухрĕ, пĕр тапхăр хытă юр тăрăх пычĕç, темиçе хутчен поселокăн тĕрлĕ вырăнĕнчен ракетăсем вĕçсе тухса йăл-ял! туса çутатса илчĕç. Çак çутăсем тăрăх поселокра темиçе батальонран таракан часть тăни разведчиксемшĕн паллă пулчĕ. Ку чаçе çапăçусăр кунтан хăваласа яраймăн. Вăл халĕ çĕр ăшне арлансем пек кĕрсе вырнаçнă.

Сержант поселока сулахай енчен пырса кĕме шутларĕ: ку енчен ракета çутисем пулмарĕç.

Разведчиксем çулсăр-мĕнсĕр тахăшĕн анкартипе çунса кайнă кил вырăнне çитсе тухрĕç, унта-кунта тимĕр-тăмăр выртать, çуннă пӳртĕн кăмаки ишĕлсе аннă, хапхи те çунса кайнă, çуннă юписем çунсах пĕтмен — лараççĕ. Çавсем хушшипе урама тухрĕç. Пăхаççĕ: урамĕн хĕвелтухăç енче — танксем, пĕр çирĕм танк та пур. Ун пек танксем поселокăн юнашар урамĕнче те йышлăн курăнаççĕ.

Васильев шучĕпе, сахалран та танк полкĕ çитсе вырнаçнă. Разведчиксем хыçал енне пăхаççĕ: тупăсем, гаубицăсем. Танксен атакине пулăшса пыма илсе килнĕ артиллери чаçĕ. Вĕсем каялла тухма тăраççĕ: вĕсен çулне пӳлме икĕ нимĕç

салтакĕ чупать. Васильев: «Эпĕ пĕрне ураран персе амантатăп «чĕлхе» валли, эсир теприне тĕп тăватăр. Выртăр!

Разведчиксем юр ăшне пашлатаççĕ те хайхисене тĕллесе переççĕ, пĕрне вĕлереççĕ; Васильев теприне ураран амантать, вăл персе анать. Хăй урипе аппаланнă вăхăтра разведчиксем унăн çăварне çĕтĕк чикеççĕ, аллисене çыхса уй тăрăх анăçалла сĕтĕреççĕ. Сулахай пĕççинчен тивнĕ вырăна бинтпа çыхса юн кайма чараççĕ. Унăн автоматне Кустов разведчик илет. Тăсланкă нимĕç патрульне сĕтĕрсе разведчиксем халтан каяççĕ. Шоссе çине тухсан, ăна пĕр тапхăр çĕклесе пыраççĕ, те чăнах ыратнăран, те шутсăр хăранипе çамрăк нимĕç салтакĕ çăварне чикнĕ çĕтĕке сурса кăларса хытă çухăрма тытăнать. Кунта хăрушлăх çукран разведчиксем çăварне урăх пăкăламаççĕ. Часах вĕсем Костров поселокне çитеççĕ.

Васильев сержант Орлов майора хăйсем разведкăна кайса килнине, пĕр «чĕлхе» сĕтĕрсе килнине пĕлтерет. Нимĕçсен танкĕсемпе артилери чаçĕ Ядримино поселокĕнче тăнине палăртать.

Орлов майор разведка мĕн курса илтнине, «чĕлхе» тытса килнине мана пĕлтерчĕ. Эпĕ «чĕлхене» дивизи штабне халех çитерме хушрăм.

Тепĕр сехетрен Катейкин ушкăнĕ те таврăнчĕ. Çав поселокран иртсен Новопетровское станцине çитиччен вĕсене нимĕçсен дозорĕ сасартăк пеме тытăнать: Борисов разведчика вилмелле амантаççĕ, Карпов разведчика хулран суранлатаççĕ. Борисов разведчика вĕсем унтан илсе тухаççĕ, документчĕсене кăларса илсе, хăйне шоссе хĕрне илсе çитереççĕ, çавăнтах юр ăшне пытарса хăвараççĕ, Карпова çĕклесе килеççĕ, Комаров капитан хушнипе санбата ăсатаççĕ.

Катейкин Ядромино поселокĕнче нимĕçсен танкпа артиллери чаçĕсем пуррине çирĕплетсе пачĕ, вĕсен пехотине асăрхаманни паллă пулчĕ.

Эпĕ, резведка пĕлтерĕвне шута илсе, ыран мĕн тумалли çинчен шухăша кайса выртрăм.

— Çур сехет хушшинче батальонсем çиме ĕлкĕреççĕши? — иккĕленсе илчĕ Гаркуша политкомиссар.— Хĕрĕх-хĕрĕх пилĕк минут кирлĕччĕ.

— Вăхăтпа тачăрах усă курсан — ĕлкĕреççĕ,— кĕскен те татăклăн каларăм эпĕ, кунта хам командир пулнине систерсе.

Урăх хирĕçлекен пулмарĕ.

Эпир хамăр та васкасах ирхи апат турăмăр. Палăртнă вăхăтчен пилĕк-ултă минут маларах тухрăмăр. Орлов Герман Федотович, ман юнтеш, хăйĕн батальонне илсе çитерме те майлаштарса тăрать. Мана курсан, батальона смирно команда пачĕ, пуçсене сулахай енне çавăрма хушрĕ, эпĕ алă сулса чарăнма ыйтрăм, ун патне пырса ал тытрăм, салтаксем мĕнле каннине, пемелли хатĕрсем çителĕклине тата мĕн çитернине ыйтса пĕлтĕм. Вăл хăйĕн салтакĕсене куçса çўрекен кухньăран вĕри яшка çитернине, вĕри чей ĕçтернине пĕлтерчĕ. Салтаксемшĕн тăрăшнăшăн эпĕ ăна батальон умĕнче ырларăм, хăй те кăмăлăл юлчĕ. Çав вăхăтра иккĕмĕшпе виççĕмĕш батальонсем çитсе хăйсен вырăнĕсене йышăнчĕç.

Виктор Комаровпа Иван Кислов капитансем ман пата çирĕппĕн утса пырса, хăйсен батальонĕсем малашнехи ĕçсене тума хатĕррине пĕлтерчĕç.

Эпĕ полк умне тухса тăтăм та хатар нимĕçсемпе Ядромино тата Новопетровское поселокĕнче çапăçмасăр ирĕке кăларас çуккине хытарсах каларăм. Санинструкторсемпе санбатсене çапăçури аманнă салтаксене кĕске вăхăтра пулăшу пама та вăр-вар каялла ăсатма чĕнтĕм. «Пурте пĕлетĕр: халĕ вăтăр пилĕк градус сивĕ, малалла тата сивĕрех те пулма пултарать, атмосферăна сăнакансем çавăн пек калаççĕ, çавăнпа та аманнă боецсене пĕр тăхтаса тăмасăр пулăшу парса санчаçсене ăсатмалла,, унсăрăн шăнса вилме пултараççĕ — ку усăсăр çухату».

Мана пурте тимлĕ итлерĕç.

Ултă сехет те вунă минутра Орлов хăй батальонне шоссе çине илсе тухрĕ, эпĕ ăна анăçалла кайма, малта çул уçса пыма ăнăçлăх сунтăм. Пĕрремĕше хыççăн иккĕмĕш батальона ертсе Виктор Комаров капитан анăçалла çул тытрĕ. Иван Кислов капитан виççĕмĕш батальон пуçĕнче пычĕ.

Çанталăк сивĕрен боецсем хăйсем те пĕр вырăнта нумай тăрасшăн марччĕ, вĕсем ăшăнас тесе хăвăрт малалла утрĕç.

Ура айĕнчи юр кăчăрт-кăчăрт туса янрать, батальон утнăçем кăчăртатни икçĕр метра янраса илтĕнет, тен, ытларах та.

Эпĕ батальонсене çул çине ăсатса янă хыççăн адьютантпа «уазика» ларса шоссепе анăçалла вĕçтеретпĕр. Савелькин адьютант манпа юнашар граната хатĕр тытса пырать, пирĕн машина хамăр полк хыççăн йĕрлет, хăшпĕр çĕрте шоссе çинче çĕмрĕк машинăсене пула пăрăна-пăрăна иртет. Нимĕç-

сем каялла чакнипе хӑйсен вӑрҫӑ хатӗрӗсене чылай ҫӗрте пӑрахса тарнӑ е пирӗн артиллери вучӗ тивнипе арканса кайнӑ. Халӗ вӗсем никама та кӑсӑклантармаҫҫӗ, шоссе ҫинче пире анчах чӑрмав кӳреҫҫӗ.

Манӑн полк пӗр тӑхтаса тӑмасӑр анӑҫалла васкать. Салтаксем хӗрсе утнипе сивве парӑнтарса ҫӑмӑллӑн пыраҫҫӗ. Эпир сехете яхӑн утатпӑр, нимӗҫ шарламасть: те пире сисмест, те чӑнах та Ядромино таранах чакса кайнӑ. Разведка пӗлтернӗ тӑрӑх, унта ҫитсен хаяр ҫапӑҫусем пуҫланмалла. Вӑл унта ҫирӗпленсе ларнӑ.

Пӗрремӗш батальон командирӗ Орлов майор ҫула тухиччен икӗ отделенирен таракан боецсене дозора ячӗ, вӗсен ертӳҫи Маркин сержант, вӑл полкран ҫур ҫухрӑм малта пырать, ку таранччен нимӗнле хыпар та пӗлтермест.

Малта сасартӑк пулемет так-так-так янратса кӗрлесе кайрӗ. Темиҫе пулемет татти-сыпипсӗр ӗҫлет. Чухлатӑп: нимӗҫсен пулеметчикӗсем ҫине ҫитсе тухрӗҫ пулмалла пирӗннисем.

Эпӗ водителе каялла ҫаврӑнма хушатӑп, пирӗн ҫӑмӑл машина икҫӗр аллӑ—виҫҫӗр метр кайсан, Орлов ертсе пыракан полк патне ҫитсе чарӑнать. Машина алӑкне уҫса тухатӑп та хам патран иртсе пыракан майора чӗнсе илетӗп.

Малта ҫапӑҫу пынине вӑл та лайӑх илтет. Гранатӑсем шартлатса ҫурӑлнипе пӗр пулемечӗ пеме чарӑнчӗ, тепри ҫаплах тӑрлаттарса тӑма пӑрахмасть.

— Маркин сержант кӗрешет. Нимӗҫсен юлнӑ темиҫе танкӗ пирӗн салтаксене асӑрханӑ та пеме тытӑннӑ,— тет Орлов майор.— Эпир унта ҫитиччен Маркин иккӗмӗш пулемет точкине те лӑплантарма кирлӗ.

— Ик-виҫӗ гранатометчика унта ямалла, унсӑр пустуй ҫухату ытларах пулать,— асӑрхаттаратӑп эпӗ Орлова.

Вӑл ҫавӑнтах пайӑр ӗҫпе хӑйӗн связнойне гранатометчиксем патне ярать: Орлов майор патне халех виҫӗ гранатометчика пыма хушать.

Ганатометчиксене ӑсатнӑ хыҫҫӑн нумай та иртмест: татти-сыпписӗр кӗрлекен пулемет шӑпланать. Пирӗн полк тӑракан вырӑна тӑватӑ боеца ҫӗклесе ҫитеҫҫӗ: иккӗшӗ вилнӗ, иккӗшӗ йывӑр аманнӑ, ҫӑмӑл аманнисем пиллӗк. Санинструкторсем ҫӑмӑл аманнисене бронетранспорта лартса Истра хулине ӑсатрӗҫ. Вилнисене пытарма Костров масарне илсе кайрӗҫ икӗ боецпа лав хуҫи.

Мана Маркин сержант икӗ нимӗҫ танкӗпе кӗрешме тивнине, вӗсене пӗтерсе, шоссе ҫулне нимӗҫсенчен тасатнине

хыпарларĕ. Дозор çак танксем патне ăнсăртран тухнипе икĕ тĕреклĕ боецпа ултă маттур çамрăка амантнине кулянса пĕлтерчĕ.. Унăн боецĕсемпе гранатăпа кĕрешекенсем бензинсăр тăрса юлнă нимĕç танкисенчи пулеметчиксене гранатăпа персе хыптарса янă, вĕсене пĕтерсе тăкнине ун сăмахĕнченех пĕлтĕмĕр.

Пирĕн полк кăшт каннă хыççăн анлă шоссепе анăçалла утрĕ. Çурçĕр çилĕ боецсен сылтăм енчен тĕртсе вĕрет, вĕсене хăвăртрах утма пулăшса пырать. Кашни боец хĕллехи сивĕпе кĕрешсе хăвăртрах утма тăрăшать, унăн мĕнле те пулин ăшăнас пулать: аллисене вылята-вылята илет, урисене пĕрпĕринпе çапăнтарать... Хытăрах утнипе çеç хăйне хăй ăшăтса пырать. Çак авăкра унăн ăшă пӳлĕме кĕрсе канасси, çак йывăр та сивĕ вăхăта хăвăртрах irттерсе ярасси тата синкерлĕ шăпаран ăнăçлă тухасси тĕп ĕмĕтрен пĕри пулнă. Паллах, нихăш çамрăкăн та кун пек сивĕ хĕл кунĕнче йывăр аманса сивĕ юр çине ӳксе юн юхтарса выртас килмен, вилес пулсан та, тĕлĕкри пек ним симесĕр, пĕр асапланмасăр чунне кăларма килĕшме пултарнă, анчах хăйĕн вăрттăн шухăшĕнче ăна çак хаяр та хăрушă тапхăртан темле аслă вăй тĕрĕс-тĕкелех упраса хăварассăн туйăннă. Тепри ăна хăйĕн халăхне ку тапхăрччен упраса хăварнă çӳлти турă çине вăрттăн шаннă. Çак турă ăна вĕри вутра та çунтарса яма памĕ тесе ĕненме тăрăшнă. Çакăн пек шухăшпа малалла талпăнна Орлов майор та Волоколамск шоссепе. Вăл тепĕр çухрăмран çитекен Ядромино ялĕнче тăшман хаяррăн кĕтсе илессине те пĕлет. Мĕнле майпа ăна çĕнтерсе малалла каясси çинчен пуçне ватса пырать. Уншăн та, унăн батальонĕшĕн те кашни утăм хĕçпăшаллă тăшманпа хаяррăн тĕл пулассине çывхартать. Çак тĕлпулуран нимĕнле майпа та çăмăллăн иртме май çук: нимĕçсем хăйсен çирĕпленнĕ позицине икçĕр çулхи юмана асар-писер çил хăватлăн пырса çапса кăкланă пек вăйпа тĕртсен сирсе пăрахма пулать. Ăçта унăн ун пек вăй? Ун пек вăй ун батальонĕн те, полкĕн те, дивизин те çук. Ун пек вăй артиллерипе танк дивизийĕсен пур, анчах ăçта вĕсем, ун пирки Орлов пĕлмест. Çав дивизисем çул уçмасан, вăл хăйĕн батальонĕпе нимĕçсен вучĕ каспипе ӳкет те урăх тăраймасть, пĕр усăсăр пилĕкçĕр боецпа командир тăшман позицийĕ умĕнче выртса юлать, нимĕççене вĕсем нимĕн чухлĕ те сиен кӳреймĕç, мĕншĕн тесен тăшман çирĕплетнĕ дотпа дзотсенчен пуля сапса тăрать, çумăр пек çутарать. Орлов батальонĕ, çуран çар урра! кăшкăрса çав пуля илеймен ти-

мĕр-хурçă дота илме чупать, анчах нихăшĕ те ун патне чупса çитеймест, темиçе пуля ун витĕр тухса ăна ĕмĕрлĕхех çĕре ӳкерет... Ун умне хăрушă ӳкерчĕк тухса тăрать, Сарлака вăрçă уйĕ нимĕçсен позици умĕнче совет салтакĕсен виллипе тулнă, миçе пин салтак ним усăсăр вилсе выртнă, тăшмана нихăш енчен те сиен кӳме пултарайман. Çакна аса илчĕ Орлов: пирĕн çарсем Смоленск, Харьков, Вязьма патĕнче çапăçнă чухне пысăк çухатусем тӳснине хăй курнă май. Ун куç умĕнчех çак хăрушă ӳкерчĕксем...

Каллех çавăн пек майпа кĕрешĕпĕр-ши ăста та вăйлă тăшманпа? Хăçан пирĕн çар пуçĕсене ăстăнпа тавçăрулăх кĕрĕ? Хăçанччен салтак пĕр усăсăр выртса юлма пăрахĕ? Хăçанччен?..

Вăл хумханса шухăшласа пынипе сисмерĕ, ун патне Иван Савелькин чупса пычĕ.

— Сире, майор юлташ, «уазик» патне полковник чĕнет, батальона кайма чар.

Орлов батальона пилĕк минутлăх чарăну терĕ те аслă политрука хăй вырăнне хăварчĕ.

Майор çăмăл машина патне çитнĕ çĕре Комаровпа Кислов капитансем те курăнса кайрĕç, вĕсене те эпĕ хам приказа пĕлтерме чĕнсе илтĕм.

Машинăран тухрăм та батальон командирĕсене малаллахи тактикăпа паллаштартăм. ..

— Разведка пĕлтернĕ тăрăх, Ядроминăра нимĕçсен танкпа артиллери чаçĕсем тăраççĕ, вĕсене эпир хамăр дивизипе ниепле те хăваласа кăларса яраймастпăр: вĕсем унта лайăх çирĕпленсе ларма пултарнă. Çак поселока ирĕке кăларма пирĕн артиллерипе мотодивизи килсе çитмелле. Тепĕр сехетрен вĕсем çитеççĕ. Халĕ пирĕн полкпа 118 полкăн задачи: поселокăн хыçне икĕ енчен тухмалла, ăна «миххе» хăвармалла; пирĕн полк — сулахай енчен, 118 полк — сылтăм енчен.

Поселок патне çитесси 700 метр юлнă, пирĕн урăх çак шоссепе пĕр утăм та малалла каймалла мар, тӳрех сулахаялла çур километр таран пăрăнмалла, унтан лупампа кайса поселокран тепĕр çур километрта шоссе хĕрне çывхармалла, чакакан нимĕçсене пирĕн çакăнта хăватлăн кĕтсе илмелле. Вĕсем çине тапăнма лайăх вырăн йышăнмалла. Мĕнле ыйтусем пур? — эпĕ батальон командирĕсем çине пăхса илтĕм.

— Задани уçăмлă. Пурнăçлатпăр,— терĕ кĕскен Орлов майор. Вăл нимĕçсене хирĕç тӳррен атакăлассинчен хытă

шикленнĕччĕ, ăна кун пек майпа поселокран тасатассине ашра ырларĕ. Комаров капитан та кун пек тактикăшăн кăмăллă пулчĕ.

Орлов майор хăйĕн батальонне сулахай еннелле пăрса шап-шурă юрпа витĕннĕ хире илсе тухрĕ.

Шоссе хĕрринчи юр салтакăн кăçат кунчи таран путать пулсан та, çамрăк боецсем яра-яра пусса малалла çул хываççĕ, хыçалта пыракансемшĕн ура айĕнче таптаннă такăр çул. Малта пыракансене çĕр метр ишнĕ хыççăн командирсем кайрарах пыракансемпе улмаштараççĕ. Кăна кайăкхурсен вĕçеври меслечĕ теççĕ. Ку меслет çурак çара хир урлă çулсăр-мĕнсĕр кайма чылай пулăшать. Орлов майор çак меслетпе ăнăçлă усă курать, батальонĕ ниçта чарăнса тăмасăр поселок тĕлĕнчи лапама çитсе ӳкрĕ, боецсем лапампа анăçалла васкаççĕ.

Нимĕçсем сисрĕç: совет салтакĕсем вĕсене аякран иртсе çавăрса илме тухнă. Поселокран уялла минăсем унта-кунта чашласа ӳкме тытăнчĕç. Шăп иккĕмĕшпе виççĕмĕш батальон пыракан çул таврашне. Комаров хăйĕн батальонне хытă васкатса лапама илсе çитерчĕ, пилĕк-ултă боеца çеç çухатса хăварчĕ. Виççĕмĕш батальона нимĕçсем прожекторпа çутатса миномётпа, пулеметпа ислетрĕç, батальон хăй йышне чылай чакарчĕ; аманнисем йынăшни, пулăшу ыйтни илтĕнсе тăчĕ.

Зоя Синицынăпа Володя Галкин санитарсем аманнисене плащ-палатка çине хурса тухаççĕ, тата аманнисен юлташĕсем пулăшнипе шоссе çулĕ çине шăвăна-шăвана тухса ӳкеççĕ. Аманнисене пурне те каялла Костроври санчаçе ăсатаççĕ.

Кислов капитанран инçе мар мина ӳкет те унăн сылтăм хулне, урине металл ванчăкĕсем тивсе суранлатаççĕ, ăна Синицынăпа Галкин санинструкторсем çавăнтах плащ-палатка çине хурса хирти юр тарах туртса шоссе хĕрне илсе тухаççĕ, кунта унăн сылтăм хулĕпе пĕççине бинтпа чĕркесе çыхаççĕ, юн ытлашши каясран суранран çӳлерех жгут хураççĕ. Аманнисене Кострова сыватма ăсатаççĕ.

Эпĕ виççĕмĕш батальон командирĕ пулма Руссаков аслă лейтенанта хушатăп, вăл Кислов çук вăхăтра батальона ăнăçлă ертсе пыратчĕ. Хăйне вăл сăпай та лăпкă тытать, йывăрлăх килсе тухсан пăлханса ӳкмест, пană ĕçе, лартнă задачăна вăхăтра тума тăрăшать, боецсен нушине, ыйтăвне ăнланать, пулăшу пама манмасть, ăна батальонра хисеплеççе, ун хушăвне тума тăрăшаççĕ.

Батальон çухату тӳсрĕ пулсан та, çар единици пулнă май ун умне лартнă задачăна сахалрах вăйпа та пурнăçлама пултарать. Хамăн заместителе, Тарасов майора, пĕрремĕш комбатпа кайса малашнехи çула уçса пыма, Волоколамск шоссе çине çаврăнса тухма хистетĕп. Шоссе хĕрне тухиччен пĕр çĕр метр шаларах позици йышăнма, Ядроминоран тухса таракан нимĕçсене «лайăх» хăналаса яма задани паратăп. Эпĕ каламасăрах Тарасовпа Орлов майорсем хăйсем те лайăх пĕлеççĕ, анчах полк командирĕ пулнă май çак татăклă тапхăрта манăн задача лартни ытах та кирлĕ: вăл кашни командира ответлăха туйтарать, хастар кĕрешме хистет, хăйне те тĕплĕрех шухăшлама вĕрентет.

Эпĕ ку майорсене пĕлетĕп: çирĕп кăмăллă, хăюллă командирсем, тĕрлĕ йывăрлăхран сахал çухатусемпе ăнăçлă тухма пултараççĕ, хăйсене пăхăнакансенчен те, хăйсенчен те çирĕп ыйтаççĕ, çав вăхăтрах ырă кăмăллă çынсем. Ман пекех çара киличчен шкул ачисене вĕрентнĕ, вĕсен пĕлӳлĕхĕшĕн, вĕсенчен çĕршыва юрăхлă çын тăвассишĕн тăрăшнă, ашшĕ-амăшĕсемпе сахал мар тĕл пулса .е пуху ирттерсе сăмахланă.

Каярахпа çĕршыв ыйтнипе совет çарĕн шанчăклă командирĕсем пулса тăнă.

Орлов майор хăй батальонĕнчен виçĕ разведчика ăсатать: шоссе çулне нимĕçсем хуралланине, вĕсем хăш еннелле куçнине, поселок вĕсенчен мĕн чухлĕ хыçала юлнине пĕлме задани парать. Разведчиксем шоссе çинчи сасăсем еннелле васкаççĕ.

Эпир иккĕмĕш батальон командирĕпе хир тăрăх шăватпăр, пирĕн умĕн пĕрремĕш батальон иртнипе юр лайăх таптанса юлнă, утма çăмăл.

Комаров капитанпа Руссаков аслă лейтенант тата Чиркин аслă политрук батальон умĕнче пыраççĕ. Эпĕ Комаровран танксемпе кĕрешме миçе гранатометчик пуррине ыйтатăп, вăл вунпиллĕк боец хатĕр тет. Унăн батальонĕнче миномет тата виçĕ станоклă пулемет пурри маншăн паллă. «Боецсем нумайăшĕ винтовкăпа кăна, автоматчиксен взвочĕ юлашки вăхăтра хутшăнчĕ»,— терĕ Комаров. Уншăн та вăл хавас.

Руссаков аслă лейтенант хăй калаçăвĕнче тăшманăн техникине ырласа пычĕ: вĕсен вут-хĕм вăйĕ пысăк. Нимĕçсен автоматлă хĕçпăшал, вăл кашни салтакăн пур, кашни автомачĕ çеккунтра вăтăр пуля кăларса ярать, пирĕн винтовка

çеккунтра пĕрре çеç перет. Вĕсен минометчикĕсем те... Нимĕçсенчен миçе хут сахалтарах?

— Çитет, Руссаков, сире тăшман çарне мухтама! Эсĕ ăнланатăн-и: хăратмалли шухăш саракана çар трибунале явап тыттарать. Мĕнле явапне ху та пĕлме кирлĕ! Стена çумне! Ăнланатăн-и çакна? — çирĕпĕпн ыйтать унран Гаркуша комиссар, ун сăмахне пӳлсе.

Эпĕ те нимĕç хĕçпăшалне ырланăшăн Руссакова аслă лейтенанта сивлетĕп. Унсăрăн ĕç шалалла кайма пултарать, Уйрăм пая (Особый отдел) çитме пултарать ку сăмах, хама та явап тыттарма пултараççĕ.

— Эсĕ, Руссаков аслă лейтенант. хамăр батальонăн хĕçпăшал вăйĕ çинчен шухăшла,— тесе эпĕ Руссакова вăрçса илтĕм, хамăр çар пирки хурласа калаçнишĕн пирĕнтен каçару ыйтма хушрăм.

Пурте ман çине пăхрĕç. Руссаков çавăнтах смирно тăрса хамăр çар пирки малашне пĕр сăмах та пулмĕ терĕ, пиртен пуринчен те каçару ыйтрĕ. Эпир ăна каçарнă пек турăмăр, анчах чĕрере темле таса мар япала юлчĕ, тĕрĕсрех каласан, шиклентерекен япала. Кун пек сăмахшăн миçе çар çыннине çар трибуналĕ персе пăрахнă-ши. Ун шутне те пĕлес çук. Эпĕ Гаркуша Руссаков çинчен уйрăм пая пĕлтересрен хăраса шухăшларăм.

Пĕрремĕш батальон Волоколамск шоссе тăрăх позици йышăннине Орловăн связнойĕ пире килсе хыпарларĕ.

Иккĕмĕш батальон та шоссе еннелле пăрăнчĕ. Мана хыçалтан дивизи штабĕн связнойĕ çитсе Воронов приказне тыттарчĕ. Унта çакăн пек хушнă:

1. Ядроминопа Новопетровское хушшинчи шоссене йышăнмалла.

2. Нимĕçсен чĕрĕ вăйĕпе техникине аркатса тăкмалла, анăçалла кайма памалла мар.

3. Тыткăна лекнисене дивизи штабне илсе çитермелле, персе пăрахмалла мар.

3. Нимĕçсем çине тапăнса пырассине аталантармалла.

Руссаков аслă лейтенант нимĕç танкĕсемпе кĕрешме вуна гранатометчика ĕç парать, вĕсене кювет тăрăх хатĕрленсе выртма хушать.

Эпĕ виççĕмĕш батальона шоссен сылтăм енне куçса Новопетровское çывăхнерех майлă позици йышăнма ыйтатăп. Унăн батальонĕ чылай çухату тӳснĕрен ăна тăшмана ăсатса ямалли вăрттăн вырăн йышăнма сĕнетĕп. Паллах, ăсатса янă чух вĕсен нимĕçсене хыçалтан çунтарма майлă.

Ялта нимĕçсен хирĕçтăрăвĕ чакса пыни вĕсем пенинченех сисĕнет, малтанах нумай енчен хытă вут тăкатчĕç, халĕ сылтăм енчен перекенсем пачах сахалланчĕç, юлашкинчен пĕтсе ларчĕç. Эпир кайран пĕлтĕмĕр: сылтăм енчен 118 полк пырса кĕрсе каять те нимĕçсене хупласа хурать.

Акă ялтан тĕрлĕ машинăсем вĕçсе тухаççĕ, пĕрин хыççăн тепри. Грузовиксем тулли салтаксем. Нимĕçсем яла пăрахса каялла тараççĕ, Нарядов полковникăн артполкĕ хытă чăмлană чĕнмен хăнасене.

Тул çутăлать, шоссе тулли нимĕç техники анăçалла куçать. Пысăк танксем те кĕрлеттерсе çитрĕç те пире асăрхарĕç вĕсем, снаряд хыççăн снаряд вĕçтереççĕ пирĕн позици çине: ăрух-ăрух! ăрух-ăрух! кĕрлесе килсе сирпĕтеççĕ юрпа шăннă тăпрана. Пирĕн боецсене пĕтерме тытăнчĕç снарядсем.

Эпĕ батальонри пулеметчиксене вут-çулăм уçма приказлатăп. Сасартăк станоклă пулеметсем кĕрлеттерсе пеме тытăнаççĕ, анчах нимĕç танкĕсене сиен тăваймаççĕ, пульăсем каялла сирпĕнсе ӳкеççĕ. Бронетранспортерсемпе танксем пирĕн тĕлтенех кĕрлесе иртеççĕ, пилĕк-ултă машина пĕр чарăнмасăр иртсе кайрĕç, вĕсене сиен тума ĕлкĕреймерĕмĕр.

Эпĕ Орлов майорпа Комаров капитана хыттăн вăрçса каларăм:

— Мĕншĕн граната ывăтакансене задани памастăр? Мĕн кĕтсе тăратăр?

Вĕсем нимĕçсен артиллери вучĕ айĕнче гранатометчиксене пуçĕсене çĕклеттересшĕн пулман-ши? Е хăйсем нимĕçсем талпăнса килнĕрен пăтранса илнĕ? Халĕ тӳрех калама хĕн.

— Гранатометчиксем! Тăшман танкĕсене хăналăр! — кăшкăрать Орлов.

Акă Абрамовпа Волков боецсем граната çыххисем çĕклесе кюветран шоссе çине тухса тăраççĕ. Вĕсем патнелле виçĕ танк кĕрлесе килет, икĕ танкĕ хайхисене пулеметран тăр-тăр-тăр тутарчĕ те Абрамова темиçе пуля тивсе тухса каять — пĕтерсе хăварать, Волкова та мăйĕпе хулĕнчен пуля лекет гранатине танк айне ывăтнă чух.

Эпĕ Комаров капитана танксемпе начар кĕрешнĕшĕн тарăхнипе вăрçса илетĕп, вăл граната ывăтаканĕсене хăй ертсе шоссе çине çĕкленет, хыçалта килекен танксенчен подрывниксене асăрхаççĕ, килнĕ çĕртех пулеметсенчен шоссе тăрăх хытă переççĕ, пĕр граната ывăтаканĕ те нимĕçсен танкĕсене сиен кӳреймеççĕ — вилсе тăкăнаççĕ. Манăн тарăху çĕпре пек

йӳçсе çĕкленет, эпĕ çавăнтах Комаров капитана вилнĕ боецсен гранатисемпе нимĕç танкĕсене хыçалтан та пулин персе çунтарма е чарса лартма чĕнетĕп. Комаров капитан хăй айăплине туйса икĕ вилнĕ боецăн грарната çыххисене илет те хăйĕнчен иртсе кайнă танкăн бензобак тĕлне вăркăнтарать, унтан — теприне. Çавăнтах икĕ танк кĕрлесе çунма тытăнаççĕ, экипажсем çаплах малалла вĕçтереççĕ, анчах инçех те каяймаççĕ, пĕрин хыççăн тепри чарăнса тăраççĕ, танкри салтаксем люк уçса тухма тытăнаççĕ, анчах инçе каяймаççĕ, Масковпа ытти снайперсем çаксене пуçтара-пуçтара хураççĕ.

Михаил Чамжаев хăйĕн отделени салтакĕсене икшер граната çыххисем илсе шоссе хĕрне илсе тухать. Вăл курать: танксен колонни кисрентерсе килет. Боецсене вăл малтан юрăхсăра тухнă нимĕç танкĕсем çумне пытанса выртма хушать. Акă хăй башньăсăр юлнă танк çумне кукленсе ларать, аллине гранатăн çыххине илет. Вăл йывăр та сулмаклă. Малти икĕ танкĕ те тупписенчен кăрăнт та кăрăнт персе килеççĕ. Снарядсем танксем патне те пырса ӳкеççĕ, йĕри-тавра ванчăкĕсем пур еннелле те шăхăрса сирпĕнеççĕ. Чамжаев сисет ун патĕнченех металл ванчăкĕсем шăхăрса иртнине. пĕри пуçри хурçа каскăна тивсе вăркăнчĕ. Урăх çĕртен лекнĕ пулсан, амантма та, вĕлерме те пултарать. Вилес марччĕ, вилсен атте-аннене те, савнă Çинука та нихçан та кураймастăп... Нихçан та. Мĕн пек тĕрĕсмарлăх, мĕн пек синкерле шăпа. Килтен те, Çинукран та эрне каяла çыру илнĕччĕ вăл. Çинук унта хăй колхозра ĕçленĕшĕн мĕн чухлĕ ыраш, пăрçа, сĕлĕ, çĕрулми илнине çырса пĕлтерет. Хăй ăна яланах кĕтсе пурăннине, ăна тĕлĕкре те час-часах курнине хыпарлать: те чăнах, те юри — калама хĕн, анчах фронтри çынна тем пекех лайăх. Çак çырăва илнĕ хыççăн Михаил паянхи кунччченех нимĕçсемпе кĕрешме хастар, унăн халĕ çак чĕнмен хăнасене часрах Мускав патĕнчен хăваласа ярас килет, хамăр çĕре хăвăртрах тасататасчĕ тесе çапăçать. .

Çак вăхăтра ун çинелле килекен варринчи танк каллех персе ячĕ, снаряд ун пуç çийĕпе вĕçсе иртрĕ, тепĕр вунă метр хыçалта çурăлчĕ. Шăп унта ун отделенинчи Бартасовпа Салкин боецсене пĕтерсе тăкрĕ. Бартасов пуçне татса кайрĕ, Салкин кăкăрне çурса пăрахрĕ... Халĕ çутăлнăран вĕсен виллисене каялла пăхнипех курчĕ. Иккĕшĕ те çара киличчен авланнăччĕ, иккĕшин те çамрăк арăмĕсем упăшкисемсĕр юлчĕç Мĕн пек хуйăх кӳчĕ çак снаряд икĕ чăваш килйышĕпе тăванĕсене. Михаил Илле арăмне те пĕлет, шкулта вĕсем пĕрле вĕреннĕ, пĕрле вунă класс пĕтерсе тухнă. Илле арăмĕ пулич-

чен Михаил Ирана перре мар Кăкшăм ялне çитиччен ăсатнă. Ира ăна хăй юратнине систернĕччĕ, анчах Мишăна амăшĕ салтак кайса киличчен авлантарасшăн пулмарĕ. «Кине манпа хăварма авланатăн-и эс? Çук, малтан салтака кайса килха, кайран чару çук»,— терĕ амăшĕ.

Миша амăшĕн сăмахне итлерĕ, юратать пулсан, Ира ăна кĕтсе пурăнĕ, терĕ. Çав кĕркуннех Мишша çара илчĕç, вăл тăванĕсемпе, Ирăпа кăнăçлă уйрăлчĕ. Таврăнсан пурпĕрех пĕрлешессе çирĕп шанса тăчĕ. Ун хыççăн нумай вăхăт иртмест — Илле Салкинпа малтанах туслă пурăннă Ира ăна качча тухать, туй та тăваççĕ. Çак хыпара Лексее ялтан ашшĕ çырса пĕлтерет, уншăн ывăлне вăл кулянма хушмасть. «Хăй сăмахне тытман хĕр вăл арăм пулсан та шанчăксăр» тесе лăплантарать Мишша ашшĕ. Тепĕр уйăхран вăрçă тухса каять, Мишăн та çитес çул кĕркунне çартан таврăнасси пĕтет. Салкинпа Бардасова та вăрçă тухсан çара илеççĕ, тăвată уйăх вĕсене Вăрнар вăрманĕнче çар ĕçне вĕрентеççĕ. Чӳк уйăхĕнче вĕсене Мускава хӳтĕлеме Вязьма хули патне илсе çитереççĕ, унта вĕсен чаçне нимĕçсем çапса çĕмĕрнĕ хыççăн Истра хулине хӳтĕлекен дивизие яраççĕ. Çакăнта Мишша тĕл пулать хăй ентешĕсемпе — Бардасовпа тата Салкинпа. Халĕ вĕсем нимĕçсенчен Мускав патĕнчи çĕре тасатса пыратчĕç, анчах паянхи çапăçура вĕсене телей пулмарĕ: иккĕшĕ те пуçне хучĕç. Мишша тем пек йывăр пулчĕ, иккĕшĕн те чĕри ыратрĕ, анчах хаяр çапăçура туйăма ирĕке яма çук, пысăк хăрушлăх ăна та кĕç-вĕç çитсе хуплама пултарать, унăн мĕнпур вăйне пухса хастаррăн кĕрешмелле, хăй сине килекен танк айне вăл пысăк тарăхупа граната çыххине вăркăнтарчĕ, пуçне ваннă танк хыçне пытарма ĕлкĕрчĕ: гранатăсем шартлатса çурăлчĕç. Мишша пуçне кăларса пăхрĕ: танк чарăнса ларнă, унăн чĕри лăштах турĕ, анчах сылтăм енчи танк çаплах кĕрлесе иртет, унран пĕр вунă утăмра. Çук, тӳсеймест Мишша, хĕрсе кайнăскер, çĕкленет те танка хыçал енчен граната ярăнтарать, тĕл лектерет, часах вут хыпса илет. Унăн гранатăсем çук, вăл хăйĕн отделенинчи салтаксене шоссе хĕрринчи кюветра шырама тухать. Вунă боецран иккĕшне шоссе хĕрринче тупать: Ярченко уринчен аманнă та нихăш еннелел те тухаймасть, вăрçă лăпланасса кĕтсе выртать, санитарсем сулахай урине юн каясран хытă çыхса хăварнă, Ермаков сывă, аллинчи автоматĕнчен кашни нимĕç техникине пемесĕр иртерсе ямасть, кĕрлеттерсе выртать кăна.

Нимĕçсем чарăнса ларнă танксенчен те пулеметсем Ор-

ловпа Комаров батальонĕсен пехоти ҫине вутлă ҫумăр ҫутараҫҫĕ, хăйсем патне никама та ямаҫҫĕ.

Орлов майора эпĕ ҫак танксенчен перекен пулеметсене чыхăнтарма задани паратăп. Вăл хăй те лайăх ăнланать: унăн боецĕсем ҫухату ытларах тӳсеҫҫĕ.

Орлов майор хăйĕн Краснов заместительне ҫак задание кĕске вăхăтра тума, тепĕр вунă минутран ĕҫ мĕнпе вĕҫленнине пĕлтерме хушать. Краснов — вырăс, панă задание нихҫан та йывăр тесе нăйкăшмасть, ҫавăнтах хăй патне кашни ротăран икшер ҫĕмĕрекен (подрывник) илет те ĕҫе тума тытăнать. Хайхисем танксене бензин сапаҫҫĕ те чĕртсе яраҫҫĕ— шоссе ҫинчи виҫĕ танк шуҫлавĕсем татăлнипе малалла каяймаҫҫĕ, анчах экипаж ҫаплипех хăйĕн туппинчен, пулемечĕсенчен татти-сыпписĕр вут тăкать, пирĕн полка шоссене йышăнма памасть. Танк факел пек ялкăшса ҫунать. Танксенчи экипаж вĕрине чăтаймасăр люк уҫса тухма тытăнать, нимĕҫ танкисчĕсене пирĕн автоматчиксем ҫавăнтах кăнтараҫҫĕ.

Ирхине, сакăр сехет тĕлне, кунти ҫапăҫу лăпланать, поселокри нимĕҫ артиллери полкĕпе танк. дивизийĕ пирĕн ҫарăн «миххинче» чылай ҫухату тӳсеҫҫĕ, анчах вĕсен тĕп вăйĕсем малтанхи бронемашинăсемпе тухса тараҫҫĕ, тыткăна лекмеҫҫĕ. Вĕсен вунвиҫĕ танкпа пилĕк артиллери расчечĕ чугун ҫул ҫумĕнчи ансăр ҫулпа тухса хăтăлаҫҫĕ.

Ҫак поселока ирĕке кăларнă хыҫҫăн мана тата Уларкин полковника дивизи командирĕн связнойĕ Терехов лейтенант ҫакăнтах тăхтаса тăма хушрĕ.

Полк ĕҫĕсене эпĕ Тарасов майорпа Гаркуша комиссара тума хушрăм. Вĕсем батальонсемпе ротăсене пухса боецсен йышне тĕрĕслерĕҫ, кашни ротăра тата батальонра миҫе боецпа командир вилнине, аманнине шута илчĕҫ, мĕнле тата миҫе хĕҫпăшал пуррипе ҫуккине тата миҫе кирлине... Ҫапăҫура паттăрлăх кăтартнă салтаксемпе командирсен списокне турĕҫ: вĕсен хушамачĕпе ячĕ, ашшĕ ячĕ, хăҫан тата ăҫта ҫурални, мĕнле паттăр ĕҫ туни тата ытти те. Ҫак сведенисене ҫур сехетрен мана пырса пама ыйтрăм Тарасов майортан. Эп пĕлетĕп: дивизи командирĕ Воронов генерал чи малтан ҫакна ыйтать манран. Ман хатĕр пулмалла.

Ирхине апат тума вăхăт ҫитрĕ. Куҫса ҫӳрекен кухня пирĕн полк вырнаҫнă ҫĕре ҫитсе тăчĕ. Вăл ҫитсе тăнине те сисмерĕмĕр: шоссе ҫинче нимĕҫсен тĕрлĕ техники ҫула картласа тăрать, ҫавсен хушшипе лаша кӳлнĕ шупка кăвак кухня пырса тухрĕ, унта икĕ салтак тумĕ тăхăннă ҫын: пĕри — пысăк

çăпалапа котелоксене ярса параканни, тепри — çăкăр-сухари валеçекенни.

Полкри аслă старшина пурне те апат илме чĕнсе каларĕ. Эпир, полк командирĕсем, хамăр адьютантсемпе кухня патне пытăмăр: ман адьютант Иван Савелькин хупăлчаллă мискăна пысăк çăпала тытнă повар çумĕ патнелле тăсрĕ, хайхи пĕр тăхтаса тăмасăр çăпалапа туллиех ăсса илчĕ те мискăна тултарчĕ, тата тепре çăрине ăсса илсе хушса пачĕ. Командир валли илнине каламасăрах пĕлчĕ вăл. Тепĕр аллинчи хутаçа сухари тултарса пачĕ иккĕмĕш юлташĕ.

Çимелли илнĕ хыççăн Савелькин мана валли майлă вырăн тупрĕ: нимĕç бронемашинин алăкне уçрĕ те унта кĕрсе ларма сĕнчĕ. Машина ăшĕнче никам та çук — ирĕклĕ.

Эпир, адьютантпа, иккĕмĕш талăк вĕри апат çименскерсем, çуллă какай яшкине хырăм сарăличченех сыпрăмăр. Пиртен инçе мар шурă çăмăл машина пырса чарăнчĕ: Воронов генерал хăй çитнине çавăнтах чухларăм.

Эпĕ васкаса машинăран тухрăм, ман хыççăн — Савелькин адьютант та. Эпĕ çавăнтах шурă çăмăл машина патне вĕçтерсе çитрĕм. Мана курсан Воронов генерал алăк уçса тухрĕ.

— Саламлатăп, Чайкин полковник, задание ăнăçлă вĕçленĕшĕн, çара ертсе пыракансен ячĕпе тав тăватăп,— тет хăйĕн ăшă та пысăк аллипе ман алла чăмăртаса.

Кун пек чыс тунăшăн чĕреçĕм çунатланса илет, эпĕ ăна кĕскен хуравлатăп:

— Малашне те командовáни заданине пурнăçлама хатĕр.

Унăн пысăк хура куçĕсем ман çине ăшшăн пăхаççĕ, тулли пичĕ савăнăçлă. Вăл манран сведенисем ыйтать, эпĕ ăна тепĕр пилĕк минутран пама пултăм, тен, урăх чухне, мана вăрçнă пулĕччĕ, халĕ ĕç ăнăçлă вĕçленнĕшĕн савăннипе кăмăлĕ çемçелчĕ, сведенисене дивизи штабне тăратма хушрĕ.

Салтаксемпе командирсем ирхи апатрине хăй курчĕ, кăмăллă пулчĕ, малаллахи ĕç пирки сăмахларĕ.

— Боецсен вĕри апат çисен вăй кĕрет, сивĕ те ăна хăратмасть, тепĕр çур сехетрен пирĕн малалла каймалла, нимĕçсене çирĕпленсе ларма памалла мар. Разведка пĕлтернĕ тăрăх, Новопетровское поселокĕнче нимĕçсен артиллерипе мотопехота чаçĕсем пур, танксем пирки паллă мар. Хальхинче пехотăран малта танк полкĕ çул уçать, ун хыççăн — 118 полк. Сан полк — иккĕмĕш эшалонта. Малти полка йывăр тивсен, санăн та ăна вăхăтра пулăшма хатĕр тамалла. Ыйтусем

пур-и? — хальхинче ман ҫине ҫирӗппӗн пӑхса ыйтрӗ, малтанхи ӑшӑ кулӑ таҫта кайса кӗчӗ.

Ҫухатнисемпе аманнисем вырӑнне ҫӗнӗ хушӑм ҫывӑх вӑхӑтра кӗтмелле-ши тесе ыйтрӑм, вӑл пуҫне кӑштах пӑркаларӗ те кӗтме хушрӗ. Воронов генерал Ударкин полковникпа хальхипе малашнехи ӗҫпуҫ пирки сӑмахлама юлчӗ.

Эпӗ хам полка таврӑнтӑм, боецсемпе командирсем, маларах апат тунисем, шоссе хӗррине тухнӑ, чӗлӗм туртса, сӑмахласа тӑраҫҫӗ, иккӗмӗш батальон — апатра, 3-мӗш батальон кухня патӗнче апат илет... Хӑшпӗрисем ытларах ярса пар тесе хыттӑнах ыйтаҫҫӗ. Эпӗ ӑнланатӑп: малтанах яшка антараканӗ пурне те тулли ҫӑпала ярса парать, кайран бачокра яшки сахаллине асӑрхать те ҫур ҫӑпала чухлӗ ӑсса илет те котелока ӳпӗнтерет. Ҫавӑнпа хӑшӗ-пӗри кӑмӑлсӑрланать, шавлама тытӑнать.

Эпӗ пӗрремӗш батальон старшинине куртӑм та ӑна кухньӑра йӗрке тума хушса хӑвартӑм. Ытларах ыйтакансене, яшки юлсан, хушса пама та юрать терӗм.

Ҫул ҫинче мана Тарасов майор шыраса тупрӗ, пирӗн полк миҫе ҫын ҫухатнӑ, миҫе боец аманнӑ, миҫе – чирленӗ тата ытти сведенисене пачӗ, нимӗҫсен ҫухатӑвӗсене дивизи штабӗ хӑй хатӗрленине пӗлтӗм.

Ман пата каллех полкӑн ҫӑмӑл машини Ядромино поселок урлӑ аран-аран тухса, нимӗҫсен урлӑ-пирлӗ канӑҫсӑрласа выртакан техникине сирсе (сирекенсем саперсем пулнӑ) ҫитсе чарӑнчӗ. Машина ӑшӗнчен Ястребов полковник, Синяков артполк комиссарӗ тухрӗҫ, Очилов связной тухнӑ-тухман ман пата хавассӑн пырса тӑчӗ, эпӗ унӑн куларах ялкӑшакан ҫутӑ куҫӗнченех сисрӗм: мана валли лайӑх хыпар илсе ҫитернӗ.

— Аркадий Петрович, сире тӑван ҫӗршывран ҫыру. Ку лайӑх наградӑпа танлашать,— тесе мана виҫ кӗтеслӗ кӑвак конверт тыттарать. Эпӗ куншӑн Очилов связиста (вӑл почтальон ӗҫне тунишӗн) тав тӑватӑп, анчах Ястребов полковник ҫырӑва вулама памасть, дивизи командирӗн ҫумӗ пулнӑ май, полка халех пухса тӑратма хушать, вӑл арми ертӳҫин приказӗпе паллаштарма тата ӑна пурнӑҫлама чӗнсе каласшӑн.

Эпӗ батальон командирӗсемпе раципе ҫыхӑнатӑп, кашнине хӑйӗн батальонне шоссе ҫине тухса йӗркелесе тӑма хушатӑп.

Тарасов майор хашкаса ҫитет, вӑл мана начар хыпар

пĕлтерет: «Руссаков аслă лейтенанта УПăна илсе кайнă, унта ăна хытă тĕпчеççĕ терĕ.— Чиркин политрук ун çинчен çăхав тунă иккен. Руссаков пысăк инкеке çакланчĕ. Эх, шел, чĕлхине чармасăр лекрĕ»,— кулянса илчĕ вăл.

Тарасов хыпарĕ маншăн та йывăрччĕ: Руссаков аслă лейтенант пултаруллă та хăюллă вырăс командирĕ, нимĕнле чăрмавра та чакса тăман, хăйĕн шухăшне чылай чухне пытармастчĕ, тӳрех каласа хурать те хӳтĕленме те тăрăшмасть. Эпĕ те, батальон командирĕ Комаров капитан та ăна пĕрре мар асăрхаттарнă, анчах ĕçе малалла яман. Темиçе кун иртсен, хăйĕн йăнăшне вăл ăнланатчĕ те каçару ыйтатчĕ. Эпир ăна пĕрре мар каçарнă. Хамăр хушăри калаçу хамăр хушăрах юлнă. Халĕ вара Чиркин политрук УПна çитернĕ. Уйрăм пая çитерсен (кĕскен УП пулать), унти çынсем никама та пăхса тăмаççĕ — ĕçе тӳрех çар трибуналĕн аллине параççĕ. Çар трибуналĕ суд тăвать те хаяр приговор йышăнать, çавăнтах «айăплă» çынна 1941 çулта леш тĕнчене ăсатнă. Халĕ Руссаков та çак синкер шăпаран чĕррĕн тухасса шанмастăп. Ăна ниепле те хăтарма çук; хăтарма çӳресен хăвна та пĕтереççĕ. Эпĕ кулянма тытăнтăм, анчах хам куляннине Тарасова систермерĕм, ăна тума юрамасть — лайăх пĕлетĕп. Ман çакăн пек калама тиврĕ: «Çиччĕ виç те пĕрре кас», тенĕ ваттисем. Питĕ ăста каланă: сăмаха персе яриччен пуç тавра шухăшламалла. Руссаковăн чĕлхин чаракĕ сахалччĕ. Хăй сăмахĕшĕн хăех явап тытать. Урăх манăн нимĕн те каламалли çук»,— тесе хутăм.

Тарасовăн вăрттăн шухăшне эпĕ пĕлместĕп, тен, ман шухăша пĕлесшĕн те паянах УПна çитересшĕн... Вара вăл полк командирне паянах ларать, мана пĕтерсе пĕр карт çӳлелле хăпарать. Çавăнпа та манăн айван пулмалла мар — вăхăчĕ çапла.

Хам панă ĕçе мĕнле пурнăçланине ыйтрăм, сведение çырса пама хушрăм. Вăл чăнах та çырса килнĕ сведение тыттарчĕ, эпĕ унпа хăвăрт паллашрăм, вилнисене пытарнă çĕре кайса сăмах калама сĕнтĕм. Тепĕр çур сехетрен полк малалла каяссине пĕлтерсе хутăм.

Тарасов хушнă ĕçе тума васкарĕ. Эпĕ çăмăл машина ăшне кĕрсе лартăм та çавăнтах Лариса çырăвне кĕсьерен туртса кăларса вулама тытăнтăм. Эпĕ унран уйăха яхăн çыру çуккипе тунсăхласа çитнĕччĕ, унăн çырăвĕ маншăн çурхи хĕвел шевли пек чуна ăшăтса ячĕ. Мĕн пек хаклă вăл, сывăх çыннăн çырăвĕ! Мĕн çырать-ха манăн ытарайми чечекĕм?!

«Манӑн чӗре патӗнчи ҫывӑх Аркаш. Эпӗ сан ҫырӑвна илтӗм, яла кайса пӗтӗм кил-йыша вуласа савӑнтартӑм. Эсӗ сыввишӗн пурте савӑнтӑмӑр. Хаяр тӑшмана Мускав патӗнчен кӗҫех хӑвалама тытӑнатпӑр тесе ҫырнишӗн шутсӑр хӗпӗртерӗмӗр. Унччен кӗҫ-вӗҫ Мускава илеҫҫӗ пулӗ тесе сехре хӑпнӑччӗ. Сан ҫырӑву пӗтӗм ял ҫыннисене хевте кӳчӗ, кӑмӑла ҫӗклерӗ. Ҫавӑн пек ырӑ ҫырушӑн эпӗ сана тав тӑватӑп, манпа пӗрле кил-йыш, пур тӑвансем. Халӗ ял хӗрарӑмӗсем фронта валли ӑшӑ ҫӑм чӑлха, алса ҫыхса пачӗҫ, тепӗр эрнерен сирӗн пата ҫитме кирлӗ. Эсир унта, хаяр сивӗре, мӗнле тӳсетӗр-ши тесе кулянатпӑр. Аркаш мӑшӑрӑм, уру-аллуна хытӑ упра, тӑм илме ан пар, ҫӑм чӑлха тӑхӑн, алсатуль тӑхӑн — вара нимле сивве те парӑнмастӑн. Эпӗ вӗрентсе калани сана кулӑшла туйӑнсан та — итле, кӑна эпӗ анчах мар, аннӳ те ҫавнах калать. Вӑл манпа юнашар лрать, хӑй шухӑшне мана пӗлтерет, сана сывӑ тавӑрӑнма ирсерен турӑ умӗнче кӗл тӑвать.

Аркаш, сана ялти хыпарсем те интереслӗ пулӗ. Ҫапӑҫу хирӗнчен аманса Ярсутов Григорий Павлович таврӑнчӗ, ӑна сылтӑм уринчен хытӑ амантнӑ, костыльпе ҫӳрет. Тепри — Чаржаев Гаврил Антонович, унӑн сылтӑм аллине хытӑ амантнӑ, ӑна ҫакса ҫӳрет, нимле ӗҫе те кӳлӗнмен-ха. Тӗп урамри Ярдарейкин Степанпа Чуворов Павел Мускав патӗнчи ҫапӑҫура вилнӗ хучӗсем килнӗ, ашшӗ-амӑшӗ, тӑванӗсем хытӑ кулянаҫҫӗ. Ярдарейкин Степановӑн арӑмӗ темиҫе кун ӗнтӗ йӗрет, апат та ҫимест теҫҫӗ.

Кашни эрнерех ялтан кама та пулин салтака ӑсатаҫҫӗ, кашни эрнерех хӗрарӑмсем вӗри куҫҫульпе йӗрсе юлаҫҫӗ. Мускав патӗнчи Гитлер ҫарӗ пирӗн пата ҫӗмӗрсе ҫитесрен хӑраса халӗ те Ямазпа Сарьел патне ҫитиччен Сӑр сылтӑм енӗпе тарӑн траншейӑсем чаваҫҫӗ, танксене хирӗҫ кӗрешмелли ҫиеле хуплануӑ тарӑн шӑтӑксем алтаҫҫӗ, хӑшпӗр ҫӗрте минӑсем те лартаҫҫӗ пулмалла. Кашни ялтан Сӑр тӑрӑхӗнче вуншар вӑйпитти ҫын ӗҫлет, ытларах хӗрсемпе хӗрарӑмсем. Уйӑх хушши унтах ӗҫлесе пурӑнаҫҫӗ. Хӗрӗх градус сивве пӑхмасӑр метр ҫурӑ шӑннӑ ҫӗре лумсемпе, пешнесемпе ҫӗмӗрсе траншейӑсем алтаҫҫӗ, дзотсем тӑваҫҫӗ... Вӑт мӗнле паттӑр ӗҫлет пирӗн халӑх хӑйне хӳтӗлесшӗн. Вӑл ырми-канми тӑрӑшать ҫӗршыва упраса хӑварасшӑн Ниушлӗ хура хӗреслӗ тӑшман пирӗн пата ҫитиччен килӗ? Ниушлӗ эсир, Аркаш, ӑна малалла кайма тытса чараймастӑр? Вӑл пирӗн пата килет пулсан, пирӗн ӑҫталла ҫак хаяр сивӗре тармалла? Эпир ҫул ҫинчех шӑнса хытатпӑр, ниҫта тарса та хӑтӑ-

лаймастпăр. Çакăн пек лару-тăру пире шутсăр хăратать, çĕрле выртсан та манăн та, хуньяпа хĕр пултăрăн та ыйăх килмест, ир еннелле кăна çывăрса каятпăр. Эсĕ, Аркаш, ман ыйту çине часрах хурав пар-ха. Эсĕ пире мĕн сĕнетĕн, ăçта кайма хушатăн?»

Çырăва вуланă май эпĕ Чăвашри лару-тăрăва ăнлантăм: унти çынсем хăраса ӳкнĕ — нимĕç çарĕ çĕмĕрсе çитесрен хӳтлĕх хатĕрлеççĕ, анчах хăйсен хӳтлĕхне шанмасăр урăх çере тарса кайма шухăшлаççĕ, анчах ăçта каймаллине те пĕлмеççĕ, манран ыйтаççĕ, мĕскĕнсем.

Çырăва вуласа тухсан, пăлханса кайрăм, манăн халех ларса Лариса патне хурав хатĕрлес килчĕ, анчах май çук: халех наступлени пуçланать. Манăн хам полк умне пырса тăмалла та шăп тăхăр сехетре нимĕçе хирĕç çапăçăва тухмалла.

Эпĕ çитнĕ çĕре полк хатĕрленсе тăнă, ун пуçĕнче Тарасов Гурий Иванович майор, Гаркуша Зинович Ильич политкомиссар, пĕрремĕш батальонăн командирĕ Орлов майор тата ыттисем тăраççĕ.

Эпĕ пурне те сывлăх сунтăм. Тарасов майор мана полк хăй умĕнчи тĕллеве пурнăçлама хатĕрри çинчен пĕлтерчĕ.

Еçсĕр тăнипе боецсем шăнни маншăн тӳрех паллă пулчĕ. Эпĕ полка Новопетровск поселока çитиччен пĕр чарăнмасăр кайма васкатрăм, поселока 118 полк ирĕке кăларать, пирĕн ăна йышăнса йĕрке тумалла, хамăрăн малаллахи планпа паллашмалла. Ман командăпа полк шоссе тăрăх хĕвеланăçнелле çул тытрĕ. Тĕтреллĕ çанталăк пирки нимĕç самолечĕсем сывлăшран тапăнмаççĕ, тĕтре сирĕлсенех вĕсене кĕтсе тăр, утă уйăхĕнче вăрманта ӳпре тапса тухнă пек.

Хамăртан малтан çур çухрăмра шоссепе 118 полк пынине куратăп, вăл айлăмран тăвалла хăпарать. Пĕлетĕп: Ударкин Лев Степановичпа полк комиссарĕ полка ертсе тăшман çине илсе пыраççĕ, вĕсем иккĕшĕ те нимĕçсемпе Смоленскшăн пынă хаяр çапăçурах паллашнă, вăрçă вутĕнче пиçсе тухнă.

Нимĕç çурла уйăхĕнче пирĕн çĕршыва вут-çулăм хыптарса хăрушшăн кĕрсе пынă пулсан, халĕ, раштавра, ялти çынсен ăпăр-тапăр тумтирне тăхăнса, пуçне пĕксе каялла таратать, халĕ ăна Мускав та, вырăс çĕрĕ те кирлĕ мар, офицерĕсем чармасан, хăйсен çĕршывне çитичечнех тарма хатĕр. Полк ертӳçисем каппайчăк нимĕç салтакăн шухăш-кăмăлĕ расна улшăннине лайăх кураççĕ. Раççейри хĕл сивви вара Гитлер пропагандин сĕрĕмĕпе тулнă нимĕç салтакĕн пуçне имретнине хĕссе тасатать, суя пропаганда пулнине тавçăрма

тытанать. Ахальтен мар тыткăна юлакансен йышĕ нуманлансах пырать...

## НОВОПЕТРОВСКИНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРНИ

Раштавăн вуннăмĕшĕнче ирхине дивизи штабне икĕ енчен те пĕр евĕрлĕ пулăмсем (сведенисем) хыпарлаççĕ: Новопетровское салине нимĕçсем хытă çирĕплетнĕ, ăна танкпа артиллери чаçĕсем çул тумасăр ирĕке кăларма май çук, пехота хăй тĕллĕн ирĕке кăларма пикенсен усăсăр пĕтет. Дивизи штабĕн начальникĕ Карпухин Арнольд Гурьевич полковник ку хыпара 16-мĕш çар штабĕнчен илет, çакăн хыççăн тепĕр темиçе минутран дивизи разведки пĕлтерет: Новопетровское сали умне мина уйĕ туса хунă, салинче артиллерипе минометсен чаçĕ вырнаçнă, дзотсем йышлă.

Карпухин полковник Воронов генерала хай илнĕ хыпара тӳрех телефонпа пĕлтерет. Воронов генерал ăнланать: танк бригадисĕр Новопетровское салине фашистсенчен тасатма май çук, çавăнпа та вăл П. А. Ротмистров полковникпа телефонпа сăмахлать, ăна пулăшма ыйтать. Çар штабĕнчен Ротмистров полковника Волоколамск еннелле хăйĕн танк бригадипе пĕр тытăнса тăмасăр наступлени тума хушаççĕ.

Воронов генерал Ударкинпа Чайкин командирсене танк бригадисĕр салана пырса кĕме хушмасть, çухату шутсăр пысăк пулассине систерет. Хăйĕн приказне командирсем патне çитерме связнойсене ярать.

Волоколамск шоссепе виçĕ километра яхăн кайнăччĕ. Пире шурă сăрпа пиеленĕ «Эмка» хӳтерсе çитрĕ, машина пирĕн тĕле çитсен чарăнчĕ, алăкĕ яр уçăлчĕ те унран яштака штаб çынни сиксе тухрĕ: «Чайкин полковник, сире пакет»,— тесе мана чĕнсе илчĕ. Эпĕ пакета илтĕм, хайхи связист ларнă-ларман машина тапранса кайрĕ, хыçран вĕтĕ юр кăна вĕçсе юлчĕ. Пакета уçрăм: мана Новопетровское салине танксем хыççăн çеç пырса кĕме ирĕк панă. Ударкин полковник та çавăн пек приказ илнине чухларăм. Ку приказ мана савăнтарчĕ. Эпĕ çавăнтах батальон командирĕсемпе аслă политруксене хам пата чĕнсе илтĕм, полка вун пилĕк минутлăх тăхтав тума хушрăм. Боецсем юр çине выртса канчĕç. Хаяр сивĕ пирки выртнă çĕртех боецсем кăçатă тăхăннă урисене вылятса, пĕр-пĕрин çумне çапса выртаççĕ, аллисене те канăç памарĕç.

Эпĕ командирсене генерал-майорăн приказне вуласа патăм, ăна каласа ăнлантартăм.

Виктор Комаров капитан кăштах тĕлĕннĕ пек пулса шÿхăша кайрĕ: «Вăрçăра пехотăна кун пек упрасшăн тăрăшнине эпĕ пĕрремĕш хут илтетĕп. Нумай чухне тăшмана мĕнле те пулин чарас тесе, ун танкĕсене хирĕç çуран çара кĕртсе яраççĕ вут-çулăм ăшне... Мĕн чухлĕ танк айне пулса лÿчĕркенмен пулĕ совет салтакĕ, мĕн чухлĕ тупăпа мина какайĕ пулнă-тăр пирĕн боец?! Ана никам та шута илмен, илме те май пулман эпир каялла чакнă чух. Çавăн пекех пулса иртнĕ кунтан инçех мар Волоколамск шоссе çинче Дубосеково разъезчĕ патĕнче. Ун çинчен халĕ пурте пĕлеççĕ».

Чăнах та, пур çар хаçачĕсенче те чӳк уйăхĕнче çирĕм сакăр панфиловец аллă икĕ танка хирĕç паттăрла çапăçса нихăшне те Мускав еннелле ирттерсе яманни çинчен хавасланса çырчĕç, ăна пурте вуланă. Эпĕ те çак паттăрсене ырласа хам боецсемпе командирсене пĕрре мар каланă.

Мĕн пулса иртнĕ-ха эпир ирĕке кăлармалли Новопетровское салара? Нимĕçсем вăл салана чӳк уйăхĕн çирĕммĕш кунĕсенче танксемпе атакăласа кĕрсе каяççĕ. Белобородов дивизийĕ питĕ хаяр çапăçнă хыççăн Ядромино поселокĕ таран каялла чакать. Нимĕç танкĕсем салана илме хытă пенĕрен чылай кил-çуртсем çунма тытăнаççĕ, çунакан салана вĕсем пырса йышăнаççĕ. Çурчĕсем хăйсене выртса тăма кирлĕ. Салана юлнă ватă-вĕтĕсене, хĕрарăмсене хăваласа кăлараççĕ, чăнах та, çаксем тăрăшнипе вунна яхăн киле упраса хăвараççĕ. Нимĕç танкисчĕсем кил хуçисене витене кăларса хăйсем йышăнаççĕ, хаяр хĕл сиввинче хуçаланаççĕ. Тепĕр кунне мотопехота çитет, çунса кайнă пӳртсен сакайне дзотсем выранне хӳтĕленмелли тăваççĕ, пулеметсенчен пемелли амбразурăсем хатĕрлеççĕ. Кашни дзотра пулемет расчечĕ вырнаçать. Салара вуникĕ-вунпилĕк дзот туса лартаççĕ пĕр талăкра.

Салан хĕвелтухăç енче, Моклуш шывĕн сылтăм çыранĕнче, Кузнецовсен килйышĕ пурăнать. Çуртне вунтăватă çул каялла Иван Васильевичпа АлександраГригорьевна хăйсем пĕрлешнĕ хыççăн тăрăшса лартаççĕ. Урам еннелле виç чӳрече, кил хушшинелле икĕ чӳрече кастараççĕ. Çине çутă хĕçтимĕр витеççĕ, урамалла крыльца кăлараççĕ. Мускав енчен пуйăспа пынă чух сала хĕрринчи çурт çур çухрăмранах курăнса ларать. Илемлĕ, курăмлă çурт. Иван Васильевич, пуртă-пăчкăпа туслăскер, сĕтел-пукан, савăт-сапа лартмалли буфет, хăйсене выртса тăмалли çăмăл кравать, кĕпе-тумтир хумалли гардероб ăсталать. Хăйсене валли çеç мар, çывăх

тăванěсемпе юлташěсем валли те буфетсем, гардеробсем туса парнелет.

Ырă та ěçчен Александра Григорьевнăпа Иван Васильевич шутсăр килěштерсе пурăнаççě, нимле ěç те вěсене хăратмасть. Александра Григорьевна çу каçипех анкартинче пахча-çимěç туса илесшěн тăрмашать, мăшăрě те пахча ěçěнчен пăрăнса тăмасть, çěрулмине вăхăтра лартать, шăтса тухсан, имçам сапать, хурт-лăпшанкăран тасатать тата ытти ěçсене те вăхăтра тăвать.

Килěшўллě мăшăрăн йыш та хушăнсах пырать, кашни ик çултан çěнě кайăк çěр çине килет. Иван Васильевич малтанхи ывăлне Петěр ятлă хурать. Ăна ахальтен мар, çамрăк чухне вăл Нева шывě çинчи аслă хулара темиçе хутчен пулать, çав хулана пуçласа яракан улăп пек Петěр патшан ěçě-хěлěпе, пултарулăхěпе паллашать, ăна çак чикесěр ăслăтăнлă, хăюллă та паттăр çыннăн сăнарě тыткăнлать. Çавăнпах ывăлне те ун ятне парать. Ěмěтре те пулин хăйне улăп пек Петěр патшан пěр тěпренчěкě вырăнне хурса кирек мěнле ěçе те çěнěлле те ытарма çук илемлě тума тăрăшать, çулсерен хăй ăсталăхне ўстерсе пырать.

Фашистла Германи çарě кěтмен çěртен тапăннипе пирěн çěршыва шаларан та шала кěрсе пырать, хулапа ялсене вут ăшне тăвать, хăй хыççăн хура кăмрăкпа сăрă кěл купи хăварать, совет çыннисене пинě-пинěпе персе вěлерет, юлнисене хăйěн çěршывне чура тума ăсатать.

Шăп Волоколамск шоссе çинчи Кузнецовсен сали те нимěçсен аллине çакланать. Иван Васильевич хăй вăрçă тухсанах усал вăя хирěç кěрешме тухса каять, Смоленск хулишěн пынă хаяр çапăçура йывăр аманать те госпитальре вилет. Александра Григорьевна хăй ачисене упрас тесе хăйсенчен темиçе çухрăмри вăрмана ертсе каять. Унта вěсен утар пулнă, çавăнти утар пўртне пурăнма куçаççě, çимеллисене те унта илсе каяççě. Нимěç салтакěсем вěсен пушă килне савăнсах йышăнаççě...

Çар генералě Жуков хăйěн приказěнче танк тата мотопехотăпа артиллери чаçěсене Волоколамск шоссепе чугун çул çинчи станцисемпе поселоксене , хулисене тăшманран хăвăртрах ирěке кăларма чěнсе каланă, тăшмана пěр чарăнса тăмасăрах хăвалама хушнă. Унăн приказне пурнăça кěртме 16-мěш армин кăмандирě Рокоссовский генерал-лейтенант яваплă пулнине пěлтернě.

Рокоссовский генерал çак приказа пурнăçлас теллевпе

8-мӗш танк бригадин ертӳҫине Ротмистров полковника Новопетровское салине ирӗке кӑларма задани парать.

Танк бригади шоссе ҫине йӗркеленсе тӑрать, малта Комолов полковникӑн танк полкӗ, шоссе ҫинче тӑватшар танкӑн йӗркеленсе тӑрать.

Рокоссовский генерал танк бригади мӗнле ҫапӑҫма хатӗррине пӑхма хӑй ҫитрӗ те ҫӑмӑл машинӑран васкаса тухрӗ, унпа пӗрле адьютанчӗ, связисчӗ, ӑна сыхлаканӗсем. Яштака та ҫӳллӗ генерал танксем умне тухса тӑчӗ. Ун патне ҫавӑнтах вӑтам пӳллӗ ҫурма шурӑ кӗрӗк тӑхӑннӑ Ротмистров пырса рапортларӗ.

— Генерал-лейтенант, 8-мӗш танк бригади сирӗн задание пурнӑҫлама хатӗрленсе тӑчӗ. Бригада командирӗ Ротмистров полковник.— Полковник рапорт пачӗ те аяккала тӑчӗ. Генерал-лейтенант танкистсене ӑшшӑн саламларӗ, ҫитес ҫапӑҫусенче хӑюллӑ та паттӑр кӗрешме чӗнчӗ. Вӑл полковника алӑ тытрӗ те ырӑ та ӑнӑҫлӑ ҫул сунчӗ.

Ротмистров полковник танкистсем умне тухса тӑчӗ, вӑл пурне те илтмелле янратса каларӗ:

— Танк бригади, итлӗр ман командӑна! Рокоссовксий генерал-лейтенант панӑ яваплӑ задание пурнӑҫлама бригада хатӗр. Экипажсем, хӑвӑрт вырӑна йышӑнӑр! Бригада, малалла!

Танксен экипажӗсем танксене кӗрсе хӑвӑрт вырнаҫаҫҫӗ, водительсем стартер ҫине пусса танксене тапратса яраҫҫӗ; хурҫӑ машинӑсен моторӗсем кӗрлесе каяҫҫӗ. Тап-таса шоссе ҫулӗпе кӗрлесе шӑвать танк бригади. Ун янравлӑ шавӗнче сисӗнет ҫарӑн вӑй-хӑвачӗ.

Бригадӑна ӑсатнӑ хыҫҫӑн Рокоссовский генерал Ротмистровӑн блиндажне хӑйӗн ҫывӑх ҫыннисемпе кӗрет, вӑл чи малтан телефонпа Жуков арми генералӗпе ҫыхӑну тытать, танк бригадипе пехота дивизийӗсем Новопетровское салипе станцине ирӗке кӑларма кайнине хыпарлать. Паян вӗсене ирӗке кӑларма шантарать. Жуков ӑна е штаба вӑхӑтра пӗлтерсе тӑмаллине аса илтерет.

Рокоссовский генерал-лейтенант Великие Луки хулинче (Псков облаҫӗ) 1896 ҫулхи раштавӑн 21-мӗшӗнче чугун ҫул машинист килйышӗнче ҫуралнӑ. Пӗрремӗш тӗнче вӑрҫинче 1914—18-мӗш ҫулсенче кӗҫӗн унтер-офицер пулса ҫапӑҫнӑ. 1917 ҫулта Хӗрлӗ гвардие кӗрет, унтан Хӗрлӗ Ҫарта служить тӑвать. 1918—20 ҫулсенче граждан вӑрҫинче утлӑ ҫар эскадронӑн командирӗ пулса шуррисене хирӗҫ ҫапӑҫать. Вӑл Уйрӑм утлӑ ҫар полкӗн командирӗ. 1925—29 ҫулсенче Фрунзе

ячĕллĕ Çар Академи çумĕнчи комсоставсен аслă пуçлăхĕсен пĕлĕвне ÿстермелли курсра вĕренет. КВЖД çапăçнă чухнехи вăрçăра 5-мĕш уйрăм Кубань утлă çар бригадин командирĕ те, комиссарĕ те пулать.

Аслă Тăван çĕршыв вăрçинче 9-мĕш механизированнăй корпусăн командирĕ пулса 1941 çулхи утă уйăхĕччен çапăçать. 1941 çулхи çурла уйăхĕнче ăна 16-мĕш арми командирĕ туса хураççĕ, фашистсемпе кĕрешет. Уйрăмах Рокоссовский генерал нимĕçсен пултаруллă çар пуçне Федор фон Бок фельдмаршала хирĕç пултаруллă çапăçать, ăна вăл пĕрре мар пыра-пыра çапса Мускав патĕнчен каялла 300 километр анăçалла хăвалать. Çак çапăçусенче Константин Константинович Рокоссовкий генералăн çапăçу пултарулăхĕ яр-уççăн палăрать, унăн пултарулăхĕ, çапăçури ăсталăхĕ вăйлă ÿсет, ун ятне пĕтĕм çĕршыв пĕлекен пулать.

Ротмистров Павел Алексеевич полковник ертсе пыракан саккăрмĕш танк бригади шоссе тăрăх кĕрлесе шăвать. Малта Комолов ертсе пыракан танк полкĕ. Шанса хытса ларнă юр асфальт çинче кăчăртатса тăрать. Вăл йывăр танксен пусăмĕпе асфальран хăйпăнса юлать.

Танк полкĕ пирĕн пата кĕрлесе çитсен, эпĕ хам полка шоссе çинчен хир еннелле илсе тухатăп, вĕсене сумлăн ирттерсе яратпăр. Хальхинче эпĕ хамăрăн çар пуçлăхне ырлатăп: тăшман çирĕпленнĕ яла пехотăпа илме çукикне ăнланнишĕн, мала танк полкне янишĕн.

Танк полкĕ хыççăн эпир хăюллăн малалла танккатпăр. Халĕ нумаях кайман-ха — пилĕк-ултă çухрăмран мала мар. Кашни утакан боецран çăра сывлăш пăсланса тухать те пасланса ларать. Хытă сивĕрен пурте çĕлĕксен хăлхисене çыхнă, пит-çăмарти çеç хĕп-хĕрлĕ курăнать, хăшĕн утнă май питçăмарти, сăмса тăрри шуралса каять, тăм илет. Тăм илнĕ салтака юнашар пыракан юлташĕсем çавăнтах асăрхаттараççĕ: Хĕл мучи питрен чуп тунă, шăлса тасат! Салтак стройран хăвăрт шоссе хĕрне тухать те шурă юрпа питне сăтăрать, пичĕ анис улми пек хĕрелсе кайсан, йĕпе питне алсапа шăлса тасатса, хăйĕн вырăнне çитме васкать. Çурăмĕ хыçĕнчи япаласен хутаççи, сулахай енчи противогаз, сылтăм енчи пилĕкрен çыхнă пĕчĕк кĕреçе тата гранатăсем вăл васкаса утнă май силленсе илеççĕ. Противогазсăр пуçне салтака вăрçăра пурте кирлĕ. Ăна вăл хăй çартан кайиччене ашак пек çĕклесе çÿрет. Юрать, ăна хĕвелтухăç çилĕ çурăмран пырса хыçалтан тĕртет, утма çăмăллатать. Боецсем пĕр-пĕрипе

ним пуплемесер шоссепе анăça утаççе, кама ăçта çитиччен утма шăпа тухать, халĕ вĕсенчен нихăшĕ те пĕлме пултараймасть, хăшне вилĕм, хăшне аману кĕтет, анчах нихăшĕ те çак асăмлă вутран тĕрĕс-кĕтел тухассине шанма пултараймасть, калама та май çук. Вăрçи ытла нумай та хăрушă пырать, унăн вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть: эрне кăна иртрĕ нимĕççене хамăр çĕршывра каялла чакарма тытăннăранпа. Хăçан ана хамăр çĕршывран тапса кăларса яратпăр, унтан ытти çершывсенчен тасатса пĕтеретпер, юлашкинчен хăйĕн çĕршывне парăнтарса вăрçа пĕтеретпĕр. Ытла та вăрăм юнлă çул! Қам ăна тĕрĕс-тĕкел утса тухĕ, хăйĕн çĕлен йывине çĕмĕрсе тăкса хĕрлĕ ялав çакĕ? Халĕ çав çулăн пуçламăшĕ кăна. Ун вĕçĕ хăçан вĕçленессине никам та уçăмлă калаймĕ. Боецсем çине пăхнă май пуçăмра çак пысăк ыйтуллă шухăш мана канăç памарĕ. Хамăн шăпа мĕнпе вĕçленесси çинчен шухăшлас та килмерĕ, ытларах эпĕ вăрçăн терт-нушине тĕпренех куракан салтак çинчен шухăшларăм, ăна ман май килнĕ таран упрас килчĕ.

Қăнтăрлаччен утсан, эпĕ полка канма тăратрăм. Çуран çар çыннисем шоссе хĕрне, кюветăн икĕ енне, вырнаçса ларчĕç, хăйсемпе пĕрле илнĕ çимĕçе (сухари, сысна çăвĕ (шпиг), сахар) кăтăртаттарса кăшларĕç, кăнтăрлахи апат турĕç. Малта, пирĕнтен пилĕк километрта, тупăсенчен пени, снарядмина çурăлни кĕрлесе тăчĕ, шоссе çинчи сала хĕп-хĕрлĕ çунни чуна ыраттарчĕ.

Ротмистров танкĕсем салана ирĕке кăларасшăн кĕрешнине пĕлме пулчĕ. Дивизирен çăмăл машина вĕçтерсе çитрĕ, унта Ястребов полковникпа адьютант. Мана та унта ларма ыйтрĕç.

Эпĕ полка малалла ертсе пыма Тарасов майора каларăм. Пирĕн машина вунă минутран Новопетровское сали патне çитрĕ. Саларан нимĕççем пăрахса тарнă, анчах унтан тухса кайиччен тĕртсе çунтарса яма шутланă. Салан анăç енчен вут хыпать, ту пуçĕнче пĕр кил те юлман, кăмака пăрăхĕсем тăлăххăн хуп-хуран курăнса ларaççĕ, çунса пĕтмен кил вырăнĕсенчен хуп-хура тĕтĕм тухса сарăлать, куçа кĕрсе куççуль кăларать. Çунса пĕтмен сарайсем халĕ те ялкăшса çунаççĕ.

Салана лапам урлă каçмалла, унта сарăлса шыв юхать. Танкистсем тӳрех салана пырса ан кĕччĕр тесе, нимĕççем тол лартса çӳлти пысăк пĕвене татса янă, танкистсен çулне пӳлнĕ. Қайран çакна пĕлтĕмĕр. Қомлов комиссар каласа па-

на тăрăх, вăл ертсе пыракан танк полкĕ талккăшпе юхакан улăха çитсе тăрать. Пысăк чăрмав! Мĕн тумалла? Кăшт шухăшласа тăрсан, пĕр хĕрарăм вĕсене хăй патне чĕнет. Сала çывăхĕнче, улăха аннă çĕрте, пĕр пӳрт юлнă, нимĕçсен вут хыптараканĕсем ун патне çитме вăхăт тупайман, вĕсен васкаса каяла тармалла пулнă, çурт-йĕр тĕрĕс-тĕкел тăрса юлнă.

Комлов ун патне çитет, мĕншĕн чĕннине пĕлет.

— Эсир ман пӳрте пăсăр та пĕренисене шыв урлă йĕркипе хурса тухăр — танксем çăмăллăнах каçса кайĕç.

Вунпилĕк-çирĕм минутран танкистсем пӳрте сӳтсе шыв урлă пĕренесене хурса çул тăваççĕ.

Пăхать Комлов: хĕрарăм пĕччен мар, унăн ултă ача, асли, Петя ятли, 14 çулта, ыттисем 5 хĕрача, ыттисем пурте Петьăран кĕçĕн. Хĕрарăмĕ, Александра Григорьевна Кузнецова, совет çарне хĕвел çутине кĕтнĕ пек кĕтнĕ, упăшки Смоленск патĕнче нимĕçсемпе паттăр çапăçса пуçне хунă. Унăн тăшмана курайманлăх вĕресе тăнă. Хăйĕн пурăнмалли пӳрт юлмасть пулсан та, ăна хĕрхенсе тăмасть, танкистсене пăсма хăй чĕнет тăшмана хăвăртрах пĕтерччĕр тесе. Тĕлĕнмелле паттăрлăх, çĕршыва юратни! Патриотка!

Комолов Яков Яловлевич Кузнецовăна расписка çырса парать.

Листок çине çырнă расписка.

«Тăшмана йĕрленĕ май танк полкĕ каçса кайма çук шыв тĕл пулать. Ун çине пĕренесем сарсан çеç каçмалла. Новопетровское салинче пурăнакан Кузнецова Александра Григорьевна пире пулăшас тесе, хăйĕн пӳртне хĕрхенмест, шыв урлă каçма кĕпер тунă çĕре парать. Çак расписка документ вырăнĕнче пулать. Çак документа кăтартсан, çĕнтерӳ хыççăн А. Г. Кузнецовăна çĕнĕ пӳрт туса памалла.

Танк полкĕн комиссаре Я. Я. Комлов алă пуснă».

Танксем шыв урлă ăнăçлă каçса икçĕр метр улăхпа хăпарса саланса пырса кĕмеллеччĕ. Сасартăк малти танк умне Петя Кузнецов тухса тăрать.

— Пиччесем, пиччесем, халех чарăнăр! Кунта фашистсем минăсем лартса хăварчĕç! Урăх çĕртен каймалла.

Танкистсем анса пăхаççĕ: чăнах та, юр ăшне мина йышлă лартса хăварнă.

Петя вĕсене вăтăр-хĕрĕх метр аяккалла илсе каять.

— Çакăнта вĕсем лартма ĕлкĕреймерĕç, тарма васкарĕç. Эпĕ пӳртрен сăнаса тăтăм,— ăнлантарать танкистсене вăл.

Петя малта, танксем умĕнче, юра ашса пырать, салана хăпаракан çул çине тухать, анчах пĕр танк мина çине пулать те ахлатса çурăлать, малта пыракан Петьăна мина ванчăкĕ пĕççинчен тивсе амантать. Урăх пĕр танк та мина çине пулмасть — салана полк пĕр çухатусăр пырса кĕрет. Фашистсем çур сехет малтан саларан тухса тараççĕ, çунтаракансене кăна вăхăтлăх хăйсем хыççăн хăварнă. Тарма ĕлкĕрни тарать, ĕлкĕрейменнисем — тыткăна лекме хăтланаççĕ, пытанса юлма тăрăшаççĕ.

Эпир салана çитиччен танк полке фашистсене йĕрлесе малалла Деньково станцине васкана: тăшмана çирĕпленсе ларма парасшăн мар.

Пирĕн полк çитиччен эпир машинăпа салана çитрĕмĕр, шыв урлă пĕренесем çийĕпе сиктерсе каçрăмăр, танксен çулĕпе салана çитсе кĕтĕмĕр. Пăхма хăрушă: пӳрт-сурчĕсем вутпа çунса пĕтнĕ, кăмака кĕлетки, мăрйи тĕтĕмпе хуралса ларнă, хĕç тимĕр витнĕ пӳртсем йăтăнса аннипе кăмака таврашне хупласа лартнă, унăн айĕпе халĕ те тĕтĕм явăнать. Пирĕн «эмка» машина иртнĕ чухне икĕ çĕрте чарăнса тăчĕ, урам урлă ик-виçĕ нимĕç машинисем юрăхсăра тухса йăванса выртаççĕ. Килнĕ çулпа каяла шоссе çине тухатпăр та каллех малалла — анăçалла каятпăр. Урамра çынсене курмастпăр, нимĕçсем хăйсен юлташĕсен виллисене пытарма ĕлкĕрнĕ — куç умĕнче курăнмаççĕ.

Шоссепе салаваррине çитсен, уçă вырăна — площадкăна — тухатпăр. Такан лартсах çакмалли тунă, çӳлти каштаран пăявсемпе тăватă çынна çакса янă: виçĕ арçын, пĕр хĕрарăм.

Эпир машинăран тухатпăр та такан патне утатпăр. Пирĕн пелес килет: фашистсем ку саларан кама çакса вĕлернĕ. Ястребов полковникпа эпир хайхи çакса вĕлернĕ çынсем патне çитсе тăратпăр. Пурте çамрăксем. Пичĕ-куçĕ, çара аллисем шурă мрамор пек чăлт шурă. Хĕрача уринче кĕске кунчаллă çăматă, ыттисен урисенче чăлха кăна, кăçатăсем çук. Иккĕшĕн çийĕнче çĕтĕк фуфайка, пĕр çамрăкăн — хăмăр пиншак. Çак вăрăм çамрăкăн пит-куçне хĕнесе пĕтернĕрен шыçăнса кайнă, янахĕнче ик-виçĕ çĕрте юнлă шăйрăлчăксем. Пурне те хытă хĕнесе асаплантарнă...

Сала çыннисем çуккипе эпир вĕсем камсем пулнине пĕлеймерĕмĕр.

Ястребов полковник выр̆анти власемсӗр пирӗн кунта хутш̆анма кирлӗ мар тесе шутларӗ. Пирӗн задача — хам̆ар хула-ялсене, т̆аван ҫӗре ирӗке к̆аларасси пулмалла, фашистсен тискерлӗхне хам̆ар ҫар ҫыннисене к̆атартса, вӗсен чӗринче курайманл̆ах ӳстермелле. Нимӗс ҫарӗн тискерлӗхӗ кӗсех сап̆аҫ̆ава кӗрекенсене хаяррӑн тав̆арма чӗнет. Ҫак тискер ӳкерчӗк нимӗс ҫарӗ этемлӗх туй̆амне сухатнине пӗлтерет. Гитлер калан̆: нимӗҫ салтакӗн чӗри выр̆анӗнче хыт̆а чул пулмалла, урӑх й̆ахри нацисене пӗр хӗрхенмесӗр пӗтермелле, в̆ал пыс̆ак наци е пӗчӗк — ӑна п̆ахса т̆амалла мар, ҫут тӗнчере пӗр пирӗн таса юнл̆а ари й̆ахӗ хуса пулмалла, тенӗ.

Эпир машин̆ана кӗрсе ларса сала т̆ар̆ах с̆анаса сӳрерӗмӗр, выр̆анти ҫынсене тӗл пуласса шант̆ам̆ар. Пирӗн тӗп урамран п̆ар̆анса ытти урамсене курма кайр̆ам̆ар. Пур сӗрте те с̆анс̆ар ӳкерчӗк: ҫунса кайн̆а пӳрт-суртсем, т̆ар̆ас̆ар ларакан чул ҫуртсем, юрпа витӗнеймен к̆амр̆ак куписем, урам хушшинче арканн̆а-ванн̆а машин̆асем, тягачсем, туп̆а вуллисем, ураписем, снаряд куписем, ещӗкӗсем. Х̆ашпӗр ҫӗрте машин̆апа иртме май ҫук, ун пек чухне водительпе ман адъютант тухаҫҫӗ те сул ҫинчен ч̆армав кӳрекен ӑп̆ар-тап̆арсене айккалла п̆арса хураҫҫӗ, снаряд ещӗкӗсене сул хӗрнелле ыв̆атаҫҫӗ. Сул йӗркелесен, эпир каллех малалла каятп̆ар.

— Ҫитет. Каялла тухар,— команда пачӗ водителе дивизи командир̆ан ҫумӗ Ястребов полковник, хӑйне кашни минутрах Воронов генерал ш̆анк̆аравлассине пӗлсе.

Водитель с̆ам̆ал машин̆ана каялла сав̆арчӗ, шоссе ҫине тухакан хӗреслӗ урампа яр̆антарчӗ. Сала варрипе тухакан шоссе ҫулӗ ҫине тухр̆ам̆ар к̆ана — пирӗн машин̆ана ас̆архан̆а связист ал̆а сӗклерӗ. Водитель машин̆ана чарчӗ. Связист чупса пычӗ те Ястребов полковника Воронов генералпа сыхӑнма хушрӗ. В̆ал юлашки сехетре мӗн пулса иртнине, полксем ӑстине, мӗнле й̆ыв̆арл̆ахсем тухса т̆анине — пӗтӗмпех пӗлесшӗн. Ястребов связиста ларма хушрӗ, машина таппанса кайрӗ, шоссепе ан̆асалла вӗстерсе ант̆ам̆ар, ман̆ан полк та салана ситсе кӗнӗ, Тарасов майор мана шырама темиҫе боеца чуптарн̆а — лешсем тавр̆анманччӗ-ха.

Связистсем салана ҫити сых̆ану провочӗсене илсе ҫитерн̆ӗ. Хӑйхи ҫырма хӗрринчи Кузнецовсен сарайне телефон аппарачӗсене те лартн̆а.

Ястребов полковник трубк̆ана илет те кирлӗ номер ҫине пусать — лерен сас̆а янраса каять:

— Виктор Васильевич, ку Ястребов калаҫать. Эпӗ кунти

лару-тарупа сире паллаштаратăп. Ротмистров танк бригади хыççăн 118-пе 52-мĕш полксем № салана пĕтĕмĕшпе йышăнчĕç. Выранти çынсем çук. Нимĕçсем ялтан тухса кайнă, салана çунтарса янă.

Генерал телефонпа пĕлтерет:

— Павел Алексеевич, халех 52, 118 полксене Деньково станцине ирĕке кăларма илсе каятăп. Эпĕ Новопетровское салине куçатăп. Малалла фронтпа унтан çыхăну тытатăп. Мĕнле йывăрлăх сиксе тухать, мана çавăнтах пĕлетретĕн. Деньковăна паянах нимĕçсенчен тасатмалла, çар штабĕнчен çавăн пек приказ.

— Анланмалла. Тепĕр пилĕк минутран эпĕ полксене ертсе анăçалла каятăп, — кĕскен хуравлать Ротмистров.

Вăл мана тата Ударкин полковника полксене малалла Деньково станцине фашистсенчен тасатмаваскатрĕ.

Эпĕ хам пата батальон командирĕсене кĕске вăхăтрах пухрăм та Воронов генерал приказне ĕçе кĕртме чĕнсе каларăм. Полк, ирхи апат тунăскер, батальонăн-батальонăн шоссе çулĕпе анăçалла çул тытрĕ.

Çил-тăман вĕçтерме пăрахрĕ, анчах хĕвелтухăç çилĕ тапхăр-тапхăр аякран пыра-пыра тĕртрĕ, утма чылай çăмăллатрĕ. Сивĕре самаях шăннă боецсем ăшăнас тесе васкаса утăмлаççĕ, ретсем хушшинчи утăма çирĕп тытаççĕ. Пăхсан, батальонсем халĕ шоссепе уява тухнă евĕр, хастарланса пыраççĕ. Анланатăп: вĕсене çилпе сивĕ тата ирхи хаяр шĕвек ăша яни васкатать, хастарлатать. Ку та сахал: эпир халĕ хамăр çĕре ирĕке кăларса анăçалла васкатпăр. Çак психологиллĕ тăрăм кашни боеца хаваслăх кӳрет, çĕнĕ шанчăк çуратать, çутă пуласлăха ĕненме тытăнать. Каялла чакнă чухне хамăр çĕнтерӳ пирки иккĕленнĕ пулсан, халĕ вăл пĕрре те иккĕленмест, пирĕн урамра та чаплă уяв пуласса шанать. Унччен ăна темле йывăр тиев пусса тăнă пек туйăннă пулсан, халĕ эрне хушши анăçалла пынă чух, хайхи çăкă çурăм хыçĕнче çуккине сисет, ăçта ӳксе юлнине те астумасть. Çавăнпах вăл хăйне çăмăллăн туять. Пăхатăп эпĕ йĕркипе пыракан çамрăк, вăйпитти боецсем çине — ман чĕре хаваслanса тапать. Акă, вĕсем пурте пуçĕсене тӳрĕ тытнă, хăюллăн малалла пăхаççĕ, урисене вăрăммăн ярса пусса хăвăрт утаççĕ. Пĕлеççĕ вĕсем: Деньково станцине тепĕр сехетрен çитмелле, нимĕçсем тымар яриччен вĕсене унтан хӳтерсе ямалла.

Вунă сехет тĕлнелле çил лăпланчĕ, юр та çумасть. Çанталăк лайăхланни пире шиклентерме пуçларĕ. Пĕлетпĕр эпир: тӳлек çанталăк нимĕç çăханĕсемшĕн ырлăх.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, анăçран кĕрленĕ сасăсем илтенсе кайрĕç.

— Анăçри пĕлĕте сăнăр!— систертĕм боецсемпе командирсене.

— Самолетсем! — кăшкăрчĕ Орлов майор. — Батальон, юр ăшне!

Ытти батальонсем те шоссен икĕ енчи юр ăшне чăмрĕç. Хайхисен çийĕнче шур халат пирки юр ăшĕнче боецсем палăрми пулчĕç.

Эпĕ Орловпа иккĕн кювета умлă-хыçлă выртрăмăр, шур халатпа витĕнтĕмĕр.

— Пире тăшман асăрхать-ши сывлăшран? — иккĕленсе сăмахлатăп Орловпа.

— Аякранах асăрхарĕç пулсан, хăтăлаймастпăр,— хуравлать мана майор.— Манăн полкра пĕр çын та çухатас килмест: пĕр кĕрешӳсĕр, ытла та айванла çухату пулса тухать.

Акă малти «юнкерссем» пирĕн çине вĕçсе çитрĕç. Эпĕ пуçа юр ăшне чиксе выртатăп, пĕр сасă кăлармастăп. Эпĕ ăна хам хăранишĕн мар, пуçа хускатсан, нимĕç летчикĕ асăрхасран — полка сиен кӳресрен.

Хайхи «юнкерссем» пирĕн çинче чарăнса тăмасăрах малалла кĕрлесе иртрĕç. Санçурăма пусса выртакан чул аяккаллах ӳкнĕннех туйăнчĕ.

Самолетсем куçран çухалсан, эпĕ шоссе çине çĕклентĕм, ман хыççăн — Орлов майор, Гаркуша политкомиссар. Орлов батальонĕ шоссе çине тухса йĕркеленсе тăчĕ. Ытти батальонсем те хăйсен вырăнĕсене йышăнчĕç.

Ура айĕнчи шăннă хытă юра кăчăртаттарса анăçалла васкатпăр. Эпир виççĕн хамăр полк умĕнче. Манпа юнашар тĕреклĕ те патмар Гурий Иванович Тарасов майор хулăм саслă. Вăл кăвак кăçатăпа, çийĕнче шурă çурма кĕрĕк. Пуçĕнче кролик тирĕнчен çĕлетнĕ шурă та ăшă çăмлă çĕлĕк, ăна хăйсен район çыннисем почтăпа ярса панă парне. Унăн Белавкăра арăмĕпе икĕ ачи ашшĕ-амăшĕ патĕнче пурăнаççĕ. Вăрçă пуçланиччен Тарасов Смоленск облаçĕнче пĕр гарнизонра службăра тăнă, арăмĕпе тата ачисемпе «çар хулинче» икĕ пӳлĕмлĕ хваттерте пурăннă. Нимĕçсем Смоленск патнелле тапăнса çитсен, вĕсен чаçĕ нимĕç çарне хирĕç çапăçма тухнă. Вăл хăйĕн кил-йышне васкасах тухăçалла ăсатнă. Лиза арăмĕ икĕ ачине илсе, йывăр чăматанне мекерленсе çĕк-

лесе, Мускав пуйăсĕ çине ларса вĕçтерет, икĕ талăкран аран-аран тĕп хулана çитсе ӳкеççĕ, вĕсен пуйăсĕ çине нимĕç самолечĕсем тапăнаççĕ, пысăк калибрлă пулеметран пуля çутараççĕ, чылай пассажирсене амантса вĕлереççĕ. Мускава çитес умĕн бомба та тăкаççĕ. Лизăпа ачисем хăйсен телейне кура çирĕм пилĕк вакунран сыхланса юлнă ултă вакунран пĕринче ăнăçлăн Мускава çитсе ӳкеççĕ. Çирĕм ултă çулхи Лиза, нихçан турра ĕненменскер, тĕп хулана çитсе ансан, чарăнса тăрса сăхха яра парать, хăйсем сывă юлнăшăн çӳлти турра ырласа илет. Пĕчĕк ачисем — хĕрачипе ывăлĕ амăшĕ турра асăнса сăхсăхнине тĕлĕнсе пăхса тăраççĕ, вĕсем нимĕн те ăнланмаççĕ. Вĕсем сывăхĕпе иртекен пассажирсем Лизăна Мускав чиркĕвне кĕрсе çурта лартма сĕнсе хăвараççĕ.

Лиза ачисемпе çав кунах Чулхулана каякан пуйăс çине ларса упăшкин ашшĕ-амăшĕ патне пурăнма вĕçтерет. Паллах, хуньамăшĕпе хуньашшĕ патĕнче пурăнасси çăмăлах пулас çуккине çамрăк кинĕ чухлать. Анчах мĕн тăвăн? Унăн ашшĕ-амăшĕ Смоленск облаçĕнчи пĕр ялта юлать. Халĕ вăл фашистсен аллинче. Ашшĕ-амăшĕн хурлăхлă шăпи ăна халĕ хуйхăртать, ашшĕ — граждан вăрçин инваличĕ, хăрах урапа мĕнле пурăнĕ-ши тесе пăшăрханать Лиза.

Тарасов майор Смоленск хулишĕн пынă çапăçура сулахай хулĕнчен аманать те Мускав хулинчи пĕр госпитальре икĕ уйăха яхăн сывалать. Суранĕ сипленсе çитиччен Мускава хӳтĕлеме тесе госпитальрен тухать, хăй чаçĕ йывăр çапăçура пĕтнĕ хыççăн çĕнĕрен чĕртсе тăма Çĕпĕре ăсатаççĕ. Госпиталь хыççăн ăна та çĕнĕ чаçе каймалли хутсем параççĕ.

Акă вăл халĕ манпа пĕр полкра çума-çумăн тăрса çапăçать, унăн хăюлăхĕпе паттăрлăхĕ çинчен сăмахлама та кирлĕ мар, пĕтĕмпех ман куç умĕнче: мĕн хушнине вăхăтра тăвать, эп асăрхаманнине, ал çитменнине курсан, хăйĕн тивĕçне туйса, пуçарулăх кăтартать. Пĕр çавăншăнах ăна шанатăп, мана та унпа пĕрле тăшманпа çапăçма майлă.

Виççĕмĕшĕ — Гаркуша Зиновий Ильич полк комиссарĕ. Вăл Киев университетне вĕренсе вĕçленĕ историк, украинец. Çар çыннисемпе кăмăлласа ĕçлет, салтаксен ыйтăвĕсене вăхăтра хуравлать, хăй пултарнă таран пулăшма тăрăшать. Палăрса тăракан лайăх енĕсем: айăпа кĕнс кĕçĕн командирсемпе салтаксене тӳрех вăрçса тăкмасть, сăлтавне пĕлме тăрăшать, никама та вăрçă трибуналĕпе хăратмасть, коман-

дирсем ҫинчен сӑмах вылятмасть, никама та хивре сӑмахпа хирӗҫтермест, сӑпайлӑ.

Унӑн ҫитменлӗхӗ те пур: хӑйне кирлӗ ҫынсемпе, аслӑрах командирсемпе, комиссарсемпе йӑпӑлтатса сӑмахласси, вӗсене ырласси.

Пирӗнпе пӗрлех Иван Савелькин адьютанта палӑртмалла. Эпӗ мӗн хушнине командирсем патне вӑхӑтра ҫитерет. вӗсемпе пӗрмай ҫыхӑну тытать, мана мӗн кирлине хӑвӑрт асӑрхать те пулӑшмаваскать, шутсӑр тӑрӑшуллӑ лейтенант.

Ирхине йӑсӑрланса тӑракан сывлӑш пирки сывлама йывӑрччӗ. халӗ, вунӑ сехет тӗлне, тӗтре чылай сӗвӗрӗлчӗ, эпир куракан тавралӑх та чылай сарӑлчӗ, сур километрти шоссе ҫулӗ курӑнакан пулчӗ. Ҫул ҫинче нимӗҫсен ваннӑ, арканнӑ тупписем, машинисем тата ытти вӑрҫӑ хатӗрӗсем халӗ те унта-кунта тӗл пулаҫҫӗ. Вӗсем кунтан васкаса пӑрахса кайни каламасӑрах паллӑ.

Пирӗн полк хӑйӗн уттипе малалла шӑвать, Денькова ситесси те километр ытларах кӑна... Тепӗр ҫирӗм-сирӗм пилӗк минутран унта ҫитсе кӗме ӗмӗтленсе пыратпӑр. Ҫапах та хамӑр Деньковӑран разведка таврӑнасса тем пекех кӗтетпӗр. Пӑхатпӑр: пӗр разведчикӗ пире хирӗҫ чупсах килет, иккӗшӗ — хыҫалта. виҫҫӗмӗшне ҫӗклесе утаҫҫӗ. Тахӑшне амантнӑ — каламасӑрах паллӑ.

Пирӗн ума разведчиксен ертӳҫи — Васильев Илларион разведчик хашкаса чупса пычӗ. Вӑл вирьял чӑвашӗ, Муркаш районӗнчи Юнкапуҫран, Шупашкарпа Етӗрне ҫулӗ ҫинче ҫуралнӑ.

— Полковник юлташ, Деньковӑра фашистсем. Халӗ кӑна унта Истра водохранилище патӗнчи танксен часӗ пырса ситнӗ. Вӗсем Деньковӑна парасшӑн мар, пирӗн танкистсем Чисменӑна тӑшманран тасатма кайнӑ,— пӗлтерет пире Васильев разведчик.

— Эсир хӑвӑр нимӗҫ танкӗсене куртӑр-и? — кӑсӑкланатӑп эпӗ.

— Эпир поселокра чухне хӗвеланӑсран кӗрлесе ситреҫ. йышне калама пултараймастӑп, машинӑсем кӗрленӗ тӑрӑх — йышлӑн.

— Кама амантрӗҫ?

— Смелов разведчика. Нимӗҫсен малти танкӗ тӗп урама кӗрлесе тухрӗ те тӳрех пеме тытӑнчӗ. Эпир тепӗр урама тапса сикрӗмӗр. Смелов хыҫала юлнӑччӗ, ӑна ураран лектернӗ, Катейкинпа Шалимов ӑна ҫӗклесе килеҫҫӗ.

Эпĕ санитарсене Смелов разведчика хăвăртрах санчаçе ăсатмаваскатрăм.

Эпĕ полк умне çаврăнса тăтăм, сылтăм алла çĕклесе чарăнса тăма хушрăм. Раципе батальон командирĕсемпе аслă политруксене хам пата килме чĕнтĕм. Вĕсем çитиччен Тарасов майор, Гаркуша комиссарпа малалла мĕн тумаллине кĕскен сăмаахласа илтĕмĕр.

— Ман шутпа,— терĕ Тарасов майор,— пирĕн малалла каймалла мар, пирĕн батальонсене шоссе икĕ енĕпе вырнаçтармалла, танксемпе кĕрешме хатĕрленсе тăмалла, Мускав енне кайма памалла мар.

Гаркушăн урăхла шухăш: нимĕç танкĕсем çуран çарсăр шоссепе Мускавалла тапăнса килме айван мар: усăсăр ĕçне ахалех пĕлеççĕ. Вĕсен тĕп задачи — Деньковăра çирĕпленсе ларасси, Волоколамск шоссепе чугун çулне хăйсен ааллинче тытасси, пирĕн çарсене малалла кайма чарса тăрасси.

Юлташсемпе сăмахланă вăхăтра Орловпа Тагиров, Комаровпа Лысенко, Шоркинпа Кислюк çитсе тăчĕç.

Орлов майор мана куçран пăхнипех чăрмав сиксе тухнине ăнланчĕ, ыйту памарĕ, эпĕ мĕн хыпарлассине кĕтрĕ.

— Командирсемпе политруксем,— терĕм эпĕ шăппăнрах. Вĕсем пурте ман тавра пухăнчĕç.— Нимĕç танкисчĕсем Деньковăра. Вĕсем пирĕн çула пӳлме Истра водохранилище патĕнчен çитнĕ. Нимĕçсен командованийĕ пирĕн наступленине чарса лартасшăн. Аçтан кирлĕ — унтан хăйĕн чаçĕсене пирĕн çул çине тăратать. Эпĕ сире танксемпе кĕрешме хатĕр пулмаллине асăрхаттарасшăн. ПТО подразделенине полк пуçне, сирĕн хăвăр батальонри ПТРсене батальонсен умне кăлармалла. Тепĕр виçĕ минутран хатĕр пулмалла. Гранатометчиксен те мала тухмалла.

Командирсемпе аслă политруксене батальонсене таврăнса салтаксене тăшманпа тытăçма хатĕрлеме хушрăм. Хам çумри раципе дивизи командирĕпе Воронов генералпа çыхăнтăм, Деньковăра нимĕç танкĕсен чаçĕ пырса йышăннине пĕлтертĕм, вĕсене аркатса тăкма артиллерипе танк чаçĕсене, анчах вăл танксем ярасса шантармарĕ, хĕрĕх пилĕк миллиметрлă тупăсен икĕ дивизионне çитерме шантарчĕ. Вăл ман пата хăйĕн заместительне Ястребов полковника ярса пама пулчĕ, вăл çитиччен мана кĕтме хушрĕ.

Полк умри тăшманпа çапăçма хатĕрленнĕ хушăра бронетранспортер кĕрлесе çитрĕ, унăн хурçă алăкĕ усăлчĕ те шурă кĕрĕкпе шурă çĕлĕк тăхăннă çӳллĕ те тăлпам Ястребов полковник анчĕ, унпа пĕрле яштака адьютант.

Эпĕ ун патне ыткăнтăм, сылтăм алла хăлха патне çĕклерĕм, полк тăшманпа çапăçма хатĕрленнине пĕлтертĕм. Ястребов полковник мана тимлĕ итлерĕ, хăйĕн çавракка хура куçĕпе мана витĕмлĕ сăнарĕ.

— Вăт мĕн, полковник юлташ! Эсĕ хăвăн полкпа Денькована сылтăм енчен тапăнса кĕретĕн, сулахай енчен Ударкин полковник пырса çапать. Тураев майор шоссепе пырса хăйĕн тупписенчен нимĕç танкĕсене çатма çинчи пăрçасене ăшаланă пек ăшалать.

Эпĕ çапăçу мĕнле аталанса пынине тимлĕн сăнаса тăрăп, вăхăтра кăтартусем парăп. Эпĕ Деньково çывăхĕнчи чугун çул будкинче пулăп е çав таврашри склада хураллакан çуртра.

## ДЕНЬКОВĂНА ТАПĂНСА ИЛНИ

Кăнтăр тĕлне тавралăх уçăлса çитрĕ, тӳпери шурă пĕлĕтсем хĕвелтухăç еннелле хуллен шăваççĕ, çил палăрмаллах вĕрмест, кăштах çемçетрĕ, анчах хĕл сивви хуçаланать, чакмасть.

Эпĕ хамăн полка Деньково станцин сылтăм енне вырнаçтартăм. Солнцегорск енчен килекен шоссе çулне хыçала хăвартăм.

Васильев разведчикпа Катейкин, Вишневский юлташĕсем тăшман мĕн тунине пĕлме вырăнти хресчен тумне тăхăнса икĕ сехет каяллах кайрĕç, анчах каялла çаплах таврăнаймарĕç, нимĕçсен аллине çакалнчĕç-ши тесе шутлама тытăнтăм. Хам ентеше пĕрре те тăшман кулли тăвасшăн мар, яланах таса та сывă упрасшăн.

Хайхи Илларион Васильев сержантпа икĕ юлташĕ разведкăран вĕçтерсе çитрĕç. Васильев тӳрех ман пата васкаса кĕчĕ.

— Полковник юлташ, нимĕç танкисчĕсем халĕ пурте кăнтăрлахи апатра, хуралçăсемпе дозортисем кăна урамра, хăйсен танкĕсем, пулемечĕсем патĕнче. Ман шутпа, халĕ вĕсем çине тапăнма чи майлă вăхăт.

— Кун пек лайăх хыпаршăн тавах!— ырласа илетĕп Васильева.— Танксем йышлă-и?— кăсăкланатăп эпĕ.

— Точнă калаймастăп, вăтăр-хĕрĕх танкран кая мар пулас.

— Танксем патне çитсе тухма кунтан миçе метр?— Васильева ыйту паратăп.

— Пĕр çухрăмран мала мар,— кĕскен пĕлтерет вăл.— Эпĕ сире хам çулпа ертсе кайма пултаратăп.

Эпĕ Комаров капитана чĕнсе илетĕп, ăна хăйĕн батальонĕпе Деньковăна тапăнса пăхма хушатăп.

— Сире Васильев разведчик нимĕçсен танкĕсем патне тухма хăйĕн çулĕпе илсе каять. Сирĕн асăрханулла пулмалла. Тăракан танксене тивертсе яма граната çыххисем ытларах илĕр, çунакан шĕвек тултарнă кĕленчесем, тăват-пилĕк ПТР пулсан тем пекех пахаччĕ.

Комаров капитанпа Васильев, Катейкин разведчиксем батальона ертсе поселок патнелле чупрĕç, анчах нимĕçсем вĕсене кĕтсе выртнă иккен: сасартăк станоклă пулеметсем вут тăкма тытăнчĕç.

Комаровпа разведчиксем юр ăшне чăмрĕç, хыçалти батальон та çухалса каймарĕ, питĕ хăвăрт юр ăшне пытанчĕ. Салтаксен пуçĕ çийĕпе синкер пульăсем вĕри юн шыраса шилетсе вĕçрĕç.

Нимĕçсем пуç çĕклеме памаççĕ, пуля çутараççĕ.

— Мĕн тумалла? — шухăшлатăп эпĕ. Раципе Комаров капитанпа çыхăнатăп. Ăна тăшман пулемечĕсене пĕтерме гранатометчиксене усă курмаваскататăп. Хам та çав вăхăтрах полкри миномет взводне Комаров капитана пулăшма чĕнетĕп.

Вăхăт шăвать, нимĕçсем хăйсем çине тапăннине лайăх ăнланаççĕ, пирĕн вĕсене систермесĕр пырса çапасси сĕвĕрĕлсе кайрĕ.

Хĕвеланăçран артиллери, вăрçă турри: кĕрлеме тытăнчĕ. Пире пулăшма Тураев майор хăватлăн сас пама пуçларĕ. Снарядсем поселок урамĕсенчи тăшман танкĕсем çине хаплатса ӳкеççĕ, пирĕн корректировщиксем артиллеристсен командирĕсене тĕрĕс координатсем пĕлтерсе тăраççĕ. Нимĕçсен танкĕсемпе артиллерисчĕсем (артиллери чаçĕ пурри палăрчĕ) Тураев дивизионĕсене хирĕç çирĕп хуравлаççĕ, снарядсем сывлăшра çурса татти-сыпписĕр вĕçеççĕ. Сăнаса тăрсан, артиллери дуэлĕ куç умĕнчех. Хăшĕ çĕнтерессине тӳрех калаймăн. Тăшмана çĕмĕрсе тăкма халĕ пирĕн вирлĕ хутшăнмалла, анчах Комаров батальонĕ çĕр çумне пăталанă пек выртать.

Эпĕ Орлов ертсе пыракан пĕрремĕш батальона çурçĕрхĕвеланăçĕнчен тапăнса кĕме çĕклетĕп. Орлов майор хăйĕн батальонне ертсе нимĕçсене хыçал енчен тапăнса кĕме илсе кайрĕ, ĕç мĕнле пынине пĕлтерсе тăма связнойсене васкатма хушрăм.

Герман Федотович панă ĕçе тĕплĕ тунине пĕлнĕрен, халĕ те Герман ответлă задание вĕçне çитерессе шантăм.

Комаровăн гранатометчикĕсем хытă тăрăшни курăнчĕ, пилĕк-ултă пулеметран иккĕшĕ кăна сасне çухатмарĕ, çаплах усал йытă пек татти-сыпписĕр вĕрет, анчах вăл хĕвелтухăçнерех вырнаçнăран хĕвеланăç енчи Комаров батальонне сиен нумаях кӳреймест. Капитан батальона поселока тапăнса кĕме çĕклерĕ, салтаксемпе командирсем, чылай вырттнипе шăнса кайнăскерсем, урра! кăшкăрса хастарланса чупрĕç, анчах çав авăкра нимĕç самолечĕсем сасартăк вĕçсе тухса чупакан салтаксем çине бомбăсем тăкма, пулеметран пеме тытăнчĕç. Ак каллех пысăк чăрмав, çухату.

Эпĕ Комарова салтаксене сыхланса юлнă çуртсем çумне пытанса тăма хушатăп, пĕлетĕп: урам хушшипе чупакан салтаксене нумайăшне пĕтерме майлă.

Нимĕçсен виçĕ звено самолечĕ вунпилĕк минут хушши Ударкинпа ман полка чылай сиен кӳчĕ, уйрăмах Виктор Комаровăн батальонĕнче вилнисемпе аманнисен йышĕ пысăкланчĕ.

Самолетсем вĕçсе кайсан, Виктор Комаров батальонĕ танксем вырнаçнă поселокăн тĕп пайне тапăнса пычĕ, анчах ĕç кунта та кал-кал пымарĕ. Нимĕç танкисчĕсем поселокпа чугун çул станцине хăйсен аллинче тытса тăрас шутпа икĕ пая пайланнă. Тĕп пайĕ поселокра юлнă, иккĕмĕш пайĕ станцие хăйсен аллинче тытса тăрать. Поселока тытса тăма йĕри-тавра оборона йышăннă, пирĕн чаçсем хăш енчен тапăнса кĕме тытăнаççĕ, çав енне хытă пеме пуçлаççĕ, вут-хĕмне кусараççĕ. Вăл анчах мар, вăйлă танксем кĕрлесе тухса пирĕн салтаксене чăл-пар салатаççĕ.

Шăп çавăн пек саманта лекеççĕ Комаровпа Орлов батальонсем, сулахай енчен пырса кĕнĕ Ударкин полкĕ те.

Нимĕçсен танкĕсен çур пайне поселок тĕп урамĕсенче виçĕ ункă туса лартса тухнă. Пирĕн чаçсем кирек хăш енчен пырсан та ,вĕсене хирĕç тӳрех вут-çулăм кăларма пултараççĕ. Кунсăр пуçне поселокăн икĕ паркĕнче те икшер теçетке лайăх хĕçпăшалланнă вăйлă танксем пытанса тăраççĕ. Пирĕн пехота поселока пырса кĕрсе хăш енчен тапăнма пикенет, тăшман танкĕсем сасартăк пырса çитеççĕ те пирĕн салтаксене куç уçма памаççĕ, хытă çунтараççĕ. Унта-кунта пытанса юлнисем вăрттăн сукмаксемпе поселокран хăвартрах тухса шăваççĕ, каялла пăха-пăха тараççĕ...

Васильев разведчик нимĕçсен чеелĕхне виççĕмĕш хут разведкăна кайсан асăрхать, пирĕн чаçсем капкăна лекессине чухласа илет, çавăнтах вăл мана пĕлтерет. Ун пек чеелĕхпе халь мар, ĕлĕк-авалах ăста çар пуçĕсем ăнăçлă усă курнă, чаплă çĕнтерӳ тунă.

Эпĕ хăвăрт ăнлантăм та Комаровпа Орлов батальонĕсене каялла чĕнсе илтĕм, Ударкин полковника та раципе пĕлтертĕм.

Комаров каялла чĕнсе илнĕшĕн тĕлĕнчĕ, кăмăлсăр пулчĕ, анчах çарта асли калани кĕçĕннишĕн закон, ăна пĕр сӳтсе явмасăр тăвас пулать.

Дивизин штаб начальникĕ мана телефон патне чĕнчĕ.

— Чайкин полковник, Деньковăра ĕçсем мĕнле?

— Полковник юлташ, начар. Тапăнса пăхрăмăр — Деньковăна илеймерĕмĕр, танкистсемпе артиллеристсем лайăх çирĕпленсе ларнă, пире «Катюша» юрлани кирлĕ е артиллери вучĕ, хамăр вăйпа ирĕке кăлараймастпăр.

— Çухату мĕнле?

— Пĕрре пиллĕкмĕш. Вĕсен çăханĕсем вăйлă сăхаççĕ тата йышлă.

— Ударкин полковник та сирĕн пекех хыпарларĕ. Кĕтĕр: пысăк хăнасемпе çитетпĕр. Эсир вăл пунктра чарăнса тăни çӳлтисене хумхантарать: ĕç планланă пек пымасть.

Эпĕ хама Ястребов полковник вăрçса тăкасран шикленнĕччĕ, анчах меллĕ сăмахлани шухăша ячĕ. Батальонсене хатĕр тăма раципе пĕлтертĕм. Хам Тарасов майора Ястребов полковникпа Воронов генерал кĕçех килсе çитессине систертĕм.

Çав вăхăтра поселок хыçĕнчи овощехранилище пулнă çуртра (вăл пушă, унта нимĕнле пахчаçимĕç те хатĕрлесе хуман) эпир вăхăтлăх вырнаçрăмăр, вăл блиндаж пекех хăтлă. Ăна пире начпрод тупса пачĕ. Стройбатран пилĕк платник пырса, тенкелсем тата сĕтел турĕç.

Шăп çав самантра бронетранспортер кĕрлесе çитрĕ. Эпĕ Тарасов майорпа вĕсем патне тухрăм. Пирĕнтен инçех мар шоссе хĕррине Воронов генералпа Рокоссовский генерал-лейтенант анчĕç тата вĕсен адьютанчĕсем. Хамăр та сисмерĕмĕр,, магнит туртса илнĕ пек çаксем патне ыткăнтăмăр. Генералсем эпир чупнине асăрхарĕç те пирĕн енне çаврăнса тăчĕç. Эпĕ васкаварлăн чи асли умне пырса тăтăм: хамăн полк мĕн тунине алла сылтăм хăлха патне тытса каласа патăм. Сивĕ сывлăшпа кĕренленнĕ тăрăхла та илемлĕ питлĕ, кăвак куçлă генерал-лейтенант мана тимлĕ итлерĕ. Каласа пĕтерсен, ал-

ла ятам, тӳп-тӳрӗ тăтăм. Рокоссовский мачча пӗçерккӗ парасса кӗтрӗм, анчах вăл сассине пӗр хăпартмасăр мана çакăн пек ыйтусем пачӗ:

— Эсир поселока çитиччен тӗплӗ разведка тунă-и? Хăвăр шутăрпа, мӗншӗн тăшмана парăнтараймарăр? Фашистсене çак пунктран сирсе ывăтма хăвăр вăйпа пултаратăр-и е сире вăйлă пулăшу кирлӗ?

Генерал-лейтенант эп хуравланине тимлӗ итлерӗ, манăн çапăçури пӗлӳпе пултарулăха, пайăр шухăшлава тӗрӗслерӗ. Эпӗ тавçăруллă шкул ачи пек ун ыйтăвӗсене уççăн хуравларăм: «Пире бомба тăкакан икӗ эскадрили тата 122 миллиметрлă тупăсен икӗ дивизионӗ кирлӗ пулать. Тăшмансене «Катюша» юррине итлеттерсен те аван.

Рокоссовский пӗрре ман çне, тепре Воронов генерала сăнаса пăхса илчӗ, ман сăмах килӗшрӗ пулас ăна.

— «Катюша» юррине хамăрăн та итлес килет, ăна шантараймастăп, вӗçекеннисем пирки те шанчăклăн калама йывăр, перекеннисене тупăпăр. Тепӗр сехетрен вӗсене кӗтсе тăрăр. Вӗсем хыççăнах фрицсен тымарне кăкласа ывăтăр та хăвăрт малалла! — приказ пачӗ генерал-лейтенант. — Хăйӗн пысăк аллипе ман сылтăм алла тытса çирӗп чăмăртарӗ, манпа Тарасов майора ăнăçлăх сунса бронемашинăна кӗрсе ларчӗ, унпа пӗрле ыттисем те. Вӗсем килнӗ çулпах каялла вӗçтерчӗç.

Чăнах та, тепӗр сехетрен пирӗн пата шоссепе артиллери кӗрлесе çитрӗ. Бронемашинăран Тураев майор сиксе тухрӗ, ман пата вӗçтерсе пычӗ.

— Чайкин юлташ, мансăр каллех ӗç каймасть-им? Чăхăмласа лартăн: ни каялла, ни малалла! Ни туды, ни сюды. Хăвăртрах кала ориентирсене. Пирӗн васкамалла.

Эпӗ Тарасов майора пӗлтерме хушрăм. Тураев майор хăйӗн артиллерисчӗсене эпир панă 2-мӗшпе 4-мӗш ориентирсем çине вут тăкма команда пачӗ.

Юрий Михайлович мана пулăшма килнишӗн хытах савăнтăм, госпитальре пӗрле сипленнӗрен вара кун пек çывăх пулманччӗ, анчах пирӗн сăмахласа тăма вăхăт çук, вăрçă тăрăмӗ хушнă ӗçе хăвăрт тума васкатать. Нумай япалана эпир, вăрçă çыннисем, пуплесе тăмасăрах ăнланатпăр.

Эпӗ раципе Орлов майора, Комаровпа Шоркина хăйсен батальонӗсене артиллери вучӗ хыççăн нимӗçсене атакăлама хатӗрленсе выртма хушатăп.

Нумай та вăхăт иртмерӗ — пирӗн урлă нимӗçсем йышаннă вырăна сывлăша çурса снарядсем вӗçеççӗ, унта ӳксе

танксене аркатаççĕ, çĕрпе хутăшăнса металл сирпĕнет

Паркри пытанса тăракан танксем снарядсем арканнипе хӳтлĕх шыраса малалла ыткăнаççĕ, артиллери вутĕнчен хăвăртрах тухса тарма васкаççĕ. Эпĕ батальон командирĕсене кĕрешме чĕнетĕп.

Çапăçу хаярлансах пырать. Таçта пытанса ларнă нимĕç пехоти те танксем хыççăн автоматран кĕрлеттерсе малаллах сĕкĕнет. Орлов хăйĕн батальонне фашистсемпе кĕрешме çĕклет:

— Боецсемпе командирсем! Тăван çĕршывшăн, аслă Сталиншăн — малалла! — хăй ал сулать те чупма тытăнать. Ун хыççăн пурте çĕкленеççĕ, малалла васкаса чупаççĕ.

Танксенчен персе янă снарядсем унта та кунта шартлата-шартлата çурăлаççĕ, Орлов батальонĕнчи салтаксене вилĕм кӳреççĕ, хăшĕсене амантаççĕ. Танксенчен нумайăшĕ, вут айĕнчен тухнăскерсем, хăрушшăн çывхарса килеççĕ, вĕсем хыçĕнче нимĕçсен автоматчикĕсем. Пĕтĕмпех тĕтĕмпе, çăра тусанпа хупланнă. Çак хурçă тискерсем хăйсен çулĕ çинче мĕн пуррине йăлтах лапчăтса, çĕмĕрсе килеççĕ.

Орлов майор ăнланать: танка хирĕç перекен орудисемпе пăшалсем тата граната ывăтакансем вĕсен çулне пӳлме пултараççĕ. Вăл вĕсене поселокри урамсене йышăнма васкатать. Вĕсем меллĕ вырăн йышăнса хурçă эсрелсене кĕтсе илеççĕ.

Тăшман танкĕсемпе пехоти çывхарнăçем çывхарать. Орлов хăйĕн салтакĕсене пĕр шикленмесĕр кĕтсе илме, танксене хирĕç питĕ хăвăрт пеме хастарлăх парса тăрать. «Вилĕме çĕнтерес тесен, ан хăраса ӳкĕр, питĕ тĕл перĕр!»— асăрхаттарать вăл. Кунта, акă, тăшман сывхарса килни ывăç тупанĕ çинчи пекех курăнса тăрать. Ку, пĕр енчен, лайăх ăнтĕ, анчах, тепĕр енчен, нимĕçсен «вилĕм ещĕкĕсем» салтак чунне пăр пек сивĕтсе яраççĕ, чăрмалаççĕ, хăратса, хĕссе тăраççĕ. Салтакăн психологи тăрăмĕ тĕпрен улшăнать: унăн хăрушă вилĕмпе вилесси чи асаплă самант.

Эпĕ раципе Орлов майорпа ытти батальон командирĕсене поселок урамĕсемпе хĕвелтухăçнелле нимĕçсен танкĕсене иртме памалла мар тесе хушрăм.

Пирĕн артиллери вучĕ нимĕçсен танк полкне чылай сиен кӳнĕ пулсан та, нимайăшĕ чип-чиперех юлнă та халĕ каллех Мускав еннелле çул тытасшăн.

Орлов майор кашни ротăран танка хирĕç перекен пăшаллă салтаксене ик ураман ик енне майлă вырăнсене йышăнма хушать. Рота командирĕсем граната çыххисем илсе пур

салтаксене кěрешме чěнеççě, анчах чылай салтакăн хăйсен çумěнче пěр-икě гранатăран мала мар, малтанхи çапăçусенче персе пěтерне. Нимěç танкěсемпе самоходкисем Орлов батальонěн салтакěсем çине тупăран та пулеметран персе çывхарса пыраççě, вут-çулăм кăна сирпěтеççě. Юрать, салтаксенчен нумайăшě ишěлнě çурт-йěр хыçěнчен ютсене куçран вěçтермеççě.

Акă умлă-хыçлă шупка кăвак танксем кěрлесе çитсе пыраççě, ПТРтан Смирновпа Гаврилов машинăн мал енчи çурăкěнчен — «трипликсран» — тěллесе переççě, пěр танк водителě, вилнипе пулас, кювета кěрсе кайнипе хирěнсе ларчě, ыттисем малалла сěкěнеççě.

Васильев разведчик арканнă хапхан сыхланса юлнă бетон юпи хыçěнчен вěçсе тухрě те хăй тěлне çитсе пыракан нимěç танкě айне граната çыххи вăркăнтарчě, çавăнтах çěре выртрě. Танк айěнче кěрěслетсе çурăлчě, гусеница, урăхла каласан, пěр енчи шуçлав татăлса кайрě, хайхи машина кăштах кайса пăрăнса ларчě. Васильев, маттур чăваш, танкăн çулне пӳлчě, хăй кунта урăх выртма юраманнине ăнланнăран, каялла хырăмпа шуса хăй вырăнне аран-аран таврăнчě.

Васильев пултарулăхне курса Орлов майор хăй те чăтса тăраймарě. Салтакра службăра тăнă чухне хăй те пулеметчик пулнă. Халě те вăл пулеметпа пеме яланах хатěр, çавăн пекех ПТРтан та. Нимěç танкěнчен персе Смирнова йывăр амантаççě, Орлов ун ПТРне чупса пырса ярса тытать, ун патнелле çывхаракан сěмсěр танк башнинчен тěллесе перет— нумай та каяймасть, чарăнса ларать, часах вут хыпса илет.

Орлова кура Тагиров политрук урăх тытăнса тăраймасть, çывхаракан танк айне гранатăсем умлă-хыçлă ăсатать — кěрлесе çурăлаççě те танка хыптарса яраççě. Каялла тухнă чухне хыçалти танкран Тагирова пулеметран персе алли-урине хытă амантаççě, вăл юн юхтарса выртать, ăна Зоя Синицынăпа Володя Галкин санитарсем çěр çумěпе шутара-шутара ишěлчěк чул çурт хыçне аран илсе тухаççě, хăйне санчаçе васкаса ăсатаççě.

Нимěç танкěсем çаплах каялла çаврăнмаççě, çиччě-саккăрăшě вилěм тупрěç пулсан та, малаллах шăваççě. Хайхи чăваш çынни, Илларион Васильев разведчик, каллех шоссе хěрне шăвăнса çитет, ку хутěнче те кěмсěртетсе килекен танк çине шěвек тултарнă кěленче вăркăнтарать, танк çавăнтах кěр! туса хыпса илет. Васильевăн хăюлăхě мана тěлěнтерсе пăрахрě. Эпě ăна каялла илсе тухма турă пулăш-

тărах тесе ăсра сăмахласа тăратăп. Ун хыççăн тискеррен кĕрлекен танка Катейкин ПТРтан тĕл тăвать — чарса лартать. Орлов майорăн салтакĕсем тата виçĕ танка граната çыххисем ывăтса хыптараççĕ, вĕсенчен пĕри çавăнтах нимĕç танкисчĕ пулеметран пенипе пуçне хурать, тепри йывăр аманнипе санчаçе çакланать.

Юнашар урамра Тарасов майор Шоркин аслă лейтенантпа нимĕç танкĕсемпе кĕрешме салтаксемпе командирсене çĕклеççĕ, Тарасов хăй ПТРтан персе икĕ танка чарса лартать, ун тĕслĕхĕ ытти салтаксемпе командирсене тăшман танкĕсемпе кĕрешме хăюлăх кÿреççĕ, икĕ сехет хушшинче вуникĕ танк экипажĕ пĕтет, танкĕсем те стройран тухаççĕ. Ытти юлнă танксем каялла çаврăнса каяççĕ, часах куçран çухалаççĕ.

Эпĕ Орлов майора нимĕç танкĕсене хăвăртрах пĕтерсе тăкма васкататăп, Рокоссовский телефонпа хăй манпа калаçрĕ.

— Чайкин полковник, эсĕ çаплах Деньковăра ташласа тăратăн-и? Мĕншĕн артиллерипе анлă усă курмарăн? Кас пуличчен поселокпа станцие тăшманран тасат та тепĕр сехетрен мана пĕлтер. Анăçлăх сунатăп.

Эпĕ хама вĕри çатма çинче ăшаланă пек туйса илтĕм, сăпайлă çар пуçлăхĕ умĕнче мана шутсăр намăс пек туйăнчĕ. Унăн шанчăкне тивĕçтерес тесе, хам та вута кĕме хатĕрлентĕм. Орловпа Комаров командирсене нимĕç танкĕсемпе кĕрешме пур салтака çĕклеме васкатрăм.

Нимĕç танкĕсем çаплах тапăнса килме пăрахман. Халĕ тата кашни танк хыçĕнче автоматчиксем шăтăртаттара-шăтăртаттара килеççĕ. Орлов майор аптраса ÿкмерĕ, станокла пулемет взводне автоматчиксене хирĕç вут-çулăм кăларма хушрĕ, кашни танка валли виçшер гранатометчик уйăрчĕ.

Каллех тĕп урамра умлă-хыçлă тăвата танк кĕмсĕртеттерсе килеççĕ. Вĕсем урам икĕ енчи арканман çуртсем çине снарядсем кăлара-кăлара яраççĕ, акă шифер витнĕ пÿрт тăрри арканса кайрĕ, маччине вут хыпса илчĕ. Орлов батальонĕнчи икĕ снайпер мачча çинчен пахчаналла анса тарчĕç. Снайперсем нимĕç автоматчикĕсене шĕкĕлчесе ларнине танкист асăрханă-мĕн, пÿрт тăрри арканса кайрĕ. Анчах та хăйне те инçене ямарĕç, Орловăн граната ывăтаканĕсем танкăн ик енчи шуçлавне те татса пăрахрĕç, Васильев разведчик танк умне сиксе тухрĕ, шĕвек тултарнă кĕленчене танкист пăхса пыракан хушăка чăмтарчĕ, кĕленче чанкăр! турĕ те

шĕвекĕ шалалла сирпĕнчĕ, вут хыпса илчĕ. Васильев хăй шоссе хĕрринчи кювета çитсе ӳкрĕ, ун пуç çийĕпе пульăсем шăхăрса вĕçрĕç, хăйне сиен кӳмерĕç. Çунакан танк ăшĕнчен экипаж аялти люка уçса çул çине упаленсе тухрĕ, пĕрин хыççăн тепри кювета çитсе тăрăнаççĕ, çунакан шĕвек водителĕн сулăйах питне тивсе пĕçертсе янă: хĕп-хĕрлĕ... Вăл кюветра выртнă май аллипе юр чавса илет те питне тытать.

— Кусемпе мĕн тумалла? — ыйтать манран Орлов майор.

— Тыткăна илмелле. Пире «чĕлхе» кирлĕ,— хуравлатăп эпĕ.

— Нимĕçле сăмахлакан çын кирлĕ.

— Васильев лайăх пĕлет. Çавăнпа тăватă салтака ямалла. Ĕçĕ те пĕтет.

Эпĕ Васильева чĕнсе илетĕп те кюветра пытанса выртакан нимĕçсене тыткăна илме хушатăп. Хирĕçлесен кала: сире çавăрса илнĕ. Тăватă совет салтакĕ автоматсенчен пеме хатĕрленсе тăнине курччăр. Вĕсен ирĕксĕрех килĕшме тивет.

Васильев ман задание эп хушнă пекех тăвать, тăватă нимĕç салтакне (пĕр танк экипажне) тыткăна илсе килет.

Эпĕ Илларион Васильев сатурлăхĕпе хăюлăхĕнчен тĕлĕнетĕп, Муркаш районĕнчи Юнкăпуç ялĕнче ӳснĕ каччăн пултарулăхĕ куçкĕретĕнче. Ман ăна çывăхрах пĕлес килчĕ, анчах юнлă çапăçу вăхăтĕнче майлă мар, ятарлă вăхăт кирлĕ.

Эпĕ нимĕç танкĕсемпе кăсăклантăм, вĕсен шухăш-кăмăлне те пĕлесшĕн.

Тăлмачă вырăнне Васильев хăй пулчĕ. Шурă тужурка тăхăннă тĕреклĕ нимĕç водителĕ умне пырса тăтăм. Эпĕ каланине Васильев сержант хайхи нимĕçе пĕлтерчĕ. Водителĕн пысăк сенкер куçĕсем мана сиввĕн пăхаççĕ, сулахай енчи пичĕ пиçнипе хĕрелсе кайнă. Эпĕ вăл мĕн ятлине тата хăш чаçрен пулнине ыйтрăм.

— Курт Шнайдер, 165-мĕш танк дивизирен,— тесе хăюллăн хуравлать.

— Дивизире миçе танк? — кăсăкланатăп эпĕ.

— Шутламан, пĕлместĕп,— тăрăхласа хуравлать.

— Сирĕн дивизи командирĕ кам?

— Ман юлташ, ачаран пĕрле выляса ӳснĕ,— каллех тăрăхласа шӳтлет.

— Эсир хăш вырăнта çуралса ӳснĕ: ялта-и е хулара? — юриех пĕлесшĕн пулатăп.

— Раççейре, Энгельс хули çывăхĕнче. Сирĕнпе эпир зем-

ляксем пулатпăр,— те шӳтлет, те чăнах пуплет — пĕлме çук.

— Кайран Германие мĕнле çакланнă?

— Хамăр тăван çĕршыва курас килнипе. Халь пирĕнпе мĕн тăватăр? Тӳрех калăр: персе вĕлеретĕр-и е Атăл çинчи нимĕçсем патне ăсататăр? — шӳтлеме пăрахрĕ Курт Шнайдер.

— Тыткăна илнĕ тăшмана эпир вĕлерместпĕр. Эсир ăна пĕлетĕр. Сире ăçта вырнаçтарассине çӳлти пуçлăхсем татса парĕç — ку пиртен килмест,— Шнайдера ăнлантаратăп эпĕ.

Олег Катейкина тыткăна илнĕ танк экипажне дивизи штабне илсе çитерме хушатăп. Вăл хайхи тăватă салтакпа каялла кайса шоссе çине тухать, тыткăнрисемпе пирĕн конвоирсем ун хыççăн пыраççĕ.

Урампа килекен тăшман танкĕсене пĕтертĕмĕр пулас, килме пăрахрĕç е хыçалтисем таврăнса кайрĕç.

Тарасов майор Васильевпа икĕ салтака поселокра нимĕçсем пуррипе çуккине пĕлме разведкăна ярать. Полкри салтаксем çав вăхăтпа усă курса, хăйсен çурăм хыçĕнчи хутаççисенчен çимеллисем кăларса çĕмĕрĕлчĕк çурт-йĕр çумне вырнаçса апатланаççĕ. Кам шпигпа сухариваскаса кăшлать, кам какай консерви уçса сухарипе çиет. Хĕрӳллĕ çапăçу пынăран поварсем вĕри апат пĕçерсе пире çитерейменмерĕç. Эпĕ хам та галет кăшланипех выçă хырăма лăплантартăм.

Эпир апатланнă вăхăтра разведка таврăнчĕ. Васильев разведчик Тарасов умне пычĕ те савăнăçлăн хыпарларĕ:

— Тăшман поселокран пăрахса кайнă, нимĕç танкĕсем пур çĕрте те арканса выртаççĕ, вилнисем те йышлă. Пирĕн 3-мĕш батальон поселокран тухса таракан тăшманăн моторлă çарне хытă шĕкĕлченĕ, ун çинчен батальон командирĕ хăй отчет тăвĕ. Сире хыпарлакан Васильев сержант.— Вăл Тарасов майор умĕнчен сылтăмалла пăрăнса тăчĕ.

Майор разведчиксене ырларĕ, ку ыр хыпара мана пĕлтерме пулчĕ. Эпĕ çавăнтах телефонпа 16-мĕш çар штабĕпе çыхăнтăм, Рокоссовский генерал-лейтенант унта пуррине ыйтса пĕлтĕм. Мана тӳрех унпа çыхăнтарчĕç.

— «Днепр!», «Днепр!» Сире пĕлтерме ирĕк парăр. Ку «Сăр» калаçать.

— «Сăр!», «Сăр!» Эпĕ сире тимлĕ итлетĕп. Калăр.

— «Днепр!» «Днепр!» «Тимĕр шапасене» Н. поселокĕнчен тасатрăмăр, вĕсем чылай çухату тӳсрĕç: çитмĕл ытла «тимĕр шапа», ик çĕр аллă кĕлте хыçала выртса юлчĕ... Каннă хыççăн «кашкăрсене» малалла йĕрлетпĕр. Сире пĕлтерекенĕ — «Сăр».

## МУХТАВЛĂ ÇУЛПА

Кăнтăр иртсен Деньково ялне хăварса, пирĕн полк анлă шоссепе малаллаваскать. Нимĕçсем пысăк çухату тӳснĕ хыççăн çывăхри ялсенче тытăнса тăман. Çур çухрăм малта пыракан дозорнăйсем хăрушлăхри пурри çинчен пĕлтермеççĕ. Çурçĕртен вĕрекен çил пире çурăм хыçĕнчен тĕртсе пырать, пире утма çăмăллатать, анчах каç еннелле ытларах сивĕтет, ура айĕнчи юр, шăнса хытнăскер, кăчăртата-кăчăртата илет. Çăвартан тухакан ăшă сывлăш тулта сивĕрен шуралса пăсланса сарăлать. Салтаксенчен хăшĕ-пĕри сивĕ шыв ĕçнĕрен ăххăмлатса ӳсĕрет. Юрать, ун пек ӳсĕрекенсем йышлă мар.

Эпир Чисмено ялĕнчен иртсе Гусеново ялĕ патнелле çул тытатпăр. Манпа юнашар Тарасов майор, вăл çак çулпа юпапа чӳк уйăхĕсенче каялла чакни çинчен тепĕр чух аса илет. Халĕ те Гусеново еннелле утнă май 316-мĕш дивизи командирĕ вилни çинчен каламасăр чăтаймарĕ.

Эпĕ Панфилов генерал-майор çинчен пĕрре мар илтнĕ, хаçатсем вăл генерала ырласа çырнине те вуланă, анчах ăçта вилнине лайăххăн пĕлмен. Халĕ акă ун çинчен мана Тарасов каласа кăтартрĕ.

— Иван Васильевич Панфилов Петровск хулинче (Саратов обласĕ) 1892 çулта çуралнă. 1918—20 çулсенче граждан вăрçинче шуррисене хирĕç паттăр çапăçнă. 1923 çулта Киевра пĕрлешӳллĕ аслă çар шкулĕнче вĕреннĕ, Хĕрлĕ Çарта батальонпа полк командирĕсем пулнă. 1937—38 çулсенче Ватам Азири çар округĕнче уйрăм штаб начальникĕ пулнă. 1939 çулта Кăркăс республикинче çар комиссарĕ. 1941 çулта утă уйăхĕнчен тытăнса Хĕвеланăç фронтра 316 çуран çар дивизийĕн çар командирĕ, кунта вăл çар талантне кăтартнă. 1941 çулхи чӳк уйăхĕн 18-мĕшĕнче Мускав облаçĕнчи Гусеново ялĕнче Волоколамск шоссене паттăр хӳтĕленĕ чух çурăлнă снаорлăн ванчăкĕ кăкăртан тивет.

Чӳк уйăхĕн 18-мĕшĕнче 316-мĕш дивизин штабĕ Гусеново ялĕнче пулнă. Штабра Панфилов генерал хăй ларнă. Ирхине Мускав корреспонденчĕсем Панфилов генерал валли хаçатсем илсе килеççĕ. Вăл хаçатсенче унăн 316-мĕш дивизине 1-мĕш гварди дивизийĕ туни çинен пĕлтернĕ-мĕн.

Панфилов савăнса каять те çак хыпара дивизири пур командирсемпе салтаксене те пĕлтерме хушать. Çав вăхăтра тулта снарядсемпе минăсем çурăлма тытăнаççĕ. Вăл ăстан пенине пĕлес тесе, штабран крыльцана тухать. Çав вăхăтра çывăхах снаряд пырса ӳкет те çурăлса каять, унăн хурçă ван-

чăкĕсенчен пĕри кăкăрне пырса тивет. Панфилов сылтăм аллипе кăкăрне ярса тытать те сулăнса каять. Штабра ĕçлекенсем ана çĕклесе пӳрте илсе кереççĕ, врач патне чуптараççĕ. Çав вăхăтра вăл вилсе каять.

Ăна ялтан хăвăрт илсе тухаççĕ. Çав авăкра Панфиловăн дивизи штабĕ патне нимĕçсен 8 танкĕ кĕрлеттерсе килет. Çавсене хирĕç штаба хӳтĕлекен Лавриненко командир, аслă лейтенант, патранса каймасть, малта килекен нимĕç танкне теллесе перет те хыптерса ярать, нимĕçсем, çак пăтăрмаха кĕтменскерсем, хумханса ӳкеççĕ. Çак пăтранупа усă курса аслă лейтенант хыçалти кашни танкне термитлă снарядпа персе шалти экипажа пĕтерсе тухать.

Еç кунпа вĕçленмест-ха. Каллех Лавриненко çине фрицсен вунă танкĕ çĕре чĕтретсе килет. Çук, çухалса каймасть вырăс паттăрĕ, вĕсемпе харсăр кĕрешме тытăнать, малтанхи тăваттăшне вилĕм кӳрет, ыттисем каялла çаврăнса тараççĕ. Ахальтен мар ăна Панфилов дивизийĕнче, каярахпа 16-мĕш çарта «танксен кашкăрĕ» тесе ырласа чĕнеççĕ.

Панфилов ӳтне çав кунах ятарлă машинăпа Мускава илсе каяççĕ, ăна Новодевичье масарĕ çине чаплăн пытараççĕ, унпа юнашар Мускавшăн паттăр çапăçса вилнĕ утлă çар командирне Л. М. Доватора тата мухтавлă Талалихин летчика ĕмĕрлĕхех вырăн параççĕ. Çак паттăрсен вилтăпри çинче хĕп-хĕрлĕ чĕр чечексем ӳсеççĕ.

Пирĕн полк Гусеновăран иртрĕ кăна, Васильев разведчик: «Дубосеково енчен нимĕç самолечĕсем!» — тесе çухăрса ячĕ.

— Полк, шоссе ик еннелле саланăр! Хăвăрт юр ăшне!— команда патăм.

Ик-виçĕ çеккунт хушшинче шоссе çинче пĕр çар çынни те юлмарĕ. Эпĕ, Тарасов, Савелькин тата Васильев сержант шоссен сылтăм енчи хире тухса юр ăшне выртрăмăр. Шур халат тăхăннăран тата вытнăран пире самолет çинчен тӳрех асăрхама çук. Ăн асăрхаччăр тесен, ал-урасене хускатмасăр, юман каски пек пĕр тапранмасăр, выртатпăр.

Пĕр пиллĕк минут иртрĕ-и, самолет сассисем илтĕнми пулчĕç, вĕсем Дубосеково çийĕпе тӳрех Мускавалла вĕçрĕç.

— Отбой! Полк, шоссе çине. Строя тăрăр!— команда пачĕ Тарасов майор.

Эпир шоссе çине тухрăмăр та кăçатă çинчи юра силлесе тасатрăмăр.

Эпĕ Васильева хăйĕн разведчикĕсемпе Мыканино ялне çитсе нимĕçсем пуррипе çуккине пĕлме хушрăм.

Энвер Абдулович Манкур ман пата хыçалтан çитрĕ.

— Полковник юлташ, халĕ, каннă вăхăтра, кăнтарлахи апат тумалла мар-и? Повар каларĕ: аш яшки хатĕр. Салтаксем икĕ талăк вĕри апат çимен, сивĕ «НЗ»[1] хырăма лăплантараймасть.

Эпĕ аслă политрук сĕнĕвĕпе килĕшрĕм. Комбатсене апат хатĕрри çинчен пĕлтертĕм. Кашни батальон валли уйрăм кухня килсе çитнĕ. Комбатсем хăйсен салтакĕсене пайăр кухня патне ертсе кайрĕç. Часах салтаксен çумри котелоксен сасси янрама тытăнчĕ.

— Черетпе! Черетсĕр никама та памастăп! — янратать мăн çăпала çĕкленĕ пысăк бачокран ярса паракан хĕп-хĕрлете самăркка повар.

Пурте черете тăраççĕ. Повар хăйĕн çăпалипе какай яшкине бачокран ăсса илет те черетри салтакăн элмен котелокне çурри ытла ярать. Тутлă какай яшкин шăрши сывлăша тухса сарăлать, сăмсана кăтăклать, çăварта сĕлеке кӳрет. Ăçтан çак яшкана çимесĕр чăтайăн? Çавăнпах пулмалла: «Хисеплĕ поварăм, манне туллирех яр, манăн кашкăрла аппетит, хĕрхен мана», — тилмĕрсе ыйтаççĕ хăшĕсем. Анчах хыçалта тăракансем васкатаççĕ:

— Илтĕн пулсан, яра пар! Калаçса ан тăр! Кунта аннӳ патĕнче мар, фронтра!

Энвер Абдулович Манкур кухня патĕнче шавланине илтет те унта васкать. Курать: пĕр вăрăм та типшĕм салтак хăйĕн котелокне тулли яма ыйтать. Анланать Манкур: салтак икĕ талăк выçăллă-тутăллă пурăннине хырăмĕ касăлнине, анчах тӳрех нумай çисен, хырăмĕ кӳпсе кайса вилесрен те шикленет.

— Салтак юлташăм, пурне те валеçсе панă хыççăн кăна сана повар хушса пама пултарать. Халĕ вăл пурне те пĕр пек парать. Урăхла май çук, — ăнлантарать ăна Манкур. Ыттисем те илтеççĕ те шăпланаççĕ.

Салтаксем котелока çĕклесе шоссе хĕрне кайса лараççĕ те çăматă кунчинчен кашăк кăларса апатланма пуçлаççĕ, япала хутаçĕнчен сухари кăларса, ăна вĕри шӳрпере ислетсе начлаттарса çиеççĕ. Аш шӳрпи мĕн пек паха!

Мана та Кастров ординарец хупăлчаллă савăтпа аш шӳрпи, рис пăтти, çăкăр чĕллисем илсе килсе пачĕ. Эпĕ салтаксенчен уйрăм ларса вĕри яшкана юратса çирĕм, какай турамĕсем те йышлă тĕл пулчĕç. Техĕмлĕ яшкана, çуллă пăтта тăраниччен хырăма тултартăм. Çинĕ май хамăн мăшăра аса илтĕм. Унран эрне ытла çыру килменни хытах шухăшлаттарма ты-

[1] НЗ — неприкосновенный запас — тĕкĕнмелле мар çимĕç.

тăнчĕ. «Мĕн пулма пултарнă-ши ăна? Ниушлĕ чирлесе ӳкнĕ? Аттепе анне мĕнле пурăннине те пĕлместĕп. Урăххисене юратса пăрахнине ĕненес килмест. Халĕ таса та сывă яшсене шăпăрпа шăлнă пек тылран тасатса тăраççĕ. Çук, ман мăшăр ун пек вылянма кирлĕ мар, хăйĕн таса ятне варалас çук. Эпĕ ăна шанатăп...»

Пайăр шухăшпа пăтранса ларнă хушăра ман пата Васильев сержант пырса тăнине те асăрхаман.

— Полковник юлташ, сире пĕлтерме ирĕк парăр,— терĕ уçă саслăн.

Эпĕ ура çине хăвăрт сиксе тăтăм. Ларса итлеме çар уставĕнче хушманнине асра тытатăп. Васильев чупса çӳренĕрен кĕрхи помидор пек хĕп-хĕрлĕ. Хăйĕн хуп-хура çӳçĕн пайăркисем çĕлĕк айĕнчен тухса кайнă, тарланипе йĕпеннĕ.

— Мыконинăран нимĕçсем тухса кайнă-и? — кăсăкланатăп эпĕ.

— Эпир ялти ватăсемпе каласрăмăр, вĕсем каланă тăрăх, нимĕçсем ялтан пăрахса кайнă, каяс умĕн хĕвеланăç енчи çур ялне вут тĕртсе хăварнă терĕç. Çырма ку енчи пайне эсрелсем вут тĕртме ĕлкĕреймен, çунса кайман çурт-йĕрсем йышлă.

— Эпир урăх разведка тумасăрах çак яла пĕр чăрмавсăр пырса кĕме пултаратпăр-и? Е дозор та пулин мала ямалла? — кăсăкланатăп эпĕ. Манăн яваплăх пысăк, ăна эпĕ кашни утăмрах туйса тăратăп.

— Полковник юлташ, вăрçă таврашĕнче кĕске вăхăтрах улшăнусем пулса иртеççĕ. Эпир Мыконинăра чухне нимĕçсем çукчĕ, анчах тепĕр сехетрен пирĕн полк унта çитнĕ çĕре пĕрпĕр нимĕçсен чаçĕ пырса йышăнма та пултарать, уйрăмах уй-хирте шăнса выртас мар тесен. Çавăнпа та каллех разведка ярса тĕрĕслемелле, полк умĕнче дозор та пымалла. Унсăрăн эпир айăплă пулса юлма пултаратпăр.

Васильев сержант тĕрĕс шухăшланине, хирĕçлеме май çуккине ăнлантăм. Пĕлетĕп: вăл пирĕн чаçе киличчен урăх çĕрте фашистсемпе хастар çапăçнă. Эпĕ ăна, хам ентеше, вăрçă тухсан, хăш чаçре çапăçнине каласа парасса шантăм. Анчах пирĕн нимĕçсене хыççăнах йĕрлемелле пулнă пирки чарăнса тăма урăх вăхăт пулмарĕ. Пирĕн çывăх вăхăтра анла шоссе çулĕ çинчи Чисмена, Гусеново, Мыконино станцисемпе поселокĕсене ютсенчен тасатмалли приказ пулчĕ. Тĕрĕсрех каласан, нимĕçсем хăйсем те ку станцисене хӳтĕлесе тăрас пирки шухăшламан пулас, каялла хăвăрт васкана.

Пирĕн полк Мыканинăна ирĕке кăларнă хыççăн кăштах кантăмăр. Волоколамск шоссе çинче снаряд ещĕкĕсем çинче канса ларнă чух Илларион Васильевпа Олег Катейкина хам пата чĕнсе илтĕм. Иккĕшĕ те ман ентеш пулнă май вĕсемпе сăмахлас килчĕ. Шăп эпĕ Дубосеково сали енне пăхса ларattăм. Дубосеково пирĕншĕн, салтаксемпе командирсемшĕн, юмахри пек никам çĕнейми паттăрлăх кăтартнă вырăн шутланнă. Çакăнта 28 совет салтакĕ фашистсен 50 хăватлă хурçă танкĕсене çĕмĕрсе тăкнă, малалла Мускав еннелле пĕрине те ирттермен. Çак тĕлĕнмелле паттăрлăхпа çапăçури пултарулăх пире пурне те тĕлĕнтернĕччĕ. Ун пирки пур хаçатсем те пичетлерĕç, пĕтĕм çĕршыв илтмелле радио кашни кун янратрĕ. Çирĕм саккăртан тăваттăшĕ йывăр аманса чĕрĕ юлнă, вĕсем халĕ госпитальте выртаççĕ тесе çыратчĕç.

Пирĕн полк йĕркеленсен эпĕ штабра Курасовран çакна пĕлтĕм: Дубосеково разъездĕнче паттăр çапăçнă çирĕм сакăр паттăртан пĕри пирĕн полка фашистсемпе çапăçма, Мускава хӳтĕлеме хăй ирĕкпе килнĕ. Ăна госпитальрен контузи хыççăн киле пĕр çур уйăха сывалма ярасшăн пулнă, анчах вăл врачсен комиссийĕпе ниепле те килĕшмен, мана çывăх юлташсемшĕн фашистсене «тăн кĕртме» ярăр, тенĕ. Унăн çунса тăракан чĕрине медкомисси ăнланнă, вăл тилмĕрсе ыйтнине тивĕçтернĕ. Медкомисси председателĕ çакăн пек йышăнса, справка панă: «Васильев аслă сержант Дубосеково разъездĕнче икĕ нимĕç «Тигрне» гранатомтпа çунтарса янă, виççĕмĕшĕ ăна тупăран персе контузи тума пултарнă, пирĕн патра сипленнĕ хыççăн сывлăхĕ çирĕпленчĕ. Халĕ вăл Совет çарĕнчи службăна юрăхлă. Клин хулинчи 5-мĕш эвакогоспиталĕн медкомисси председателĕ С. В. Медынский профессор».

Çак справкăпа ăна резервăри полка йышăнаççĕ. Акă икĕ ентеш те ман умра. Эпĕ вĕсене ещĕксем çине ларма хушрăм. Васильев аслă сержанта хампа юнашар вырăн патăм. Вăхăт сахаллине шута илсе ăна кĕскен те пулин çак хамăр куç умĕнчи Дубосековăри çапăçу çинчен каласа пама ыйтрăм. Вăл хăйĕн хура куçĕпе пĕрре ман çине, тепре Катейкин çине пăхса илчĕ, темшĕн вăрăммăн сывласа ячĕ:

— Сире вăл интереслĕ пулсан, кĕскен те пулин юптарса парас.

«Эпе Панфилов генерал-майорăн 316-мĕш дивизинче свя-

зистчĕ. Ĕçĕ, паллах, мăй таран. Тепĕр чухне «чĕлхе» тытма та çӳренĕ. Чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕнче ирхине дивизи штабне çитрĕм кăна, мана тӳрех штаб пуçлăхĕ 1075 полкпа çыхăну çук, сан халех унта çитсе тӳрлетес пулать, терĕ. Эпĕ хам катушкăна çурăм урлă çакрăм та Петелино ялĕпе Дубосеково разъезд-не вĕçтертĕм. Çак полкăн хӳтĕлемелли вырăнĕ. Полк командире Илья Васильевич Капров майор — хăюллă вырăс çынни, провод татăлнăран унпа та сăмахлама май килмен. Эпĕ Петелино ялне провод тăрăх пырса çитетĕп, кунта çитиччен провод йĕркеллех, малалла Дубосеково разъезда утăмлатăп. Чăнах та, унта çитиччен провод икĕ çĕртен татăлнă, нимĕçсен снарячĕсем ӳксе татса пăрахнă. Эпĕ вĕсене сыпса çыхăнтаратăп. тӳрлетсе хăваратăп. Мана 4-мĕш ротăн командирĕ Павел Гундилович капитан хăйсен йышăннă разъезд патне провод туртма хушрĕ, хăй те мана пулăшса пычĕ. Тăшман танкĕсемпе çапăçакан унăн взвочĕ чугун çулпа юнашар оборона йышăнать-мĕн.

Эпир çитнĕ çĕре салтаксем чугун çул икĕ енĕпе те окопсем чаватчĕç.

Манăн çыхăну точкине хатĕрлемелле пулчĕ. Капитан хăй ĕçĕпе разъезда кайрĕ. Салтаксемпе Василий Клочков аслă политрук ертсе пычĕ.

Эпĕ хамăн ĕçе тума та çитерейменчĕ — нимĕçсен бомбардировщикĕсем вĕçсе килчĕç те пирĕн позици çине бомбăсем тăкса кайрĕç. Юрать, взвод çухату тӳсмерĕ. Ак анăçалла пахать Григорий Шемякин — нимĕç автоматчикĕсем чугун çулпа хăюллăн утса килеççĕ. Автомачĕсене пеме хатĕр тытнă хăйсем, ретĕн-ретĕн çирĕппĕн пусса утаççĕ. Пирĕн пата çитме çĕр метр юлчĕ-и, нимĕçсен командирĕ шăхăрса ячĕ — харăс пеме тытăнчĕç.

Иван Шепетков пулеметчик çаксене çунтарма пуçларĕ. Эх, шăлать те шăлать — малти виçĕ речĕ тӳрех касăлса тăкăнчĕ, ыттисем чугун çул çинчен аякалла тапса сикрĕç. Вĕсене те Аликбай Касаев казах, Гавриил Митин слесарь, автоматчик, Дюйшонкул Шапоков кăркăс хăйсен хĕç-пăшалĕпе питĕ меллĕ ăсатса ячĕç.

Эпĕ хам та автоматпа гранатăсем илтĕм взводри юлташсенчен, тарăн мар шăтăк алтса выртрăм. Кунта хам ирĕкпе çапăçма юлтăм. Тĕрĕссипе каласан, ман дивизи штабне таврăнмаллаччĕ. Ун пек тума чун хушмарĕ, çак ушкăна йывăрлăхра пулăшас килчĕ.

Нумай та вăхăт иртмерĕ — Мыконино поселокĕ енчен вăрман хӳттипе танксем кĕрлесе килеççĕ, танкĕсемпе пĕрлех автоматчиксем.

Пăхса таракан çӳлĕ вырăнтан пирĕн пата Василий Клочков аслă политрук чупса анать. Вăл малтанах асăрханă тăшман танкĕсене.

— Тăвансем! Тăшман танкĕсем. Çирĕм штук. Кашнине пĕрре тивмест. Ытлах нумай мар. Кăтартăр вĕсене раксем ăçта хĕл каçнине! — чĕнет пире хĕрӳллĕн кĕрешме.

Акă малтанхи танк Григорий Шемякин окопне патнелле кĕрлесе пырать, гранатометчик пăтранса каймасть: тĕл перет хăй гранатине — çурăлса каять те гусеницăна татса пăрахать, хайхи танк чарăнса ларать. Унпа кӳршĕ Григорий Конкин тепĕр танкне çунакан шĕвек тултарнă литр кĕленчипе хăналать — танка вут хыпса илет, Мусабек Сенгирбаев юнашар танка вут айне тăвать, ПТРтан персе Иван Шадрин икĕ танка, Петр Немцевпа Николай Болотов бронебойщиксем виççĕр танка пĕтерсе хураççĕ. Эпĕ граната ывăтса пĕр танка юрăхсăра кăлартăм.

Тăватă сехете ярăн ку çапăçу пычĕ, нимĕççен автоматчикĕсене тĕпрен илсен, вĕлерсе пĕтертĕмĕр, эп хам та тăваттăшне леш тĕнчене ăсатрăмм. Пирĕн рет те сайралчĕ: Николай Трофимова вĕлерчĕç, Григорий Петренко юн кайнипе вилес патне çитрĕ, нимĕççен автоматчикĕсем Крючковпа Конкина тата Тимофеева касса татрĕç. Çапăçма юрăхлисем çирĕм çын юлчĕ.

Хăрушлăх иртрĕ тесе, чĕрĕ юлнисем савăннăччĕ. Ĕнтрĕк çапнăччĕ. Каç пуласси çывхарнăччĕ. Кун пек вăхăтра фашистсем тапăннине илтмен. Каллех кĕрленĕ сасăсем илтĕнсе кайрĕç, çан-çурăм çӳçенсе кайрĕ. Ниушлĕ фашистсем? Тепĕр ик-виç минутран паллă пулчĕ. Иван Шадрин кăшкăрса ячĕ:

— Фашистсен кашкăр кĕтĕвĕ! Хальхинче вăтăр таран.

Василий Клачков пурне те илтмелле чĕнсе каларĕ:

— Хаклă тусăмсем! Кашни çынна танк та çурă тесе ан сехĕрленĕр. Совет салтакĕ хăрама çуралман. Раççей пысăк, анчах чакма вырăн çук. Хыçалта — Мускав!

Аслă политрука хăйĕн çывăхĕнчи тĕреклĕ Бондаренко ыталаса илсе чуп турĕ: — Вилĕме хирĕç çапăçăва тухатпăр, — тесе малтанхи танк çине граната вăркăнтарчĕ. Хаяр та юнлă çапăçу пуçланса кайрĕ.

Кашни салтак фашистсемпе хастарланса çапăçрĕ, хăй патĕнчен пĕр танка ирттерме памарĕ. Тан мар çапăçу пилĕк сехет хушши тăсăлчĕ. Виçĕ сехет çапăçнă хыççăн Василий Клочкова танкран пенĕ тăшман пулемечĕ хытă амантрĕ, вăл граната çыххине хăйпе илчĕ те çак танк айне выртрĕ, хайхи танк ун çине кĕрсе кайса çурăлса кайрĕ; Иван Натарова та хытă амантрĕç.

Эпĕ пĕр танка çунтарса ятăм, тепĕр танк айне граната ывăтнă чух ман çывăхра темскер ахлатса çурăлчĕ те — тăнсăр пулса ӳкрĕм. Урăх нимĕн те ас тумастăп.

Çапăçу вĕçленсен Петелино ялĕнчи шкул ачисем çĕрле вăрçă уйне çунашкасемпе пыраççĕ, кашни вилене тĕрĕслесе тухаççĕ. Чĕри тапаканĕсене çунашка çине хурса хăйсен килĕсене илсе каяççĕ. Çирĕм саккăртан пилĕк салтак чĕрĕ юлнă: Шемякин, Шадрин, Натаров, Васильев, Кужебергенов, анчах вĕсем хытă аманнипе вилнĕ пек тапранмасăр выртнă. Эпĕ контузипе кăна çухатнă. Мана Клинри эвакогоспитальре икĕ эрнеренех ура çине тăратрĕç. Унти врачсене тав!» — сăмахне вĕçлерĕ Васильев аслă сержант.

Олег Катейкин ун патне пычĕ те: — Эсĕ, Илларион, Иисус Христос пек вилсе чĕрĕлтĕн пулсан, халĕ нумай пурăнан. Маттур! Чăн-чăн герой! Чăваш ятне çӳлте тытакан. Санпа малашне мухтанма пултаратпăр.

Ана Илларион Васильев çавăнтах хирĕçлерĕ: — Эпĕ мар — эсĕ — чăн-чăн герой. Эсĕ пĕр-пĕччен тăватă гитлеровеца тыткăна илсе, штаба çитертĕн. Ун пекки сахал пулать. Эпĕ ку таранччен никамран та илтмен-ха.

— Хаклă ентешсем, тавлашар мар. Сирĕн фронтри паттăрлăха çитес ăру сӳтсе явса хаклĕ. Вĕсем пирĕн судьясем пулĕç. Пирĕн Тăван çĕршывăн аслă вăрçине, ун çитменлĕхĕпе лайăх енĕсене вĕсем тĕплĕн тĕшĕлесе тухĕç, кирлĕ хак парĕç, ун вырăнне те кăтартĕç, — вĕсен тавлашăвне лăплантарас шутпа çапла кĕртсе хутăм хам сăмаха.

## ВОЛОКОЛАМСКШĂН ПЫНĂ ХĂВАТЛĂ ÇАПĂÇУ

Пирĕн чаççем, раштавăн çирĕммĕшсенче Мыконино, Гусеново ялĕсемпе ыттисене нимĕçсенчен ирĕке кăларса, Волоколамск хули патне çитсе тухаççĕ. Анчах нимĕçсен командованийĕ, хăйĕн резервĕпе усă курса, пирĕн 16-мĕш армие тек малалла ярасшăн пулмасть.

Пире хирĕç тылран, Франципе Польша территорийĕсенчен çĕнĕ чаççем илсе килет. Вĕсемпе фюрер Мускава çавăрса илнĕ чухне усă курасшăн пулнă. Гитлер командованийĕн «Центр» çар ушкăнĕн ертӳçи фон Бок фельдмаршал Манштейн генерал-фельдмаршал тата сывлăш çар флочĕн Кессельринг генерал ертсе пынă çарсен хăватне шанса, чакассине чарса лартас, кĕске вăхăтра каялла Мускава çĕмĕрсе çитес тĕллевпе план хатĕрленĕ.

Вăл çĕнĕ чаççене, вырăс хĕлĕн хаярлăхне пĕлсе, кĕрĕксем, кăçатăсем, çĕлĕксем тăхăнтартать. Хăйĕн çар командирĕсене, тапăнса кĕнĕ чух наступлени ăнăçлă пытăр тесе, обер-лейтенантран кĕçĕнрех чинлисене (шнапсăр пуçне) допинг пама хушать. Командирсен ăс-тăнне хаярлатса, сатурлатса яракан шĕвексен витĕмне шута илет. Паллах, ун пек шĕвексем ĕçнĕ хыççăн этемĕн психологийĕ тĕпрен улшăнать, ăна ĕçекен нимле хăрушлăхран та хăрамасть, хăйне вăл хурçăран та çирĕп туйма пуçлать. Ун пек çынна хăйĕн çийĕнчи тумтирĕ çунни те, хăй патĕнче снаряд çурăлни те, хăйĕн ури-аллине тăм илтерни те хăратса тăмасть — вăл малалла пĕр шиксĕр çĕнтерсе кайма хатĕр вăй-халпа тулать. Ун пек салтака хăйне вĕлермесĕр те чакма, парăнма ăс-тăн витĕмĕ çитмест. Ăна пĕрмай малалла çĕмĕрсе, аркатса, пĕтерсе каяс туртăм хистет, вĕскĕртет...

Совет çарĕсен ĕçмелли-çимелли çитменнине шута илсе, Гитлер çарĕнчи индентантсем хăйсен çапăçакан салтакĕсене чи лайăх апат-çимĕçпе тивĕçтереççĕ. Çапăçакан çаршăн Гитлерла Германи нимĕн те хĕрхенсе тăмасть. Тутă çарăн кăмăлĕ выççипчен пачах расна пулнине туйнах ĕнтĕ çарпуççем. Тӳрех каламалла, ку пур çапăçакан çаршăн та — паллă ен. Гитлерăн илĕртӳллĕ чĕнӳ-лозунгĕсене те нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем чун-чĕререн ĕненеççĕ. Ара, Мускава илсен, вĕсем ку таврара хуçа пулаççĕ-çке! Вăрçăра ашшĕ вилсен те, çак право ачисене куçать, унпа усă курса, ывăлĕ е хĕрĕ каярах нимĕçсем тытса илнĕ çĕршывра пысăк хуçа, барон пулса тăрать...

Паллах, çака хавхалантарать çар çыннисене: мĕншĕн Совет çарне пĕтеричченех çапăçас мар-ха? Мĕншĕн кĕрес мар-ха тахçанах ĕмĕтленнĕ çăтмаха?..

...Пирĕн дивизи Мыконенкăна ирĕке кăларнă хыççăн çĕнтерӳпе малалла каймаллаччĕ. Анчах разведка çапла пĕлтерет: нимĕç командованийĕ, пире чарса лартас тесе, тĕрĕсрех каласан, Волоколамскра çапса аркатас шухăшпа, Европăран темиçе çĕнĕ дивизи илсе килнĕ, тӳрех Волоколамск хулине хӳтĕлеме вырнаçтарнă.

Çавна кура Мыконинăна пирĕн дивизи командире Воронов генерал-майор, унăн çумĕ Ястребов полковник, дивизи штабĕн начаальникĕ Карпухин полковник, çыхăну начальникĕ Онилов майор бронетранспортерпа персе çитрĕç.

Мыконино ялĕнче вĕсем кирпĕчрен тунă тăвату пӳлĕмлĕ çуртра чарăнса тăчĕç. Эпĕ унта хамăн заместительпе Тарасов майорпа тата Гаркуша полк комиссарĕпе пĕр пӳлĕм йышăннăччĕ. Савелькин адьютантпа Костров ординарец тата Терехов çыхăну лейтенанчĕ те — пирĕнпех.

Пире Воронов генерал-майор кунта килсе тухичченех асăрхаттарнăччĕ: «Эпир çитиччен Волоколамск хулине тапăнма кирлĕ мар. Тăхтăр»,— тенĕччĕ.

Тепĕр минутран пирĕн КП-на артиллери дивизионĕн командирĕ Нарядов полковник, хăйĕн заместителĕпе Тураев подполковникпа (ăна уйăх каялла çĕнĕ çар званийĕ панăччĕ), танк дивизийĕн командирĕ Катуков генерал-майор хăйĕн адьютанчĕпе килсе çитрĕç.

Эпĕ, пысăк пуçлăхсем килнĕ май, ман патра канашлу ирттерессе кĕтрĕм.

Тураев мана çапла систерчĕ: «Кĕç-вĕç кунта 16-мĕш армин çарпуçĕ Рокоссовский çитмелле. Мускав фрончĕн командующийĕ те пулмалла пек».

Унăн сăмахĕсем хыççăн çĕрлехи тĕтĕмре хăватлă çиçĕм шар! çиçнĕн туйăнчĕ мана. Вĕсем ахаль килес çукки тӳрех паллă!

Эпĕ хăнасене кĕтсе илме начпрода[1] чĕнсе илтĕм,аслă çынсене хăна тума мĕн пуррине хатĕрлеме, Тарасов майора хамăр çурта хăвăртрах тасатса тухма, сĕтел çиввĕттисене улăштарма хушрăм.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, Ястребов полковник аслă хăнасем çитнине пĕлтерчĕ.

1 Начпрод — начальник продовольствия — апат-çимĕç пуçлăхĕ.

Чăнах та, умлă-хыçлă икĕ машина вĕçтерсе çитрĕ, малтинчен Рокоссовский генерал-лейтенант, теппринчен сарлака та тăлпан Жуков çар генералĕ анчĕç, хыçран — вĕсен адъютанчĕсем. Вĕсене Воронов генерал-майор кĕтсе илчĕ.

Жуков Воронова: «Ăçта сан апартамент, кĕртсе кăтартха!» — терĕ. Эпир пурте ун хыççăн хурсем пек карталанса утрăмăр. Пире кашнинех вĕсем мĕнле хыпарпа килни, Ставкара мĕн калани кăсăклантарчĕ.

Хамăр çурт патне çитиччен эпĕ мала тухрăм та хăнасене канашламалли пысăк пӳлĕме илсе кĕтĕм.

Пӳлĕм пысăк, малта вăрăм сĕтел ларать, ун çине хĕрлĕ пусма сарнă, графинпа шыв, ик-виçĕ стакан, таса хут листисем. Сĕтеле хирĕç — ултă рет вăрăм тенкел.

— Эсĕ, Воронов генерал, кунта хуçа мар иккен, хуçи кунта — полковник,— шӳтлесе илчĕ Жуков ман çине кăтартса.— Эсĕ ман пекех хăна кăна.

— Георгий Константинович, Чайкин полковник хăнасене манран лайăхрах кĕтсе илме пĕлет, çавăн пекех — хăналама та... Вĕсен халăхĕ ыра та тарават,— тавăрчĕ ăна та дивизи командирĕ.

— Качча каякан хĕр мухтаннă, тет, анчах...— ваттисен сăмахне аса илчĕ çар генерале.

— Ку ун пекки мар, кайран курăр-ха,— сăпайлăн хирĕçлерĕ Воронов ман енне пăхса.

Эпĕ ним калама та аптăрарăм. Хама ырлама та, хурлама та халăм çитмест. Эпĕ килнĕ аслă хăнасене малти сĕтел хушшине ларма сĕнтĕм. Хам та пӳлĕмри тенкел çине кайса лартăм.

Салтăннă хыççăн сĕтел хушшине Жуков, Рокоссовский тата Воронов ларчĕç. Воронов çĕкленчĕ те канашлăва уçăлнă тесе шутлама ыйтрĕ. Сăмах — Георгий Константинович Жукова.

Пӳлĕмре ларакансем Жуков мĕн каласса чăтăмсăррăн кĕтеççĕ.

— Фон Бок фельдмаршал хăйĕн хăватлă çарĕпе Мускав патнех çитсе тухсан, Сталин манран çапла ыйтрĕ:

— Кала, Жуков юлташ, Мускава вăл илеет е çук? — Манăн ăна татăклă хурав памаллаччĕ. Вăл вăхăтра маншăн та çакă чи йывăр ыйтуччĕ. Анчах эпĕ Совет Çарĕн иксĕлми паттăрлăхĕпе вăй-халне, чăтăмлăхне çирĕп шанатăп. Çавăнпа та çулпуçа кĕскен çеç хуравларăм:— Иосиф Виссарионович, фон Бок Мускава илеймест, унăн, çарне çухатса, каялла тарма тивет.

Жуков, çак сӑмахсене эпир мӗнле йышӑннине пӗлес шутпа пулас, пурин çине те тимлӗн, сӑнавлӑн пӑхса илчӗ.

— Халӗ куратӑр пулмалла: эп каланӑ евӗрлех пулса пырать. Анчах та фон Бок пире Волоколамскра тӗпренех чарса лартма Берлинтан приказ илнӗ. Вӑл çавна пурнӑçласшӑн мӗнпур вӑйне хурӗ. Пурнӑçлаймасан — ӑна шӑлса ывӑтаççӗ. Гитлер хӑйӗнпе сӑмахласа тӑрас çуккине шутсӑр лайӑх пӗлет вӑл: е ӑна мухтав та пысӑк награда кӗтет, е ӗмӗрлӗх намӑс... Вӑл, ятне ярас мар тесе. мӗнпур пултарулӑхӗпе, ӑс-тӑнӗпе, пуян пӗлӗвӗпе кӗрешӗ. Ку пуриншӗн те паллӑ. Пирӗн, çавна шута илсе, тӑшман тактикине хирӗçле хамӑрӑн çӗнтерӳ тактикипе стратегине аталантарса, салтаксемпе ефицерсене Суворов çарпуçӗ пек хавхалантарса пырса, раштавра пуçланӑ хӑватлӑ тапӑнӑва ӑнӑçлӑ вӗçличчен çапӑçмалла.

Çар генералӗ хӑйӗн сӑмахне иртнӗ çапӑçури лайӑх тӗслӗхсемпе начаррисене илсе пачӗ, хӑшпӗр командирсемпе политкомиссарсен йӑнӑшӗсене палӑртса хӑварчӗ, анчах темшӗн Рокоссовские нихӑш енчен те тӗкӗнмерӗ. Хисеплет пулас вӑл ӑна...

Жуков политруксемпе политкомиссарсем Мускавшӑн пыракан хаяр та юнлӑ çапӑçура Волоколамск çулӗ çинче нихçан манми паттӑрлӑх кӑтартнӑ Панфилов генерал дивизийӗн салтакӗсем, Волоколамск хулинче çакса вӗлернӗ сакӑр комсомолец çинчен анлӑн пропагандӑлама кирлине палӑртрӗ.

Тепӗр кунтан Волоколамск хулине ирӗке кӑларассишӗн çапӑçу пуçласси тата çак тӗллевпе 16-мӗш арми штабӗнче тӗплӗ план хатӗрлени çинчен Константин Константинович Рокоссовский тухса каларӗ, иртнӗ çапӑçусенче хӑш часть ӑнӑçлӑ çапӑçнине, командирсен ячӗсене ырӑпа асӑнса хӑварчӗ.

Çӳллӗ те илемлӗ Рокоссовский хӗл сивӗ пирки салтаксен пӗр-пӗрне пулӑшмаллине, хытӑ шӑнтнӑ алӑ-урана çийӗнчех спиртпа мазь сӗрсе ӑшӑтмаллине, тӑм илтернӗ салтаксене хӑвӑртрах санчаçпе санбата çитермеллине, аманнӑ салтаксене çапӑçу хирӗнчен хӑвӑрт илсе тухса пулӑшу памаллине тепӗр хут çирӗппӗн аса илтерчӗ.

Жуков генералӑн юлашки сӑмахӗ уйрӑмах асра юлчӗ: «Совет çӗршывӗ — пирӗн кил. Хамӑр килте — хамӑр хуçа. Хуçа кирек мӗнле вӑрӑ-хураха та хӑйӗн кил-çуртӗнчен тапса кӑларса ывӑтать. Эсир хӑвӑр кил-çуртран аякра пулсан та, Волоколамска хӑвӑр хула, унта хӑвӑр кил пур тесе шухӑшлӑр. Вара сире çапӑçма та çӑмӑл, çӗнтерме те ансат. Чӑнах та, ку маншӑн ют хула тесен, ӑна чунпа йышӑнма-

сан — çĕнтересси пулмасть. Вилекенсен йышĕ çеç нумайланать. Ман шухăша командир юлташсем, кашни салтак патне çитерĕр — унтан вăйли нимĕн те çук».

Пире çар пуçĕсем çак канашлура вĕрентсе калани ахаль сая каймарĕ, малашнехи çапăçусенче вăл уççăнах палăрчĕ.

Жуков генерал пирĕнпе тĕл пулнă хыççăн кашни часть ертӳçине çивĕч лару-тăрура хăйне ирĕклĕ туйма, çав хушăрах командовани лартнă тĕллеврен пĕртте пăрăнмасăр, панă задачăна ăнăçлă, сахал çухатупа пурнăçлама ырă сунчĕ...

Жуков çав кунах Ставкăна таврăнчĕ, Рокоссовские тĕллевсем еплерех пурнăçланнине пĕлтерсех тăма хушрĕ.

Эпир ăна çак тĕлпулу хыççăн хăна тăвасшăнччĕ, анчах вăл «пулла тытмасăр пулă яшкине çиме чĕнмеççĕ» терĕ. Мĕн калăн? Чăн сăмахăн суйи çук!

Эпĕ çав кунах, хамăрăн командир пунктне батальон командирĕсене, политработниксене, связистсемпе санинструкторсене чĕнтĕм.

Вĕсем тенкелсем çине вырнассан, Тарасов майорпа иксĕмĕр сĕтел хушшине лартăмăр. Эпĕ хамăн юлташсене, офицерсене сăнатăп. Ман умрах 1-мĕш батальон командирĕ, сарака питлĕ Орлов ларать. сивĕрен ăшша кĕнипе пичĕ хĕрелсе кайнă хăйĕн, халь-халь юн пĕрĕхес пек. Тимлĕн пăхать вăл ман сине. Хура çӳçĕ, пĕр-икĕ уйăх касманнипе, чылай вăрăм. Сăмси кăштах каçăрălса тăрать, тути хĕррисем хулăм. Çийĕнчи çурма шурă кĕрĕкне йӳле янă, ун айĕнчи кăвак гимнастеркăн пăхăр тӳмисем йăлтăртатса илеççĕ.

Орловпа юнашар — иккĕмĕш батальон командирĕ Комаров капитан. Вăл Лысково вырăсĕ, хăюллă та çивĕч, сырă çӳçлĕ, кăвак куçлă, тăсăкрах питлĕ, вăрăм пӳллĕ. Чĕлĕм туртма юратать. Тен, çавăнпа та пит-куçĕ шуранка сăнлă. Революциччен пĕр çул малтан сут тĕнче курнă, полк шкулне пĕтернĕ, финсемпе çапăçнă, çĕрте пулнă, вăрçă опычĕ пур.

3-мĕш батальон командирĕ Кислов вилнĕ хыççăн вăхăтлăх Руссаков аслă лейтенант пĕр тапхăр ертсе пычĕ, анчах ăна особистсем илсе кайрĕç, каялла таврăнмарĕ. Халĕ ун вырăнне сĕнĕ командир ярса пачĕç, вăл Бельский Василий Владимирович майор, белорусс, вăрсăн малтанхи кунĕсенче батальон командирĕ пулса çапăçнă. Вĕсен чаçĕ «вутлă унка» сакланать те вăл темиçе боецпа аран-аран «ункăран» тухса ӳкет, ăна хамăр чакакан çар хыççăн виçĕ уйăх хушши вăрмансемпе тухма тивет. Вăл Солнцегорск патĕнче фронт урлă каçса хамăрăннисемпе тĕл пулать. Унта ăна Уйрăм пайра шутсăр хытă тĕрĕслеççĕ. Хăйпе пĕрле тухнă боецсем

ăна хӳтĕлесе калаççĕ, лайăх тĕрĕсленĕ хыççăн ăна ирĕке кăлараççĕ, Мускава хӳтĕлеме яраççĕ. Çав майпа Бельский пирĕн чаçа çакланать. Паллах, ăна çарти Уйрăм пай сăнама пăрахмасть, пĕтĕмпе шанса çитерейместь.

Бельский майор хăмăр куçлă, шуранка сăнлă, вăрăм та тӳрĕ сăмсаллă, тăрăх питлĕ, шĕвĕр ана шăммиллĕ; тĕксĕм çырă çӳçне хыçалалла туранă. Особистсен алли витĕр тухнăскер, вăл шухăшласа сăмахлать, кашни сăмахшăн явап тытассине лайăх пĕлет. Вăл мана тĕсесе пăхать, эп мĕн каласса кĕтет.

Виççĕмĕш батальон утмăл процент ытла çĕнелнипе боецсемпе командирсем хальхи тапхăрти тапăнупа хӳтĕленӳ тактикине пĕлменни чылаях чăрмав кӳчĕ. Бельский майора батальонри çак çитменлĕхе кашни кун ĕçлесе пĕтерсе пыма асăрхаттарса тăтăм, çапăçу ăсталăхне Орловпа Комаров командирсенчен вĕренсе пыма сĕнтĕм. Паллах, Бельский ку сĕнĕве уççăн хирĕçлемерĕ, анчах сылтăм питçăмартине кăмăлсăр хускатса илнинчен ăнланма пулчĕ.— вăл килĕшесшĕн мар, унăн хăйĕнех тапăнупа хӳтĕленӳ тактикипе опыт пур тенине пĕлтерчĕ. Юрать, пуласлăх кăтартса парĕ терĕм эп ăшăмра.

Çак авăкра пӳлĕме Володьăпа Зоя та кĕчĕç, вĕсем хыçалти тенкел çине пырса ларчĕç. Иккĕшĕ те шурă маскхалатсемпе, ун урлă вĕсем санитари шурă сумккисене çакса янă, вĕсем çинче — хĕрлĕ хĕрес. Пичĕсем сивĕ çĕртен кĕнипе пиçсе çитнĕ анис пек хĕп-хĕрлĕ, чипер. Çирĕм çулхи çамрăксем мĕн пек илем, юн вĕресе тăрать, пĕтĕм пурнăç малалла. Халĕ вĕсем малашнехи ырă та телейлĕ, çутă та тулăх пурнăçшăн мĕнпур вăйне парса кĕрешеççĕ. Ирĕклĕ те çутă пуласлăха упраса хăварасшăн чунне пама хатĕр.

Ютсем илсе килекен пусмăр влаçне хирĕç пĕтĕм совет халăхĕ çавăнпа кар! çĕкленнĕ. Вĕсем ун чухне шухăшлама та пултарайман: хамăр çĕршыври влаçри сутăнчăксем çак ирĕклĕ халăха гем тĕрлĕ чеен улталаса пусмăр тĕнчине кĕртсе ярассине... Тепĕр аллă çултан пусмăр влаçĕ пулассине кам кĕтнĕ?

Эпĕ чĕннĕ çар çыннисем пухăнса çитсен, полк умне килсе тухнă йывăр та васкавлă ĕçсемпе паллаштарма тытăнтăм.

— Хаклă çар çыннисем! Пирĕн умри тĕп задача — Волоколамск хулине тăшман аллинчен ирĕке кăларасси. полкăн уйрăм ĕçĕ — хулана шоссен сылтăм енчен пырса кĕресси.

Тепĕр енче питĕ шанчăклă çар чаçĕ, фашистсемпе иаттăр кĕрешсе мухтава тухнă Çĕпĕр дивизийĕ.

Сулахай енёпе хайхи 9-мёш гварди дивизине А. П. Белобородов генерал-майор ертсе пырать. Вăл нимĕçсене Волоколамск шоссепе Мускава чўк уйăхĕнченех кĕрсе кайма памасть. Истра водохранилище патĕнче паттăр çапăçать, тăшмана ăнăçлă пыра-пыра çапса, каялла чакарма тытăнать. Ытти чаçсемпе пĕрле Волоколамск шоссене нимĕçсенчен тасатас çĕрте хăюллăхпа паттăрлăх кăтартать, ăна гварди дивизи ятне параççĕ.

Пирĕнтен сылтăмра 118-мĕш полк, ăна Ударкин полковник ертсе пырать. Пирĕн полк хулан тĕп урамĕсемпе шоссен сылтăм енне йышăнать. Малти эшелонра 1-мĕшпе 3-мĕш батальонсем, разведка роти, миномет роти, иккĕмĕш эшелонра 3-мĕш батальонпа дивизин хушма роти, артбатальонпа пулемет роти тата стройбат. Топографи картинче кашни батальонăн йышăннă тата йышăнмалли вырăнĕсене палăртса тухнă. Батальон командирĕсен аллинче çак топографи картти пур, ăна вăл алă пуссах илнĕ.

Эпĕ хамăн командный пунктраччĕ. Мана телефон патне «Днепр» чĕнет терĕ связист. Эпĕ трубкăна илтĕм. Константин Константиновичăн çемçерех сассине тўрех уйăртăм.

— Халĕ артилери нимĕçсен позицине çĕмĕрет. Сирĕн шăп пĕр сехетре вĕсене чăрсăррăн тапăнмалла та пĕр чарăнса тăмасăр хулана ирĕке кăлармалла. Эсир приказа пурнăçлама хатĕр-и? Мĕн çитмест? Мĕн кирлĕ? Мана пĕтĕмпех пĕлтерсе тăрăр. Эпĕ Белобородов штабĕнче. Унта пĕлтерсех тăрăр.

— «Днепр», сире пĕтĕмпех ăнлантăм. Çак çил-тăвăла тепĕр сехетрен хутшăнатпăр,— хыпарларăм эпĕ.

Кĕрлерĕ вут-çулăм, çурт-йĕрсем шатăртатса çунчĕç. Мана хамăр хулана хамăрăн артиллери çунтарни хытă пăшăрхантарчĕ. Анчах тепĕр тĕрлĕ шухăшласан, нимĕçсене ун пек арканмасан, пирĕн çара хытă пĕтерет вăл, мĕн чухлĕ салтак вилĕм тупать. Çурт-йĕре хĕрхенсен, нумай çын усăсăр юн тăкать, пуçне çухатать.

Çав вăхăтра нимĕçсен самолечĕсем пирĕн артиллерие шĕкĕлчеме вĕççе килчĕç, анчах артиллери хăй ĕçне вĕçлесе шăпланчĕ. Эпир те, çуран çар, уйри юр айне чăмрăмăр та пĕр тапхăр хускалмасăр выртрăмăр. «Юнкерссем» пирĕн хыçри Петелино ялĕ таврашĕнче бомбăсем тăкса çĕре кисретрĕç, каялла вĕççе кайрĕç.

Рокоссовский хăй те 13 сехетре бронетранспортерпа Волоколамск хулине çитрĕ. Ман полк Волоколамска тапăнать. Хула тĕтĕмпе хупланнă, унта-кунта вут ялкăшать. Эпĕ батальонсене атакăлама приказ патăм. Вĕсем вут-çулăм витĕр

хулана штурмлаççĕ. Сулахайра хулана нимĕçсенчен 9-мĕш гварди дивизийĕ (Белобородов генерал-майорпа Рокоссовский тасатать... Пирĕн чаçсем хулана шалалла кĕрсех пычĕç. Ĕç йăнăçлах пыратчĕ. Анчах хула варринелле çитеспе пирĕн çула халь тин килсе çитнĕ танксен дивизийĕпе мотопехота пÿлчĕç. Пирĕн батальонсем çине снаряд хыççăн снаряд ÿкет, вуншар çынна çулса тăкать. Пулеметсем пуля çумăрĕ çутараççĕ.

Эпĕ хамăн батальонсене çурт-йĕр ишĕлчĕксем хыçне пытанса, пулеметсене хăвăртрах ĕçе яма, граната перекенсене танксемпе кĕрешме команда патăм.

3-мĕш батальонри темиçе боец çуртсем хыçĕпе каялла тарнине асăрхарăм. Раципе батальон командирне Бельский майора хытă асăрхаттартăм, таракан боецсене тупма, малти линие илсе пырса çапăçтарма хушрăм.

Эпир Тарасовпа пĕрле тăшман хытă пенине пăхмасăрах, хамăр батальонсене тăшман атакине сирсе яма хавхалантарса тăтăмăр. Пульăсем пуçа çĕклеме те памаççĕ. Анчах батальонсем чакмаççĕ — салтаксем те пулеметсенчен, автоматсенчен, минометсенчен, гранатометсенчен пĕр вĕçĕм персе, тăшмана хирĕç тăраççĕ.

Нимĕçсен артиллерийĕпе танксем çинчи тупăсен вучĕ 1-мĕшпе 3-мĕш батальонри боецсене пысăк çухату кÿчĕ, нумайăшне вĕлерчĕ. Акă Орлов батальонĕн салтакĕсем патне çитсе тухрăмăр Тарасов майорпа. Танксем!.. Виçĕ танк, тупăсенчен вут-çулăм пĕрĕхтерсе урампа кĕрлеттерсе килет. Вĕсем хыçĕнче ик рет танк курăнать. Орлов майор тепĕр урамра иккен, унти танксемпе кĕрешнĕ çĕрте. Ку урамра унăн Тагиров политрук танксемпе кĕрешме боецсене пуçтарать, анчах ишĕлнĕ çуртсем хыçĕнчи гранатометчиксем курăнмаççĕ. Эпир Тарасов майорпа пĕр пÿртĕн чул никĕсĕ хыçĕнче пытанса выртакан салтаксене асăрхарăмăр.

Вĕсем патне чупса çитрĕмĕр:

— Танксем килеççĕ! Курмастăр-и? Халех гранатăсем хатĕрлĕр! Хăвăр тĕлтен нихăшне те ан иртттерĕр!!

Тăвата боецран иккĕшĕ танксем килекен çул хĕрне шăвănса тухса выртрĕç.

Танксем патне вуннилĕк-çирĕм метр юлсан, çаксем пĕрерщерĕн çĕкленсе танксем айне умлă-хыçлă граната ывăтрĕç. Пĕр танкĕ, шуçлавĕ татăлнипе, çаврăнса ларчĕ, иккĕшĕ малалла вĕçтереççĕ.

Анчах та çурт никĕсĕ хыçĕнчен тепĕр икĕ боец, харăс çек-

ленсе, кашни танкăн башнине тěллесе граната ывăтать... Хаплатса çурăлать лешě. Пěр танкě çунать те! Унăн мотор пайне вут тивсе илет. Вăл хуп-хура тěтěм кăларса çунма тытăнать. Анчах перекенсенчен пěри чул никěс хыçне пытанма ĕлкěреймест, ăна хыçалти танкран персе ярaççě те боецăн пуçě татăлса сирпěнсе каять, кěлетки те аяккалла ыткăнать.

Эпě Тарасовпа çав никěс хыçěнче выртатпăр. Пуççăр кěлетке пěр вунă метр хыçалалла сирпěнсе ÿкет, татăк мăйран юн чашлатса юхать. Çак пулăм чуна хăрушшăн çÿçентерсе ячě.

Эпě Тагировпа ыттисене танксемпе çапăçма салтаксем патне васкататăп. Çул тепěр енчи боецсем хыçалти танксемпе кěрешме тухаççě. Чул куписем хыçěнчен çěкленеççě те килекен танксене граната çыххисемпе, çунакан шěвек тултарнă кěленчесемпе кěтсе илеççě, анчах хăшěсем пенě хыççăн пытанма ĕлкěреймеççě, çавăнтах пуля е снаряд ванчăкě тивнипе вилсе выртаççě.

Катейкин ПТР-пан персе виçě танка стройран кăларчě. Акă ун çине умлă-хыçлă икě танк кěрлеттерсе килет. Перет вăл, меллě лекмест, крючок çине тепре пусать — пăшал пемест, — ун патронсем пěтнě! Мěн тумалла? Урăх патронсем çук. Танк çывхарсах килет. Çакна Тарасов майор асăрхать, хăйěн çумěнчи гранатăна танк айне вăркăнтарать — хайхи пысăк танк, шуçлавě татăлнипе, Катейкин патне ик метр çитеймест, шалт пăрăнать! Лешě танк çулě çинчен аяккалла сикет. Улăп пек танк вара сасартăк чарăнсах ларать. Салтак хăранипе нимěн те ăнланмасть: хăй тěлěнче пысăк танк кěрлесе тăрать, моторě ěçлет, хăй малалла каймасть. Танк башнинчен пулемет шатăртатать: тат-тат-тат!.. Тупи те çаврăнать — пирěн салтаксене асăрханă çěре перет.

Тинех тавçăрса илет Катейкин: кунăн малти гусеници татăлнă иккен, ав мěншěн каймасть! Экипаж сывă, пемеллисем нумай. Вăл танк çине хăпарса каять, çав вăхăтра люк алăкě уçăлать, пěри шалтан тухма тăрать, Катейкин ăна пуçран çапать те лешě шалалла ÿкет. Çав вăхăтра салтак хăйěн юлашки гранатине танк ăшне пăрахать, хăй хăвăрт аяккалла сикет. Шалта шартлатса çурăлнипе нимěççем хăрушшăн кăшкăрнине илтме ěлкěрет вăл... Танк патěнчен эпир выртакан çěрелле чупнă вăхăтра хăйне те амантрěç тăшман автоматчикěсем. Çапах çитсе ÿкрě вăл хÿтлěхе. Эпě унăн аманнă хулне хăвăртрах бинтпа çыхса юнне чартăм, санчаçе кайма хистерěм. Шăпах çав самантра ман пата Тагиров çитрě.

— Полковник юлташ, Орлов майор васкавлӑ пулӑшу ыйтать. Унӑн тӗп урамӗпе нимӗҫсен ҫӗнӗ танк колонни килет, батальонӑн пӗр роти пачах пӗтнӗ, тепӗр ротинче те вӑтӑр салтакран мала мар, вӗсен те пемелисем сахал юлнӑ. Пулӑшу кирлӗ! Унсӑрӑн пӗтет!— питӗ пӑлханса пӗлтерчӗ политрук.

— Йӑлт ӑнкармалла: иккӗмӗш эшелона пирӗн хӑвӑртрах ҫапаҫӑва кӗртмелле! Эпӗ Иван Савелькина Комаров патне чуптартӑм, виҫҫӗмӗш батальона васкавлӑн Орлов майора пулӑшма хушрӑм.

— Юрать,— шухӑшлатӑп хам,— тӳрех пӗтӗм полка ҫапаҫӑва кӗртсе ямарӑм, 2-мӗшпе хушма батальонсене резерва хӑвартӑм. Хӑварман пулсан, снарядпа пуля айӗнче кусем те вӑйсӑрланса юлатчӗҫ, нимӗҫсен хирӗҫле атакине сирсе ярайман, чакма тиветчӗ. Хамӑр нимӗҫсене ҫӗнтерсе каяс вырӑнне, пӗтӗмпех кутӑнла пулса тухатчӗ. Жуковпа Рокоссовский генералсенчен «тип мунча» пулатчӗ е ытларах та... Мана Воронов генерал-майортан та хытах лекетчӗ. Ҫакӑн пек пӑтӑрмахсемпе ят каять те ҫар ҫыннин... Анчах та чи хӑрушши — ҫынсене пӗтерни, хулана тавӑрайманни.

Эпӗ Тарасов майора кунти хӳтӗлеве ҫирӗп йӗркелеме хушса хӑвартӑм та хамӑн адьютантпа тӗп урама Орлов вырнаҫнӑ ҫӗре васкарӑм. Эпир пӗр урамран тепӗр урама тӑкӑрлӑкпа мар, ҫынсен картисем урлӑ каҫа-каҫа, пӗшкӗнсе чупатпӑр. Пульӑсем ши! те ши! шӑхӑрса вӗҫеҫҫӗ, снарядсем кӗрӗслетсе ҫурӑлаҫҫӗ. Капла мӗн куратпӑр-ха?

Урам тепӗр енӗпе салтаксем каялла тараҫҫӗ. Нумайӑшӗ курӑнми те пулнӑ. Хула хӗрнех ҫитнӗ пулӗ.

Тӳрех ӑнланса илеймерӗмӗр. Хыҫалта Комаровпа унӑн адьютанчӗ вӗҫтерсе килеҫҫӗ. Мӗн пулнӑ?

— Куратни, полковник, вӗсене хыҫалтан «Тигр» хӑвалать. Хӑй пемест. Вӗсене ҫитсе вӑл таптаса лучӑркасшӑн,— тет чӗтрекен сасӑпа ман адьютант.

Ҫак «Тигр» хыҫӗнчех, инҫе мар — танксен колонни!

Ман куҫ алчӑрса кайрӗ.

Нимӗҫсем Комаров батальонӗпе ҫапӑҫма ӗлкӗрнӗ-и е ҫук, анчах салтаксем вӗсем ҫине танксем йышлӑн килнине курнипе хӑраса ӳкнӗ. Каялла ним пӑхмасӑр тараҫҫӗ. Комаров вӗсене итлеттерейместь, юлашкинчен хӑй те Чиркин адьютанчӗпе куян пек вӗҫтерет.

Савелькин асӑрхать: пирӗн енчен хамӑртан темиҫе ҫурт анаталла пӗр ишӗлчӗк чул ҫурт ларать, чӳречисенчен тупӑн кӗпҫисем курӑнаҫҫӗ.

— Полковник юлташ! Çав çуртра пирĕн артиллеристсем пулас. Халех çаванта!

Эпир унта хăвăрт чупса çитетпĕр, çурма алăкпа шала кĕретпĕр. Чăнах та, икĕ тупă, анчах снаряд çывăхра çурăлнипе икĕ расчетран пĕри те юлман, артиллеристсем çине пăхма хăрушă: хăшĕн пуçĕ, хăшĕн кĕлетки, хăшĕн алли-ури, хăшĕн хулĕ çук, пурте пĕтнĕ, сулахайри те пĕр туппин хыçĕнче пĕр çын чĕрĕ юлнă, анчах вăл наводчик ĕçне пĕлменрен тупă патĕнче аптăраса тăрать, нимĕç танкĕсем килнине курнипе тарма хатĕрленнĕ-мĕн.

Эпĕ пĕр тупă хыçне тăратăп, теприн хыçне — Савелькин.

Хайхи подносчика Савелькин патне снарядсем çĕклеме хушатăп. Эпĕ тупăн вуллине Комарова хăвалакан «Тигрăн» аяккинчен тĕллетĕп. Пĕлетĕп: аяккинчи бронь хулăмах мар, 46 миллиметрлă снаряд çăмăллăнах шăтарса кĕрет те шалта çурăлать.

Пăхатăп: окулярта — хĕрес. Сылтăм алла рычаг çине пусатăп, затвор шатлатса илчĕ — çав авăкрах пенĕ сасă янрарĕ. Снаряд танка аяккинчен тивет — шалта кĕрĕслетет. Танк нумай та каймасть — чарăнса ларать.

Сехре хăпнă Комаров хăраса каялла пăхать — танк чарăнса ларнă.

— Чиркин! Танка тахăшĕ тĕп тунă! Тăрать авă! — Адьютанчĕ те чарăнса тăрса каялла пăхать.

Эпĕ пуçа тулалла кăларатăп та Комарова вăрçса тăкатăп.

— Эсĕ, капитан, ăçта таратăн? Ăçта сан батальону? Хăравçă! Нимĕç танкĕсенчен хăрарăн-и? Халех батальонна тытса чар та оборона йышăн! Пурнăçламастăн — воентрибунал!

Комаров мана палласа илет, ман приказ уншăн -- саккун.

— Çак самантрах пурнăçла! — хыттăн кăшкăратăп эпĕ тарăхса кайнипе.

— Эпир тăшман танкĕсене кунтан иртме памастпăр, — ман шухăшпа килĕшӳллĕн сăмахлать Савелькин. Лăпкă вăл — нимĕнле хăрушлăх та çук тейĕн...

— Есть! — тесе Комаров хăйĕн батальонне чарма аналалла хăвăрт чупрĕ.

Эпĕ Савелькинпа хамăр тупăсене туран анакан нимĕç танкĕсем çине тĕллетпĕр.

Ман тупă хыçĕнче икĕ купа снаряд хатĕр, Савелькин валли те чылай туртрĕ подносчик. Эпĕ ăна снарядсене мана çĕртен çĕклесе пама чĕнсе илтĕм. Боец ман пата пырса тăчĕ, мана снаряд тыттарчĕ. Эпĕ ăна тупă çăварне ăсатрăм. Мал-

та килекен икĕ танкран сулахай енчине тĕллерĕм, сылтăмрине пеме Савелькина хушрăм.

Пÿрт умĕнче чие çатрисем йышлăран пире сывăха çитмесĕр те асăрхаймарĕç пулас. Тен, çавна пула туран килекен нимĕç танкĕсем тÿрех асăрхама пултарайман-мĕн паллă.

Эпĕ сылтăм енчи шупка кăвак танка тĕллесе петĕм, анчах унăн малти пайне хулăм броньăран тунă пирки çĕмĕреймерĕм,— вăл нимĕн пулман пек малалла кĕрлесе шăвать. Савелькин персе ячĕ — танкăн башни çаврăнса ларчĕ, çулăм тухнă, танк тăпах чарăнчĕ. Çавăнтах, люка уçса, экипаж тула сиксе тухрĕ. Виççĕшĕн аллинче автомат, водитель — гранатăпа. Эпир çаксене тÿрех автоматран шăлса тухрăмăр, водитель кăна танк хыçне пытанса юлчĕ.

Ман пата Комаров адьютанчĕ Чиркин сержант чупса пычĕ:

— Полковник юлташ, сире Комаров капитан 2-мĕш батальон фашистсемпе çапăçма позици йышăннине пĕлтерме ячĕ, хăй кашни боец çапăçма хатĕррине тĕрĕслет. ПТР-семпе гранатометчиксене танксемпе çапăçма команда панă. Вăн, вĕсем епле переççĕ!

Куратăп: вĕсем йышлăн переççĕ, анчах тăшман танкĕсем 300—400 метрта пирки малти броне тивеççĕ те сиен кÿреймеççĕ, чăлт-чалт туса вут кăларса аяккалла сирпĕнеççĕ. Ман енчи танк çывăхрах çитнине асăрхарăм та аяккинчен куна та тĕллесе шатлаттартăм. Снарядăм меллĕ лекрĕ — танк ăшĕнче çурăлса кĕрĕслетрĕ. Танкран никам та тухакан пулмарĕ.

Хыçалти танксем хăвăрт кунталла килеççĕ, пеме ĕлкĕр çеç — кĕç-вĕç Комаров батальонне таптаса каçса каяççĕ. Акă, кĕрлеттерсе харăсах виçĕ танк çывхарать, ун хыççăнхисем те виçшер. Савелькинпа пĕр вăхăтрах хамăр тупăсенчен перетпĕр, иккĕн икĕ танка чарса лартатпăр, виççĕмĕшне Комаровăн Сизов ятлă боецĕ ПТР-тан персе танка çунтарса ярать. Виççĕмĕш ретри танксем эпир ăçтан пенине асăрхаççĕ те хăйсен тупписене пирĕн çине тытаççĕ, снарядсем пирĕн тавра кĕрлесе çурăлма, снаряд ванчăкĕсем шиллесе вĕçме тытăнаççĕ.

Савелькин тепĕр танка тĕл тивертет те çунтарса ярать. Эпĕ виççĕмĕш танкăн шуçлавне тивертетĕп те татса пăрахатăп. Танк ман еннелле çаврăнса тăрать. Тăшман экипажĕ сывă юлать, наводчикĕ хăйĕн туппине мана тĕллеме тытăнсан, эпĕ çиçĕмле хăвăртлăхпа аялалла сикетĕп, тĕп сакайне

анса ӳкетӗп. Ман хыҫҫӑн—снаряд ҫӗклесе парса таракан подносчик боец та сакайне анса тӑрать. Снаряд пӳртӗн хыҫалти стенине тивет—юлашкине ишсе антарать. Эпир темиҫе минут хӑлха хупланнипе анра-сухра пулса ларатпӑр. Пуҫ кашлать, кирпӗч тусанӗ сӑмса-ҫӑвара кӗрсе тулать, чыхӑнтарать, сывлама йывӑрлатать. Хамӑр чӗрӗ юлни тӗлӗнтерет.

Савелькин нимӗҫсене пирӗншӗн те тавӑрать: вӑл хӑй туппипе ҫак танк ҫинчи туппа тӗллесе перет,снаряд тупӑ кӗпҫине кӗрсе кайса ҫурӑлать, наводчика вӗлерет, водительпе радистне амантать.

Фашистсем хирӗҫ килсе ҫапнине сирсе яма хамӑн вӑй ситес ҫуккине туйса илетӗп, кӗҫ-вӗҫ 3-мӗш батальона аркатса тӑкса, малалла каясран шикленме тытӑнатӑп. Хам команда пунктне ҫитсе Рокоссовские васкаса шӑнкӑравлатӑп.

— «Днепр!» «Днепр!» Сирӗнпе «Сӑр» калаҫать. Сире хамӑн йывӑрлӑха пӗлтерме ирӗк парӑр. Нимӗҫсем ҫӗнӗ танк дивизийӗпе пире хирӗҫ тапӑнса килчӗҫ, ман батальонсем питӗ пысӑк ҫухату тӳсеҫ, 2-мӗш батальон та йывӑр лару-тӑрура, ҫар хатӗрӗсемпе пемеллисем пӗтнӗпе пӗрех. Пире халех пулӑшу кирлӗ. Ана сиртен кӗтетпӗр!

— Итле, «Сӑр!» Вунӑ минут тытӑнса тӑрӑр. Пулӑшу ҫитет,— кӗскен хыпарларӗ Рокоссовский генерал.

Эпӗ 1-мӗш батальон ӗҫӗ-хӗлӗпе паллашма чупрӑм. Юнашар урама ҫитрӗм, унта Орлов майора шыраса тупрӑм. Вӑл хӑй сулахай хулӗнчен аманнӑ, Синицына Зоя унӑн юнлӑ суранне ҫыхса янӑ. Ана санинструктор санчаҫе ӑсатасшӑн пулнӑ, анчах майор ӑна итлеме шутламан, нимӗҫсен танкӗсем тапӑннине сирсе яма васканӑ. Ун патӗнче Чамжаевпа Васильев ентешсем, танксене гранатӑпа пере-пере харсӑр ҫапӑҫнӑ. Орлов майор хӑй ҫеҫ виҫӗ танка ҫунтарса янӑ, ентешӗсем пилӗк танка хытах сиен кӳнӗ.

Йывӑҫ кил-ҫурт ҫунса кайнӑ, пӳртӗн вырӑс кӑмакипе мӑрйи тӑрса юлнӑ тата кирпӗчрен купаланӑ виҫӗ кил хапхи юлнӑ. Орлов ҫӳл енчи чул хапха хыҫӗнче сылтӑм аллине РПГ-40 тытса тӑрать, иккӗмӗшпе виҫҫӗмӗш юписен хыҫӗнче Чамжаевпа Васильев сержантсем пеме хатӗрленсе тӑраҫҫӗ. Урам тепӗр енче те ун батальонӗн салтакӗсем тӗрлӗ ҫӗрте выртаҫҫӗ. Пурте танксемпе, автоматчиксемпе кӗрешме хатӗр.

Акӑ каллех урам varрипе икӗ танк кӗрлесе ҫитеҫҫӗ. Майор юпа хыҫӗнчен вӗҫсе тухать те хайхи хӑй енчи танк айне РПГ-на вӑркӑнтарать. Хайхи шартлатса ҫурӑлать, танкӑн сылтӑм шуҫлавне татса пӑрахать. Кӗмӗркке танк малалла кӑшт каять те тепӗр еннелле ҫаврӑнса ларать. Ытти танксе-

не те гранатăсемпе тытса чараççĕ, çулĕсене пӳлеççĕ.

Танксем хыçĕнчи нимĕç автоматчикĕсем пирĕн юр çинче выртакан боецсене тĕллесе переççĕ, Орловпа юлташĕсем кирпĕч юпа хыçĕнче тăнипе сывă юлаççĕ, тепĕр енчи юр çинче выртакан боецсенчен хăшĕ-пĕри çавăнтах вилĕм тупать, иккĕшĕ хулран, виççĕмĕшĕ купарчаран аманаççĕ те санитарсене чĕнеççĕ. Çавăнтах вĕсене Зойăпа Володя, шуса пырса, пахчаналла сĕтĕрсе каяççĕ, унта пĕрремĕш пулăшу параççĕ.

Нимĕç автоматчикĕсемпе Орлов батальонĕнчи станоклă виçĕ пулеметпа перекенсем паттăрăн çапăçаççĕ, вĕсене урамри çӳппе шăлнă пек шăлса тасатаççĕ. Пулемечĕсене хăйсене курма çук, тĕрлĕ çурт-йĕр хыçĕнче, ишĕлнĕ мăрьесем тавралĕнче майлаштарса лартнă пулмалла, тăшман пехотине аялтанах çулать.

Эпĕ кĕсьери сехете кăларса пăхрăм, Рокоссовский калана хыççăн шăп вунă минут иртрĕ — унччен те пулмасть пирĕн çийĕн, хаяррăн шăхăрса, сывлăша çурса снарядсем вĕççе иртрĕç. Хула варринчи площадьре нимĕç танкĕсен колонни çине ӳксе хаяррăн кĕрĕслетни хăлхана хупласа хучĕ. Акă çитмĕлултă миллиметрлă тупăсен симфонийĕ нимĕç танкĕсене ташлатма тытăнчĕ. Манăн чĕре тинех çăмăллăн тапма пуçларĕ.

Артиллери вутне хамăн юлташ Тураев майор «пилленине» ăнлантăм. Вăл хăйĕн полкĕпе мана пулăшма вăхăтра çитрĕ. Ытла та вăхăтра. Рокоссовский генерал приказĕпе çак пулăшу пире ăнăçу кӳчĕ.

Снарядсем нимĕç танкĕсем пухăннă вырăнта вăйлăн кĕрлесе çурăлни, танк башнисене сирпĕте-сирпĕте яни, унта вутçулăм ялкăшса тăни сывă юлнă боецсене пурне те сазăнтарчĕ пулмалла.

Мана Терехов связист çавăнтах тепĕр килпетлĕ хыпар пĕлтерчĕ: Жуков генерал приказĕпе кунта 20-мĕш армири Ремизов генералăн 40-мĕш стрелковăй бригади, 64-мĕш тинĕс-çар бригади тата Катуков генералăн 4-мĕш танк бригади килсе çитнĕ, вĕсем Волоколамск хулине икĕ енчен çавăрса илеççĕ...

Хулана кĕçĕр фашистсенчен тасатмалла...

Ку хыпар мана, паллах, хĕпĕртеттерчĕ, анчах çар хула ытла нимĕçсен аллинче-çке, вĕсене тӳрех тасатса пĕтерме çук. Нимĕç автоматчикĕсемпе снайперĕсем çуртсем хыçĕнчен, маччасем çинчен, сарайсенчен те пеме пултараççĕ.

Васильевпа Чамжаев сержантсем ман пата чупса пычĕç:

— Полковник юлташ! Ай-вай, пирĕн артиллери хытă чĕтретет. Мĕнле вăхăтра килсе çитрĕ!!! Мĕнле тавçăрса илнĕ вĕсем? — хăйĕн савăнăçне пытармасть Васильев.

Пире Рокоссовский пулăшать тесе темшĕн каламастăп çаксене.

— Гудериан танкĕсене пĕтерсе çитерес çук тесе, хăрама тытăннăччĕ,— пĕлтерет хăй шухăшне Чамжаев.

Чăнах та, нимĕçсен танкĕсем тапăнма пăрахрĕç, вунă-вунпилĕк минут артиллери вучĕ ĕрĕхнĕ хыççăн нимĕçсен танк колонни арканса пĕтни паллă пулчĕ, юлашкисем, унта-кунта сыхланса юлнисем, каялла хытă тарнине пĕлтĕмĕр.

Орлов майора эпĕ санбата халех кайма хушрăм, вăл манпа кăмăлсăррăн уйрăлчĕ, ăна хавхалантарас шутпа штаба çитсенех нимĕçсемпе паттăр çапăçнăшăн «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденне илме тăратма пултăм.

Вăл хура куçĕпе мана ăшшăн пăхрĕ, сылтăм аллипе хытă чăмăртарĕ, хăй асра упракан шухăшне пытармарĕ: «Эсĕ, Аркадий Петрович, маншăн ан çун, мана нимĕнле награда та кирлĕ мар, чи лайăх награда маншăн — эсĕ, хаклă ял çынни, аслă пиччем, çак асар-писер юнлă вăрçăра чĕрĕ юлни пулĕ. Упра хăвна, хаклă тăванăм!..» — Вăл мана питрен чуп турĕ те, Володя Галкинпа Зоя Синицына пулăшнипе, аслă урампа анаталла утрĕ. Санитарсем ăна санитари машини патне ситичченех ăсатма кайрĕç.

Эпĕ хамăн команда пунктне васкарăм. Унта мана Савелькин адьютант, Тараасов майор, Костров ординарец, Терехов связист кĕтсе тăраççĕ. Тарасов ик-виçĕ минут каялла Рокоссовский хăй манпа сăмахласшăн пулнине, хăйĕн шăнкăравне кĕтме хушнине пĕлтерчĕ.

Кас еннелле сулăннăччĕ ĕнтĕ. Икĕ сехет пĕр канмасăр çапăçнипе эпир пурте чылаях ырнăччĕ. Каллех телефон шăнкăравларĕ. Терехов трубкăна илсе итлерĕ те мана пачĕ:

— Сире Воронов чĕнет.

Эпĕ трубкăна алла илтĕм, дивизи командирĕ мĕн ыйтасса кĕтрĕм.

— «Сăр», «Сăр», мана илтетĕн-и? — кăсăкланать Воронов генерал.

— «Атăл», сана лайăх илтетĕп.

— Вăт мĕн.— тет Воронов генерал.— Новосолдатская, Кутузовская тата ытти хĕвеланăç урамĕсене нимĕçсенчен кĕçĕр тасатмалла. Полковник юлташ, вăл сирĕн умри ответлă задани. Улттă та нуль-нуль — ĕçе тытăнатăр. Дивизи командирĕ, хăш сехетре тапăнăва тухмаллине палăртса, хама

шухăшлама икĕ сехет ытла вăхăт хăварчĕ, анчах полк çапăçса ыванна тесе, ку ĕçе ырана хăвармарĕ, задачăна кĕçĕрех татса пама хушрĕ. Çакăн сăлтавне ăнланмалла ĕнтĕ: хулан çурçĕрпе хĕвелтухăç пайĕсене тăшманран тасатнă пулсан, мĕншĕн юлашкине тасатмалла мар? Вăл кирек камшăн та паллă.

Эпĕ ку ĕçе ыран каннă хыççăн çĕнĕ вăйпа тума тытăнасшăнччĕ. Каннă салтаксемпе офицерсем нимĕçсемпе хăюллă та тулли вăйпа çапăçассине пĕлетĕп. Тепĕр енчен илсен, кун çутинче тăшман лайăх курать, хăйне тапăнса пыракана ытларах сиен кӳрет, пĕтерет. Кăнтăрла çухату нумайрах пулать. Тăшман артиллерийĕпе авиацийĕ пирки те манма юрамасть. Çавна май, кун çутинче тăшманпа çапăçма темиçе хут йывăрланать.

Паллах, çĕрлехи тапăну ăнăçлă пултăр тесен, çав тапăну вырăнне тата тăшман сыхлăхĕпе ун хĕçпăшал вăйне, йышне лайăх пĕлмелле. Ку тĕлĕшпе малтан разведчиксене хытă ĕçлеттермелле. Пур кирлĕ сведенисем командир аллинче пулмалла. Вăл вĕсемпе тĕрĕс усă курсан çеç тапăну çĕнтерӳпе вĕçленме пултарĕ... Эпĕ хула карттине планшетран туртса кăларатăп та анăçри урамсене тимлĕ пăхма-сăнама тытăнатăп. Чи малтан — Новосолдатская урама. Нимĕçсем подвалсенче чӳречесем туса пире хирĕç вăйлă çапăçасса пĕлетĕп. Нимĕçсен çар ертӳçисем хулана çăмăллăн парас çукки паллă.

Чăнах та пирĕн артиллери вучĕ хыççăн нимĕçсем танкпа тапăнса килме пăрахрĕç: те вĕсен танкĕсен йышĕ хăвăрт чакрĕ, юрăхсăра тухнисем йышланчĕç, те хăйсен тактикине улăштарчĕç, кам пĕлет?

Паллах, сăнав пунктĕнчен, вырăсла ăна кĕскен НП теççĕ, Рокоссовский, Воронов генералсем стереотрубапа сăнаса тăрса тавралăха лайăх кураççĕ, кунсăр пуçне, вĕсене çар разведки йăлтах пĕлтерсе тăрать. Пирĕн çар ертӳçисем тăшман мĕн тунине, мĕнле вăйпа кĕрешнине, мĕнле резервсем пуррине ал тупанĕ çинчи пек курса тăраççĕ. Ăна та анчах мар, хăш çĕртен, хăш енчен мĕнле вăйпа татса кĕрсе кайма пултарассине те чухлаççĕ, çавăнта тӳрех хирĕçле вăй тăратаççĕ...

Чăн та, Мускавшăн пыракан çапăçура хăйсен ăсталăхĕпе пултарулăхне Жуков, Рокоссовский, Панфилов, Казаков, Захаров, Ремизов, Катуков, Белобородов, Говоров, Доватор, Плиев генералсем яр-уççăн кăтартса пачĕç. Эпир те тăшманпа çапăçма вĕсенчен вĕренсе пытăмăр.

Нимĕçсем тапăнма пăрахсан, пирĕн салтаксем хăйсене

çамăлрах туйрĕç. Выртнă çĕртех хăйсен çумĕнчи сухарине кăтăртаттарса кăшларĕç, çывăхри колонкăран котелока шыв тултарса ĕçрĕç, камăн пемелли вĕçленнĕ, ăна кайса илчĕç.

Раштаври кĕске кун тĕксĕмленсех пычĕ, анчах хулара нихăш килте те çутă çутăлмарĕ — ăçтан пултăр электричество арканса-ишĕлсе пĕтнĕ хулара?

Эпĕ вăхăтлăха хамăн командир пунктне таврăнтăм. Хампа пĕрле Иван Савелькин, Алексей Костров ординарец пычĕç.

Мана кĕтсе тăнă пекех, телефон шăнкăравларĕ, эпĕ трубкăна илтĕм.

— Сирпе, Чайкин полковник, Рокоссовский калаçать,— терĕ сăнав пунктĕнчи связист.

Тепĕр çеккунтран Рокоссовский генерал-лейтенантăн çемçе сасси илтĕнсе кайрĕ.

— Аркадий Петрович, сирĕн участокра хăвăра мĕнле туятăр? Тăшман хăйне мĕнле тытать? Хытă хĕсмест-и?

Эпĕ ăна вăхăтра пулăшу панăшăн тав турăм, нимĕç танкĕсемпе мотопехоти тапăнма пăрахнине палăртрăм, салтаксемпе командирсем явкай апачĕ тунине, çухатусем нумай пулин те, тăшманпа çапăçма хатĕр тăнине пĕлгертĕм.

— Сирĕн, эпĕ Воронов генералпа калаçрăм, кĕçĕр ытти чаçсемпе пĕрле Волоколамск хулине нимĕçсенчен тасатмалла. Сиртен тата Воронов генералтан рапорт кĕтетĕп. Май килнĕ таран пулăшăпăр. Сире чи малтан мина тасатакансен ротине паратăп, задание пурнăçлама ăнăçлăх сунатăп.

Эпĕ тăватă разведчика чĕнсе илтĕм, çак ушкăна Васильев ертсе пыратчĕ. Вăл пĕрре мар разведкара пулнă, кирлĕ сведенисем тупса килнĕ.

Васильев сержант ентеш пулнă май ăна эпĕ уйрăмах шанатăп, халĕ те нимĕçсем мĕн тунине пĕлме, «чĕлхе» тупса килме хушрăм.

Васильев сержант задани илсен, разведчиксем юр тĕслĕ шурă тум тăхăннăскерсем, докуменчĕсене старшинана упрама хăварса, каç сĕмĕнче çухалчĕç.

Эпĕ батальон командирĕсене хам КП-на чĕнсе илтĕм, анчах Бельский кăна пулчĕ. Комаров капитана, йывăр аманнипе, санбата ăсатнине пĕлтĕм. Халĕ батальона вăхăтлăх Шпагин аслă лейтенант ертсе пырать. Çакна манăн ырламалли çеç юлчĕ. Чăнах та, 2-мĕш батальонра унран пысăкрах званиллĕ командир çукчĕ. Эппин, ун пирки дивизи штабне кирлĕ хутсем тăратмалла.

Эпӗ Савелькина Марчука чӗнсе килме чуптартӑм.

Марчук капитан хӑвӑрт ҫитрӗ. Вӑл батальон командирӗ пулма яланах хатӗр пулнине сӑнран пӑхсах ӑнлантӑм.

— Полковник юлташ, эсир чӗннипе килтӗм! — чыс пачӗ вӑл.

— Эсӗ, Марчук, паянтан пӗрремӗш батальон командирӗ пулатӑн, батальоншӑн явап тытатӑн! — тӳрех пӗлтертӗм эпӗ ӑна.

— Есть! — терӗ ҫеҫ вӑл, пӗтӗм кӗлеткипе тӳрленсе.

КП-на пынӑ командирсемпе кӗске калаҫу ирттертӗм.

— Пирӗн кӗҫӗр ҫывӑрма тивмест. Ытти чаҫсемпе пӗрле хулара юлнӑ нимӗҫ гарнизонӗпе ҫапӑҫма тивет, ытларах пытанса ларнӑ пулеметчикӗсемпе, автоматчикӗсемпе, снайперӗсемпе... Хулана ирччен тасатмалла, 16-мӗш ҫар командующине Рокоссовский генерал-лейтенанта хыпарламалла...

## ХУЛАНА НИМӖҪСЕНЧЕН ТАСАТНИ

Эпӗ батальон командирӗсене кашни ротӑрах пӗрер-икшер снайпер тата подрывниксен пӗрер отделенине уйӑрса тӑратма, вӗсене кирлӗ хӗҫ-пӑшалпа тивӗҫтерме хушрӑм. Ҫӗрлехи ҫапӑҫура кусемсӗр пуҫне ҫутатакансемпе ракетчиксем хатӗр пулмаллине асӑрхаттартӑм.

Хула ҫутӑсӑр пирки нимӗҫсемпе ҫапӑҫма, вӗсене ӑшӑ вырӑнтан вӑтӑр градус сивве хӳтерсе кӑларма тем пек йывӑр пуласси такамшӑн та паллӑ.

Ҫӗрлехи ҫапӑҫу ытла та йывӑр ӗҫ. Командарм хушнӑ пулсан, ӑна пурнӑҫламаллах. Эпӗ хамӑн штаб пуҫлӑхӗпе тӳрех тухса рекогносцировка тума шутларӑм. Ҫав самантра пирӗн разведчиксем каялла таврӑнчӗҫ. Вӗсем хӑйсемпе пӗрле «чӗлхе» ҫавӑтса килчӗҫ.

Вӑл сивӗрен хӑйсен кӑвак шинелӗ ҫине кӑвак тӑлӑп, кролик тирӗнчен ҫӗлетнӗ кӑвак ҫӗлӗк, шурӑ кӑҫатӑ тӑхӑнса янӑ.

— Вӑт, ҫӗрле пӗл вӗсене! Ку нимӗҫ-и е вырӑс салтакӗ? Пире хирӗҫ пемесен, вырӑс ҫынни тесе йышӑнатӑн, — сӑмахлать штаб пуҫлӑхӗ, сасартӑк тӗлӗннипе.

Васильев сержантпа тепӗр разведчик хайхи «чӗлхене» ман чул ҫурт айӗнчи подвала илсе анчӗҫ. Шала кӗрсен, эпӗ ҫурта ҫутрӑм, сӗтел хушшине лартӑм. Хайхи нимӗҫ автоматчикне хам ума тӑратрӑм. Вӑл, ҫӳллӗ те тӗреклӗскер, Францирен илсе килнӗ «Викинг» дивизирен. Лайӑх апатпа пурӑннӑскер, пичӗ-куҫӗ тулли те самӑр, кӑвак куҫӗпе ман ҫине сӑнаса пӑхать.

Эпĕ Васильевран тĕлĕнерех ыйтатăп:

— Çак тĕреклĕскерне мĕнле илсе çитертĕр? Сире кашнинех пĕрер çапса вĕлерсе пăрахать.

— Вăл туалета кĕнине куртăмăр, автоматне алăк умне тăратса хăварчĕ. Вăл кĕрсе ĕç туса пĕтериччен пĕри автоматне хуллен илчĕ, кайран алăк уçса ятăмăр — эпĕ:

— Хэнде хох! — тесе кăшкăрса ятăм.

Ана-кăна кĕтменскер, çухалса кайрĕ пулас, тӳрех аллисене çĕклерĕ, эпир ăна тухма хушрăмăр. Вăл утнă май йĕмĕ анса кайрĕ, çанталăк сивĕрен тӳмелеме тиврĕ. Уншăн вăл «данке» терĕ этем евĕрлех. Тем сăлтавпа вăл пире хирĕçлемерĕ, çапăçма шутламарĕ.

Эпĕ нимĕçле чухлакалатăп, анчах Васильев чухлех пултараймастăп, çавăнпа ăна тăлмачă пулма хушрăм.

Хушамачĕпе ятне, ăçта фуралнине, çарччен кам пулса ĕçленине, çемье ăçтине, мĕнле номерлĕ çар чаçне, хăйĕн шухăшне, вĕсен умне лартнă заданине... Вилли Хант эпĕ панă ыйтусене пĕр тăхтаса тăмасăр хуравларĕ, унăн ашшĕ коммунист пулнине, Эрнст Тельмана хакланине, хăй те, май килсен, пире парăнма шутланине уççăнах каларĕ.

— Хĕрлĕ Çарпа Совет Союзĕ пирки мĕн шутлатăр? — кăсăклантăм эпĕ.

— Хĕрлĕ Çар вăйланса пырать, ăна Гитлер çарĕ ниепле те çĕнеймест. Гитлер капут! Çавăнпа та эпĕ сирĕн енне куçма шутласа хутăм. Сирĕн разведчиксем ăна тума пулăшрĕç.

Вăл Васильев разведчика ăшă куçпа пăхрĕ. Вилли Хант хулара нимĕçсен танк дивизийĕсемпе тухса кайнине, минометчиксемпе пулеметчиксем тата автоматчиксем ирччен кăна юлнине пытармарĕ. Нимĕçсен тактикине ăнланмалла: тĕп чаçсем каялла чакса хăвăртрах çирĕпленсе лармалла васкакан арьергарда мотопехотăна хăварнă.

Васильев разведка ушкăнĕ те нимĕçсен территоринче пулнă хыççăн çав шухăш патнех пынă.

Эпĕ стена çумĕнчи телефон трубкине илтĕм те дивизи командирĕ патне шăнкăравларăм, Воронов генерал трубкăна илчĕ, эпĕ ăна Вилил Хант каланине пĕлтертĕм, хăйне вĕсем патне ăсатма пултăм. Эпĕ хамăн шухăша кĕскен хыпарларăм:

— Виктор Васильевич, ман шутпа, пирĕн нимĕçсемпе çĕрле çапăçма хамăр салтаксемпе командирсене усăсăр пĕтермелле мар, ыран ирхине Белобородов, Катуков тата ытти чаçсем Волоколамск хулине пур енчен те çавăрса илеççĕ те

хулари нимĕç мотопехоти капкăна çакалнать, пĕр юн тăкмасăр хăйех парăнать. Эсир мĕн шутлатăр?

Трубкăра Воронов сасси пĕр авăк çухалчĕ, унтан сасартăк мана татăклăн хирĕçлерĕ:

— Эсĕ, Чайкин полковник, командовани приказне улăштарма та, пăрахăçлама та пултараймастăн, сана мĕн хушнă — çавна пурнăçла.

Воронов трубкине хучĕ, сас урăх пулмарĕ.

Ман калаçăва итлесе тăракан Тарасов, Савелькин, Костров, Васильев эпĕ сăнран улшăннине тӳрех сисрĕç. Тарасов майор пуçне пăркаларĕ: «Вĕсем хăйсен приказне нихçан улăштармаççĕ», терĕ мана çеç илтмелле.

Вилли Ханта урăх хам патра тытмарăм, ăна разведчиксенех дивизи штабне çитерме хушрăм, Васильев сержанта ĕçе ăнăçлă тунăшăн тав турăм.

Çӳлти пуçлăх мана питрен хытă çиçсе янă пекех туйса хама итлекенсен умĕнче кăмăлсăрлантăм, ним калама аптăраса тăтăм, çарта демократи çуккине ăнланатăп пулсан та, çак тĕрĕсмарлăха куçкĕрет куратăп, ăна улăштарма çуккине те ăнланатăп.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, пирĕн дивизие килнĕ командарм полк командирĕсем çапăçăва мĕнле хатĕрленнине пĕлме шутланă май, ман пата кĕрсе тухрĕ. Рокоссовский ăнсăртран килнипе эпĕ кăштах тĕлĕнтĕм. Вăл манăн кĕçĕрхи çапăçу планĕпе паллашрĕ, эпĕ ăнланмалла каланине, карттăпа çăмăллăн та ирĕклĕн ĕçленине, хăш урамсене нимĕçрен тасатмаллине командующи çийĕнчех асăрхарĕ.

— Аван каларăр, полковник юлташ,— манăн алла тытса чăмăртарĕ,— пит аванччĕ хăвăр каланă пек çапăçсан.

— Пĕтĕм вăя хурса тăрăшăпăр, командующи юлташ,— савăнса тавăртăм эпĕ ăна.

— Анчах эпĕ пĕр япалана ăнланаймарăм,— систерчĕ хăйне генерал.— Мĕнле-ха эсир çак вырăна кĕске вăхăтра хăнăхса çитме пултарнă. Эсир ку хулара малтан та пулнă-и? Рекогносцировкаирттертĕр-и?

— Ку хулара пĕрремĕш хут, генерал-лейтенант. Рекогносцировка та ирттереймен-ха. Халь кăна ирттерме шутланăччĕ.

— Ирттерме кирлĕ. Вырăна лайăх пĕлни çапăçура унпа тĕрĕс усă курни — çур ăнăçу вăл.

Рокоссовский ăшă куçпа пăхни, ман çапăçу планне ырлани мана унпа пуплеме, хам шухăша калама хăюллантарчĕ. Мĕн пулать те мĕн килет тенĕ пек, эпĕ хамăр салтаксем-

шĕн тăрăшмалли, вĕсене упрама пĕлмелли майсем çинчен сăмах хускатрăм.

— Генерал-лейтенант юлташ, сирĕнпе пĕр ыйтупа сăмахлама ирĕк парăр,— Рокоссовский хăйĕн пысăк кăвак куçĕпе мана тинкерчĕ.

Эпĕ ăна Волоколамск хулине фашистсенчен çĕрле тасатма йывăррине, пирĕн салтаксем йышлă пĕтессине систертĕм. Хулана пурпĕр Катуковпа Ремизов генералăн чаçĕсем икĕ енчен çавăрса илеççĕ те пĕтереççĕ. Ыран ирхине хула фашисчĕсенчен пурпĕр тасалать, пирĕн енчен сахал çухату пулма кирлĕ.

Ман шухăш тĕрĕс пулнине те ăнланчĕ вăл, анчах хăй пĕрре панă приказа каялла илесси уншăн тем пек йывăррипе, Жуков генерал умĕнче хăйĕн чысне чакарас маррипе мана çавăнтах хирĕçлерĕ.

— Ку приказ манран çеç килмест, çакна çӳлтен хушнă. Эпĕ ăна улăштарма та, пăрахăçа кăларма та пултараймастăп. Еçĕ йывăр пулсан та, тăвас пулать. Эпĕ ăна гитлеровецсем çурçĕр тĕлĕнче ăш ыйха путсан пурнăçлама çăмăлтарах тесшĕн. Çав тĕле пĕтерекен ушкăнсем хатĕрленсе çитчĕр, вĕсем гранатăсемпе, автоматсемпе, ручной пулеметсемпе хĕçпăшалланччăр, çуртсене çавăрса илччĕр те вырăс çыннисене (кил хуçисене) шăппăн сасăпа тухма ыйтаççĕ. Алăк уçсанах, унта нимĕçсем çывăраççĕ пулсан, хăвăрт кĕрсе каяççĕ те парăнма ыйтаççĕ, хирĕç тăма пикенсен, çавăнтах персе вĕлерсе хăвараççĕ. Çавăн пек майпа хăвăрăн урамсене ирччен тасатса тухатăр. Чее те хăюллă, тавçăруллă пулмалла. Халĕ, полковник, хăвăн чаçна çĕрлехи операци тума тĕплĕн хатĕрлемелле. Çавăн чухне çеç вăл ăнăçлă та сахал çухатупа вĕçленĕ. Эпĕ сирĕн çине шанатăп, полковник», — вăрăм аллине ман еннелле тăсрĕ, кăмăллăн пăхса, алла чăмăртарĕ. Вăл мана аслă юлташ пек вĕрентсе калани чĕрене хавхалантарчĕ.

— Тĕлĕнмелле ырă та кăмăллă этем! — шухăшларăм ăшра.— Тепри ун вырăнĕнче пулсан, мана хăравçă тесе вăрçса тăкатчĕ, çарти устава пăсма тăнăшăн çар трибуналĕпе сехре хăпартатчĕ е халех полк командирĕн должноçĕнчен хăтаратăп тесе чĕтрететчĕ. Кĕскен каласан, эпĕ пысăк инкеке çакланатăп, ниçта та хӳтлĕх тупаймастăп. Ваттисем калашле, хамăн чĕлхе — хамăн тăшман пулса тăратчĕ.

Мана каçкӳлĕм виç кĕтеслĕ çыру илсе килсе пачĕç, ăна ман мăшăрăм Лариса çырнине аллинчен пĕлтĕм. Ăна вулама тытăниччен Тарасов майорпа Тагиров политрука батальон-

сене кайса Рокоссовский мĕн-мĕн тума хушнине командирсем патне çитерме васкарăм, истребгруппăсем йĕркелеме, хунарпа çутатакансене, ракетчиксене, минерсене хатĕрлесе тăратма ыйтрăм.

Çапăçава малтан палăртнă пек улттăра мар, вуннăра тытăнма чĕнтĕм. Ман çумсем тухса кайсан, çырăва кĕсьерен туртса кăлартăм та çавăнтах ăна уçса вулама тытăнтăм. Çырава çар цензури тĕрĕслесе тухнă тенĕ, анчах чăвашла çырнăран тĕплĕн пăхман курăнать: ман Лариса ялти пурнăç йывăррине, колхозниксене ĕç кунĕ пуçне икçĕр грамм тырă кăна валеçсе панине, налуксем нумай тӳленине, аш-пăш кашни кил пуçне патшалăха алă килограмм панине тата ытти парăмсене каласа тухнă.

Хăйĕн çырăвĕнче Лариса госпитальри ĕçсене, унта аманнă офицерсене епле сыватни, уколсем туни, сурансене пенициллин маçĕсемпе çыхса яни çинчен çырса кăтартать. Ик каç сиктерсе виççĕмĕш каçĕнче госпитальре дежурствăра çĕрĕпе куç хупмасăр ĕçленĕ пирки çырать.

Манăн йăмăк хулара повара вĕреннине, вĕренсе тухсан ăна çар чаçне ăсатассине хыпарлать. Вăл салтаксем валли çăмран виçшер мăшăр алса-чăлха çыхса панине те пĕлтерме манман.

«Аркаш мăшăрăм, эпир ялта пурăннă май чылай япаласене пĕлместпĕр,— çырать малалла Лариса.— Кала-ха, фашистсем пирĕн патах çитме пултараççĕ-ши? Хăщĕсем çаван пек пуплеççĕ. Халĕ тата вĕсене пирĕн çар Мускав патĕнчен каялла хытă хăвалать тесе радио пĕлтерет, хаçатсем те çыраççĕ. Хăшне ĕненмелле — эпĕ иккĕленетĕп. Эсĕ мана тĕрĕссине çырса пĕлтер-ха. Çакăн пек йывăр пурнăçшăн чун тăвăлать, кăмăл пусăрăнчăк çӳрет, саншăн хуйхăрса чĕре ыратать. Тепĕр чухне сан çинчен шухăшланипе çывăрса та каяймастăп, йĕрсе те илетĕп. Ытла та çемçе-çке çав хĕрарăм чунĕ!

Аркаш, çырса пĕлтерсеммчĕ хăвăн вăрçăри пурнăçу çинчен. Паллах, эсĕ хаяр вут-çулăм айĕнче, сĕмсĕр вилĕм аллинче. Эсĕ сасартăк вилсе выртассăн туйăнать, сан виллӳне те салтаксем шыраса тупаймаççĕ пек. Çак мана ытла та шутсăр хăратать. Эпĕ икĕ хутчен хула чиркĕвне кайса Христос турă умĕнче сана чĕрĕ хăвар тесе çурта лартрăм, çичĕ хутчен пуççапрăм. Чăнах та, аслă Турă сана сывă усратăрччĕ, ман пата тĕрĕс-тĕкел илсе çитертĕрччĕ. Санран хакли маншăн нимĕн те çук...»

Вунă сехет çитрĕ. Батальонсем, кашни хăй урамĕпе тăвалла хăпарса, нимĕçсене хула хĕррине тухиччenex тасатма

шутларĕç. Батальонпа рота командирĕсем хăйсем палăртнă штурмлакан тата тăшмана пĕтерекен (истребительнăй) ушкăнĕсене ĕçе тытăнма васкатрĕç, пиротехниксем ракетницаран виçĕ хут персе кăвак çутăпа ялкăштарчĕç.

Пирĕн урамсенче шăплăх хуçаланатчĕ. Хулан тĕрлĕ пайĕсенче пулемет шатăртаттарса илни е мина кĕрĕслетсе çурăлни, е акă, автомат кĕрлесе тавралăха янратни çеç илтĕнкелет.

Эпĕ полка ăсатса ятăм, Тарасова ĕç мĕнле аталанса пынине пĕлсе тăма Новосолдатская урамри 32-мĕш кирпĕч çуртри телефон аппарачĕ пур пӳлĕме хăйĕн адьютанчĕпе тата Моркин связистпа хăвартăм. Вĕсемпе пĕрле Зойăпа Володя санитарсем те аманнисене тӳрех пулăшу пама юлчĕç, эп хам ординарецпа, адьютантпа КП-на таврăнтăм. Ман ытти чаçсемпе, дивизипе çыхăну тытма хамăн «йăвара» пулмалла. Хамăн кирек ăçта та шăнкăравлама, ыйтса пĕлме, батальонсемпе те çыхăну тытма тивет е хам пата та шăнкăравлама кирек ăçтан та пултараççĕ.

Зойăпа Володя яланах пĕрле пулни мана питех килĕшет. Вĕсем вут айне кĕрсе кайсах йывăр аманнисене санчаçе е санбата çĕклесе çитерни кашни кунах темиçе хут пулнă. Вĕсене боецсемпе командирсем ырланине пĕрре мар илтнĕ. Çаксем, хăюллă та чиперскерсем, пĕр-пĕрне юратнине асăрхама пулать, анчах хăйсем çынсене систересшĕн мар: йĕплĕ чĕлхесенчен шикленеççĕ. Тепĕр чухне пĕри теприне вăрçса та илет, Зоя ытларах Володьăна вăр-вар пул, хăвăртрах ут тесе тĕртсе илет, анчах каччи нимĕн те хирĕç каламасть, хĕр мĕн хушнине хăвăрт тума тăрăшать.

Эпĕ Лариса çырăвĕ хыççăн çаксенчен инкек килсе çапмасан лайăх мăшăр пуласса шантăм. Анчах шухăш вĕсем çинче нумай тытăнса тăмарĕ, манăн батальонсем усал тăшманпа мĕнле кĕрешнин кăсăклантарчĕ, телефон шăнкăравламасăр ун патне пыма васкамарăм.

Кăшт тăхтасан, Тарасов майор патне шăнкăравларăм, нимĕçсемпе тытăçу мĕнле пынине пĕлтерме ыйтрăм.

Гурий Иванович кăмăллă сасăпа кĕскен хыпарларĕ: «Полковник юлташ, виçĕ батальонран та çакна пĕлтерчĕç: пирĕн штурмлакан ушкăнсем çуртсене сасартăк çавăрса илеççĕ, хуçисене шăппăн чĕнсе уçтараççĕ (вĕсем пурте совет çарĕ паян-ыран хăйсене ирĕке кăларать тесе кĕтсе лараççĕ, йĕркеллĕ çывăрмаççĕ, нимĕç салтакĕсем ĕшеннипе хытă çывăраççĕ), эсир хушнă пек штурмовик-истребительсем вĕсем çывăрнă çĕре кĕреççĕ те автомачĕсене, пистолечĕсене пухса

илеççĕ, хăйсене: хэнде хох! — тесе сасартăк кăшкăраççĕ, вĕсем çине автомачĕсемпе тĕллесе тăраççĕ. Хăранипе сехĕрленсе кайнă нимĕç салтакĕсем сиксе тăраççĕ, вĕсене çаплипех тула илсе тухаççĕ. Тулта, вăтăр градус сивĕре, вĕсене пĕрерĕн хăйсен япалисене тăхăнма параççĕ, шăнса чĕтрекен салтаксене ушкăн-ушкăнăн Мускав еннелле тыткăна ăсатаççĕ.

— Хирĕç тăракансем пур-и? Вĕсемпе мĕн тăваççĕ? — кăсăклантăм эпĕ.

— Пĕр нимĕç лейтенанчĕпе икĕ фельдфебель, вĕсене иквиçĕ хутчен хăлхаран тăхăнтартнă хыççăн, урăх хирĕçмен. Халлĕхе ĕç йĕркеллех пырать, анчах Совет площадьне çитсен улшăнма пултарать. Пирĕн разведчиксем пĕлтернĕ тăрăх, унта вĕсен артиллерипе миномет батарейисем, вĕсене хытă хуралласа тăраççĕ, дозор та çывăрмасть, чиркӳпе пушар каланчи çинче те наблюдательсем, пулеметчиксем яланах сыхă... Унта çапăçусăр ĕç тухмасть,— пĕлтерет мана Тарасов.

— Кунта та каллех разведчиксемпе пĕрле икшер-виçшер штурмовиксен ушкăнне ямалла, пĕтĕм батальонсене çапăçăва кĕртмесĕр тилĕ пек вăрттăн пырса тигр пек сиксе çурса тăкмалла.

Тепĕр сехет çурăран Тарасов мана пирĕн батальонсем Совет площадьне çитсе тăшманран тасатса тухни çинчен хыпарларĕ, ĕç сухатусăр пыни кăмăла çĕклерĕ. Эпĕ хам ăшра ĕç малашне те çапла ăнăçлă пултăрччĕ тесе шухăшлатăп. Алăри сехете пăхса илетĕп: çурçĕр иртни икĕ сехете яхăн. Ĕç кун пек пырсан, тепĕр икĕ сехетрен хула тăшманран тасалмалла...

Пăхатăп: манăн адьютантпа ординарец тата связист тенкел çинче пуçĕсене уснă та çывăрса лараççĕ. Чăнах та, ăшă ыйхă вăхăчĕ. Эпĕ вĕсене вăратмарăм, хамăн хуралçă вырăнтах-и тесе пăхма тула тухрăм. Часовой хăй вырăнĕнчех, сивĕ хытă чĕпĕтнĕрен кăçатăпа пулин те ташла-ташла илет, аллисене те вылятать, пĕр-пĕрин çумне çапать, пĕр-пĕринпе лутăркаса илет. Ана кĕç-вĕç ылмаштарма килмелле. Тулта унта-кунта пенĕ сасăсем илтĕнеççĕ, тӳпе шурă тачка пĕлĕтсенчен тасалса пырать, çăлтăрсем мăч-мач, мăч-мач çутатса илеççĕ, пĕлĕт айĕнчен уйăх тухман-ха, вăл тухсанах пĕтĕм тавралăх çуталса каять, манăн разведчиксемпе штурмлакан ушкăншăн майлă мар: тăшман асăрхама пултарать, вара хаяр çапăçусăр ĕçе татса пама çук. Тулта кăчăртатать раштав, аякранах илтĕнет çын утни. Раштавăн юлашки кунĕсем. Кĕçех Çĕнĕ çул. Мĕнпе кĕтсе илĕпĕр-ха Çĕнĕ çула? Чи пысăк та асра юлмалли пулăм, событи — Мускав патĕнчи Гитлерăн

хăватлă çарне аркатса тăкни, асар-писер çил-тăвăлне сирсе пăрахни. Çак истори пулăмĕ Совет çарĕ фашист çарне тĕпрен аркатса тăкма шанчăк çуратрĕ. Ку — совет çыннишĕн чи кирли.

Хамăн Лариса патне хурав çырасси пирки шухăшлама пуçларăм. Çук, Волоколамск хулине нимĕçсенчен тасатмасăр кирлĕ мар, тăхтамалла. Эпĕ хамăн КП-на кĕтĕм. Манăн çынсем ларнă çĕртех çывăраççĕ. Савелькин тенкел çине тăсăлса выртнă, пуç айне сулахай аллине хунă, харлаттарсах хуп турттарать. Мĕн тăвăн? Ыйхă хăйĕннех тăвать.

Акă телефон шăнкăравлать. Эпĕ трубкăна ярса тытрăм.

— Сире «Сăр» итлет!

Анланатăп: манпа Воронов генерал калаçасшăн. Трубкăра, чăн та, ун сасси илтĕнсе кайрĕ, вăл манран тасату мĕнле пынине пĕлесшĕн-мĕн.

— Тасатса Совет площадьне çитрĕмĕр, халĕ малалла кайма палăртрăмăр, ирччен ĕçе вĕçлесшĕн.

— Сăмсаран юн кайтăр та — ирччен хулана тăшманран тасатмалла.

Площадь урлă каçса тури урамсене тасатса тухмалли вăхăт çитрĕ. Эпĕ разведкăна каллех Васильев сержантпа Синицын, Палан, Каримов, Волк разведчиксене ятăм. Вĕсене сержант ертсе кайрĕ. Площадь урлă шăвăнса лайăхах каçса каяççĕ те икĕ хутлă кирпĕч çурт умне пырса тухаççĕ. Шур пĕлет айĕнчен тухнă уйăх çутатса ярать. Васильев юлташсене çурт стени çумне йăпшăнса тăма хушать, хăй Палана чĕнет те пĕрле алăк патне пырса итлеме тытăнаççĕ, шалтан нимĕнле сас-хура та илтĕнмест. Сержант сылтăм аллипе алăка виçĕ хутчен тăк-тăк-тăк тутарать те каллех итлет.

— Килте çук пулас,— тет Палан чăвашла.

Васильев алăка хытăрах тăклаттарса илет, хальхинче такам шалтан тухать те алăк патне чупса пырать.

— Кам унта? — илтĕнсе каять ача сасси.

— Сирĕн патра нимĕçсем çук-и? — кăсăкланать разведчик.— Эпир вырăс салтакĕсем.

— Пирĕн патра нимĕçсем çук, эпир аннепе иксĕмĕр кăна, анне чирлĕ, нимĕç салтакĕсем пирĕн пата кĕресшĕнччĕ, анне тифпа чирленĕ терĕм те, пирĕн патран пăрăнса утрĕç.

— Эсĕ маттур ача,— ырларĕ ăна Васильев.— Эсĕ алăкна уç-ха,— ыйтрĕ ăна сержант.

— Анне уçма хушмарĕ. Юрамасть,— хирĕçлерĕ ача.

— Эсĕ мĕн ятлă пулатăн?

—Витя... Витя Чапурин.

— Витя, хăш çуртра нимĕçсем пуррине асăрхаман-и? — пĕлесшĕн пулчĕ Васильев.

— Эпĕ пĕлетĕп те анчах сасăпа калама хăратăп, урамалла янраса тухать. Вăрттăнлăх,— шăппăн хуравлать ача.

— Апла пулсан мана çеç кĕрт, Витюся, ан хăра,— тилмĕрнĕ пек ыйтать сержант.

— Эпĕ анне патне кайса килем-ха. Вăл ирĕк парсан, пĕр-ик минутлăха кĕртетĕп.

Ача чупса кайнă сасă илтĕнсе юлать. Тепĕр минутран вăл вĕçтерсе те çитет, алăк çекĕлне çӳлелле çĕклет — алăк уçăлса каять.

— Асли кĕтĕр, — тет.

Васильев хăвăрт кĕрсе каять, ача алăка хупса питĕрсе хурать. Сержант ача хыççăн тулти пӳлĕме кĕрет. Сĕтел çинче пĕчĕк лампа çунса ларать. Ун çутинче вунпĕр-вуникĕ çулсенчи çырă çӳçлĕ, шĕвĕр янахлă, кăвак куçлă шуранка арçын ача тăрать. Çине вăл шурă кĕпе, урине кивĕ пушмак тăхăннă.

— Витя тусăм, халĕ калама пултаратăн-и?

— Эсир кам пулатăр? — пелме тăрăшрĕ Витя.

— Разведчик. Хулана кĕтмен хăнасенчен тасатас пулсан, ăçта, хăш çуртра вырнаçнине пирĕн лайăх пĕлес пулать. Халĕ, çĕрле, вĕсем пытанса ларма пултараççĕ,— ăнлантарма пикенчĕ вăл.

— Халĕ пĕтĕмпех ăнланмалла. Апла пулсан, итлĕр, асра тытма тăрăшăр. Кутузов умĕнчи — 25, 27, 35, 39, 42 çуртсенче, Суворов урамĕнче — 23, 24, 30, 32, 36, 28, 40, 45, Новосолдатская урамĕнче — 26, 29, 33, 37, 41, 46, 49, 51. Çак килсем сыхланса юлнă, вĕсенче фашистсем чылай вăхăт пурăнаççĕ ĕнтĕ. Эпĕ партизансене пĕлтерме çак çуртсене асра тытатăп, ниçта та çырмастăп. Çырма та хушмаççĕ мана вăрманти мучисем. Полицайсем тытас-тăвас пулсан, ман патра та, çумра та нимĕн те тупаймаççĕ, айăплама йывăр.

— Вăт маттур ача эсĕ! Питĕ шанчăклă та ăслă,— ырласа гавăрчĕ ăна аслă разведчик.— Аннӳ чăнах та тифпа чирленĕ-и?

— Çук, шăннипе ӳсĕрет, сунас. Халĕ ыхрапа сипленет. Иртет вăл,— ăнлантармалла сăмахлать Витя Чапурин.

Васильев ачана тав тăвать, темиçе сахăр катăкĕ парать, васкаса каялла тухать, Витя ун хыççăн алăка питĕрсе юлать. Темиçе минут кĕтсе тăнă юлташĕсем нумай вăхăт çак килте иртернĕшĕн ӳпкелешме те пăхрĕç, анчах Васильев сержант хăй хаклă сведени туяннине систернĕ хыççăн ăпланчĕç. Раз-

ведчиксем килнĕ çулпах каялла васкаса таврăнчĕç: тупнă сведение штурмовиксемпе истребительсен аллине памалла, вĕсемпе пĕрле автоматчиксем, пулеметчиксем те пулаççĕ.

1-мĕшпе 2-мĕш батальон командирĕсем хăйсен штурмовикĕсене виçĕ ушкăнпа задание пурнăçлама ăсатаççĕ. Ушкансем пуçĕнче Редьков, Чамжаев кĕçĕн лейтенантсем, Юман аслă сержант. Кашни ушкăнĕнчеултшар боец, кашни боец автоматпа тата гранатăсемпе, хăшĕ-пĕри финкăсем те илнĕ.

Кĕскен те пулин кашни командирах сăнласа парас килет.

Чамжаев Михаил Антонович — ман ентеш, вăрçа киличчен пуçламăш шкулта вĕрентсе пурăннă. Вăтам пӳллĕ, çивĕч этем, сахал калаçать, хушнă ĕçе шухăшласа тăвать, васкамасть, тĕрĕслĕхшĕн тăрăшать, суйнине юратмасть, вăтăр пĕр çулта, тавракурăмĕ анлă. Ун командинче харсăр боецсем: Арланов, Стрелков, Нечай.

Редьков Василий Иванович — кĕçĕн лейтенант. Çара киличчен Чулхулари çар училищине вĕренсе пĕтернĕ, хĕрлĕ сăнлă, тулли питлĕ, хура çӳçлĕ, тачкарах çамрăк, авланман, вулама юратать, хирĕç сăмахлакансемпе хытă тавлашать, шикленӳсĕр, вăй-халĕ те çапăçура хастар, автоматран, пулеметран, лайăх перет, сасси вăйлă. Унăн боецĕсем хăй пекех хăюллă та харсăр: Бойко Иван, Назаров Толя, Яшков Яккăвĕ, Шевчук Тарас.

Ярайкин Борис — Чăваш çĕрĕнчен. Тарапай ялĕнче ӳссе çитĕннĕ çирĕм виççĕри каччă, хастар та хăюллă, вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн полк шкулĕнче çар ĕçне вĕреннĕ, бокспа вăйлă, çар вăрттăнлăхне асра тытать, сӳпĕлтетме юратмасть. Пемелли хатĕрсенчен тĕл перет, инçе чупать — ырсах каймасть. Унăн ушкăнĕнче пултаруллă штурмовиксем: Смелов Сергей, Волк Владимиров, Каримов Рафик, Штыков Борис.

Кашни командир хăйĕн ятарлă ушкăнне çапăçмалли участока илсе кайрĕ, варринчи Суворов урамне Редьков Василий Иванович илсе çитерчĕ. Площадь ту енче — пысăк магазин, унăн сылтăм енĕ Суворов урамне тухать.

Магазинра нимĕçсем пулас. Алăкĕ умĕнче часовой каллĕмаллĕ утать. Площадь енчи варринчи чӳречерен пулемет кĕпçи куранса тăрать.

Редьков Бойко боеца хайхи нимĕç часовойне хыçалтан пырса тирпейлеме хушрĕ, Назаровпа Яшкова магазинăн хыçал енчи подвалне кĕрсе нимĕçсенчен тасатма сĕнчĕ. Хăй Шевчукпа магазинран тухса таракан фрицсене шĕкĕлчеме хатĕрленсе тăчĕ.

Бойко тротуар тулашĕпе лартнă йывăç тĕмĕсем хӳттипе

хайхи нимĕç часовойĕ патне тилĕ пек йăпшăнса пычĕ, ун çурăмĕ хыçне сасартăк сиксе тухрĕ те автомат кĕпçипе пусĕнчен вирлĕн туртса çапрĕ — часовой пĕр сасă кăлармасăр тротуар çине тĕшĕрĕлсе ӳкрĕ. Бойко ăна кĕрĕк çухинчен тытса йывăçсем хыçне тротуар хĕрне сĕтĕрсе кăларса пăрахрĕ. Редьковпа Шевчук, вăтăр çулсенчи тĕреклĕ украинец, подвал патне йăпшăнса çитрĕç. Шевчук картлашкасемпе хуллен анса тимĕр алăк патне çитсе тăчĕ, шалта нимĕçсен сассисем илтĕнсе кайрĕç, вăл тимĕр алăка хуллен уçрĕ те шалалла граната вăркăнтарчĕ, хăй стена çумне çыпçăнса тăчĕ.

Шалта хыттăн кĕрĕслетнĕ, çухăрнă, йăнăшнă сасăсем илтĕнсе кайрĕç, алăкран нимĕç салтакĕ вăркăнса тухрĕ, анчах икĕ картлашка тума ĕлкĕрчĕ-и, ăна Шевчук «хэнде хох!» тесе янратрĕ, Редьков ăна автоматпа тĕллерĕ. Ирĕксĕрех «чĕнмен хăнан» аллине çĕклеме тиврĕ.

Бойко шăп çав самантра вĕсем патне вĕçтерсе çитрĕ.

— Эсĕ çак «кайăка» тĕрĕсле, пемелли япаласене пухса ил,— хушрĕ ăна Редьков.

Бойко офицер кĕсйинчен «Вальтер», патронсем, хуçмалли пекĕ, зажигалка кăларса илчĕ, Редькова пачĕ.

Командир çакна штаба илсе каймалла, терĕ.

Редьковпа Шевчук подвала анчĕç. Унта йăнăшакан нимĕç сассине илтрĕç.

— Сыввисем, тухăр! — кăшкăрчĕ Редьков. Анчах тухакан пулмарĕ, Редьков кĕсьерен хунар туртса кăларчĕ. Алăка уçса шала кĕчĕç. Урайĕнче виçĕ виле тăсăлса выртать, тăваттăмĕшĕ алли-уринчен юн юхать, вăл хаяррăн йăнăша-йăнăша илет.

— Шевчук, аманнă салтак — тăшман мар, ăна халех юн каясран пулăшу пар, суранĕсене çыхса яр. Утаять пулсан, штаба ăсатмалла. Çак ĕçе эсир Яшковпа тăватăр. Назаровпа эпĕ магазина кĕрсе унта мĕн пуррине тĕрĕслĕпĕр.

— Асăрханăр, командир юлташ, лере нимĕç пулемечĕсем урамалла пеме хатĕр тăраççĕ. Нимĕç командирĕ те, пулемет расчечĕ те унтах пулмалла. Вĕсемпе çапăçма сире иксĕре йывăр тивет. Тен, эпир таврăнасса кĕтетĕр? — аслă юлташне инкек пуласран асăрхаттарчĕ Шевчук.

— Юрать, юлташăм, эсĕ каланине шута илепĕр. Эсир вăр-вар çӳрĕр.

— Қаçарăр, командир юлташ, эп калани çамарти чăххине вĕрентнĕ пек пулса тухрĕ...

Шевчук çумри васкавлă пулăшу пакетĕнчен йод, бинтпа ваттă туртса кăларчĕ те аманнă нимĕçе сиплеме тытăнчĕ.

Нимӗç ӑнланать, сылтӑм аллине хуллен çӗклет, çыхма хуллине тӑсать...

Редьков ютсемпе кӗрешме подвалтан хӑвӑрт тухса кайрӗ. Ӑна хирӗç Муркаш чӑвашӗ Юманов автоматчик вӗçтерсе килет. «Эпӗ Назаровпа,— тет вӑл,— Кутузов урамӗнчи кӳршӗри çурта йӗри-тавра пӑхса çаврӑнтӑмӑр, никама та курмарӑмӑр, пӑлтӑр алӑкне шалтан хытӑ питӗрнӗ, хуçисем килте пулас. Унран тӑвалла икӗ кил çунса кайнӑ, кӑмака мӑрйисем кӑна тӑрна мӑйӗ пек çӳлелле карӑнса тӑраççӗ; кил хушши тулли ӑпӑр-тапӑр йӑтӑнса выртать, вӗсене çиелтен юр витнӗ. Унтан тӑвалла икӗ хутлӑ чул çурт, аялти чӳречисенчен пулемет кӗпçисем тухса тӑраççӗ. Пӳрт умӗнчи çулпа часовой утать. Вӑл тӑвалла кайнӑ чухне çурт çумӗпе йӑпшӑнса кунта килтӗмӗр. Назаров туалета кӗрсе юлчӗ, вар-хырӑмӗ пӑсӑлнӑ, хуçасӑр пӳрте кӗрсен, чӳлмекри чылай ларнӑ шыва, пӑсӑк шыва, ӗçнӗ.

— Унӑн флягӑра спирт юлман-им? — çавӑнтах ыйтрӗ Редьков.

— Пӗлместӗп,— хӑвӑрт сӑмахлать Юманов.

— Çук пулсан, стакан тӗпне тӑвар яр, унта аллӑ грамм спирт, ӑна тӑварпа хутӑштар. Çавна ӗçтӗр — тӳрех сывалать, туалета чупма пӑрахать,— вӗрентет ӑна Редьков.— Ку — халӑх медицини. Спирт пулмасан, эрех те каять.

Ик-виçӗ минутран Бойкопа Шевчук тата Назаров çитеççӗ.

— Пирӗн йыш пухӑнчӗ — ӗçе тытӑнар. Сирӗн, Бойко, тротуарпа тӑвалла кайса икӗ хутлӑ чул çурт умӗнчи нимӗç часовойне расхутламалла, Шевчукпа Юмановӑн аялти хутри пулеметсене стройран кӑлармалла,— задани пачӗ Редьков.

Шӑп çав вӑхӑтра вӗсем патне Шпагин аслӑ лейтенант çитсе тӑчӗ. Вӑл Редьковӑн юлашки сӑмахӗсене илтме ӗлкӗрчӗ.

— Оставить!—хӑвӑрт каларӗ вӑл. Малалла ӑнлантарчӗ.— Пулемечӗсене мар, хуçисене кӗрсе пӗтермелле. Пирӗн приказ çавӑн пек. Пулеметсене пӗтерме тытӑнсан, пӗтӗм тавралӑха сас тӑватӑр, ытти çуртри нимӗçсне çапӑçма ура çине тӑрататӑр. Эпир ку вӑйпа нимӗн те тӑваймастпӑр, пӗтӗм батальона е полка чӗнме тивет. Каллех хаяр çапӑçу пуçланса каять.

Редьков малтанхи батальон командирне хакланӑран, Шпагин аслӑ лейтенанта, дивизирен ярса панӑ çӗнӗ çынна, кӑмӑлламарӗ, анчах хӑйӗнчен аслин приказне йышӑнмах тиврӗ, штурмовиксен умӗнче хирӗçлесе тӑрсан, сипкек сиксе тухасси куçкӗрет, çар трибуналӗ ӑна хытӑ айӑпласси каламасӑрах паллӑ. Вӑл Бойкона нимӗç часовойне расхута яма хушрӗ, ытти штурмовиксене хыçалти чӳречесенчен пӳрте кӗр-

се кайса тăшман салтакĕсене тыткăна илме, хирĕç тăрсан — пĕтерме хушу пачĕ.

Бойко хăй ĕçне хăвăрт тăвать, часовоя леш тĕнчене ăсатать. Ытти боецсем кухня чӳречине рамипех илеççĕ те шала вăшт-вашт кĕрсе тăраççĕ. Вырăс хĕрарăмĕ хыçлă пукан çинче тĕлĕрсе ларнă-мĕн. Кусем кĕрсен, вилесле хăраса каять, ăна Юманов шăппăн каласа ăнлантарать, хăй умĕнче совет салтакĕсем пулнине ĕненет хĕрарăм, аялти урам енчи пӳлĕмре икĕ станоклă пулемет патĕнче ултă нимĕç салтакĕсем пеме хатĕр тăраççĕ. Çӳлти пӳлĕмре пĕр офицерпа адьютант ординарец пулнă.

Бойко урама юлнă Редьков аслă сержанта чĕнсе килет, халĕ мĕнле тапăнмаллине ыйтать. Редьков аялтипе çӳлти пӳлĕме пĕр вăхăтрах тапăнма хушать, унсăрăн пĕрисем тапăннине илтсен, теприсем хытă хирĕç тăраççĕ те юнсăр вĕсене çĕнтерме пулмасть. Аялтисем патне Бойко, Назаров, Шевчук кĕреççĕ те нимĕç пулеметчикĕсене автоматпа тĕллеççĕ, аллисене çĕклеме, пӳлĕмрен тухма ыйтаççĕ, çӳлтисем патне Редьковпа Юманов гранатăсем çĕклесе кĕреççĕ, çумри япаласене сĕтел çине кăларса хума, хăйсене, вĕлерместпĕр тесе шантарса, тула тухма васкатаççĕ.

Нимĕç пулеметчикĕсем аллисене çĕклемеççĕ, автомачĕсене ярса тытма хăтланаççĕ. Бойко «огонь!» тет те Назаровпа Шевчук пĕр харăс автоматпа кĕрлеттереççĕ, пӳлĕмри нимĕçсене касса тăкаççĕ, пулеметсен çăраççине кăларса илсе, тула тухаççĕ.

Редьковпа Юманов çӳлти хутран аслă лейтенантпа икĕ ун çумне тыткăна илсе аялти хута анаççĕ, вĕсене крыльца умĕнче виçĕ штурмовик кĕтсе тăрать.

— Сирĕн ăста? — кăсăкланать Редьков.

— Хирĕç тăма тытăнчĕç те касса тăкрăмăр,— хуравларĕ Бойко.— Урăхла май çукчĕ.

Редьков ăнланчĕ: Бойкопа юлташĕсем пулеметчиксене хăратса хаярран кăшкăрнă, вилĕмпе хăратнă, хăйсен çиллине ытлашши кăтартнă, вĕсен пурнăçне упрамалли çулпа шанчăкне те хăварман. Ун пек чухне кирек мĕнле тăшман та, хăй çумĕнчи хатĕрпе хӳтĕленме тăрăшать. Ĕлкĕрсен, хăй пĕтерет, ĕлкĕреймесен — хăй пĕтет. Кунта та çапла пулса тухнă. Тăшман пулсан та — вăл çын. Çын пулсан, унпа тискер кайăк пек пулмалла мар, çынлăх туйăмне те палăртмалла-мĕн.

Редьков аслă сержантпа Юманов автоматчик нимĕç офи-

церне ман пата подвала илсе анчӗç. Тарасов майорпа полкăн штаб пуçлăхӗ эпӗ чӗннипе ман пата пынăччӗ. Эпӗ сӗтел хушшинче Рокоссовский патне донесени çыраттăм. Сӗтел çинче гильзăран майлаштарса тунă «чӗпкуç» тӗксӗмрех сарă хӗрлӗ тӗспе мӗлтлетсе çунать. Нимӗç офицерне «чӗпкуç» çывăхнерех илсе пычӗç. Хăй вăл сарă çӳçлӗ, шупка сенкер куçлă, тăрăхла питлӗ, яштака, анчах халӗ пуçне усса, пӗшкӗнерех тăрать. Хăйне эп паттăр тесе кăтартасшăн мар, пуçӗнчи çӗлӗкне хывнă, алăра тытать.

Редьков офицер çумӗнче тупнă япаласене — документсене, медальсемпе значоксене, çырусене сӗтел çине кăларса хучӗ. Пемеллине илме ӗлкӗреймен-мӗн. Эпӗ ăна хăш чаçре çапăçнине пӗлтерме ыйтрăм.

— Эпӗ 28-мӗш мотострелковăй дивизирен,— шиклӗн пӗлтерчӗ офицер, тăр-тар чӗтресе.

— Илтнӗ, пӗлетӗп вăл дивизие. Чылайранпа çапăçатăрха апла пирӗнпе,— терӗм эпӗ ăна тимлӗн сăнаса.— Ротăра тата батальонра мӗнле çухатусем? — кăсăклантăм эпӗ.

Тарасов майор нимӗç офицерне асăрхаттарчӗ: «Сире полк командирӗ полковник хăй допрос тăвать. Астăвăр: пурне те тӗрӗс калана пултăр. Пирӗн разведка ыранах тӗрӗслеме пултарать. Суйсан, каçару çук!»

Полк командирӗн ятне асăнсан, офицер пуçне ялтах çӗклерӗ, тӳп-тӳрӗ тӳрленсе тăчӗ, ман ыйтупа Тарасовăнне васкамасăр хуравлама шутларӗ.

— Юлашки йывăр çапăçусенче эпир сахаллансах пытăмăр. Малтанах ротăра çӗр çирӗм çын, батальонра ултçӗр таран пулнăччӗ, халӗ ротăра вунсаккăрăн юлчӗ, батальонра çӗр пӗр çын. Ытти ротăсенче çухатусем пирӗннинчен те пысăкрах. Эпӗ ку дивизире уйăх та çурă çапăçатăп. Ку дивизире малтан, Чехословакире, Польшăра çапăçнă чух, çухату пачах сахал пулнă теççӗ, кунта ытла йывăр çапăçма, киле чӗррӗн таврăнассине никам та шанмасть.

Эпӗ сӗтел çинче выртакан сăнӳкерчӗке асăрхарăм. Ăна алла илтӗм, унта — тулли питлӗ çамрăк хӗрарăмпа икӗ ача.

— Ку сан йыш-и? — кăсăкланатăп.

— Я, я, майне киндер,— тӳрех тавçăрчӗ нимӗç. Сасси ун темшӗн чӗтренсе тухрӗ.

— Эсӗ халь, офицер господин, турра тав ту, çак аслă сержанта ырла, вăл сана вилӗмрен хăтарчӗ. Эсӗ малашне урăх пирӗнпе çапăçмастăн, саншăн вăрçă пӗтрӗ. Пирӗн патра вăрçă пӗтичченех ӗçлесе пурăнатăн. Кайран сире киле арăмупа ачусем патне тӗрӗс-тӗкелех ăсатаççӗ,— çак офицера

çине тăрсах ăнлантаратăп эпĕ.

— Я, я, ферштейн,— терĕ нимĕç офицерĕ.

— Қаласа пар-ха пире: мĕнле задача пулнă сирĕн?

— Фрайгеен Москау айм бис коммунистсен: Мускава коммунистсенчен тасатмалла, тет, ăна тытса илмелле темест. Епле чее калаçать, шельмă!

— Полковник господин, пирĕн часть сакăр большевика çакса вĕлернĕ çĕре хутшăнман,— тет хайхи офицер.

Эпĕ тĕлĕнсех каятăп: эпир ун çинчен нимĕн те пĕлместпĕр.

— Ăçта çакса вĕлернĕ? — ыйтатăп çакăнтан.

— Вĕсем пушар каланчи патĕнче çакăнса тăраççĕ,— хумханса хуравлать офицер, çак ĕçе хăй те хутшăннă пек. Вырăссем «вăрă пуçĕнче çĕлĕк çунать» тенĕ евĕр.

Хайхи нимĕç офицерĕ çак тискер ĕç пирки сăмах пуçарнăшăн шутсăр шуйханса кайрĕ, пăшăрханса ӳкрĕ. Эпир ун çинчен нимĕнле сас-хура та илтменнине пĕлмен-мĕн.

— Хăçан тата мĕншĕн çакса вĕлернĕ? — манăн ытларах пĕлес килчĕ.

— Найн, найн,— тет çакă. Ун пирки пачах пĕлмĕше печĕ; ăнланчĕ вăл: пĕлетĕп тесен, нумай калама тивет, ун вĕçĕхĕррине те тупма çук.

Эпĕ Тарасов майора çак нимĕç офицерне дивизи штабне автоматчиксемпе ăсатăр, унта ăна тĕплĕрех тĕпчесе пĕлĕç, терĕм. Кĕçех тыткăна илнĕ нимĕç офицерне çурма подвалти пӳлĕмрен илсе тухрĕç.

Манăн пушар каланчи патĕнче çакăнса тăракан совет патриочĕсем çинчен пĕлесех килчĕ. Эпĕ каллех Васильев разведчика чĕнме Терехов связиста ятăм, хăйĕн командипех килме хушрăм.

Çав вăхăтра кашни батальон командирĕпе çыхăну тытрăм, нимĕçсенчен хулана ăçта çитиччен тасатнине ыйтса пĕлтĕм.

Марчук капитан Суворов урамне нимĕçсенчен кĕç-вĕç тасатса пĕтеретпĕр тесе хыпарларĕ, унăн штурмлакан тăватă ушкăн ĕçленĕ, юлашки вăхăтра икĕ ушкăнĕ пысăк çухату тӳснĕ те унран çĕнĕ боецсем яма пулăшу ыйтнă, вĕсене вăл тивĕçтернĕ.

Шпагин аслă лейтенант Кутузов урамне фашистсенчен чылай тасатнă, анчах штурмлакан ушкăнсем ĕçе юлашкинчен ăнăçуллă тăвайман пирки вăл пĕтĕм батальона çĕкленĕ, халĕ çуртран çурта тасатса пыраççĕ, анчах пытанса ларнă

нимĕç снайперĕсемпе автоматчикĕсем чартаксенчен, сарай çинчи аслăксенчен, упранса юлнă çуртсем тăрринчен сасартăк тĕллесе переççĕ те вилмелле амантаççĕ, çавна май батальон чылай çухату тÿсет.

Шпагин полк командирне, мана эппин, хăйĕн команда пунктне пыма чĕнет.

Эпĕ Бельский майорпа çыхăнтăм, Новосолдатская урамри ĕçĕ-хĕлпе паллаштарма ыйтрăм. Шпагин аслă лейтенант хăй урамне нимĕçсенчен тасатса пынă май икĕ хутлă виçĕ сыпăклă чул çурт патне тапăнса пырать, анчах кунта тăшман лайăх çирĕпленсе ларнă-мĕн.

Эпĕ хамăн адьютантпа тата Терехов связнойпа çуррине яхăн юлнă чул çурта васкаса кĕретпĕр. Кунта Шпагинăн вăхăтлăх вырнаçнă КП (командир пункчĕ). Сĕтелпе пукансем пур, сĕтел çинче телефон аппарачĕ ларать, Шпагин эпир кĕнĕ чух такампа калаçса илчĕ те трубкине хучĕ.

Вăтам пÿллĕ, сарлака хул-çурăмлă, пысăк пуçлă аслă лейтенант ман ума пырса тăчĕ, сылтăм аллине çĕклерĕ кăна — эпĕ ăна доклад тума кирлĕ мар терĕм, тÿрех çапăçу мĕншĕн ăнăçманнине евитлеме васкатрăм.

— Эпĕ виçĕ сыпăклă çурта виçĕ ротăпа харăс атакăларăм, анчах пире çывăха та ямаççĕ: пулеметсенчен, автоматсенчен вут татти-сыпписĕр тăкаççĕ, хамăр та аран чакса тухрăмăр,— хăйĕн ăнăçсăр атаки пирки каласа пачĕ Шпагин.

— Миçе хутчен çак çурта тапăнтăр? — пĕлме тăрăшрăм эпĕ.

— Икĕ хутчен. Икĕ хутĕнче те ăнăçлă пулмарĕ.

— Кун пек пилĕк е вун хут тапăнсан та, пĕр усси те пулаймĕ. Кая юлнă тактика,— тиркесе илтĕм ăна.— Мĕн чухлĕ пирĕн сан пек командирсем! Вĕсем нимĕç йышăннă пĕр-пĕр тÿпеме е сăртлама тытса илес тесе, тÿррĕн тапăнса пыраççĕ те мĕн чуклĕ боеца пĕр усăсăр пĕтереççĕ. Неушлĕ нимĕç ухмах?! Вăл çав сăртлама пит хытă çирĕплетет: минометсемпе пулеметсем, тупăсем лартать. Тапăнакансене çÿлтен аялалла хытă çунтарать. Çав сăртлам çаплипех нимĕç аллинчех юлать. Çакăн пек тактикăна Жуковпа Рокоссовский генералсем хытă сивлерĕç, ун пирки вĕсен кăтартăвĕсем те пур, вĕсемпе эс паллашман пулас.

— Вĕсен инструкцине вулана пек астăватăп. Вуласси пĕрре, пурнăçра — тепре, вăрçăра урăхла, пур чухне те тавçăрса çитейместĕн,— хăй йăнăшне сирсе яма пикенчĕ аслă лейтенант.

— Шпагин юлташ,— терĕм эпĕ шалти тарăхупа, анчах ăна ытлашши палăртмасăр.— Сирĕн штурмлакан тăватă ушкăн пур, çавсене кăна ĕç памалла. Вĕсем çак çурта хыçалти алăкпа чӳречесенчен, çурт маччинчен систермесĕр сасартăк кĕрсе нимĕç пулеметчикĕсемпе автоматчикĕсене çулса тăкма, парăнакансене тыткăна илме пултараççĕ. Анискин кĕçĕн лейтенанта хăйĕн взвочĕпе мал енчен çак çурта тапăннă евĕр тутармалла. Унăн салтакĕсем лайăх хӳтĕленсе выртаççĕ те пулеметсем лартнă чӳречесене татти-сыпписĕр пеме тытăнаççĕ. Нимĕç пулеметчикĕсем те хирĕç хытă çунтарма тытăнаççĕ, сирĕн штурмовиксем çавăнпа усă курса хыçалти чӳречесене кăларса шалалла сикеççĕ... Çак майпа хайхи çурта тăшманран тасатаççĕ.

Анискинăн штурмлакан ушкăнĕнчи боецсене те пĕлетĕп. Акă Грачев салтака илер. Вăл питĕ çивĕч те çирĕп йĕкĕт, тигр пек ăнсăртран тапăнма, инçе сикме те пултарать. Автоматпа та, гранатăсемпе те питĕ меллĕ ĕçлет, вăр-вар та хăравçăсăр этем; сăмахпа та вирлĕ кастарать. Е тата — Ясон Пегун. Пăшалпа пуринчен тĕл перет. Çапăçура хăюллă, хăраса-шикленсе тăрас йăла çук. Юлташĕшĕн вута кĕме те хатĕр, анчах ăна кӳрентерсен, темиçе талăк уппа сăмахламасть, пулăшу та ан кĕт. Вĕри чĕреллĕ, кăра çилĕллĕ. Вăл хуп-хура çӳçлĕ, хура пысăк куçлă çирĕм пилĕк çулсенчи кăнтăр çынни, авар халăхĕн пĕр тумламĕ.

Ман Ярайкина та манса хăварас килмест. Ăна ыттисенчен сумлăрах пирки Яков Лаврентьевич тесе хăйĕнпе ашшĕ ятне те асăнса чĕнеççĕ. Хăшĕсем кĕскен Яклавр тесе те илеççĕ. Хăй кирек епле каласан та кӳренмест: мана куршак тесе вĕри кăмакана çеç ан лартăр, тет кулкаласа. Чăваш, Хĕрлĕ Чутайра çуралнă, хăюллă та шиксĕр, танксемпе кĕрешнĕ чухне ăнăçлă çапăçрĕ, вăл тăшманăн çичĕ танкне çунтарса ячĕ, çирĕме яхăн нимĕç салтакне тĕп турĕ. Яклавр çапăçма анчах мар, шӳтлеме те юрататать.

— Эсĕ, Яклавр, Тăван çĕршыва юрататăн-и? — ыйтрĕ пĕррехинче Анискин.

— Унăн çӳхе тутине тупса пар — вара юратăп,— çавăнтах хуравларĕ Ярайкин.

— Эсĕ халĕ кама юрататăн?

— Хамăр старшинана,— ответне малтанах хатĕрленĕ тейĕн.

— Мĕншĕн?

— Ирсерен «наркомовски» панăшăн.

Е политика çинчен калаçнă чухне унран юлташĕсем юри

ыйтнă:

— Мĕншĕн Гитлер Совет Союзĕ çине тапăнчĕ?

— Хăвăртрах йытă вилĕмĕпе пĕтесшĕн пулнăран.

— Мĕншĕн еврейсене юратмасть Гитлер?

— Еврейсем çĕнтерсен, унăн аялти пуçне операци тăвасран.

— Мĕншĕн Черчильпе Рузвельт иккĕмĕш фронт уçма васкамаççĕ?

— Вĕсем иккĕшĕ те инвалид, Ла-Манш урлă ишсе каçнă чух путасран хăраççĕ.

— Эсĕ хăçан партие кĕме шутлатăн? — ыйтать унран политрук.

— Икĕ кĕнекене вуласа тухман-ха.

— Мĕнле кĕнекесем?

— Марксăн «Капиталне», Энгельсăн «Антидюрингне».

— Вăрçă хыççăн мĕнле пурнăç пулĕ? — ыйтать унран юлтарĕ.

— Санпа ман валли шурлăх та хурлăх, çӳлтисем валли— ырлăх та пурлăх.

Ирĕк вăхăтра Ярайкина юлташĕсем яланах шӳтсем, анекдотсем, халапсем каласа пама ыйтаççĕ, ун тавра боецсем çеç мар, кĕçĕн командирсем те пухăнаççĕ. Политика анекдочĕшĕн УП-ая та чĕнтерсе хытă çиптарнă, пĕррехинче манăн та ăна хӳтĕлесе хăварма, ун çинчен лайăх сăнласа пама тиврĕ.

УП хыççăн Ярайкин политикăпа çыхăнтармастчĕ хăйĕн шӳтлĕ сăмахĕсене, анекдочĕсене, вăрçă трибуналĕ умĕнче хурав тытасран, штрафбата çакланасран хăратчĕ. Ара, хăрамасăр, строй умне тăратса персе вĕлереççĕ е штрафбата вилмелли çĕре çапăçма яраççĕ, унта йывăр амансан кăна чĕрĕ юлма пултаратăн.

Ку ушкăнра Володя Тускай чăваш сăвăçи те пур. Вăл вăрçă çулĕ, уйрăмах Волоколамск шоссе çулĕ йывăртан, пуçне усарах юлташĕсемпе сăмахламасăр çӳрет. Хăйĕн ялти савнийĕ патне сăвăласа çырусем янине юлташĕсем асăрхаççĕ, тепĕр чухне вуласа пама та ыйтаççĕ, анчах вăл юрату вăрттăнлăхĕ — чун сипечĕ тесе хирĕçлет. Теприсем ăна «вăрттăн сăвăçă» тесе килĕштермеççĕ, вăл сăвă çырма та пĕлмест пулмалла, пустуй курнăçланать, хăйĕн хакне ӳстерет тесе сӳпĕлтетеççĕ. Те çавсене ĕнентерес тесе, те хавхалану килнине кура, вăл амăшĕпе юратнă хĕрĕ патне çырнă сăвăсене вуларĕ. Сасси уçăмлă та кĕвĕллĕ, чĕре туйăмĕ çурхи ăшă çил пек çанçурăма сипетлĕ çупăрлать, чĕкеç сасси евĕр-

лĕ халхана çепĕççĕн ачашласа кĕрет, итленĕçемĕн итлес килет.

Хăшпĕр йĕркисем халĕ те асра.

> Сана, аннем, мĕнпе эп тав тăвам-ши?
> Чĕлхемĕрте сăмахăм та çитмест.
> Сана, аннем, мĕнпе савăнтарам-ши?
> Çак çĕр çинчи пуянлăх та çитмест.

Чуна уçакан йĕррксем... Е татах —

> Çепĕç шăпчăк шăпчăка шыратчĕ
> Шурăмпуç килсессĕн ирпеле.
> Ялкăшан куççем кулса пăхатчĕç —
> Эпир пулнă ун чухне пĕрле.
> Эс пĕрмай, пĕрмай аса илетĕн,
> Савнă тусăм, мана йывăр чух.
> Эс мана вăй-хал та чыс пиллетĕн,
> Çĕнтермешкĕн сансăр май та çук!..

Çавăн пек çын вăл, Володя Тускай, маттур салтак, чăваш сăвăçи.

...Аслă лейтенант эпĕ хушнă пек виçĕ сыпăклă чул çурта тапăнать, унăн штурмлакан виçĕ ушкăнĕ хыçалти чӳречесене илсе кĕрсе каяççĕ, малти ушкăнĕ çаплах нимĕçсем çине автоматран, пулеметран пеме пăрахмасть. Тăшман та çак ушкăна çывăха ярас мар тесе хытă тăрмашать, вут-çулăм тăкать. Виçĕ ушкăн шала кĕрсе каяççĕ те хирĕç тăракансемпе алла-аллăн тытса çапăçма пуçлаççĕ. Нимĕçсем те, тĕреклĕ те вăйлăскерсем, пĕр пăтранса каймасăр хастар кĕрешеççĕ, хăш-пĕр совет салтакĕсене пăвса пăрахаççĕ, теприсене çумри тесаксемпе чиксе вĕлереççĕ. Кĕрешӳ йывăр пырать.

Анискин лейтенант Грачевпа Ярайкина тата Туская гранатăсемпе усă курмаваскатать. Чăнах та, вĕсене старшина икшер граната çитсе тыттарать. Ярайкин коридора тухакан алăка уçать те гранатăсем умлă-хыçлă вăркăнтарать — нимĕç салтакĕсем вĕсене хирĕç тухма пăрахаççĕ, анчах тахăшĕ Ярайкина та пеме ĕлкĕрет, унăн хулĕнчен пуля тухса каять шăммине ватса.

Яков Лаврентьевич ап-ап-ай! лектерчĕç тесе, каялла сирпĕнсе тухать. Грачевпа Тускай коридора асăрханса кĕреççĕ. Урайĕнче ултă-çичĕ виле йăваланса выртать, пĕри йывăр аманнă е вилсе каяйман, йăнăша-йăнăша илет. Грачевпа Тускай урам енчи пӳлĕмсене кĕрсе тĕрĕслеççĕ. Пулемет патĕнче виçĕ вилнĕ нимĕç салтакĕ, чĕррисем çук.

Анискин Ярайкина çуртран çавăтса тухать. Унăн урипе хулĕнчен те пульăсем лекнĕ.

Шпагин санитарсене чĕнсе илет, вĕсем пĕрремĕш подъездри аманнисене пулăшу панă-мĕн. Зоя малтан чупса çитет, ку подъездра çапăçу вĕçленменнине курса, вăл Ярайкина пулăшу пама тапĕр подъезда çавăтса каять, унта ăна хывăнтарсах аманнă вырăнсене кирлĕ имçам сĕрсе марлĕпе çыхать те бронемашинăпа санчаçе ăсатать.

Анискин кĕçĕн лейтенант çуртра аманнă нимĕç салтакĕ йынăшса выртнине курнă, халĕ çавăнпа мĕн тумаллине Шпагин аслă лейтенантран ыйтать. Эпĕ те вĕсен калаçăвне илтетĕп.

Шпагин сассине хăпартса Анискина йĕтĕрлесе илет:

— Çавна та пĕлместĕн-и? Расхута яр! Ĕçĕ те пĕтнĕ.

— Шпагин аслă лейтенант, Гаагари конференцире аманнă салтаксем пирки йышăннине пĕлместĕн иккен! Унта мĕнле çырса хунă? Аса ил-ха! — асăрхаттартăм эпĕ.

— Пулăшу памалла. Сыватмалла, — хăех аса илсе хуравларĕ.

— Çавăн пек тăвăр,— пĕтĕмлетрĕм эпĕ.

Грачевпа Тускай тула тухрĕç, Анискин Грачева санитара чĕнсе илме хушрĕ. Аманнă нимĕç салтакне Володя Галкин килсе кирлĕ пулăшу пачĕ, унăн сылтăм урипе алли хытă аманнă, янахне граната ванчăкĕсем кĕрсе ларнă, мăй тăрах юн кăкăр çинелле кайнă. Юн чылай çухатнипе вăйсăрланса юлнă...

Володя унăн аллипе урине те йод сĕрсе çыхса ячĕ, санитари машини килсенех сыватмалли çурта ăсатса яма пулчĕ.

Çав вăхăтра ман пата Васильев разведчикпа юлташĕсем васкаса çитрĕç, вĕсем эп хушнă вырăна çитсе килчĕç. Хăйсем хумханаççĕ, вĕсене такам хăратнă пек пĕр авăк сăмах та чĕнмеççĕ. Мана разведчиксем хăйсене темле тытăн тĕлĕнтерме пуçларĕ.

— Васильев сержант, хăвăр кайса килни çинчен хыпарлăр, итлетĕп,— сержанта куçпа пăралантă май.

— Полковник юлташ, кун пек тискерлĕхе курманччĕ, юн чĕре патĕнче хытса ларчĕ пуль. Такан çинче хĕнесе пĕтернĕ çамрăксене йĕркипе çакса янă, сивĕ çил вĕрнипе сулкаланса тăраççĕ, çакиччен каччăсен куçĕсене чиксе шăтарнă, тути-çăварĕ хăшĕсен чышкă пек шыçса кайнă, янах шăмми тăрăх юн анса кĕвĕленсе ларнă... Пăхма ытла та хăрушă! Ытла та тискер! Эпĕ вĕсен тискерлĕхне каласа пама та вăй

çитерейместĕп, сăмахăм та çитмест.

Ытти разведчиксем те Васильев сержант каланине çирĕплетсе пачĕç. Вĕсем мана вăхăт тупса çитсе курма сĕнчĕç.

Тепĕр çур сехетрен çак вăрăм çурта нимĕçсенчен тасатрăмăр, юнашарта пире чăрмантаракан çурт-йĕрсем пулмарĕç, эпир васкаса малалла пыратпăр. Акă, хуларан тухса çитнĕ çĕре тепĕр кĕмсĕркке чул çурт ларать. Шпагин аслă лейтенант разведчиксене çитсе тĕрĕслеме хыпалантарчĕ. Васильев хăйĕн ушкăнĕпе унта вĕçтерчĕ. Çаксем пĕрершерĕн çурт патне йăпшăнса пыраççĕ, Васильевран малта икĕ разведчик: пĕри — пилĕк-ултă метр малта, çурт патнех куклен-се çитсе пыратчĕ. Тăрт-тăрт-тăрт! тăрт-тăрт-тăрт! персе илчĕ ручной пулемет, разведчик çавăнтах юр çине йăванса кайрĕ: те вилĕ, те аманчĕ — паллă мар. Хыççăн пыраканĕ юр ăшне чăмрĕ — кĕмсĕркке çуртра тăшман.

Васильев малалла мĕн тумалла? Нимĕç сыхлать, çурт патне çывăха яма памасть. Мĕнле вăйпа хӳтĕленет? Мĕнле хĕçпăшал унăн? Нумай ыйтăва татса памалла. Вăл хăй вăйĕпе вĕсене татса парайĕ-и-ха.

Эпĕ ăнланатăп: тарапçă[1] пулса талăрса[2] кайнипе ĕçе тăрлаймăн, ăслă теветкелсĕр[3] тивлет ан кĕт. Ютсем тĕтхем[4] персе тăрсан, хатарлăх ӳсет, вăхăт хĕсет, херĕп[5] тесе каялла чакма юрамасть. Хурусăр[6] çынна хурлăх пусать.

Васильев кун пек пăтăрмахра çухалса каякан марччĕ, сăлай тупатчĕ. Вăл хăйĕн икĕ юлташне икĕ çĕртен: пĕрне — хыçал енчен, теприне тепĕр енчен çитсе сăнама ăсатрĕ.

Ик-виçĕ минутран паллă пулчĕ: хыçала кайнă разведчик хăлхине амантса çитрĕ, тепĕр енне кайни нимĕçсен бронетранспортерне, темскер тиенине, темиçе чинлă çар çынни кĕрсе ларнине курса юлчĕ, машина анăçалла вĕçтерчĕ.

Васильевпа юлташĕсем васкаса пирĕн пата çитеççĕ, хăйсем мĕн курнине Шпагина пĕлтереççĕ.

Эпĕ ăнлантăм: пирĕн урам пусĕнчи нимĕçсен — юлашки çирĕплетнĕ пункчĕ, офицерĕсем унтан тухса тарчĕç, вăхăтлăх пире чарса тăма темиçе салтак станоклă пулеметсемпе хăварма пултарнă.

— Шпагин юлташ, хăвăн штурмлакан ушкăнусемпе халех тапăн — ĕçĕ вĕçлентĕр!

Мана шыраса Терехов связной вĕçтерсе çитрĕ.

[1] Тарапçă — никам итлемен, ăнланусăр.
[2] Талăр — сасартăк тарăхса кай.
[3] Теветкел — пĕр хăрамасăр тытăну. ниме пăхмасăр, тивĕççĕр хăюлăх.
[4] Тĕтхем — пĕтĕмĕшпе, йĕркипе.

— Сире асли телефон патне чӗнет, халех!

Эпӗ подвалти телефон патне васкарӑм. Телефонистсӑр пуҫне кунта никам та ҫук. Эпӗ телефон трубкине илтӗм те хам итлени ҫинчен пӗлтертӗм.

— Полковник юлташ, ӗҫсем мӗнле пынине пӗлтерӗр. Вӑхӑт тӑватӑ сехет. Ир пуласси инҫе мар. Ҫӗтетпӗр.

— Нимӗҫсем юлашки ҫирӗплетнӗ пунктне атакӑласси юлчӗ. Тепӗр ҫур сехетрен манӑн чаҫ хӑй умӗнчи задачӑна пурнӑҫлать,— хӑюллӑн хыпарларӑм Рокоссовские.

— Шӑп тепӗр ҫур сехетрен хуларан тухнӑ ҫӗре эпир ҫитетпӗр, пире унта кӗтсе илӗр,— кӗскен пӗлтерчӗ 16-мӗш ҫар ертӳҫи.

Эпӗ адьютантпа хайхи кӗмсӗрккe ҫурт патнелле васкатӑп. Аякранах унта ҫапӑҫу кӗрленине, пулеметсем татти-сыпписӗр пенине, гранатӑсем ҫурӑлнине илтетпӗр.

«Шуйттансем,— тарӑхса шухӑшлатӑп эпӗ,— фрицсем парӑнасшӑн мар, епле хирӗҫ тӑраҫҫӗ...»

Пире пулӑшма Тарасов майор та Анискин кӗҫӗн лейтенант взвочӗпе персе ҫитнӗ. Эпӗ Тарасова кӗмсӗрккe ҫуртри нимӗҫсемпе калаҫма хушатӑп, хам текста вуласа пама ыйтатӑп.

— Нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсем! Сирӗн ҫурта ҫавӑрса илнӗ. Халех хӑвӑр ирӗкпе парӑнӑр, сирӗн пурнӑҫа упрама сӑмах паратпӑр. Килӗшмесен — пурне те пӗтеретпӗр. Шухӑшлама виҫӗ минут паратпӑр.

Тарасов нимӗҫле пӗлекен Илларион Васильев связиста шыраса тупать. Унпа вӑл урамӑн тепӗр енне каҫать, ишӗлнӗ чул ҫуртӑн сылтӑм кӗтесси упранса юлнӑ ҫӗрте вырнаҫаҫҫӗ те радиорупора ишӗлчӗк стена ҫумӗнчен урам еннелле кӑлараҫҫӗ.

Васильев сержант икӗ енне те пеме пӑрахма ыйтать. Радиорупортан икӗ хутчен хытӑ янратса калать. Пирӗннисем чи малтан пеме пӑрахаҫҫӗ. Виҫҫӗмӗш хут ыйтнӑ хыҫҫӑн нимӗҫсем те пеме чарӑнаҫҫӗ.

Сержант ман текста васкамасӑр вуласа парать. Пирӗн штурмлакан ушкӑнсем чӳречен аяккисене пырса йышӑнаҫҫӗ, пӗрисен аллинче гранатӑсем, теприсен аллинче — автоматсем. Хыҫал енчен те икӗ взвод тапӑнса кӗме хатӗр тӑраҫҫӗ. Вӗсене Шпагин аслӑ лейтенант ертсе пырать.

Тарасов майор хушнипе ман текста Васильев икӗ хутчен

[5] Херӗп — йывӑр.

[6] Хурусӑр — вӑй, хӑват, тӗрек; вӑйсӑр, тӗрексӗр, хӑватсӑр.

уҫӑмлӑ вуласа пачӗ. Виҫӗ минут хушши шӑплӑх тӑчӗ. Анчах нимӗҫсем хӑйсен ирӗкӗпе парӑнма килӗшмерӗҫ. Ҫаллех нимӗҫсем хыттӑн пеме пуҫларӗҫ.

— Килӗшмеҫҫӗ! — тарӑхса илтӗм.— Пурте вилесшӗн, айвансем!

— Штурм! Ҫил-тӑвӑл кӑларӑр,— терӗм эпӗ алӑ сулса Шпагин аслӑ лейтенанта.

Пулеметсем кӗрлесе ларакан урамри чӳречесенче гранатӑсем шалалла вӑркӑнса кӗрсе ҫурӑлаҫҫӗ, пӗр минут хушшинче пулеметсем чарӑнса ларчӗҫ. Пирӗн штурмовиксем чӳрече рамисене ҫапса ҫӗмӗреҫҫӗ те шалалла сикеҫҫӗ, шалта чӗрӗ юлнӑ нимӗҫсемпе хастаррӑн ҫапӑҫаҫҫӗ. Хӑшӗсене штыкпа чикеҫҫӗ, теприсене алӑри капсюль лартман гранатӑсемпе пуҫӗсенчен ҫапса ҫурса пӑрахаҫҫӗ. Пӗрремӗш хутне тасатнӑ хыҫҫӑн иккӗмӗш хутне те улӑхса каяҫҫӗ, алӑкӗсене хытӑ питӗрсе хунӑ нимӗҫсене ирӗкпе уҫма ыйтаҫҫӗ, анчах тӑшман каллех килӗшмест, пирӗннисем лумсемпе хирсе уҫаҫҫӗ — шалта нимӗҫсем ҫук — таҫта кайса кӗнӗ. Пӗрисем хыҫал енчи чӳречерен анса тарнӑ, пирӗннисем вӑл вӑхӑтра пурте аялти хута кӗрсе кайса шалта ҫапӑҫнӑ-мӗн, теприсем — арканса аннӑ маччари мӑрье шӑтӑкӗпе чертака тухнӑ, унтах пытанса юлнӑ.

Пирӗн салтаксем ҫутӑ мар пирки ку вӑрттӑнлӑха асӑрхамасӑрах каялла иккӗмӗш хутран анчӗҫ. Хайхи ҫурта нимӗҫсенчен тасатнӑ хыҫҫӑн Шпагин хӑйӗн батальонне строя тӑратрӗ. Эпӗ ӑна хӑйӗн батальонӗпе хулан хӗвеланӑҫ енчи шоссе ҫине тухса тӑма хушрӑм.

Эпӗ Тарасов майора Марчук капитанӑн батальонӗпе пӗрле ҫур сехет хушшинче ҫав вырӑнах тухӑр терӗм. Хам Бельский майор патне 3-мӗш батальона васкарӑм.

3-мӗш батальон Новосолдатская урамне нимӗҫсенчен тасатса хула хӗрне тухнӑччӗ. Салтаксемпе командирсем хӑйсен ҫи-пуҫне ҫӳп-ҫапран, юртан шӑлса тасататчӗҫ, хӑшӗсем ҫири шинельне, командирсем ҫурма кӗрӗкӗсене хывса силлеҫҫӗ.

Эпӗ вӗсене малалла тасалма ӑнаҫлӑх сунса, Бельский майорӑн подвалне адьютантпа антӑмӑр. Вӑл хӑй эпир ҫитсен ура ҫине тӑчӗ, пире чей ӗҫме сӗнчӗ. Хӑй эпир пынӑ чух чей ӗҫсе ларнӑ-мӗн. Эпӗ чейникрен кружка сарӑ чей ятӑм та пӗр тутлантармасӑрах васкаса ӗҫрӗм, сӑлтавне майора ӑнлантартӑм.

Майора хӑйне те халех батальона ертсе хула хӗрне шоссе ҫине илсе тухма васкатрӑм: кӗҫ-вӗҫ аслӑ пуҫлӑхсем ҫитмеллине систертӗм.

Хамăн адьютантпа Бельский патĕнчен тухрăмăр та шоссе еннелле утрăмăр. Пирĕн çул пушар каланчи патĕнчен иртет. Эпир каланчаран инçе мар такан çинче çынсем çакăнса тăнине курах кайрăмăр. Иван Савелькин мана такан патнех пыма чĕнчĕ. Тем пек вăхăт çук пулин те, хайхи çакăнса таракан сакăр виле патне пырса çитрĕмĕр.

Такан пĕр вĕçĕ çӳллĕ хурăн турачĕ çинче, теприне ятарласа лартнă юпа çумне çапса лартнă.

Пирĕн пата çакăнта пурăнакан кăвак сухаллă ватă пырса тăчĕ. Çак Мускав комсомолецĕсене допрос тунине унăн вун виçĕ çулхи мăнукĕ Лина Сергеевна Зимина курнă иккен. Вăл каланă тăрăх, чи малтан илемлĕ вăрăм каччăна допроса илсе кĕреççĕ: вăл Константин Пахомов пулнă. Вăл Мускаври «Çурлапа мăлатук» заводра слесарьте ĕçленĕ, 24 çулта, авланман. Унран нумай ыйтаççĕ — ним те хуравламасть. Ăна илсе тухса каяççĕ те çакаççĕ. Кун хыççăн хăюллă хĕрачана илсе кĕреççĕ.

— Эсĕ кам?

— Эпĕ студентка.

— Мĕн ятлă?

— Клава,— хуравлать хĕр.

Генерал унран Совет çарĕ çинчен, тупăсем çинчен, юлташĕсем пирки ыйтать. Клава эпĕ нимĕн те пĕлместĕп, урăх ан ыйтăр, тет. Унтан каллех тепĕр хĕре илсе кĕреççĕ. Вăл Александра Грибкова студентка.

— Санăн аннӳ пур-и? — кăсăкланать генерал.

— Пур, паллах,— хăюллăн хуравлать Грибкова.

— Эсĕ ăна хĕрхенетĕн-и?

— Эсир хăвăра хĕрхенĕр,— татăклăн хуравлать хĕр.

Ытти ыйтусем çине студенткăсем хуравламаççĕ. Пурне те ыйтса тĕпчеççĕ, анчах комсомолецсем нумайăшĕ нимĕн те хуравламаççĕ. Тарăхса кайнă фашистсем паттăр комсомолецсене персе вĕлереççĕ те таканран çакса яраççĕ. Такан çумне плакат çырса çакаççĕ: «Кам пирĕн çул çине тăрать, кашнинех çакăн пек шăпа кĕтет!»

Эпир çак кăвак сухалпа сыв пуллашса уйрăлтăмăр та васкасах хула хĕрне утрăмăр. Куратпăр: батальонсем çитсе майлашса тăнă, чи малта — пĕрремĕш батальон, ун командире — Марчук капитан, вăл Орлов майор вырăнне йышăнчĕ. Иккĕмĕш батальона Шпагин аслă лейтенант ертсе пырать, вăл пултарулă Комаров капитан вилнĕ хыççăн ĕçлеме тытăнчĕ.

Эпĕ çитиччен Бельский майор хăйĕн батальонĕпе шоссе

ҫине килсе йышӑнчӗ. Пирӗнпе кӳршӗллӗ 118 полк тӑрать, унӑн паттӑр командирӗ Ударкин Лев Степанович полковник хӑйӗн штабӗпе сумлӑн кӗтсе илме тухнӑ ҫӳлти пуҫлӑхсене.

Артиллери полкӗ те хӑйӗн тупписемпе анӑҫалла тӗллесе тӑрать, вӗсен командирӗ Нарядов Кирилл Петрович. Эпӗ кунта хамӑн шанчӑклӑ юлташа Тураев Юрий Михайловича куратӑп. Ун патне ыткӑнсах пыратӑп та ыталаса илсе питрен ӑшшӑн чуп тӑватӑп.

— Эпӗ сана чылай вӑхӑт килменрен шикленсех ӳкрӗм: «Ӑҫта кайса ҫухалчӗ? Ҫак кунсенче вӗлермерӗҫ-ши? Мӗншӗн вӑл ҫук?» тесе шикленнӗччӗ. Никамран та ыйтма хӑратӑп: усал хыпар пӗлтересрен шикленетӗп,— хумханса сӑмахлать юлташӑм.

Вӑл нумай улшӑннӑ: сӑн-пичӗ хӗллехи сивӗ ҫил ҫинче пиҫнӗрен пичӗ хӑмӑр сӑнлӑ, ҫӳҫӗ ӗнси ҫине усӑнса тӑрать, кӑвак ҫӳҫӗ йышланнӑ. аллинчи ӳт-тирӗ ҫирӗпленсе хура сӑн ҫапнӑ.

Тураевпа сӑмахласа тӑнипе сисмен те, кӑвак шуҫӑм ҫапрӗ, тавралӑх ҫутӑлма пуҫларӗ, пирӗн ҫар пуҫӗсем вӑхӑтра ҫитеймерӗҫ тесе шутлама пуҫланӑччӗ, «эмка» вӗҫтерсе ҫитрӗ, пирӗнтен иртсе чарӑнчӗ. Машина алӑкӗ уҫӑлчӗ, майор сиксе анчӗ, ку Рокоссовскин адьютанчӗ, акӑ, хӑй те пӗшкӗнсе тухрӗ. Унпа пӗрле ҫар штабӗн начальникӗ. Воронов генерал-майор, ун адьютанчӗ, Карпухин полковник — дивизин штаб начальникӗ, Ястребов полковник — дивизин командирӗн ҫумӗ, дивизин политкомиссарӗ т. ыт.

Манӑн полк, ытти полксем пекех, анлӑ шоссе ҫине тухса ҫаккӑршар ретӗн тӑрса вырнаҫнӑ. Эпӗ хамӑн полк умне васкаса ҫитрӗм те смирно! команда патӑм.

Полк умне яштака та вӑрӑм пӳллӗ, папаха тӑхӑннӑ Рокоссовский генерал-лейтенант пырса тӑчӗ. Унӑн уринче шурӑ кӑҫатӑ, ҫийӗнче шурӑрах ҫурма кӗрӗк.

— Генерал-лейтенант юлташ, манӑн полк сирӗн приказа пӗтӗмпех пурнӑҫларӗ.

Рокоссовский уҫӑ саслӑн:

— Ирӗклӗ! (Вольно!) — тесе янратрӗ.— Эсир Тӑван ҫӗршыв лартнӑ ыйтӑва пурнӑҫлама тытӑнтӑр, Волоколамск хулине фашистсенчен тасатрӑр, вӗсене ирӗклӗх илсе килтӗр. Ҫуралӑхпа вилӗмрен хӑтартӑр. Жуков генерал, Мускав фрончӗн аслӑ ертӳҫи, сире, боецсемпе командирсене, чӗререн тав тӑвать, малашне те нимӗҫсемпе ҫапӑҫас ҫӗрте хӑюлӑхпа паттӑрлӑх тата пысӑк ӑнӑҫулӑх сунать. Эпӗ те, хам енчен, пур-

не те тав тăватăп. Çапăçура хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн пурне те наградăсем илме тăратăп!..

Эпĕ командирсене чĕнсе калатăп: хăвăр подразделенири кашни хастар çапăçнă боецпа командира награда илме дивизи штабне кирлĕ хут çырса тăратăр: вăхăт — икĕ кун!

Рокоссовский çар ертÿçине пурте тимлесе итлерĕç, хăйĕн ăшă кăмăлĕпе, хĕрÿллĕ сăмахĕпе вăл пире çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарчĕ.

Пирĕнпе, командирсемпе, алă парса, чи çывăх тăван пек уйрăлчĕ те артиллеристсене саламласа тав тума кайрĕ.

Пирĕн чаçăн Волоколамск шоссе çинче пынă хаяр çапăçусем паллă çĕнтерÿпе вĕçленчĕç. Пире çĕнĕ вăй илме Химки хули патне илсе кайрĕç. Унта икĕ эрне хушши кантăмăр, сурансене сиплерĕмĕр-тÿрлетрĕмĕр, çĕнĕ хăватпа малалла, Анăçалла талпăнма хатĕрлентĕмĕр.

## ТУПМАЛЛИ

Умсăмах 3

Хавасланса ĕçле, Сергей пичче! 5

Паха та кăмăллă парне 7

ВУТ-ÇУЛАМЛА ÇИЛ-ТАВАЛ (роман)

Сиплекен çуртра 8

Амăрткайăк Германе 24

Вăрçă хирне каялла таврăнни 37

Эпир каялла чакни 47

Ахмед паттăрлăхĕ 52

Истра хулине хӳтĕлени 54

Траншейăри хаяр çапăçу 63

Урăх пĕр утăм та каялла! 78

Асар-писер çил анăçалла вĕрни 97

Хирĕçле çил-тăвăл 105

Анăçалли çул 123

Новопетровскине ирĕке кăларни 144

Деньковăна тапăнса илни 158

Мухтавлă çулпа 168

Волоколамскшăн пынă хăватлă çапăçу 176

Хулана нимĕçсенчен тасатни 193

Сергей ЮШКОВ

# ВУТ-ÇУЛАМЛА ÇИЛ-ТАВАЛ

Роман.

Сдано в набор 21.12.1999 г. Подписано к печати 25.01.2000 г. Формат 60×84/16. Бумага газетная. Гарнитура литературная. Печать высокая. Учетно-изд. л. 13,75. Тираж 300 экз. Заказ № 2917. Лицензия ЛР № 010330 от 24.03.1999 г.

РГУП «Кугесьский издательский дом»
Государственного Комитета ЧР по печати
249500, Чувашская Республика, Чебоксарский район,
пгт. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

66-00



Атӑлкас Серукӗ (Сергей Павлович Юшков) СССР писательсен Союзӗн членӗ, тип ҫӗрпе тинӗс ҫинчи вӑрҫӑсем ҫинчен ҫыракан тӗнчери писательсен ассоциаци членӗ, Алексей Талвир ячӗллӗ литература премийӗн лауреачӗ, Чӑваш патшалӑх педагогика университетӗнче тата Чӑваш патшалӑх нумай енлӗ ӑслӑлӑх университетӗнче (ЧПУ-риа ҫур ӗмӗре яхӑн ӗҫленӗ. Чӑваш наци культури тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, чӑваш халӑх ӑсчахӗ (академикӗ), 1955-85 ҫулсенче вӗрентмелли учебниксен тата математика кӗнекесемпе статьясен авторӗ.

Чӑваш ҫӗршывӗнче Етӗрне тӑрӑхӗнчи Атӑлкассинче 1918 ҫулхи кӗркунне юпа уйӑхӗн 12-мӗшӗнче ҫуралнӑ. Палтайри вӑтам шкулта вӗренет, литратурӑпа тарӑн пӗлӳ илес тесе, Чӑваш патшалӑх педагогика институтӗнчи литература факультетӗнче ӑс пухать. Икӗ ҫул Штанашри вӑтам шкулта ӗҫленӗ хыҫҫӑн Совет ҫарне илеҫҫӗ. Нимӗҫ фашисчӗсемпе 1941-43 ҫулсенче аманса яла таврӑнать. Хӑйӗн пӗлӗвне малалла аталантарма Мускаври аспирантурӑна вӗренме кӗрет, чӑваш чӗлхи методикипе ӑсӑлӑлӑх ӗҫне ҫырса, ӑна унтах хӳтӗлет, ученӑй ятне илет, Чӑваш патшалӑх педагогика институтӗнче чӑваш чӗлхипе литература кафедринче доцент пулса 20 ҫул ӗҫлет, унтан - университетра 1987 ҫулччен.

Ҫав ҫулсенчех вӑл илемлӗ литературӑра та тимлет. Ун пичетленсе тухнӑ кӗнекисем: "Вутлӑ ҫумӑр" (повеҫ, 1971), "Кӗрен кӳлӗсем" (повеҫ, 1975), "Вутра пиҫӗхнисем" (повеҫсем, 1985); "Пӗр куҫ хупмасӑр" (калавсем, 1978 ҫ.), "Ҫӗршыв чӗнсен" (калавсем, 1988 ҫ.), "Ҫулӑмлӑ ҫулсем" (сӑвӑсемпе поэма, 1992 ҫ.), "Манӑҫсӑр юрату" (калавсем, 1993 ҫ.), "Пурнӑҫ тӳпинчен" (поэмӑсем, сӑвӑсемпе юптарусем, 1998 ҫ.), "В минуты вдохновенья" (стихи, поэмы и басни), 1998 г.).

Халӗ унӑн "Вутлӑ ҫил-тӑвӑллӑ" роман пичетленсе тухрӗ. Атӑлкас хӑй те фронтовик пулнӑ май Тӑван ҫӗршывшӑн чи хӑрушӑ тапхӑра - Мускав хули патне ҫитсе тухнӑ вӑхӑта - кӑтартса парать. Унтан пирӗн Совет ҫарӗ чаплӑ ҫар пуҫӗсем ертсе пынипе аҫа ҫиҫӗм ҫиҫтерсе хайхи "Никам ҫӗнмен" Гитлер ҫарӗсене раштав уйӑхӗнче каялла хытӑ хӑвалаҫҫӗ, 800 пин тӑшман вилли вырӑс уйӗсене ӗмӗрлӗхех выртса юлать, унӑн арканнӑ хӗҫ-пӑшалӗпе техники те.

Ҫак юнлӑ ҫапӑҫусенче Чайкин полковник ертсе пыракан чаҫре чӑваш салтакӗсем те йышлӑ пулнӑ, вӗсем тискер тӑшманпа хастар ҫапӑҫаҫҫӗ, хуласемпе ялсене ирӗке кӑларас ҫӗрте тимлӗ хутшӑнаҫҫӗ, хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартаҫҫӗ. Халӑхсен туслӑхӗ романра паллӑ вырӑн йышӑнать.